**И.В. Софронова**

# *ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ТАТА ÇАМРĂКСЕН ЛИТЕРАТУРИ*

**Вĕренӳ пособийĕ**

Шупашкар
2012

РАҪҪЕЙРИ ВĔРЕНТŸ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
Профессиллĕ аслă пĕлÿпаракан
федераллă патшалăх бюджетлă учрежденийĕ
«И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»

**И.В. Софронова**

# ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ТАТА ҪАМРĂКСЕН ЛИТЕРАТУРИ

**Вĕренÿ пособийĕ**

Шупашкар 2012

ББК Ш83(2)(=635.1){6}я73
УДК821.512.111-053"19"(075.8)
С 683

***Рецензенты*:**
отдел литературоведения и фольклористики
Чувашского государственного института гуманитарных наук;
канд. филол. наук, доцент кафедры чувашской литературы
Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я. Яковлева
*О.В. Скворцова*

**Софронова И.В.**
**С683** Чувашская детская и юношеская литература: учеб. пособие / И.В. Софронова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2012. – 174 с.

Утверждено Учебно-методическим советом университета

ISBN

Рассматриваются становление и развитие чувашской детской и юношеской литературы, творчество детских писателей, отдельные жанры и виды произведений.

Для студентов III, IV курсов национальных факультетов и отделений вузов республики, учителей-филологов и лиц, интересующихся данными вопросами.

Ответственный редактор д-р филол. наук, профессор В.Г. Родионов

ISBN
ББК Ш83(2)(=635.1){6}я73
© Софронова И.В., 2012

# КӲРТӖМ

Ачасене воспитани парас ӗҫре кирлӗ, пахалӑхлӑ литература усӑ курни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Тӗнче литературинче ятарласа ҫак ӗҫе айванла беллетристикӑна, сентименталлӑ жанрсене, тӗн литературине усӑ курнӑ тапхӑрсем пулнӑ. Ачана тӗрлӗ условисенче хӑйне мӗнле тытмаллине вӗрентсе калакан кӗнекесен те пахалӑхӗ пысӑках мар. Чӑваш филологийӗ тата культура факультетне вӗренсе пӗтерекен студентӑн чӑваш литература историне тата чӑваш ача-пӑча тата ҫамрӑксен литературин аталанӑвне аван пӗлсе тӑмалла, ӑна практикӑра усӑ курма пӗлмеле.

Чӑваш ача-пӑча тата ҫамрӑксен литератури дисциплинӑн тӗллевӗсем:

- ача-пӑча литератури аталанӑвӗн тӗп тапхӑрӗсене, унӑн хӑй евӗрлӗхне, содержани уйрӑмлӑхне тупса палӑртасси;
- ача-пӑча ҫыравҫисен пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тишкересси;
- ача-пӑча литературинче лирика, эпика, драма ретӗнчи хайлавсенен аталану ҫул-йӗрне, тытӑмне, стиль паллисене, илемлӗх мелӗсене тишкересси.

Пулас учительсемпе ашшӗ-амӑшӗсене ку дисциплинӑна пӗлни уйрӑмах кирлӗ. Вӗсен ача ҫитӗнӗвне, пурнӑҫне, шухӑшкӑмӑлне, культурине аван пӗлмелле, илемлӗ литература тата фольклор тӗслӗхӗсене кирлӗ пек усӑ курса тӗрӗс воспитани пама пӗлмелле, ӑс-тӑн, тавракурӑм, тӗнчекурӑм аталанӑвне тивӗҫлипе йӗркелесе пымалла.

Ача-пӑча тата ҫамрӑксен литератури дисциплинӑна вӗреннӗ май литература аталанӑвӗн тӗрлӗ тапхӑрӗсене, уйрӑм авторсен пултарулӑхне, ача-пӑча фольклорӗн хӑй евӗрлӗхне, Библи вӗрентӗвӗ ҫинче чарӑнса тӑма палӑртнӑ. Ача-пӑча литературин уйрӑм жанрӗсем аталаннин ҫул-йӗрне пӑхса тухни те кирлӗ пулӗ. Ҫак ӗҫе кӳршӗ халӑхсен литературипе танлаштарса пыни те кӑсӑклӑ тесе шутлатпӑр. Ача-пӑча литератури аталанӑвӗпе пӗрлех хушма ӳнерсем те аталанаҫҫӗ: иллюстраци, драматурги, театр, ачасен пултарулӑхӗ, ача-пӑча хаҫат-журналӗ... Ку ыйтусемпе те уйрӑм калаҫу ирттерни кирлӗ тесе шутлатпӑр.

Ача-пӑча литератури шутне эпир кӗҫӗн, вӑтам, аслӑ ҫулхи ачасем валли ятарласа ҫырнӑ хайлавсене кӗртетпӗр. Ку

литературăна тата виçĕ ушкăна пайлама пулать: 1) ачасем валли ятарласа çырнă хайлавсем (К. Чуковский, Т. Ыхра, Р. Сарпи); 2) аслисем валли çырнă, анчах ача-пăча литературине куçнă хайлавсем (Д. Свифтăн «Путешествие Гуливера», А. Пушкинăн тата К. Ивановăн юмахĕсем); 3) ачасем хăйсем шухăшласа кăларнă хайлавсем.

Ача-пăча литературине ача-пăча сăмахлăхĕ тата çырулла ача-пăча литератури çине уйăрма пулать. Жанр тĕлĕшĕнчен çак ушкăнсем пур: юмах (фольклор мотивĕсемпе çырнисем, литература юмахĕсем), автобиографилле проза, историлле проза, йăла прози (Н. Носов), илемлĕ наука жанрĕ, приключени, фантастика, наука фантастики, сăвăсем, юрăсем, поэмăсем т. ыт. те.

Ача-пăча литературин содержанийĕ çыравçă тĕллевĕнчен çеç мар, хăш çитĕнӳри ачасем валли çырнинчен те килет. Тĕрлĕ çулти ачасен аталану шайĕ тĕрлĕрен пулнине кура шкул çулне çитменнисен, кĕçĕн классенчи, вăтам классенчи, аслă классенчи ачасен литературине уйăрма пулать.

Ача-пăча тата çамрăксен литературин тĕп тĕллевĕ – çамрăк ăрăва пур енлĕн аталантарасси, тĕрĕс воспитани парасси. Тĕллевĕн хăй евĕрлĕхне кура вăл педагогика, эстетика, культурологи, фольклористика, психологи, литература пĕлĕвĕ, социологи тата ытти ăслăлăхсемпе çыхăнса тăрать. Çавăнпа та ача-пăча литературин тĕслĕхĕсене тишкернĕ чух педагог пек те, тĕпчевçĕ пек те, литератор пек те пăхма тивет.

Ача-пăча литературин тематики питĕ анлă пулма пултарать. Вăл обществăн, уйрăм çыннăн пурнăçне пур енлĕн кăтартса парать. Çапах та тĕп теми – ачасен пурнăçĕ: çемьере, шкулта, юлташсемпе тантăшсем хушшинче, ĕçре, вăййăра, аслисемпе хутшăннинче... Ача-пăча литературине хăйне евĕрлĕ ачалăх çинчен çырнă энциклопедипе танлаштарма пулать. Ачасем хăйсен тĕнчи çинчен ытларах пĕлме тăрăшаççĕ. Кĕнекере хăйсемпе пĕр çулхи ачасен пурнăçне сăнлани вĕсемшĕн тата та интереслĕ.

***Ача-пăча литературин хăй-евĕрлĕхĕ***. Ку проблемăна тĕрлĕ вăхăтри тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен татса панă. Пĕрисем унăн уйрăмлăхĕ воспитани парас ĕçе ӳкерчĕк урлă палăртассине, теприсем тематика уйрăмлăхне кăна асăрханă. Капла ятарлă ансат чĕлхепе ансат содержание çырса кăтартасси çеç тĕпре пулать.

Ача-пӑча литератури илемлӗ сӑмахлӑха тата вӗрентӳпе воспитани ӗçне пӗрлештерсе тӑрать, искусствӑн хӑйне уйрӑм пайӗ шутланать. Унӑн функцийӗ – ачан тавракурӑмне йӗркелеме пулӑшасси, ӑна эстетика киленӗвӗ кӳресси.

Ача-пӑча литературин хӑй евӗрлӗхӗ – улшӑнса тӑракан пулӑм. Вӑл конкретлӑ мар. Ачан çитӗнӳ уйрӑмлӑхне, истори тапхӑрне, социаллӑ пурнӑç условийӗсене кура улшӑнса тӑрать. Пирӗн асаннесем ача чухне вуçех урӑхла кӗнекесем вуланӑ, эпир тата урӑх кӗнекесене вулатпӑр. Паянхи ачасемшӗн партизан Мурат, тимуровецсем çинчен çырнӑ кӗнекесем интереслӗ, актуаллӑ мар.

Ача-пӑча литературин тӗп уйрӑмлӑхӗсем шутне çаксене кӗртме пулать: хайлавсем динамикӑлӑхпа, ӗç-пуç черетленӗвӗпе уйрӑлса тӑмалла. Çавӑнпа та сюжет йӗрӗ пулни интереслӗ. Сюжет аталаннӑ май сӑнар характерӗ уçӑмланса, аталанса пыни курӑнмалла. Ӗç-пуç аталанӑвӗ воспитани, вӗрентӳ тӗллевне палрӑтакан информацине те уçса памалла. Капла çӗнӗ пӗлӳ çӑмӑллӑн та хаваслӑраххӑн ӑша хывӑнать. Ача-пӑча литературинче ӗмӗтленнипе чӑн пулни уйрӑлми пӗрлӗхре пулмалла. Ача-пӑча литературин тепӗр хӑй евӗрлӗхӗ – шӳтпе усӑ курасси. Ку вӑл ачасен çитӗнӳ уйрӑмлӑхӗнчен килекен пулӑм. К. Чуковский: «У детей есть великая потребность смеяться», – тесе каланӑ. Шӳт ачана пур енлӗн аталанма пулӑшать, вӗренӳ процесӗнче пулӑшать. Пурнӑçра тӗрлӗ вак-тӗвекрен, пӑтӑрмах çине çӳлтен пӑхма вӗрентет.

***Ача-пӑча литературин илемлӗх критерийӗсем***. Ачасем валли çырнӑ кӗнекесем пултарулӑх тӗлӗшӗнчен чи çӳллӗ шайра пулмалла. К. Чуковский çапла çырать: «Не забывать, что поэзия для маленьких должна оставаться поэзией и для взрослых». Урӑхла каласан, ача-пӑча литератури классика шайӗнче пулмалла. Тема актуаллӑхне, идея, форма пуянлӑхне, илемлӗх традийийӗсен шайне, сӑнарлӑх формине пурнӑç ыйтӑвӗсемпе шайлашӑнса пынине шута илмелле. Л.Н. Толстой каланӑ: «Пилӗк çулхи ачаран алӑ çулхи ватӑ пулма – пӗр утӑм, тин çуралнӑ ачаран пилӗк çула çитиччен – тӗпсӗр çырма». Ача-пӑча литературин пӗлтерӗшӗ те уйрӑмах çак тапхӑршӑн кирлӗ. Вӑл çыннӑн тавракурӑмне, пурнӑçа ӑнкарас туртӑмне йӗркелеме кирлӗ.

7-8 çула çитиччен ачан ас туса юлас туртăм питĕ пысăк. Вăл çĕнĕ сăмахсене, грамматика конструкцийĕсене, сăмах илемне асăрхаса хăвăрт астуса юлма пултарать. Çавăнпа та ача-пăча кĕнекин лексики пуян та анлă пулмалла, çав вăхăтрах ансатлăх та кирлĕ. Тĕрĕссипе прозăлла çырнă илемлĕ хайлав тексчĕ те асра çăмăллăнах юлма пултарать. Кĕнекере, паллах, усал, килĕшӳсĕр сăмахсемпе, жаргонсене усă курма юрамасть.

Пĕчĕк ачасем мĕн илтнине, вуланине тĕппипех ĕненме пултараççĕ (Гарри Потер вĕçни пирки илтсен ачасем те шкаф тăррине хăпарса вĕçсе кайма хăтланса пăхнă тĕслĕхсем сахал мар пулнă). Çавăнпа та хайлавра çырса кăтартнă чăнлăх илемлĕх мелĕсемпе çырăннă пулсан та ĕнетерӳллĕ пулмалла.

Ача-пăча литературинче илемлĕ сăнар калăпласси те тĕпре. Ăна ахаль пурнăçран е юмахран илнĕ пулин те вăл ĕнетерӳллĕ, чĕрĕ сăнар пулсан çеç ачан чĕрине тыткăнлама пултарать. Ачан асĕнче ытларах паллакан, пĕлекен çынсем, япаласем çинчен çырнă хайлавсем çирĕпленсе юлаççĕ. Вĕсенче вара пĕтĕмĕшле палăртни мар тĕплĕнрех сăнласа пани кирлĕ.

Мĕн авалтанпах ача-пăча литератури çынлăх проблемисене хускатас, ырăпа усала, тĕрĕссипе суяна уйăрма вĕрентес туртăмлă пулнă. Çав хушăрах, кашни ĕмĕр çыравçи хăй пурăнакан вăхăтăн идеалĕсене палăртмасăр тăма пултараймастьс. Çыравçă ачасем валли хайлав çырнă чухне лиро-эпика хатĕрĕсемпе е фольклор материалĕпе усă курма пултарать.

Ача-пăча кĕнекинче ӳкерчĕк, иллюстраци пулни те пĕлтерĕшлĕ. Уйрăмах пĕчĕк ачасем тĕнчене курни тата илтни урлă пĕлме тытăнаççĕ. Кĕнеке вулама вĕренни ача хăйне тĕллĕн интелектпа пурăнма пуçланине пĕлтерет. Кĕнекери ӳкерчĕк ачана содержанине ăнланма пулăшать. Ача ăнлавĕнче текстра çырнипе ӳкерчĕкре ӳкерни тата çавна вăйăра выляса пани хушшинче уйрăмлăх çук. Çавăн пекех кĕнекери текстпа мульт-фильм е кино, театр е радиоинсценировка хушшинче те чикĕсем çук. Çавнпа та вĕрентӳ, воспитани процесĕнче вĕсен те пĕлтерĕшĕ пысăк.

# АЧА-ПӐЧА ЛИТЕРАТУРИН УМ ИСТОРИЙӖ

Ача-пӑча литературин ҫӑлкуҫӗсем шутне фольклор, куҫару, классикӑлла литература, архаика цивилизацийӗ, антика тапхӑрӗ, ача-пӑча сӑмахлӑхӗ кӗреҫҫӗ. Мӗн пӗчӗкрен ырӑпа усала, чӑнлӑха, илеме уйӑрма хӑнӑхса ҫитӗнни тӗрлӗ ӳнерсен, пурнӑҫри пулӑмсен, истори тапписен пӗлтерӗшӗсен вӑрттӑнлӑхне ӑнланма, хаклама вӗрентекен «пурнӑҫ кӗнеки» пулса тӑрать.

Тӗнче литературинчи чи пирвайхи ача-пӑча кӗнеки авалхи шумерсен «Эпос о Гильгемаше» хайлавӗ шутланать. 12 тӑм кӗнеке ҫине 12 юрӑ-поэма ҫырса хунӑ пулнӑ. Вӗсен йӗрки 12 зодиак черетленӗвӗпе тӳр килет. Ку хайлавра тӗл пулакан сюжет мотивӗсем, детальсем каярах ытти паллӑ хайлавсене куҫаҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри – Турӑ ачи ҫинчен калакан миф.

Турӑ ачи ҫинчен калакан миф Ама, Аҫа, Ама йывӑҫ, тӗнче пулса кайни, ҫӑтмах, тӗнчене шывпа тасатни, турӑсенчен ҫулӑм вӑрлани т. ыт. ҫинчен калакан мифсемпе пӗр вӑхӑтра ҫуралнӑ. Вӗсенче тӗрлӗ халӑхсен мифла тӗнче курӑмӗ палӑрать. Асӑннӑ мифӑн паллисене юмахсенче, ӗненӳре, амӑшсен сӑмахлӑхӗнче, ачасен вӑййинче курма пулать. Ача-пӑча фольклорӗн, литературин хӑш-пӗр сюжечӗсем тата мотивӗсем те ҫак мифпа ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Ача-пӑча литературин тӗп сӑнарӗ – ача. Ачан «эпӗ» тени ахаль ача сӑнарӗ урлӑ та, улӑп е карлик пек, сӑнсӑр япала е чӗр чун пек те палӑрма пултарать. Ача-пӑча литературинчи сӑнарӑн функцийӗ – тӗлӗнтермӗш япаласем тӑвасси, хӑй асамлӑхне палӑртасси. Авалхи легендӑсенче ача сӑнарӗ вӑл хӑй пурнӑҫлакан асамлӑ ӗҫсемпе уйрӑлми пӗрлӗхре пулнӑ. Тӗлӗнтермӗш ачан хӑй евӗрлӗхне палӑртмалли тӗп илемлӗх мелӗ – асамлӑха усӑ курасси. Архаика фольклорӗн тата эстетика сакунӗсемпе килӗшӳллӗн ача вӑл хӑй чи тӗп асамлӑх.

Турӑ ачи мифӑн тытӑмӗнче тата та вакрах мотивсем пур:
1. Ача ҫураласси пӗр-пӗр хуйхӑпа ҫыхӑнма пултарать: мӑшӑрсем ача пулманран куляҫҫӗ. Сӑмахран, Авалхи Халалта Самсонӑн ашшӗпе амӑшӗ (Иоанпа Анна) ҫинчен калани, кӑркӑссен «Манас» эпосӗнчи ӗҫ-пуҫ аталанӑвӗ тата ытти те.

2. Хуйхă тени ача тăлăх пулнипе е вăл çурални пĕр-пĕр вăрттăнлăхпа çыхăннинче палăрма пултарать. Ашшĕпе амăшĕнчен пĕри асамлă тĕнчерен килнĕ: А. Македонскийĕн ашшĕ асамçă пулни (Амăшĕ ачине эсĕ Зевсран çуралнă, тесе калать). Шумерсен халапĕнче патша хĕрĕ ача çуратсан, страшниксем ăна Акрополь тăвĕ çинчен пăрахаççĕ. Ачана ăмăрт кайăк хăй çунатти çине илет, пахчана антарса ярать. Пахчаçă патĕнче ӳснĕ Гильгемаш кĕçех Вавилон патши пулса тăрать. «Шах-наме» кĕнекере Зам паттăра шурă çӳçлĕ çуралнăшăн ашшĕ йышăнмасть. Ту тăрринчен пăрахма хушать. Ачана Симург кайăк çитĕнтерет.

3. Турă ачи хайлаври ытти сăнарсенчен уйрăлса тăрать. Моисей пирки каланă халапра унăн ӳт-пĕвĕ питĕ пысăк пулнине палăртнă. Вăл виçĕ çулта чухнех тем пек пысăк çитĕнсе çитнĕ. Тепĕр чух ачан ӳт-пӳ уйрăмлăхĕ ытла та илемлĕ е сăнсăр пулнинче палăрать. Израиль çĕрне çăлакан Самсон пирки калакан Библи сюжетнех илер. Асамлă ача çураласси çинчен Манной арăмне ангел пĕлтерет. Вăл çийе юлса ывăл çуратать, анчах ачан çӳçне касма юрамасть. Ку ача Турă ирĕкне пурнăçлакан пулĕ, Израиль çĕрне фалимстянсен пусмăрĕнчен çăлĕ. Ача ӳссе çитĕнет, паттăр пулать. Илемлĕ çӳçĕсем унăн сăн-питне тата та хитрелетеççĕ. Вăл тăван халăхне пусмăртан хăтарать. Пĕррехинче çывăрса кайнă Самсонăн çӳçне чее хĕр арăм касса илет. Çӳçĕ çукран вăйсăрланнă паттăр хăй халăхне хӳтĕлейми пулать. Çӳçĕ ӳссен кăна унăн вăйĕ таврăнать.

Гофманăн юмахĕнчи Крошка Цахес çуралнă чухнех асамлă çӳçпе çуралать, вĕсен хăватне пула хăй тăшманĕсене çĕнтерме пултарать. Бурятсен «Гэсэр» эпосри паттăр çĕр çинчи карчăкпа стараик килĕнче иккĕмĕш хут çуралсан пĕрмаях сăмса юхнипе, таса мар шăршă кăларнипе, тăтăшах йĕмне варалинипе уйрăлса тăрать. Паттăр тум-тирне тăхăнсан вăл çĕр çинчи чи илемлĕ йĕкĕт пек курăнать.

4. Хăш-пĕр халапсенче çӳлти хăват ирĕкне пула ахаль ача асамлă пулса тăни çинчен калани пур. Унăн шăпипе ĕçĕхĕлĕнче çынсем Турă паллисене кураççĕ. Ку пророк тата тĕнчене çăлма килнĕ ачасен сăнарĕсем. Мухаммед пророкăн

ачалăхнех илер: пулас пророк йӳркĕн арабсен çемйинче çитĕннĕ. Пĕррехинче Мухаммедпа унăн тантăшĕ кĕтӳ çывăхĕнче вылянă. Вĕсем патне шурă тăхăннă икĕ ют çын пырса тăнă. Кусем ангелсем пулнă. Пĕри шап-шурă юр тултарнă ылтăн тирĕк тытса тăнă. Вĕсем Мухаммеда çурăм çине хураççĕ, кăкăрне уçса чĕрине кăларса илеççĕ. Чĕринчен хура тумлама пăчăртаса кăлараççĕ те аякка ывăтса яраççĕ. Чĕрине шурă юрпа тасатса каялла чиксе хураççĕ. Çакăн хыççăн хăйсем куçран çухалаççĕ. Мухаммедăн тантăшĕ хăй мĕн курнине часрах ашшĕпе амăшне кайса каласа кăтартать. Аслисем килсессĕн Мухаммед чĕрĕ, ним айăпсăр тăнă, пичĕ çеç шуранка пулнă. Мухаммед ун чухне 3-4 çулхи ача пулнă. Мусульман традицийĕсемпе килĕшӳллĕн, пророк хăвачĕ çынна ача чухне куçма пултарать. Ача çеç çылăхсăр, таса, шурă юр пек.

5. Чылай хайлавра асамлăха курма пултаракан ачасем аслисем курманнине асăрхаççĕ, вĕсемпе хрушă, çав хушăрах асамлă ĕçсем пулса иртеççĕ. А. Беляевăн «Человек-амфибия» романĕнчи сăнар этем тĕнчин çылăхĕсене асăрхамасть, çав хушăрах океан вăртăнлăхĕсене чухлать.

6. Араб юмахĕнче ангелсем ачасем патне килсе пĕрне пророк, теприне свидетель тăваççĕ пулсан, христиан-иудей юмахĕсенче Гавриил архангел аслисем патне килет: Захарийăн хĕсĕр арăмĕ патне, вată Иосиф патне, Таса хĕр Мария патне, Вифлиемри кĕтӳçсем патне.

7. Тĕнче литературинче араб сюжечĕ ытларах тĕл пулать. Ангел е вĕрентекен Турă ирĕкне пурнăçлакан ача патне килсе ăна идеаллă тĕнче çинчен каласа парать, ырă ĕçсем тума çул кăтартать (А. Погорельскийĕн «Черная курица или подземные жители», А. Линдгренăн «Сказка о Карлсоне»).

8. Ача-пăча литературинче сарăлнă авалтан килекен тепĕр мотив вăл – ача хăй куракан асамлăх çинчен каласа паракан юлташне асамлă вĕрентекен вырăнне хисеплени. А. Линдгренăн юмахĕнче ача Карлсон çинчен аслисене каласа кăтартать. Сент Экзюперин «Маленький принц» хайлавĕнче çитĕнсе çитнĕ çын вулакана çĕр çине Маленький принц килсе кайни çинчен пĕлтерет. Вăл çĕр çинчи çынсен пурнăçне тĕпчет, пурнăç пирки хăй мĕн шухăшланине калать. Калуçă чунĕнче ачалăх тĕнчи чĕрĕлет, вулаканăн та çак тĕнчене таврăнмалла пек. Маленький

принц паянхи литературӑри ютран вӗҫсе килнӗ ача мифологемӑн тӗслӗхӗ. Вӑл ачалӑх планети ҫинчен аслисен ҫӗрӗ ҫине вӗҫсе килет. Вӑл чӑн-чӑн ӑсчах, ырӑ кӑмӑллӑ, ҫепӗҫ ҫын. Ун евӗррисем: Питер Пен, Карлсон, Ҫӑлтӑр ача, Алиса. Ютран вӗҫсе килнӗ ача (пришелец) Турӑ ачи сӑнарне тӳр килет.

Кришна, Геракл, А. Македонский, Таса хӗр Мария, Иисус тата тӗнче культуринчи ытти сӑнарсен ачалӑхне сӑнланӑ чухне ҫакӑ пирвайхи асамлӑ ӗҫсен тапхӑрӗ пек курӑнать. Асамлӑ ӗҫсем паттӑрла пулма пултараҫҫӗ: пӗчӗк Кришна демонсене ҫӗнтерет, А. Македонский Буцефал лашана алла хӑнӑхтарать, сӑпкари Геракл икӗ ҫӗлене вӗлерет... Асамлӑ ӗҫсем хӑрушла та пулма пултараҫҫӗ: пӗчӗк Иисус тепӗр ачана, лупашкари шывпа сирпӗтнӗшӗн, вилмелле тӑвать. Тӗрлӗ асапран, чир-чӗртен сыватнине кӑтартакан асамлӑ ӗҫсем те пулаҫҫӗ.

Авалхи кӗнекесен традицийӗсем ӗнентернӗ тӑрӑх ачалӑх ҫулӗсем – аслисене ачасенче Турӑ паллине туйма, хисеплеме май паракан вӑхӑт. Ача аслисене асамлӑхпа ҫеҫ мар, ӑс-тӑнӗпе те тӗлӗнтерет. Ӑна хӑйне асамлӑх пек те йышӑнма пулать.

### Ыйтусемпе ӗҫсем

1. Турӑ ачи пирки калакан мифӑн паллисене каласа тухӑр.
2. Библире сарӑлнӑ Турӑ ачи мифӑн тӗпрех мотивӗсем.
3. Тӗрлӗ халӑхсен эпоссӗсенче Турӑ ачи мифӑн пиллисем тӗл пулнин сӑлтавӗсем.
4. Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗнчи Турӑ ачи мифӑн паллисем.
5. Библи сюжечӗсем илемлӗ литературӑра тӗл пулни.
6. Ача-пӑча Библийӗнче ача-пӑча литературин спецификине тӳр килекен сюжетсем тӗл пулни.

# ЧИКĔ ЛЕШ ЕНЧИ ХАЛĂХСЕН АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

Ача-пăча литератури чăн малтанах тухăç халăхĕсен аталанма пуçланă. Ку кĕнекесене ятарласа патшасен ачисем валли ăса вĕрентес, пĕлӳ тата воспитани парас тĕллевпе патша çывăхĕнчи сăвăçсем, ăсчахсем çырса хатĕрленĕ пулнă. Китай литературинче «Золотая книга», Иран халăхĕсен Фирдоусин «Шах-наме» эпопеи, индире «Панчатантра» кĕнеке тата ытти тĕслĕхсем те пур.

«Панчатантра» кĕнеке III-IV ĕмĕрсенче йĕркеленсе çитнĕ. Ку кĕнекене халăхра анлă сарăлнă юмахсем, притчăсем кĕреççĕ. Кашни юмахĕ умĕнхинчен тухса тăрать, унпа тачă çыхăннă. Кĕнекере ăса вĕрентсе калани чылай, анчах та тепĕр чух пĕр халапра тунă пĕтĕмлетӳ умĕнхи халапра каланине хирĕçлеме пултарать. Халапсем каларăш шухăшне уçса паракан функцине çеç пурнăçламаççĕ, хăйсем тĕллĕн çӳрекен илемлĕ хайлав пек те курăнаççĕ, пурнăç ăслăлăхĕпе шӳте пĕрлештерсе тăраççĕ.

Çавăн пекех, тухăç халăхĕсен тĕнпе мифологине пĕрлештерсе тăракан кĕнекесем те ачасене воспитани парас ĕçре пĕлтерĕшлĕ пулнă. Индире ку кĕнеке «Махабхаратра» ятлă, иранта – «Авеста», мусульмансен – «Коран», катайра – «Ши-цзинь», «И-цзинь»... Вĕсенче чылайăшĕнче Çӳлти Туррăн ачалăхĕ пирки калани пур. Кашнинчех ача чухне пулас Турă ыттисенчен уйрăлса тăнине, хитре, ăслă, маттур, вăйлă пулнине палăртаççĕ. Лао-дзы çуралсанах ав шурă çӳçлĕ пулнă. Вăл «особенный ребенок» пулни мĕн çуралнă кунтанах палăрать. Вĕсемпе çыхăннă асамлă ĕçсем те ачалăх кунĕсенчех палăрма тытăнаççĕ.

Тухăç литературин тĕслĕхĕсем ытти литературăсен аталанăвне витĕм кӳнĕ, тĕрлĕ çул-йĕрсем урлă унти сюжетсемпе мотивсем, калу мелĕ, жанрсем анăçалла куçсса пынă.

## Европăри Вăтам ĕмĕрсенчи тата Чĕрĕлӳ тапхăрĕнчи ача-пăча литератури

Европа халăхĕсен аваллăхран паянхи куна çитиччен халапсемпе юмахсем ытларах сыхланса юлнă. Хăюллă Роланд рыцарь,

Лоэнгрин юрăçă, Тристанпа Изольда, Дон Жуан çинчен калакан халапсем паянхи çыравçăсене хумхантараççĕ, вĕсен сюжет йĕрĕсене çĕнĕ хайлавсенче чĕрĕлсе тăнине курма пулать.

Вăтам ĕмĕрсенчи халапсем ăруран ăрăва сăмах вĕççĕн куçса çӳренĕ. Пĕр-пĕр çыравçă вĕсене литература хатĕрĕсемпе илемлетсе, хăйĕн шухăшĕсене палăртса пĕр-пĕр хроникăра усă курнă е уйрăм хайлав пек çырса хума пултарнă. ***Томас Мелори*** (1417 – 1471) акăлчан рыцарĕсемпе вĕсен хăюллă королĕ çинчен калакан халапсене пуçтарса «Смерть Артура» кĕнеке пичетлесе кăларнă.

***Мигель Сервантес*** (1547 – 1616) рыцарь романĕсене вуланă хыççăн тĕрлĕ «çулçӳрев» çинчен, разбойниксемпе тата пиратсемпе çапăçни çинчен, тухатмăшсемпе тата усал-тĕселсемпе тĕрлĕ хутшăнăва кĕни çинчен, ĕмĕтри пулмасла япаласене пысăка хуракан, чăн пурнăçран уйрăлса кайнă ăсран тайăлнă çын сăнарне «Дон Кихот» романта калăплать. Сервантес тексчĕ майĕпен илемлĕ литература хайлавĕ пулса тăрать, унăн тĕрлĕ варианчĕсем çуралаççĕ.

Рыцарь романĕ ку вăхăтри Европăри чылай çыравçăна хумхантарать. Англири ***Вальтер Скотт*** (1771 – 1832) «Айвенго», «Квентин Дорвард» хайлавĕсенче вăтам ĕмĕрсенчи шотланди, англи çĕр-шывĕсен пурнăçне сăнлать. Çыравçăн чылай хайлавĕ аслисене халалласа çырнă пулин те ача-пăча литературине тахçанах куçнă. Вĕсем приключенилле, историлле жанрсен йышне пуянлатаççĕ.

***Ян Амос Коменский*** (1592 – 1670) – чех ăсчахĕ, хăй хайлавĕсенче гуманистла педагогика идейисене аталантарать. Вăл ачасем вĕренӳрен, вĕрентекерен хăранине сирсе яма пултарать. Унăн паллă ĕçĕ «Великая дидактика». Педагог хăйĕн вĕрентӳ кĕнекисене пĕр-пĕринпе çыхăнса тăракан тĕнче, уçлăх çинчен вĕрентсе калакан пособи евĕр йĕркелет. «Мир чувственных вещей в картинках» кĕнекинче 150 ӳкерчĕк тата вĕсене ăнлантарса çырнă текстсем урлă автор хутла пĕлмен ачана тĕнче тытăмĕн тĕп шăнăрĕсем çинчен каласа кăтартать: Турă, тĕн, тĕнче тытăмĕ, пĕлĕтсем ... тата ыт. Паянхи кун тĕрлĕ энциклопедисен тытăмне çак кĕнекене евĕрлесе йĕркелеççĕ. Ăста педагогăн «Открытая дверь языков», «Открытая дверь предметов»

кӗнекисем те вăйă урлă пӗлӳ парас тӗллеве пурнăçлаççӗ. Коменский шухăшӗсем каярахри педагогсен, çыравçăсен пултарулăхне те пысăк витӗм кӳрсе тăнă. Л.Н. Толстой унăн принципӗсене хăй кӗнекисене йӗркеленӗ чухне усă курать.

## Çут ӗç тапхăрӗнчи ача-пăча литератури

***Даниил Дефон*** (1660 – 1731) «Робинзон Крузо» кӗнеки наукăлла системăлла энциклопедине, тӗрӗс воспитани пама вӗрентсе каланине çывăх. Унăн хайлавӗсенчи тӗп сăнар тӗрлӗ вăхăтра ӳснӗ ачасемшӗн тӗслӗх вырăнне шутланнă. Чылай ӗмӗр хушши унăн кӗнеки ачасне эстетика, пӗлӳ, кăмăл-спет, воспитани парас тӗллевсене пурнăçлать.

Çыравçă пӗр моряк хăй пурнăçӗнче чăн пулнине каласа панине тӗпе хурса çырать. Моряк çын пурăнман утрав çинче чӗрӗ юлма пултарать çеç мар, хăйне валли пурнăçра кирлӗ пӗтӗмлетӳсем те тăвать, хăйне валли юлташ тупать, ăна пӗлӳ пама пултарать. Романа автор мемуар жанрӗпе тӗп сăнар, моряк ятӗнчен çырнă. Кунта ӗнентерӳллӗ самантсемпе уйрăм детальсем чылай, кунсăр пуçне вăл психологи тӗлӗшӗнчен те ӗнентерӳллӗ.

Д. Дефо хыççăн литературăра приключени жанрӗн çӗнӗ тӗсӗ – робинзонада – анлă сарăлать. Ку йышши хайлавсенче ӗç-пуç пăтăрмахлăхне сăнласа парасси çеç тӗпре мар, ятарлă условисенче çынна воспитани парасси пӗлтерӗшлӗ. Робинзон хăйне тӗллӗн аталанма, тӗрӗс те кирлӗ воспитани илме пултарать. Кун хыççăн çеç вăл тепӗр çынна вӗрентме тытăнма пултарать. Тӗп сăнар аталаннă май вулакан та цивилизаци çитӗнӗвӗсене, ырă кăмăллăхăн пӗлтерӗшне уйăрма вӗренет.

***Джонотан Свифт*** (1665 – 1745) «Путешествие Гулливера» романӗнче хăй тапхăрӗнчи акăлчан обществинчен тăрăхлас тӗллеве лартать, çак ӗçе пурнăçланă май аллегорилле сăнарсем, сюжетсем калăплать. Унăн пултарулăхӗнчи публицистикăлла памфлетпа приключениллӗ фантастикăлла фабула пӗрлешӗвӗ вулакана куленхи политикăлла пăтăрмахсем çинчен манма май парать. Çыравçă реализмла гротеск мелӗпе анлă усă курать,

çавна май ют çын çинчен çырса панинче хамăртан тăрăхласа каланине курма пулать.

XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Францири салонсенчи пурнăç вĕреннĕ, пултарулла хĕрарăмсен кăмăлĕнчен чылай килсе тăнă. Вĕсем юмах каласcине йăлана кĕртеççĕ. Чылайăшĕ, пултарулăх шайне кура, хăйсем те юмах шухăшласа кăларнă. Юмахпа кăсăкланасси францири академире «киввисемпе» «çĕннисем» хушшинчи тавлашăва пула та ӳсме тытăнать. «Киввисем» искусствора антикăлла сăнарсем çеç пулмалла тесе çирĕплетенĕ, «çĕннисем» искусство никĕсне халăх пултарулăхне тата çĕнĕ литература шедеврĕсене хумалла тесе шутланă. Çĕннисен ушкăнне ***Шарль Перро*** (1628 – 1703) тĕпчевçĕ ертсе пынă. Вăл юрист пĕлĕвне илнĕ пулнă, патша çывăхĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ сановниксенчен пĕри пулнă. Перро хăй юмахĕсене çырнă май хавхалану çăлкуçне халăх сăмахлăхĕнче, кулленхи пурнăçра шыранă. Унăн пĕрремĕш юмах кĕнеки «Сказки матушки Гусыни, или Истории и сказки былых времен с поучениями» (1697) ятлă.

Перро французсен фольклорĕнче анлă сарăлнă сюжетсене аристократилле хăй евĕрлĕх тата буржуаллă практикăлăх сĕмĕ кĕртсе усă курать. Уншăн кашни юмахра мораль пулни пĕлтерĕшлĕ пулнă, çавăнпа та хайлавсем хыççăн вăл кăмăл сипет вĕрентĕвне сăвăласа çырса хăварать. Юмахçă хайлавсем çырнă чух ыркăмăллăхăн кашни енне (ĕçченлĕх, чăтăмлăх, тавçăрулăх) уйрăм сюжетпа çыхăнтарать, пурнăçа тата халăх этика нормисене тӳрре кăларма тăрăшать. Ш. Перро шучĕпе, ыркăмăллăхăн чи паха енĕ – вăл çын çинче харпăр хăйне тытма пĕлесси. Çак пахалăх геройсене чиновниксем патне çул уçма пулăшать. Унăн юмахĕсенчи тĕп сăнарсем те хăйсене тытма тата ырăнлă тумланма пĕлнипе, калаçма пултарнипе мĕн пур йывăрлăхсене çĕнтереççĕ.

Ш. Перро хăй юмахĕсенче йăлана кĕнĕ юмах элеменчĕсене куленхи пурнăç чăнлăхĕпе пĕрлештерме, çыхăнтарма тăрăшать. Раççейре Шарль Перро юмахĕсене 1768 çулта «Сказки о волшебницах с нравоучениями» ятпа пичетленĕ. 1866 çулта çак юмахсене И.С. Тургенев редакцилесе тепĕр хут кăларать.

## Европăри романтизм тапхăрĕнчи ача-пăча литератури

Романтизм тапхăрĕнчи çыравçăсем илемлĕх пахалăхне наци культуринче шыраççĕ. Çакна ирĕклĕхе, таса туйăмсене идиализациленипе сăлтавлама пулать. Хура халăх вара шăп та лăп ирĕклĕ, чару çуклăх, илемлĕ енсене упракан общество сăнарне аса илтернĕ. Çыравçăн пултарулăх пахалăхĕ те чăн пурнăça туйма пĕлнинчен, шухăшласа кăларма пултарнинчен килнĕ. Халăх сăмахлăхĕпе, юмахсемпе тата легендăсемпе кăсăкланни çырулла литературăра та юмах жанрне аталанма май панă. Çакна пулах çыннăн шалти тĕнчине тĕпчесси тарăнланать. Романтик-çыравçăсемшĕн уйрăмах чăн пурнăçпа вăйă, ĕмĕтпе юмах хушшинче пурăнакан ача тĕнчи кăсăклă пулса тăрать. Чылай çыравçăн хайлавĕсем ача-пăча литературине пуянлатаççĕ.

***Пĕр тăван Гриммсем, Якоб*** (1785 – 1863), ***Вильгельм*** (1786 – 1859), нимĕç чĕлхипе, историпе, культурипе кăсăкланакан çынсем пулнă. Вĕсем нумай томлă «Нимĕç чĕлхин словарьне», «Нимĕç чĕлхин историйĕ» кĕнекесене çырса кăлараççĕ. Авалхи нимĕç литературин палăкĕ шутланакан текстсене, нимĕçсен паттăрлăх тата чĕр чун эпосне, Вăтам ĕмĕрти çыравçăсен хайлавĕсене пичетлесе кăларма пултараççĕ. Çав хушăрах вĕсем ют халăхсен авалхи литературипе те интересленнĕ: вырăссен «Слово о полку Игореве...», скандинави скальдчĕсен юррисем... Вĕсем пуçтарса илемлетнĕ юмахсем «Детские и семейные сказки» (1812 – 1815) сборникра пичетленнĕ. Пичетлесе кăларнă юмахсенче пĕр тăван Гриммсем халăхăн чĕрĕ чĕлхине, композици уйрăмлăхне, содержанин идейипе эмоцине сыхласа хăварма пултарнă. Çав хушăрах илемлĕ литература пахалăхне кӳме тăрăшнă. Вĕсем каласа панă юмахсем этнографи материалĕ пек çеç янрамаççĕ, вĕсенче классикăлла литература пахалăхĕ те пур.

***Вильгельм Гауф*** (1802–1827) пултарулăхĕшĕн романтикăлла пулăм характерлă пулнă. Унăн хайлавĕсенче акăлчан романисчĕн В. Скотăн, нимĕçсен фантастикăлла юмахсен авторĕн Э. Гофманăн витĕмне асăрхама пулать. Илемлĕ хайлавсем çырма хавхалантараканĕ вара халăх сăмахлăхĕ тата тухăç халăхĕсен «Тысяча и одна ночь» юмах пуххи пулнă.

Тӑван фольклор тата тухӑҫ юмахӗсен мотивӗсемпе ҫырнӑ хайлавӗсене В. Гауф ачасене халаллать. Ачасем ҫеҫ фантазие ӗненме, шанма пултараҫҫӗ, тет вӑл. Ҫыравҫӑ «Сказки для сыновей и дочерей образованных сословий» виҫӗ томлӑ юмах кӗнеки ҫырать. Кунта «Рассказ о калифе-аисте», «Рассказ о маленьком Муке», «Карлик нос», «История Альмансора», «Холодное сердце» тата ытти юмахсем кӗнӗ. Халапсенче илемлӗ, улшӑнса тӑракан сӑнарсем чылай. Гауфӑн романтикӑлла юмахӗсем араб ярӑмне кӗреҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен тытӑмӗпе «Тысяча и одна ночь» юмах ярӑмне аса илтереҫҫӗ. Юмах пуҫламӑшӗнче тӗп сӑнарсем пӗр-пӗрне асамлӑ халап ярса парасси ҫинчен калаҫса татӑлаҫҫӗ. Ытти халапӗсем пӗри тепринчен тухса тӑраҫҫӗ. Тӗпӗр чух туратланса кайни те пулать. Урӑхла каласан, вӗҫӗмсӗр тата татӑлми сюжет йӗрӗ пулса тӑрать. Калавра чӑн пурнӑҫри детальсене, шухӑша ӳкнине усӑ курни асамлӑха иронилӗх сӗмӗ кӗртет. Тухӑҫ экзотикине палӑртакан уйрӑм паллӑсем те чылай. Гауф юмахӗсенчи калуҫӑ чӗлхи эмоци тӗлӗшӗнчен пуян, интонацинче ирони тата хӗрхенӳ туйӑмӗ пурри сисӗнет. Калура этем чунне сӑнаса парассине тӗпе хунӑ, унӑн ҫӳллӗ тата айаллӑ шайри уйрӑмлӑхӗсене сӑнлать пулин те автор калаҫӑвӗнче сентименталлӑх палли ҫук.

Тухӑҫ юмахӗсен мотивӗсем нимӗҫ халӑх сӑмахлӑхӗ ҫине таянса ҫырнӑ юмахсене те витӗм кӳнӗ. Вӗсене нумай сӑмах урлӑ сӑнлассиӗ, уйрӑм пайсен паха енӗсене кӑтартасси пур, калу тытӑмӗ тепӗр чух султансемпе витязьсем ҫинчен каланине аса илтерет. Автор буржуаллӑ обществӑра тӗлӗнтермӗш, экзотикӑлла сӑнарсене вырнаҫтарать. Вӗсем килсе кӗни ку обществӑн тунсӑх туйӑмне сирсе ярать. Ҫыравҫӑ шӳт урлӑ хӑй тапхӑрӗнчи обществӑн килӗшӳсӗр енӗсене, айванлӑхне тиркесе калать.

***Ханс Кристиан Андерсен*** (1805 – 1875). Вӑтам хресчен ҫемйинче мӗн пӗчӗкрен халӑх юмахӗсене, халапсене итлесе ӳснӗ. Илемлӗ литературӑпа палашасси Лафотенӑн юптарӑвӗсенчен, Л. Хольберг-дат комедийӗсенчен тата «Тысяча и одна ночь» юмахсенчен пуҫланать. Сагель хулинче гимназире вӗренет. Сӑвӑсем, трагедисем ҫырать, артист пулма ӗмӗтленет. Хӑйӗн пӗрремӗш хайлавӗсене Вильгельм Кристиан Вольтер псевдонимпа пичетленӗ пулнӑ (Шекспирӑн, хӑйӗн, Скоттӑн ячӗсем).

Тĕнче тăрăх нумай курса ҫӳрет. Ăна уйрăмах Итали ҫĕр-шывĕ кăмăла каять. Ҫавăнпа та юмахĕсенче сăнланнă ĕҫсем ытларах чух ҫавăнта пулса иртеҫҫĕ («Дюймовочка», «Русалочка»...). «Сказки, рассказанные детям» (1835 – 1842) кĕнекене кĕнĕ хайлавсенче халăх сăмахлăхĕнчи мотивсене усă курнă. «Огниво», «Дикие лебеди», «Свинопас» юмахсене тата «Истории, рассказанные детям» (1852) кĕнекене историнче чăн пурнăҫра пулнă событисене илемлетсе сăнланă. Ҫавăн пекех араб, грек, испани тата ытти халăхсен юмах сюжечĕсене усă курса ҫырнă. Халапсенче ача-пăча пурнăҫĕ палăрать.

Андерсен фольклорти сюжетсемпе, сăнарсемпе усă курать пулин те фантази элеменчĕсене те манса хăвармасть. Ун шучĕпе кулленхи пурнăҫра та тĕлĕнтермĕшсем нумай, ăна курма, илтме ҫеҫ пĕлмелле. Кашни япалапах хăйне май асамлă ĕҫ-пуҫ пулма пултарать. Ҫынсем вĕҫĕмсĕр тĕлĕнтермĕш тĕнчинче пурăнаҫҫĕ, тĕрлĕ пăтăрмаха лекеҫҫĕ, тĕлпулусем пулса иртеҫҫĕ, интереслĕ туйăмсем ҫуралаҫҫĕ. Этемĕн хăйĕн пурнăҫĕ те асамлă, мĕн ачаран пуҫласа ватлăх патне ҫитичченех. Ҫулталăк вăхăчĕсенче те кашнинчех асамлăх пур. Андерсен тĕнче мĕн пуҫламăшĕнченех илемлĕ, ҫураҫуллă пулма ҫуралнине тата ырă яланах усала ҫĕнтернине ĕненет. Ҫакă унăн юмахĕсене тата та илемлĕрех, чĕрĕрех тăвать.

Андерсенăн калу чĕлхи ҫемҫе, иронилĕ, хĕрхенӳ туйăмлă. Унăн калуҫи ачасене килĕшме пултаракан кашни япалипе киленет. Юмах сюжечĕ вара пур чух та телейлĕ пĕтмесен те пултарать, апла пулин те ырă усала ҫĕнтерни тĕпре. Ҫыравҫă ачасен кулленхи пурнăҫĕнчен илнĕ сюжетсемпе те усă курать. Ачасене аслисен туйăмĕсемпе, пурнăҫĕпе паллаштарать. Хирĕҫӳн сăлтавĕ ытларах чух ачана ыттисенчен уйăрса тăракан пахалăх ҫинчен асăнни пулса тăрать. Андерсен юмахĕсенче вĕрентсе калани те пур. Вĕсем пурнăҫа юратма, ырăпа усала уйăрма вĕрентеҫҫĕ. Юмахҫă шучĕпе: «Нет на свете такого человека, которому бы хоть раз в жизни не улыбнулось счастье. Только до поры до времени счастье это скрывается там, где его меньше всего ожидают найти».

Андерсен юмахĕсене вырăсла чăн малтан Петербург университечĕн профессорĕ П.А. Плетнев XX ĕмĕрĕн 40-мĕш ҫулĕсенче куҫарать. 2009 ҫулта И.Дмитриева чăвашла куҫарнă юмахĕсем Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленсе тухаҫҫĕ.

## XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи тата XX ĕмĕрти чикĕ леш енчи ача-пăча литератури

XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа тĕнчери ача-пăча литературинче стиль тата жанр мелĕсене сарас, аталантарас туртăм пуçланать. Ку вхăтри ачасен кĕнеки хăйне евĕрлĕ форма, мел, чĕлхе, логика тата психологи тĕлĕшĕнчен çĕнĕ майсем калăплакан пултарулăх лаççине аса илтернĕ.

Уйрăм халăхсен ача-пăча литератури йĕркеленме тытăнать: Англире, Францире, нимĕç чĕлхиллĕ халăхсен... Акăлчан ача-пăча литературин хăйне евĕрлĕхĕ чĕлхе тата фольклор уйрăмлăхĕсенчен килекен сăмах вăййисенче палăрать. Кашни халăх литературинчех ăса вĕрентекен хайлавсем чылай пулнă, тĕнче çине урăхла куçпа пăхма вĕрентекен кĕнекесем те сахал мар пичетленнĕ.

***Льюис Кэррол*** – акăлчан юмах ăстин Чарлз Латуидж Доджонăн (1832 – 1898) псевдонимĕ. Вăл математик пулнă. Тĕнчипе паллă «Алиса в стране чудес» (1865), «Алиса в зазеркалье» (1872) кĕнекесем çырнă. Çыравçă ку кĕнекесене хăйĕн юлташĕн хĕр ачине тата хăйне йăпанма, кăсăклантарма тесе çырнă пулнă. Вăл Виктория королевăн литература аталанăвне чарса тăракан йĕркисене сивленĕ. Патша шучĕпе, кĕнекесенче воспитани парасси, идеаллă геройсене ӳкересси, пĕр-пĕринпе çыхăнса тăракан сюжетсене усă курасси çеç тĕпре пулмалла пулнă. Кэеррол юмахĕсенче вара фантази тата «математикăлла логика» пĕрлешсе тăраççĕ. Çакă литературăра çĕнĕ жанр çуралма майсем уçса парать. Парадокса, логикăлла ăнланусене, фразеологилле çаврăмсене выляса усă курни çĕнĕ йышши ача-пăча поэзийĕн, прозин тĕп енĕ пулса тăрать.

Кĕнекен тĕп сăнарĕ – акăлчан чĕлхи. Сăмах пĕлтерĕшĕпе выляса усă курни – çыравçă пултарулăхĕн тĕп пахалăхĕ. Чĕрĕлсе тăнă метафорăсем, каларăшсем Алисăна кăсăклантараççĕ, тĕлĕнтермĕш ыйтусем умне илсе çитереççĕ, тĕлли-паллисĕр хуравсем партараççĕ. Кэерролăн тĕлĕнтермĕш, çав хушăрах кăштах тайăлнăтарах сăнарĕсем акăлчан фольклорĕнчи сăнарсене çывăх, халăхăн балаган, карнавал культурине аса илтереççĕ. Ĕç-пуçа динамикăлăх, çивĕчлĕх сĕмĕ

параканĕ кĕнекере диалог пулать. Диалогра акăлчан тĕнчи, унăн паттăрĕсен сăнарĕсем ӳкерĕнеççĕ. Вĕсем тата дуэль евĕр. Калаçакансенчен теприне шуç тупанĕпе шуçтарса яма пултараканни çĕнтерет.

Кэррол пĕлтерĕшсĕр япаласен пĕлтерĕшĕпе вылямалли вăйă шухăшласа кăларать. Кунта чăн пурнăçа йĕркелесси тата йĕркесĕрлетесси тĕпре. Алиса хăйĕн ĕçĕсемпе, шухăшлавĕпе йĕрке тума тăрăшать, Зазеркалье тĕнчинче пурăнакансем йĕркесĕрлĕх тăваççĕ. Асамлă, фантастикăлла тĕнчере пĕр-пĕр пăтăрмахран теприн патне, утăм хыççăн утăм малалла куçса пынă май Алиса ăслăрах та опытлăрах пулса пырать теме çук. Анчах та вулакан унăн çĕнтерĕвĕсемпе ăнăçусăрлăхĕ урлă хăйĕн ăс-тăнне, интелектне çивĕчлетет.

«Алиса в стране чудес» кĕнекене В. Набоков вырăсла куçарать.

***Алан Александр Милн*** (1882 – 1956) – математик тата çыравçă пулнă. 1924 çулта унăн «Когда мы были совсем маленькими», тепĕр виçĕ çултан «Теперь нам уже шесть» сăвă кĕнекисем тухаççĕ. Хăй сăввисемпе хайлавĕсене вăл ывăлне тата унăн теттисене, хăй арăмне халалласа çырнă. Унăн «Винни-Пух» юмахĕ икĕ кĕнекерен тăрать: «Винни-Пух» (1926 ç.) тата «Дом на медвежьем углу» (1927 ç.). В. Заходер ку кĕнекесене «Винни-Пух и все, все, все» ятпа вырăсла куçарать. Çыравçă хăйĕн кĕнекине ашшĕ хăй ывăлне юмахсем каласа панă евĕр йĕркелет. Хайлаври вăрман – ачалăх тĕнчине пĕлтерет. Вăхăт ăнлавĕ те кунта хăйне евĕрлĕ, вăл циклсем çине пайланать. Тĕп сăнарсен çитĕнĕвне вĕсене магазинтан хăçан илсе килнине кура палăртаççĕ. Сăнарсен системине арçын ачан психологине палăртнине кура уйăрма пулать: Пятачок – пуринчен те хăранă, иккеленӳ тапхăрĕ, Тагра – хăй йăнăшĕсем урлă пурнăçа курма вĕреннĕ тапхăр. Винни-Пух – шухăшлама хăнăхса пынă вăхăт. Усал ăнлавĕ ĕмĕтре çеç пурăнать, вăл формăсăр, ăна уйăрма та çук: Слонопотам, Бука, Бяка. Юлашкинчен вĕсен сăнарĕсем сирĕлсе пĕтеççĕ, ăнсăртран килсе тухнă ăнланусăрлăх пулса тăраççĕ. Йăлана кĕнĕ ырăпа усал кĕрешĕвĕ çук кунта. Унăн ырăнне пĕлӳпе пĕлӳсĕрлĕх, воспитанность тата ирĕклĕ тыткаланин хирĕçтăрăвĕ. Хайлаври вăрманĕ те, унта пурăнаканĕсем те

асамлӑ, вӗсене пысӑк вӑрттӑнлӑхсем хупӑрласа тӑраҫҫӗ. Кӗнекери кашни калавӑн тӗп мотивӗ – вӑйӑ урлӑ ача тӗнчене пӗлме тытӑнни.

***Астрид Линдгрен*** (1907 – 2002) Швецири ача-пӑча ҫыравҫи. «Пеппи Длинный-чулок» (1945), «Брит-Мари изливает душу» (1944) кӗнекесен авторӗ. Ачасен тӗнчине хӑйне евӗр куҫпа курма пултаракан автор.

«Пеппи Длинный-чулок» кӗнекинче ҫыравҫӑ чӗрӗ, хӑйне ирӗклӗ тытакан, тӗрӗс шутлама пултаракан, хӑй тапхӑрӗнчи патриархаллӑ обществӑн тунсӑхлӑ пӗр евӗрлӗ пурнӑҫне хирӗҫлекен хӗрача сӑнарне калӑплать. Ҫыравҫӑ хӑй тӗллӗн тӗрлӗ ыйтусене татса пама пултаракан ача сӑнарне литературӑна кӗртет.

Линдгренӑн кӗнекисен фонӗ – ахаль ҫемьен кулленхи пурнӑҫӗ. Кашни ачах ҫав ахаль кулленхи пурнӑҫа асамлӑ, хаваслӑ тӑвас тесе ӗмӗтленет. Ҫыравҫӑ ҫак тӗллеве пурнӑҫа кӗртет.

Линдгренӑн тепӗр паллӑ хайлавӗ – «Три повести о Карлсоне, который живет на крыше» (1965–1968). Ачашӑн куленхи пурнӑҫра ӑна ахаль те юратакан ашшӗ-амӑшӗ савӑнӑҫ кӳни сахалтарах иккен. Пысӑкланнӑ май вӑл аслисен пурнӑҫне хӑнӑхса пырать ҫеҫ мар, пурнӑҫа хӑйне килӗшнӗ пек йӗркелет. Ҫыравҫӑ идеалӗ ача пирки халиччен каланӑ чылай шухӑша хирӗҫлет. Вӑл чӑн-чӑн чӗрӗ ачана ӳкерет. Ача тӗнчи вара кӑткӑсрах та, хирӗҫӳллерех те, асамлӑрах та иккен.

***Антуан Мари-Роже де Сент-Экзюпери*** (1900 – 1944) «Маленький принц», «Письма к заложнику», «Летчик», «Южный почтовый» кӗнекесен авторӗ. Чухӑнланса юлнӑ дворян ҫемйинче ҫуралнӑ. Летчик, ҫыравҫӑ, изобретатель пулнӑ. Ӑна ҫыннӑн пурнӑҫӗнчи ачалӑх тапхӑрӗ уйрӑмах кӑсӑклантарнӑ. «Детство – это огромный край, откуда приходит каждый, словно из какой-то страны...», тесе ҫырать вӑл. Ҫав асамлӑ тӗнчери Маленький принц ун патне ҫырусем ҫырать. Этемӗн хӑйӗн ачалӑхне манма юрамасть, ӑна чунра туйса, илтсе тӑмалла. Ҫакӑ ҫитӗнсе ҫитнӗ ҫыннӑн ӗҫӗсене пӗлтерӗшлӗрех тума пулӑшать. «Маленький принц» хайлава автор ҫитӗнсе ҫитнӗ ачасене халалланӑ. Тӗрлӗ символсем урлӑ этемӗн ҫӗр ҫинчи ӗҫӗсем уҫлӑх куҫӑмӗпе, унӑн уйрӑлми пайӗ пулнӑ пек ҫураҫуллӑ пулмаллине калать. Ҫынсем ҫакна ӑнлансан хӑйсен чылай пӑшӑрханӑвӗ ниме юрӑхсӑр, кирлӗ мар япала пулнине ӑнланӗччӗҫ. Ҫын вара хӑйӗн пурнӑҫӗнчи тӗп

тĕллевĕпе Çĕр планетăна упрасси тата илем кӳрессипе çеç килĕшӳллĕн пурăнĕччĕ.

Маленький принц ансат та нумай пĕлтерĕшлĕ пурнăçпа пурăнать: хĕвел анăçĕпе каленет, чечексем ӳстерет, такана çитĕнтерет, çут çанталăк панă ырлăха упрать.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. Европăри ача-пăча литературин аталанăвĕн тапхăрĕсемпе тĕп критерийĕсем.
2. Европăри ача-пăча литератури аталанăвне витĕм кӳнĕ тĕп пахалăхсем.
3. Ш. Перрон юмахĕсем, юмах çырас ăсталăхĕ.
4. Андерсенăн юмахĕсен тĕп шухăшĕ, тĕллевĕсем.
5. В. Гауфăн юмахĕсен хăй евĕрлĕхĕ. Вĕсенчи тăван тата тухăç халăхĕсен фольклорĕсен пĕлтерĕшĕ.
6. Пĕртăван Гриммсен литература юмахĕн аталанăвĕнчи вырăнĕ.
7. Л. Кэррол юмахĕсен хăйне евĕрлĕхĕ. Вăл чĕлхе вăййине тĕпе хуни.
8. Çыравçăсем чăн пурнăçа хайлавсенче сăнарлани.

## ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА СĂМАХЛĂХĔ

Халăх – чи пĕлтерĕшлĕ тата генилле педагог. Ĕмĕрсем хушши вăл воспитани, пĕлӳ парас традицисене йĕркелесе, аталантарса пырать. Çав традицисем ăруран ăрăва куçса тата та пуянланса, якалса пыраççĕ. Халăхăн воспитани парас ĕçри чи паха мелĕ вăл – чĕлхе тата сăмахлăх. Фольклорта нацин ĕмĕрсем хушши упраннă, аталаннă ăс-тăн, эстетика, кăмăл сипет енчен воспитани парас традицисем упранаççĕ. Халăх сăмахлăхĕ ачана пур енлĕн аталантарма май панă. Пĕтĕмĕшле халăх сăмахлăхĕнче авалтанпах ача-пăча сăмахлăхĕн уйрăм жанрĕсем пур. Ача хăй калаçăвĕнче те уйрăм лексика усă курать. Каярахри аталану юмах-халап паттăрĕсен, тĕлĕнтермĕш сăнарсен витĕмĕпе пулса пырать. Вĕсен хушшинче ачан юратнă тата сивлек сăнарсем пур. Ача майĕпен пурнăç çине икĕ енлĕ пăхма тытăнать, ырăпа усала уйăрма пуçлать. Пысăкланнăçемĕн, тантăшсемпе вылянă май, ача хăй сăвă-юрă хывать: шӳт сăввисене, хăвăрт каламалли

сӑмахсене, витлешӳ сӑмахӗсене... Чупса, выляса ҫӳремелли тапхӑр иртсе пынӑ май ача ӗҫе кӳлӗнет, ӗҫ тата йӑла юррисене хӑнӑхать. Халӑх сӑмахлӑхне ӑша хывса ӳсни ачана тӗнчене ӑс-тӑн урлӑ ҫеҫ мар, туйӑм урлӑ та туйма, тӗпчеме вӗрентет. Халӑх сӑмахлӑхӗ тӑван ҫӗр-шыва, халӑха мӗн ачаран юратма вӗрентет ҫеҫ мар, характерта хӑюлӑх, ыр кӑмӑллӑх, тӳрӗ чунлӑх туйӑмӗсене аталантарма та пулӑшать.

Фольклорти ача-пӑча сӑмахлӑхӗ хӑй содержанипе формине кура педагогика функцийӗсене те пурнӑҫлать. Сӑмахлӑхӑн кашни тӗслӗхӗнчех ӑса вӗрентни, мораль пур. Халӑх ытарлӑ каласа, тӗрлӗ сюжетсене усӑ курса ӑса вӗрентет. Ачан ҫитӗнӗвӗ, аталанун уйрӑмлӑхне кура кашни тапхӑрӑн хӑйӗн сӑмахлӑхӗ пулнӑ. Унӑн урлӑ ача тӗнчене курма вӗренет. Ҫитӗнӳ уйрӑмлӑхӗсене кура халӑх поэзийӗн тӗслӗхӗсене тӑватӑ ушкӑна уйӑраҫҫӗ: сӑпка ҫулӗсенчи, кӗҫӗн ҫулсенчи, вӑтам ҫулсенчи, аслӑ ҫулсенчи сӑмахлӑх. Чӑваш ача-пӑча сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсем авалтанах килеҫҫӗ, вӗсенчен чылайӑшӗ халӗ те хӑйсен пахалӑхне ҫухатман, хӑшӗсем ӗмӗрсем хушшинче улшӑннӑ. Пуррисем ҫумне ҫӗнӗ тапхӑрта ҫуралнисем хушӑнса пыраҫҫӗ.

Паянхи ача-пӑча сӑмахлӑхӗн пулӑвӗ виҫӗ тӗрлӗ: 1) аслисем ачасем валли ятарласа хывнисем, 2) ҫитӗннисен фольклорӗнчен куҫнисем, 3) ачасем хӑйсем шухӑшласа кӑларнисем.

Ача-пӑча сӑмахлӑхне ӑҫта, хӑҫан, мӗнле усӑ курнине кура ушкӑнлама пулать: пӗчченe ушкӑнпа, килте е урамра, ҫулла е хӗлле, уявра е куллен тата ыт. те.

Текстсене ушкӑнламалли меллӗрех критери – вӑл текста илемлӗ сӑмах пултарулӑхӗн хайлавӗ вырӑнне хурса хаклани. Кун пек чухне унӑн содержанипе формине, пурнӑҫра мӗнпе ҫыхӑннине шута илме тивет. Ача-пӑча сӑмахлӑхӗн жанрӗсем: сӑпка юрри, йӑпатмалли-илӗртмелли сӑвӑ-такмак, йӑла-уяв юррисем, чӗнсе каламалли сӑвӑсем, йыхрав юррисем, вӑйӑ юррисем, тӑрӑхламалли такмаксем. Прозӑлла хайлав жанрӗсем: юмах-халап, ӑса вӗрентекен калавсем, юптарусем.

Ача-пӑча сӑвви-юрри хӑвӑрт улшӑнса ҫӗнелекен пулӑм мар, кунти жанрсем ҫирӗп традицисене пӑхӑнса тӑраҫҫӗ. Пӗр сӑвӑ-юрӑсемех тӗрлӗ ҫӗрте сарӑлнӑ. Чӑваш Республикинчи ача-пӑча

сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем диаспорăри ача-пăча сăмахлăхĕсемпе пĕр пулнине палăртма пулать.

Ача-пăча сăмахлăхĕн чылай хайлавĕсенче халăхăн аваллăх сăнарĕсем упранаççĕ. Авал хывăннă сăмахлăх тĕслĕхĕсене çав халлĕн упрас туртăм ачасен çитĕннисенчен чылай çирĕп. Çавна май вĕсен фольклорĕнче халăхăн авалхи историйĕнчен юлнă йĕрсем, манăçа тухнă сăмахсемпе кивелнĕ пулăмсем тата ытти пулăмсем йышлăн палăраççĕ. Тĕслĕхрен, авал чăвашсем Çĕпĕр, Кавказ тăрăхĕнче пурăнни, славян халăхĕсемпе хутшăнни, Ылтăн Уртапа Хусан ханлăхĕ пуç пулнă тапхăрти йăласемпе çав вăхăта асăннисем упранса юлнă.

Ача-пăча сăмахлăхĕ халăх педагогикин, ватăсен çамрăксене ырра вĕрентес ĕмĕчесене пăхăнса аталанса пырать. Вăл ачана пурнăça ăнланма пулăшать, ăс-хакăла хускатать, шухăшлава çивĕчлетет, чĕлхе пултарулăхне туптать, илеме туйма хăнăхтарать.

Чăн малтан пичетленсе тухнă ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕ «Чи-чи кăсăя» юрă пулнă. Ăна С.М. Михайлов 1853 çулта çырса илнĕ. Хăйĕн тĕпчев ĕçĕсенче С. Михайлов чăвашсен йăла пурнăçне ачасем те хутшăннине кăтартса парать. Ача-пăча сăмахлăхне ятарласа тĕпчессе çырни Н.И. Золотницкийĕн «Чăваш чĕлхин словарĕ» кĕнеки çумĕнчи очеркĕсенче, В.К. Магницкийĕн «Материалы к объянению старой чувашской веры» тĕпчевĕнче пур. В.К. Магницкий хăйĕн ĕçĕнче ача-пăча вăййисен, юррисен тĕслĕхĕсене усă курнă. Шкулта ачасене тăван халăх поэзийĕн тĕслĕхĕсемпе усă курса вĕрентес ĕçе Н.И. Золотницкий пуçарса ярать. Чăвашсен пĕрремĕш букварьне (1867) вăл ваттисен сăмахĕсен тĕслĕхĕсене тĕрлĕ темăпа ушкăнласа кĕртет. Çавăн пекех чăваш ялĕсенче çӳренĕ хыççăн сăмахлăха, чĕлхене тĕпчесе çырнă П.М. Мальховăн, В.А. Мошковăн, Х. Паасоненăн, Д. Месоршăн ĕçĕсенче те ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем пур.

1917 çулччен ятарласа чăваш ача-пăча сăмахлăхне пуçтарас ĕç Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пурнăçланса пырать. Ку ĕçе И.Я. Яковлев йĕркеленипе Г. Тимофеев, Ив. Юркин, К. Иванов, П. Пазухин т. ыт. те хутшăннă. Унсăр пуçне, М. Трубина юмах кĕнекине пухса хатĕрлет, ăна икĕ хутчен пичетлесе кăларать. Ф. Павлов ача-пăчан вăйă юррисене пухса пичетлесе кăларать.

XX ĕмĕрĕн 20-30 çулĕсенче сăмахлăха пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсем Н. Золотов, Н. Романов, С. Максимов, В. Воробьев, Н. Ваçанка, Г. Лисков хăйсен ĕçĕсенче те ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе усă кураççĕ.

И. Никитин, И. Тукташ ятарласа юмахсене пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. И. Тукташ сăпка юррисемпе кулăш сăввисене хăйĕн «Чăваш фольклорĕ» кĕнекине кĕртет. Каярах ку жанрсен хăй евĕрлĕхĕ пирки тĕпчев ĕçĕ çырать. Н. Золотов ача-пăча сăмахлăхĕн тытăмне ятарласа тишкерет.

***Сăпка çулĕсенчи поэзи***. Сăпка юррисем – пĕчĕк ачасене çывăратнă чух йăпатса юрламалли юрăсем. Фольклорти чи авалхи жанрсенчен пĕри шутланать. Сĕм авал çынсем ыйхăна чĕрĕ тесе шутланă. Ытти ыр-усалсем пекех ыйхă та кайма, килме, вĕçме пултарнă (ыйхă вĕçрĕ, ыйхă килчĕ...). Авлхи çын шучĕпе ырăсене йыхравланă, пĕлсе каланă сăмахпа чĕнсе илме пулнă. Ыйхăна та çывăрма выртнă ача патне килме ыйтнă, ачана çывратма, сывлăх пама ыйтнă. Çавнпа та сăпка юррисенче авалхи йыхрав юррин хăш-пĕр çаврăмĕсем пур. Сăпка юррисен тĕп тĕллевĕ – ачана лăплантарасси, тĕп шухăшĕнче ачана сывлăх, телей, ăраскаллă пурнăç сунасси пур. Юрăсенче вăйă, йăпату урлă ача амăшĕн кулленхи пурнăçĕ палăрать: вăл ача ӳснине курса савăнни, пăшăрханни, ун пулсалăхĕ пирки шухăшлани. Юрă тексчĕнче ачана çывăх, ăнланма çăмăл сăнарсем тĕл пулаççĕ. Унăн лексики те ансат, сăмахĕсем йышлă мар. Вĕсем ачана хăйĕн таврашĕнчи тĕнче çинчен каласа параççĕ.

Ача фольклорĕшĕн тĕрлĕ чĕр чун ячĕсене усă курни характерлă. Вĕсем çынсем пекех калаçаççĕ, ĕçлеççĕ. Çакăнта антропологизм паллисене те асăрхама пулать. Авалхи çынсем ĕненнĕ тăрăх, чĕр чунсен чунĕ, ăс-тăнĕ пур, çавăнпа та вĕсем çынсемпе тĕрлĕ хутшăнăва кĕме пултараççĕ.

Сăпка юррисен хăйне евĕр илемлĕх мелĕсем, уйрăм чĕлхе, композици уйрăмлăхĕсем пур. Ытларах анлă мар паллă ячĕсене усă курасси характерлă, вăрăм эпитетсем сайра тĕл пулаççĕ. Сăмахри пусăма улăштарни те тăтăшах тĕл пулать. Ят ылмаш, танлаштару, уйрăм сăмах çаврăнăшĕ е сасă повторĕ чылай. Рифма функцине ритмика, кĕвĕлĕх, сасă повторĕсем те пурнăçлама пултараççĕ. Ятсене ачашласа, йăпатса каласси, е

ăна валли ятарлă аффиксене усă курни тĕл пулать. Кун пек чухне яча ятне çеç мар, ăна хупăрласа тăракан кашни япаланах ачашласа калама пулать.

В.П. Аникин сăпка юрри пирки çапла калать: «Колыбельная песня – своего рода прилюдия к музыкальной симфонии детства. Пением песен приучают ухо младенца различать тональность слов, интонационный строй родной речи, а подрастающий ребенок, уже научившийся понимать смысл некоторых слов, овладевает и некоторыми элементами содержания этих песен».

Ача-пăча фольклорне кĕмен сăпка юррисем те пур. Вĕсен форми сăпка юррисене çывăх, шухăшĕпе амăшĕн кăмăл-туйăмне палăртаççĕ, вĕсем лирикăлла юрăсен тĕслĕхĕ пулаççĕ. Вĕсенче социаллă пурнăç пирки калани тĕп вырăн йышăнать.

***Йăпатмалли сăвă-такмаксене*** такмакласа калаççĕ. Ача йĕрсен, карăнсан, çывăрса тăрсан, ӳксен каламалли сăмахсем. Ку ушкăна пӳрне вăййисем те кĕреççĕ. Пӳрне вăййисем авалтанах килнине ку жанр чылай тĕрĕк халăхĕсен пурри тата вĕсем пĕр евĕрлĕ пулни ĕнентерсе парать.

***Календарь поэзийĕ.*** Ача-пăча аслисем пурнăçлакан йăласене хутшăнни паллă. Çак йăласем, ытларах чухне, çĕр ĕçĕпе çыхăннă. Ку ушкăна сурхури, çăварни, сĕрен уявĕн юррисем кĕреççĕ. Чĕнӳ-йыхрав юррисем çут çанталăкпа чĕрчунсене, кайăк-кĕшĕкпе кăпшанкăна чĕнсе хушса калаççĕ. Хĕвелпе çумăра, вут-кăвара чĕрĕлме чĕнсе калакан тĕслĕхсем пур халăхăн та тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та вĕсем чи авалхи тапхăрта ăрăмласа каланинчен пуçланса кайнă тесе шутлаççĕ.

***Кулленхи сăвă-юрă***. Ачасен фольклорĕнче пĕр-пĕрин ăсхакăл пуянлăхне тĕрĕслемелли сыпăнуллă юрăсем пур. Чылай тĕслĕхĕ аслисен фольклорĕнчен куçма пултарнă. Вĕсем ачасен шухăш-кăмăлне витерекен сăнарсемпе пуянланнă, ансатланнă, улшăннă. Ку сăвăсен шăнăрне ламран-лама куçса пыракан сăнарсем пĕрлештерсе тăраççĕ. Тĕллевне кура, сăвăсем диалог евĕр те йĕркеленĕççĕ. Вĕсенче халăх историйĕ, кун-çулĕ, кулленхи пурнăçĕ палăрать. Ку йышши жанрсем вырăс, белорус, коми халăхĕсен те пур. Çак ушкăна пулмасла халапсемпе ташă такмакĕсене те кĕртме пулать.

***Вăйă юррисем***. Вăйă тени ачана савăнăç кӳрет, пурнăçа вĕрентет. Унăн урлă ачан вăй-халĕ çирĕпленет, тавракурăмĕ сарăлать. Хăйĕн вăййисенче ача чылай чухне аслисен ĕçĕ-хĕлне евĕрлет: ака тумалла, тырă вырмалла, кăшман кăлармалла вылять. Вăйăра авалхи тата хальхи йăласем палăрма пултараççĕ. Ача-пăча вăййисенче халăх историйĕнчи самантсем те сыхланса юлма пултарнă. Вăйă вăхăтĕнче усă куракан теттесем те аслисен пурнăçĕнчен куçнисем: ухă, çĕмрен... Хăй касса ăсталанă япаласем те пур: йывăçран – сӳре, урапа, пушăт чĕллинчен – лаша, йытă, качака, улăм пĕрчисенчен – кайăксем, хутран касса кăларнă кĕлеткесем. Ача вылямалли теттесем пурнăç, самана çĕнелсе пынине кура улшăнаççĕ. Вăйăсене ушкăнлама та пулать: уявсем вăхăтĕнче çеç выляма юранă авалхи вăйăсем тата кулленхи вăйăсем. Тепĕр вăйăсене пĕччен те выляма пулать, теприсене иккĕн-виççĕн е ушкăнпа. Çулталăк вăхăтне кура та вăйăсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Çитĕнсе пынă май та ачан вăййисем улшăнаççĕ. Вылянă вăхăтра та ачасем çĕнĕ вăйă шухăшласа кăларма пултараççĕ.

Композици тĕлĕшĕнчен пăхсан, вăйă темиçе сыпăкран тăма пултарать: умĕ, пуçламăшĕ, вĕçĕ. Чăваш ачисен вăййисем ытти тĕрĕк, финн-угор, вырăс ачисемпе пĕр евĕр пулнине асăрхама пулать. Тепĕр чух вырăс вăййисем ним улшăнмасăр кĕни те тĕл пулать.

***Витлешӳтакмакĕсене*** пĕр-пĕринчен кулас-витлес, йĕкĕлтес шутпа калаççĕ. Такмаксен темисенчен çак уйрăмлăхсене уйăрса илме пулать: ют ялпа ют урам, ют халăх ачисенчен тăрăхланисем, уйрăм сăмах пирки хывнă такмаксем. Сăвă тытăмне сасăсен пĕр пек янăравĕ, çемĕпе кĕвĕ, рифмăсем йĕркелесе тăраççĕ. Текстра усă курнă эпитетсем япалин чăн паллисене палăртмаççĕ, сăввăн шухăшне кулăш сĕмĕ кĕртес тĕлĕшпе усă кураççĕ. Такмак икĕ е тăватă йĕркеллĕ пулать. Сăвăра тăрăхлакан япала çумне кӳренмелли эпитет е ырă мар сунакан сăмахсем хушса калаççĕ. Тĕпчевçĕсем ку йышши тĕслĕхсене такмак-портрет е витлешӳ-эпиграмма тесе ят панă. Сюжетлă такмаксем те пулаççĕ. Ку жанра ытти жанрсенчи сăвă-юрă та куçма пултарать, уйрăмах, пулмасла халапсенчен. Чăваш ача-пăча фольклорĕнче шӳт, хăвăрт сăмах, вăрттăн чĕлхе жанрĕсем те пур.

***Юмах-халапсене*** чăн малтан çитĕннсем валли хывнă пулнă. Юмахсенче ĕç çынни сĕм авалтан йĕркеленсе пынă ĕмĕчĕсем, шухăш-кăмăлĕ, поэзилле сăмахлăхĕн илемĕ палăрать. Халăхăн кун-çулĕ, кăмăлĕ, ĕмĕчĕ, савăнăçĕпе хурлăхĕ курăнать. Юмах ачан ăс-хакăлне пуянлатать, илеме туйма хăнăхтарать, ырăпа усала уйăрма вĕрентет, обществăри тĕрĕсмарлăхпа тĕрĕслĕх хăшшинчи уйăрмлăха курма хăнăхтарать.

Юмахсем ăса вĕрентес шухăшлă, илĕртӳллĕ сюжетлă пулаççĕ. Ачасем юмахри уйрăм сăмах çаврăнăшĕсене, пуплев-сене, юрăсене тата ытти илемлĕ вырăнсене хăвăрт ас туса юлаççĕ. Ăна фактсемпе, илемлĕхсемпе тапса тăракан детальсем илĕртеççĕ. Халăхра сăвăласа калакан юмахсем те пур. Анчах вĕсене ас туса калама йывăр пулнă пирки прозăлла варианчĕсем çуралаççĕ. Вĕççĕр юмахсем ĕç çине ĕç тиенсе пынипе йĕркеленеççĕ. Вĕсене кĕçĕн çулхи ачасене каласа пама меллĕ. Ку юмахсенче кăсăклăх пысăк вырăн йышăнать пулин те, вăл хăйне тĕллĕн кăна тăсăлмасть, юмахăн шухăшĕпе çыхăнса ăна аталанма пулăшать. Юмахсем ытларах айван, канăçсăр çынсенчен тăрăхлаççĕ.

Чĕр чун юмахĕсенче авалхи çынсен тотемлă тĕнчекурăмĕ сыхланса юлнă. Вĕсенче чĕр чунсем хăйсене çынсем пек тыткалаççĕ, пĕр-пĕринпе тĕрлĕ хутшăнăва кĕреççĕ. Сĕм авалхи юмахсенче чĕр чунсем этемрен вăйлăрах, чеерех пулни курăнать. Юмахри асамлăх – асамлă вăй-хăватсем, пурне те пултаракан, никам çĕнейми этемĕн ывăл-хĕр паттăрĕсем – этемлĕхĕн «ачалăх тапхăрĕнчи» шухăш-ĕмĕчĕсенче çуралнăскерсем, паянхи ачасемшĕн те интереслĕ, ырă фантазие чĕретеççĕ.

Темипе стилистикине кура юмахсене традицилле чĕр чунсем çинчен калаканнисене, асамлисене, йăла юмахĕсене уйăраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсене тăвата ушкăна пайлама сĕнеççĕ: янавар, нараста, асамлă тата шаймăк юмахĕсем. Юмахра уйрăм сăнар характерĕ хатĕр хальлĕн çӳрет, ăна ачан хăйĕн хакласа лармалла мар. Тилĕ – чее, упа – вăйлă, Ухмах Йăван – ăнăçлă, Иван-патша – хăюллă... Ачасем валли ятарласа çырнă юмахсем те пулаççĕ. Вĕсенчи тĕп сăнар – ача, пикепе хăрхăм, вăл ĕçчен тата тӳрĕ кăмăллă, ырлăхшăн тăрăшать, вилме каян пуйса килет, пуйма кай-якан вилсе килет. Ача пархатарсăр сăнарсемпе амаçурипе,

тухатмăшпа, çын çиен карчăкпа хирĕçĕве кĕрет, çĕнтерӳпе таврăнать. Ку юмахсенче ăса вĕрентесси тĕпре. Анчах та ăса вĕрентесси тӳрремĕн пулса пымасть, юмах хăвачĕпе хăех ăша кĕрсе пырать.

Чылай юмахсенче композици тĕрлĕ çаврăмсенчен тăрать. Вĕсен тытăмĕ ĕç-пуç виçĕ хут пулса иртни çинчен каланисем пур. Кашни повторĕ хыççăн ĕç çивĕчлĕхĕ ӳссе пырать. Калу мелĕн çак уйрăмлăхĕ ытти тĕрĕк халăхĕсен те пур, вăл сĕм авалтанах килет. Юмахăн чĕлхи уçăмлă, ритмлă, сăнарлă. Ачасене ытларах ырă кăмăллă, тӳрĕ чунлă, вăйлă, илемлĕ сăнарсем килĕшеççĕ. Вăл яланах йывăрлăхсене çĕнтерет. Ăна асамлă япаласем пулăшнипе пĕрлех вăл хăй те тавçăруллă, ăслă.

Патша самани вăхăтĕнче аристократи ытларах Европа культурине сума сунă пирки вырăс юмахĕсем хисепре пулман, вĕсене чиркӳ те калама чарнă. XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче хăш-пĕр педагогсем юмахсенче нимле воспитани тĕллевĕ те çук тесе критикленĕ.

***Халапсем*** ятарласа ача-пăча сăмахлăхĕнче аталанман. Вĕсем тăван халăхпа çĕр-шыв аваллăхĕ çинчен пĕлме, пĕлес тенине татах та аталантарма пулăшаççĕ. Фольклорта халапсен тĕсĕсем темиçе те пур: мифологи, истори, топонимика, улăп халапĕсем тата ыттисем те. Улăп халапĕсем ачан халăхăн историне пĕлес, унпа кăсăклантарас ĕçре пĕлтерĕшлĕ. Чылай чухне вĕсенче ырăпа усал вăйсем кĕрешнине кăтартасси, ырă яланах çĕнтернине палăртасси тĕпре. Халапсенче историнче чăн пулнă ĕçсем мифри сăнарсемпе, мотивсемпе пĕрлешсе тăраççĕ. Хайлавсенче ӳстерсе каланине усă курни калăва монументалăх сĕмĕ кĕртет, фантастикăлла сăнарсем вара ĕнентерӳллĕрех пулса тухаççĕ. Чăвашсен ĕмĕрсем хушшинче туптаннă идеалĕсем улăп халапĕсенче палăрса юлнă. Вăл халăх кун-çулне, унăн авалхи тавракурăмне хăйне евĕрлĕ анлă ӳкерсе кăтартать. Халăх пултарулăхĕн эпосла сăнарĕсем йăхсемпе ăрусене, вĕсен пĕрлешĕвĕсене, нацине пĕр чăмăра пĕрлештерсе аталанма пулăшнă. Улăп халапĕсем хăйсен идейипе сăнарĕсене кура чăвашсен сĕм авал хывнă халапĕсем пулаççĕ. Вĕсенче хамăр несĕлсем Атăл çине куçса килнĕ хыççăнхи пурнăç паллисем

сисĕнеççĕ. Улăпсем Алтăркуçпа, темиçе пуçлă ăçтахасемпе, Хусан ханĕсемпе, Терпит хунпа, тутар-монголсемпе çапăçаççĕ.

Улăпа çĕр çине этеме тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕхе вĕрентме, усалтĕселсемпе кĕрешме Аслати турă янă. «Улăп» сăмах хальхи вăхăтра халăх хушшинчи пысăк пӳ-сийлĕ, вăйлă паттăр çын пĕлтерĕшпе çӳрет. Авалхи вăхăтра вăл çар çыннине пĕлтернĕ. Ытти тĕрĕк халăхĕсен те вăл çакăн пекех. Ку халапсен хăш-пĕр сюжет йĕрĕсем хăйсен аталанăвĕпе авалхи тĕрĕксен пурнăçĕпе çыхăннине кăтартаççĕ. Улăп халапĕсем чăвашсен те паттăрлăх эпосĕ пулнине çирĕплетеççĕ. Халăхра улăпсен ачалăхĕ çинчен, вĕсем епле пĕтни çинчен калакан тĕслĕхсем чылай. Ку йышши хайлавсем прозăлла та сăвăлла та пулаççĕ. Чăвашсен йăла-йĕрке поэзийĕ ытларах аталаннă. Çавăнпа та пирĕн халăхăн хатĕр хальлĕн çӳрекен эпос çук. Унăн сюжечĕсене уйрăм халапра, юрăра, йăла-йĕрке сăмахлăхĕнче тĕл пулма пулать. Чăвашăн ăнĕнче пĕр-пĕр шухăша сăмахпа сăнласа парасси мар, ăна ĕçпе туса кăтартасси (тĕслĕх урлă) малти вырăна тухать.

Улăп халапĕсене XVIII ĕмĕр вĕçĕнчех çырса илме, тишкерме пуçланă. Хальтерехри тĕпчевçĕсенчен И. Одюкова, В. Канюкова, Г. Волкова (вăл унта халăх педагогикин паллисене тупать), А. Тимофеева, А. Салмина, Г. Юмарта асăнмалла. Улăп халапĕсене пĕр çĕре пуçтарса пĕр хайлав пек кăларас ĕç XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче пуçланать. С. Лашман ку ыйтупа ятарлă статья çырать, сюжетсене усă курса поэма йĕркелет. «Халăх сăмахлăхĕнчен йĕркелесе тунă произведенисем ытла та илемлĕ пулаççĕ, вĕсенче халăхăн чунĕ, пуçĕ, чĕри пит лайăх курăнать», – тет вăл, «Улыпиада» çырма хавхалантарать.

1927 çулта Çемен Элкер «Сунтал» журналта «Улăп» поэма пичетлет. Кунта халапсенче тĕл пулакан темиçе сюжета усă курнă, мифологири персонажсен ячĕсене асăннă. Çуйăн Хĕветĕрĕ çак çулсенчех «Улăп» пьеса çырса пăхать. Вăл халапсене пĕр çĕре пуçтарса пĕтĕмĕшле хайлав йĕркелес тĕлĕшпе 60 çула яхăн тăрăшать, унăн тăхăр варинтне çырать. Улăп халапĕсен пĕтĕмĕшле пуянлăхне çыхăнуллăн 1996 çулта тухнă «Улăп» кĕнекинче кăтартаса парать. В. Ахун, Юхма Мишши, И. Ивник пултарулăхĕсенче те халăх эпосне йĕркелес туртăм пулнă.

***Юптарусенчи*** тĕп сăнарсем çынсем, чĕр чунсем, чĕрĕ мар япаласем пулма пултараççĕ. Юптару пурнăçра пулса иртни пирки анлăн шухăшласа пăхма хистет. Вăл çынсен кулленхи пурнăçĕнчи, йăлари, обществăри çитменлĕхсене питлет, айванлăхпа суяна уйăрма вĕрентет, айванлăхпа мĕскĕнлĕхе хирĕç тăратать, сĕмсĕр пуçтаха, куштансемпе пуяна шанасран асăрхаттарать.

Чăваш юптарĕвĕсем тиркемелли, тăрăхламалли ĕçсене çеç мар, пултаруллисене, тĕслĕхе юрăхлисене те ӳкерсе кăтартаççĕ. Юптарусенче яланах пĕрле çыхăнса тăракан персонажсем тĕпре: йытăпа кушак, чакакпа чĕппи... Сюжета чылай чух этем обществинче чăн пулма пултарнă ăса вĕрентес ĕç хывăнать. Юптарури илемлĕхпе сăмах тытăмĕ ăса вĕрентекен калавсене çывăх, кунта ун çумне шӳт те хушăнать.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕпрех жанрĕсене, вĕсен уйрăмлăхĕсене каласа тухăр.
2. Чăваш ача-пăча сăмахлăхне тĕпчес ĕç аталанса пыни.
3. Ача-пăча сăмахлăхĕн аталанăвĕ.
4. Ача-пăча сăмахлăхĕн хăй евĕрлĕхĕ, тĕллевĕсем çинчен калăр.
5. Çитĕнӳ уйрăмлăхне кура ача-пăча сăмахлăхне тĕрлĕ ушкăнсем çине пайланин сăлтавĕсем.

## Г.Н. ВОЛКОВĂН ЭТНОПЕДАГОГИКИ

Г.Н. Волков – халăх педагогикине тĕпчесе чапа тухнă академик. Этнопедагогика общество пурнăçĕн уйрăлми пайĕ шутланать, унăн тымарĕсем те сĕм авалтан килеççĕ. Вăл халăх, çын, çемье, ачасем, общество пурнăçĕ çинчен, вĕсен тĕнчери пĕлтерĕшĕ çинчен, çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани парасси çинчен мĕн шутланипе ĕмĕтленнине палăртать. Халăхăн педагогика культури ĕмĕрсем хушши упранакан афоризмла сăмах çаврăнăшĕсенче, ал-ĕç ăсталăхĕнче сыхланса юлнă.

Халăх ăруран-ăрăва хăйĕн социаллă тата обществăлла пĕлĕвне куçарса пырать, пурлăх тата чун культурин историне йĕркелет. Халăх историйĕ вăл ăрусен черетленĕвĕ. Кашни ăру умĕнхи хатĕрленĕ, упраса хăварнă пурлăх тата экономика

пахалăхĕсене, культура çитĕнĕвĕсене усă курать. Çакă халь пурăнакан çынсене унчченхисенчен юлнă чи аван енĕсене ăша хывса малалла аталантарма, пуянлатма май парать. Ку енчен пăхсан, халăх çак пахалăхсене йĕркеленĕ пек çеç курнăмасть, вăл чунлăхăн, философилĕхĕн, поэзин иксĕлми çăлкуçĕ тата чăн пирвайхи ăс-тăна вĕрентекен, чăн çын пулма хăнăхтаракан.

Халăх педагогикин опычĕпе авалхи тата хальхи педагогсем кăсăкланнă. Я.А. Коменский, чех педагогĕ, çемье воспитанийĕ çине таянса «материнская школа» текен ăнлава никĕслет. И.Г. Песталоций, швецари çынни, хăй хальĕн воспитани парас ĕçри опыта пĕтĕмлетсе «Книга для матерей» ĕç çырать. Вăл çемьере пурнăçланма пуçланă воспитани ĕçĕ шкулта малалла аталанса пымалла тесе шухăшланă.

Халăх педагогики этнологи, фольклор, чĕлхе пĕлĕвĕ ăслăлăхĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Халăх характерĕ, шухăшлавĕ, идейисем унăн фольклор тексчĕсенче палăраççĕ. Унăн пуянлăхне тĕпчес ĕç пирĕн çĕр-шывра 50-мĕш çулсенче Г.Н. Волков пуçарнипе тытăнать. Чăваш халăхĕн воспитани парас традицийĕсене тĕпчесе вăл «Чувашская народная педагогика», «Этнопедагогика чувашского народа», «Трудовые традиции чувашского народа», «Этнопедагогика» монографисем çырса кăларать. Г.Н. Волков этнопедагогика сăмаха наука терминĕ туса хурать. Унăн ĕçĕсенче этнопедагогика йĕркеленсе çитнĕ система, пур хускатнă проблемăсен тулли характеристикине палăртакан ăслăлăх пулса тăрать. Унăн предметне, халăх воспитани тата унăн тĕллевĕсем пирки мĕн шутланине, ĕç урлă воспитани парасси – тĕп мел шутланнине, ăс-тăн, кăмăл-сипет, эстетика, сывлăх воспитанине, халăх ырă çынăн кăмăлĕпе пахалăхĕ пирки мĕн шутланине, ача-пăча йышне, воспитани ĕçĕн мелĕсемпе меслечĕсене, мелсен уйрăмлăхне тупса палăртать. Хăйĕн ĕçĕсенче Г.Н. Волков этнопедагогика ăслăлăхĕ хускатакан пур проблемăна та пăхса тухнă: халăх воспитанийĕн функцийĕсене, воспитани мелĕсене, меслечĕсене, воспитани ĕçне пурнăçлакансен пĕлтерĕшне...

Г.Н. Волков шучĕпе, халăх педагогики вăл – уйрăм çыннăн характерне йĕркелеме, аталантарма май паракан тĕллевсемпе задачăсен, мелсемпе майсен, хăнăхусен пĕрлĕхĕ тата çыхăнăвĕ. Унсăр пуçне, вăл воспитани ĕçĕнчи эмпирикăлла содержанипе

пĕлĕве палăртать. Çак пĕлӳ сăмах вĕççĕн упранать, çамрăксене воспитани парас ĕçри практикăлла ĕç-хĕлте палăрать. Г.Н. Волков шучĕпе, воспитанин тĕллевĕсемпе задачисем практикăпа çыхăнса тăни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Халăх педагогикин тĕпчемен ыйтăвĕсем паянхи кун та пур ха, вăл халĕ те воспитани ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ. Общество тытăмне çĕнетес, улăштарас çĕрте халăхăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Уйрăм çыннăн культура шайĕ ӳсни, вăл культура пахалăхĕсене, авалхи палăксене упрама тăрăшнинче, историне, традицисене, халăх педегогикине тĕпченинче палăрать.

Г.Н. Волков хăйĕн ĕçĕсенче халăх культурин чун, интеллект, кăмăл-сипет, эстетика пуянлăхĕн спецификăлла формине палăртать. Академикăн воспитани парас ĕçри тĕп аспекчĕсем çапларах янăраççĕ: традици историлле астăвăм пулнинчен килет, культура традицисем çинче никĕсленет, воспитани культурăран килет, воспитани чăнлăхра палăрать, чунсăр личность пулмасть, халăх личностьсĕр пулмасть. Халăх педагогики вăл çамрăк ăрăва чун пуянлăхĕпе, пултарулăхпа, эстетика тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çĕкленме май пуррипе палаштарать, ку енĕпе çитĕнӳсем тунă тĕслĕхсене кăтартса парать. Г.Н. Волков хăйĕн «Этнопедагогика» кĕнекинче ятарлă материал урлă халăх педагогикин конкретлă мелĕсене кăтартса парать, вĕсен çыхăнăвне тишкерет, наци культурине мĕн таран витĕм кӳнине палăртать. Автор тĕрлĕ тапхăрта халăх асĕнче идеаллă çын сăнарĕ еплерех пулнине сăнать, гармонилле обществăн, вăл çут çанталăкпа еплерех хутшăнни мĕнле шайра пулнине кăтартать. Г.Н. Волков шучĕпе, халăх философийĕн тĕп тĕллевĕ – уйрăм личность (индивидум), общество (социум) тата çут çанталăк (космос) хушшинчи идеаллă çыхăнăва, килĕшĕве пур енлĕн тытса тăма тăрăшни. Халăхăн чĕлхи, фольклорĕ, пуян традициллĕ тĕррийĕ, йăли-йĕркисем, этикечĕ – пурте унăн цивилизацийĕн çӳллĕ шайне, культура пуянлăхне палăртаççĕ.

Г.Н. Волков илемлĕ хайлавсем те çырнă. Унăн тĕрлĕ вăхăтра «Асанне юмахĕсем», «Кил илемĕ» тата ытти кĕнекесем пичетленсе тухнă. Вăл шкул учебникĕсем хатĕрлес ĕçе те активлă хутшăннă. 2008 çулта унăн «Кил илемĕ» кĕнеки çулталăкри «Ачасем вулакан чи юратанă кĕнеке» конкурсра мала тухнă.

Асăннă кĕнекере Г.Н. Волков хăй пурнăçĕнче илтнĕ, ас туса юлнă юмах-халапсене ансатлатса, ват çын чĕлхипе каласа парать. Унăн хайлавĕсен тĕп палли – ăс парасси тата пурнăç пурăнма вĕрентсе каласси. Хайлавĕсене ятарласа ачасем валли çеç çырман, кунта çитĕнсе çитнĕ çын валли те ăс пухмалли, шухăшласа пăхмалли тем чухлех.

Халăхра уйрăм юмахăн тĕрлĕ варианчĕсем тем чухлех çӳреççĕ. Автор вĕсенчен кирлĕреххине, пуянраххине суйласа илет. «Ылтăн çĕр» юмахăн пурĕ тăватă вариант пурри паллă. Кĕнекене Тутарстанри Кăнна Кушкинче пурăннă А. Вороновран çырса илнĕ тĕслĕхне кĕртнĕ. Тепĕр юмахра темиçе варианта пĕр çĕре пуçтарнине асăрхама пулать. Халăхра Тăрнаккай пирки калакан юмахсем чылай. Айван ача килтен тухса кайса тĕлли-паллисĕр, вырăнсăр сăмахсем калать, пĕрре мар патак çиет. Вăл çул çинче туй çыннисене, пушар сӳнтерекенсене, виле пытарма каякансене, сысна пусакансене тĕл пулни традицилле. Сунарçăна тĕл пулни, пир шуратакансенчен патак çини, тимĕр калакпа çăпата тĕпĕнчи пыльчăка хăпăтни тĕслĕхсене ытти тăтăш тĕл пулман вариантсенчен илнĕ е автор хăй хушса хунă. Ĕç-пуç ĕнентӳллĕрех курăнтăр тесе автор Елчĕк тăрăхĕнчи ял тата вырăн ячĕсене асăнать. Тепĕр чухне пĕр пĕр ăса вĕретсе каламалли шухăша палăртма, ăна вулакан патне çитерме тесе Г.Н. Волков хăй юмах çырать. Халăх юмахĕнчи традицилле сăнарсене, ситуацисене илет, хăйĕн шухăшне палăртать. Халăх асĕнче упранакан каларăш евĕр халапсене илемлетсе пичетлесе кăларать, унăн тулли вариантне чĕртсе тăратать.

Г.Н. Волков юмахĕсенчи сăнарсем традицилле: пĕр карчăкпа пĕр старик, вĕсен ывăлĕ е мăнукĕ, йывăç-курăк, пуянпа тарçи,ултавçăпа йăваш чăваш, ăраслан, вăкăр, тилĕпе кашкăр тата ыттисем те. Кашни хайлавĕнчех, халăх юмахĕнчи пек, пĕр тĕп сăнар пур: вăл çивĕч, ăслă, тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă, вăрăм кун-çул пурăнакан ват çын. Халăх йăлинчи пек вĕсенче кахалтан, хыт кукартан, юлхавран, пуш сăмах çапаканран тăрăхласси, апла туни лайăх маррине, ваттисене хисплеме, çемьере туслă пурăнма, ĕçе юратма кирлине вĕрентсе калать. Вĕрентсе каласси сюжет аталанăвĕпе сăнарсен тыткаларĕшĕнчен тухса тăрать.

Кашни юмахăн эпиграф пур. Юмахра унăн шухăшне уçса паракан сюжет аталанать е юмахçăн шухăшĕсене, аса илĕвне илсе панă. Вĕçĕнче ăса вĕрентсе калани пур. Хăш-пĕр юмахра ваттисен сăмахне хайлавăн сюжечĕ валли усă курать е сюжетне халăх сăмахлăхĕнчен илет. Г.Н. Волков ача-пăча валли калавĕсем çырнă чухне И.Я. Яковлев традицийĕсене тĕпе хурать. Вĕсенче хускатнă проблемăсем воспитани ĕçĕпе çыхăннă. Пĕлтерĕшлĕреххисем шутне çаксене кĕртмелле: кил-йыш проблеми, аслисемпе çамрăксен хушшинчи хутшăну, этем тата çут çанталăк. Кĕнекери хайлавсем калăпăшĕпе пысăк мар. Кунти ĕçсем хăвăрт пулса иртеççĕ. Калăва юмахçă каласа панă пек йĕркеленĕ, тепĕр чух калавçă сăнарĕ те тухса тăрать. Вăл хăйĕн шухăшне палăртать, хăйпе пулса иртнĕ ĕçсене, çывăх çыннисене аса илет.

Г.Н. Волковăн калавĕсенче те вĕрентсе каласси тĕп вырăн йышăнать. Вĕсенче çемьере, кил-йышра тату пурăнмаллине, халăхра хăвна тивĕçлĕ тытмаллине, юратма тата туслă пулма вĕрентсе калани тĕпре. Чылай чухне автор ăрусем хушшинчи хутшăнăва кăтартса парать: кинĕпе хунямăшĕ, асламăшĕпе мăнукĕ, ашшĕпе ывăлĕ... Вĕсем кашниех çынна çĕр çинче пурăннă чухне упрама кирлине вĕрентеççĕ. Калавсенче автор хăйĕн чи çывăх çыннисене халăхăн ырă йăли-йĕрки, шухăш-туйăмĕ, ырă кăмăлĕ çинчен, тăван тавралăхпа ĕç, тăван халăха тата ытти наци çыннисене юратма вĕрентекен ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕпе асламăшĕсем çинчен çырать.

Г.Н. Волков хайлавĕсенче тĕп сăнарĕ мар, ун çинчен калакан, ăна вĕрентекен сăмах мала тухать. Калавсемпе юмахсен чĕлхи илемлĕ, пуян, çепĕç. Таса чăваш чĕлхи янăрать. Авторĕ тем пек çӳллĕ шайри çын пулсан та, тăван тăрăх чĕлхине манманни савăнтарать. Хайлавсенче сăмах повторĕ тĕл пулмасть. Кĕске те уçăмлă предложенисемпе ытларах усă курнă. Вĕсем шухăша уçăмлă палăртма май пара̧ççĕ.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. Мĕн вăл этнопедагогика?
2. Г.Н. Волковăн чаш халăх этнопедагогикине тĕпчесе çырнă ĕçĕсем çинчен каласа парăр.
3. Г.Н. Волковăн юмах тата калав çырас ăсталăхĕ.
4. Г.Н. Волковăн илемлĕ хайлавĕсенче этнопедагогика традицийĕсем пурнăçланни.

## XVIII ĔМĔРЧЧЕНХИ ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

Ача-пăча литератури хăй аталанăвĕнче пĕтĕмĕшле литературăпа пĕрле уншăн характерлă тапхăрсене пурănса ирттерет. Çавна май чăваш ача-пăча литератури аталанăвĕн тымарĕсене авалхи тĕрĕк литератури тапхăрĕнче шырамалла. Авалхи тĕрĕк литератури шутне эпир Орхонпа Енисей тăрăхĕнче тупнă чул палăксене кĕртетпĕр. Вĕсене чаплă çар пуçĕсене Тоньюкука, Пĕлке Кагана, Йолăх текĕне, Кÿл Текĕне халаласа, вĕсен паттăрлăхĕпе мухтавлă ĕçĕсене ырласа çырнă. VI ĕмĕрте, паллах, литературăна аслисене тата ачасене валли уйăрасси пулман. Ку тапхăрта унсăр пуçне çырулăхпа халăхăн пур сийĕ те усă курма пултарайман. Çырулăхĕ, тĕпрен илсен, кÿршĕллĕ халăхсемпе çыхăну тытма кирлĕ пулнă. Çапах та палăксем çине çырнă текстсен содержанийĕнче халăх мифĕ, ваттисен сăмахĕсем, хÿхлевпе мухтав юррисем, каларăшсем палăрса юлни вăл вăхăтри сăмахлăхра ача-пăча фольклорĕ те çителĕклĕ аталанни çинчен çирĕплетсе калама май парать. Европа тĕпчевçи А. фон Габен авалхи тĕрĕк сăмахлăхне чул палăксен тексчĕсенче мĕн таран палăрса юлнине тишкерет, вĕсен хушшинче сăпка юррисем, тупмалли юмахсем те пулнине çирĕплетет. Паттăрсене мухтаса çырнă текстсенче вĕсен мăнаçлăхне ÿстерсе кăтартма ĕç виçĕ хут пулни çинчен калани каярах чăваш юмахĕсене куçать. Калăвăн тĕп мелĕ пулса тăрать.

Авалхи тĕрĕк сăмахлăхĕнче, литературинче ача сăнарĕсем пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ теме пулать. Пулас паттăр мĕн ачаран маттур, вăйлă пулнине сăнлас, аслисемпе ачасен хуш-

шинчи хутшăнусен йĕркисене çирĕплетес традицисем пирĕн эра пуçламăшĕнчи сăмахлăх тексчĕсенчех пулнă. Вĕсем çинчен çамрăк ăрăва каласа пани аваллăх традицийĕсемпе палашма май панă. Тĕрĕк халăхĕсем кашкăр тотемран пулса кайни çинчен калакан халапра та ача сăнарĕ тĕпре. Тĕрĕксен йăхне тăшмансем килсе аркатса пĕтерсен пĕтĕм халăхран вунă çулхи пĕр ача çеç тăрса юлать. Кунтан пире хăрушлăх пулас çук тесе вĕсем ачан урисемпе аллисене татса илсе шурлăха персе яраççĕ. Кĕçех ача патне кашкăр ами килсе çӳреме тытăнать. Хăйĕн сĕчпе ачана çитĕнтерет, каярах Алтай тăвĕсем хушшине кайса унран вунă паттăр çăвăрлать. Тăшманĕсем ачана килсе вĕлерсе каяççĕ, анчах та тĕрĕк халăхĕ çĕнĕрен ĕрчеме пуçланине пĕлмесĕрех юлаççĕ.

Огуз чĕлхеллĕ тĕрĕк халăхĕсен Вăтам ĕмĕрсенче йĕркеленсе çитнĕ тепĕр сăмахлăх палăкĕнче «Китаби деде Коркут» хайлавра ача сăнарĕ, çемье хутшăнăвĕсем, ачасене тивĕçлĕ воспитани парасси ыйтусем тĕпре. Йӳркĕн пурнăçпа пурăнакан тĕрĕксен ывăл ачисен çар ĕçне пĕлсе, хăнăхса çитĕнмелле пулнă. Хайлавăн тăваттăмĕш сыпăкĕнче Казан паттăр хăйĕн Уруз ывăлне пĕрле сунара илсе каять, вăл çар ĕçне хăнăхтăр, тет. Ăнсăртран вĕсем çине гуярсем тапăнаççĕ. Ашшĕ ывăлне айккине пăрăнса çапăçăва сăнаса тăма хушать. Лешĕ ашшĕн паттăрлăхĕпе хавхаланса тантăшĕсемпе пĕрле çапăçăва кĕрет. Гуярсем çамрăксене çăмăллăнах çĕнтереççĕ, Казанăн ывăлне тыткăна илеççĕ. Тĕрĕксен йĕркипе килĕшӳллĕн ачан ашшĕ сăмахĕнчен иртме юрамасть. Уруз вара хăйне çапăçура кăтартас тесе тăрăшнипе паттăр ятне мар, йăха намăс кăтартакан ятне тивĕçет. Ашшĕ ăна, вăл пĕртен-пĕр кĕтнĕ ывăл пулнă пулин те, çапăçуран тарса амăшĕн кĕпе арки айĕнче пытаннă пулĕ тесе хĕçпе касса пăрахма та хатĕр. Юлашкинчен Бурла-хатун хăйĕн хĕрĕх хĕрĕпе тата огуз бекĕсем тыткăнри Уруза хăтарма килеççĕ, гуярсене çĕнтереççĕ.

Çавăн пекех авалхи тĕрĕк халăхĕсен ача-пăча сăмахлăхĕ Кажгар Махмучĕ çырса хатĕрленĕ «Тĕрĕк сăмах пуххинче» тĕ тĕл пулать. Чăваш тата ытти халăх тĕпчевçисем кĕнекере сăпка юррисен, тупмалли юмахсен тата ытти жанрсен тĕслĕхĕсем упранса юлнине çирĕплетеççĕ.

Ю. Баласагунин «Хăтлă пĕлӳ» поэмине вара чылай тухăç халăхĕсен литературинче ятарласа ватă ăсчахсем патша ывăлĕсем валли пурнăç пурăнма, патшалăха тытса пыма вĕрентсе çырнă хайлавсемпе танлаштарма пулать теççĕ. Тухăçри «Панчатантра», «Калила и Димна», «Золотой блеск», вырăссен «Домострой», «Златоустрой» кĕнекисенче те çак тĕллевех тĕпре. Патша ăсчахĕ тĕрлĕ тĕслĕхсем урлă: мифологири, турăсен пурнăçĕ çинчен каласа пани, фольклорти, историнчи, кулленхи пурнăçри - Айтолты патшана, çавăн пекех килес çамрăк ăрăва та, пĕлӳ парать, пурнăç йĕрки çинчен каласа парать. Уйрăмах этика, мораль, кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатать. Кашни сословинчи, чинри çынна хăйне мĕнле тытмалли çинчен вĕрентсе калани те воспитани тĕллевĕсене пурнăçлани пулать.

Чăвашсен мăн аслашшĕсен пурнăçĕ çинчен каланисене вĕсемпе кӳршĕллĕ пурăннă халăхсен летопиçĕсенче, çырулăх палăкĕсенче асăрхама пулать. Вĕсем: Китай летопиçĕсем, Фирдоусин «Шах-наме» эпопейи, А. Калантуйскийĕн «Аланук историйĕ», Ахмед ибн Фадланăн алçырăвĕсем, вырăс летопиçĕсем тата ыттисем те. Вĕсенче палăрса юлнă хăш-пĕр халап сюжечĕсем паянхи чăваш фольклорĕнче пулмасан та пултараççĕ, çапах вăл вăхăтри сăмахлăхăн тĕслĕхĕ шутланаççĕ. Çавна май кашкăр тотем сăнарĕ, «Кубрат ханăн пилĕ» тата ытти хăш-пĕр мифла халапсем паянхи кун та актуаллă шутланаççĕ. Çамрăк ăрăва тăван халăх аваллăхĕпе палашма май пtriкараççĕ. Ибн Фадлан алçырăвĕсенче те истори, мифологи элеменчĕсене упракан халапсем чылай.

XVII ĕмĕрте вырăс мар халăхсене Христос тĕнне йышăнтарас ĕç пуçланать. XVII ĕмĕрте çак ĕç II Кĕтерне патша тăрăшнипе тухăçлăрах пурнăçланма тытăнать. Чăвашсем хушшинче чиркӳсем уçма пуçлаççĕ, вĕсен çумĕнче шкулсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Вăл шкулсенче вĕренӳ процесĕ вырăсла пулнă. Ачасене авалхи славян чĕлхипе çырнă кĕнекесене вулаттарнă. Кĕлĕсемпе чиркӳ юррисене те ăнланма йывăр чĕлхепех ирттернĕ. Чиркӳ грамотине лайăх хăнăхса, ăнланса пырайманшăн айван ачасене чăвашла пачах та пĕлмен пачăшкă-учительсем вăрçнă, тепĕр чух хĕненĕ те. Н.В. Никольский чăваш тăрăхĕнчи чиркӳ

шкулĕсен историне, ĕçĕсен пĕлтерĕшне тĕпченĕ май вĕсенче ачасем хăш-пĕр чухне пурнăç условийĕсене чăтаймасăр хĕне кайса вилни çинчен çырать. Çак сăлтавсене пула тата хетла вĕреннин уссине ăнлансах çитейменнишĕн ачасем шкула çӳреме хăраса тăни çинчен ку вăхăтра палăрнă çыравçăсен биографинчен курма пулать. М. Федоровăн, «Арçури» авторĕн, тĕслĕхрен, шкула хăйĕн пиччĕшĕ вырăнне каймалла пулса тухать. II Кĕтерне патша тĕн кĕнекисене вырăс мар халăхсен чĕлхи çине куçарма ирĕк парсан çеç чиркӳ шкулĕсенчи вĕренӳ процесĕ чăваш ачисемшĕн те ăнланмалларах пулса тăрать.

XVII-XVIII ĕмĕрсенчи çырулăх чиркӳ литературин канонĕсене пăхăнса тăнă. Унпа килĕшӳллĕн литературăна çынсен çитĕнӳ уйрăмлăхне кура ушкăнлас йăла пулман. Çавна май чăвашла чăн малтан куçарнă çырулăх тексчĕсем аслисемшĕн те, шкулта вĕренекен ачасемшĕн те тĕп вĕренӳ пособийĕ, вуламалли кĕнеке шутланнă. Çав кĕнекесенех чиркӳри кĕлĕсем вăхăтĕнче те усă курнă. Çакă çырууллă чăваш ача-пăча литератури никĕсĕнче фольклор традицийĕсемпе вырăс классикин куçарăвĕсем тата тĕн литератури пулнă тесе çирĕплетме май парать.

Чăваш сăмахĕ ют çĕр-шыв тĕпчевçисен словарĕсенче çырăнса юлни, пĕрремĕш чăваш грамматикисем пичетленсе тухни те ача-пăча литератури аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнă. Кунсăр пуçне патшасене, миссионерсене халалласа çырнă ода, мухтав юррисен тĕслĕхĕсен те витĕмĕ пулнă. Вĕсен авторĕсем Хусанти, Чулхулари тĕн семинарийĕсенче вĕренекен чăваш ачисем пулнă.

Ятарласа ачасем валли тăван чĕлхепе пуçласа хайлав çыраканĕ ***Ермей Рожанский*** (1741 – XIX ĕмĕр пуçламăшĕ) пулнă. Вăл 1773 çулта Л. Бакмейстерăн «Речи для переводов» кĕнекинчи текстсене чăвашла пичетлесе кăларать. Вĕсем ачан тавракурăмне сарма, çут çанталăк пулăмĕсене сăнама, тĕрĕс хак пама вĕрентеççĕ. Кĕçĕн çулхи ачасене халалланине кура, калавсем калăпăшĕпе пысăках мар, кĕске те ансат предложенисенчен тăраççĕ. Пĕр-пĕр япалана, пулăма вĕçе-вĕçĕн сăнласа параççĕ. 1800 çулта «Пичикçе катехизис» кĕнекене ансатлатса куçарать.

Е. Рожанский, Хусанти тĕн семинарине пĕтернĕ священник, ку вăхăтри мал ĕмĕтлĕ çынсен витĕмĕпе халăха çутта кăларас

ĕмĕтпе пурăннă. Çак ĕçе халăха тӳрĕ христианина çавăрсан çеç пурнăçлама пулать тесе шутланă вăл. Каярах, Дамаскин витĕмне пула, халăха вĕрентме ăна хăй чĕлхипе çырнă кĕнекесем кирлине ăнланса илет. Г. Рожанскийпе И. Руссановский 1789-1790 çулсенче 130 урока пайланă чăвашла вĕренмелли кĕнеке хатĕрлеççĕ. Унти текстсене ансат тата ăнланмалла чĕлхепе çырнă. Кĕнекене Чулхулари тĕн семинарийĕнче вĕренекенсем XVIII ĕмĕр вĕçĕчченех усă курнă.

Е. Рожанскийĕн литературăри, çут ĕçĕнчи традицийĕсене малалла аталантараканĕсем хушшинче ***В.П. Вишневский*** (1804 – 1885) те пулнă. В. Вишневский хăй умне çут çанталăк тĕнне ĕненсе пурăнакан халăхра Христос тĕнне çирĕплетес тĕллеве лартать. Хăй шухăшне пурнăçлама тесе чиркӳри кĕлĕсене чăвашла ирттерме тытăнать. Унăн пултарулăхĕ халăха хутла вĕрентес ĕçпе те çыхăнса тăнă. Вăл «Начертания правил чувашского языка...», «Начатки христианского обучения» кĕнекесем çырса кăларать. Тĕпчевçĕн икĕ кĕнеки те тĕн семинарийĕсенче тĕп вĕренӳ пособийĕ вырăнне шутланнă. «Краткая священная история», «Краткий катехизис» куçарăвĕсем алфавитпа пĕрле «Начатки христианского обучения» кĕнекере пичетленеççĕ. В. Вишневский куçарнă «Кĕске святой юмахĕ» хайлава оригиналлă хайлав пек йышăнма пулать. Автор Библири сюжетсене чăвашла ăнланмалла, ансат чĕлхепе каласа парать. Кашни сюжетне ят парса уйрăм хайлав пек йĕркелет. Вĕсенче ыр кăмăллăха, сăпайлăха, аслисене хисеплессине вĕрентесси тĕпре. Хайлавсенче çавăн пекех историпе географи пĕлĕвне палăртакан материал та пур. Вĕсем авалхи халăхсен, патшасен пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ, топонимика ячĕсемпе палаштараççĕ.

Хайлавра Турă ачи мифăн хăш-пĕр мотивĕсем те пур: ангелсем тĕнчене çăлакан килесси çинчен Таса хĕр Марийăна, кĕтӳçсене пĕлтереççĕ, Иоанн çураласси çинчен Захарий ашшĕне систереççĕ. Турă ачи çураласси асамлă пулăмсемпе пĕр вăхăта килет: çĕнĕ çăлтăр çутăлни, ача йăлана кĕмен вырăнта çурални, вăл çитĕнерехпе тĕрлĕ асамлă ĕçсем тума пултарни. «Кĕске святой юмахĕ» хайлавра литература юмахĕ, илемлĕ тата публицистикăлла очерк жанрĕсен паллисем, кĕлĕ жанрĕ те пур.

***С.М. Михайлов-Янтуш*** (1821 – 1861) – этнограф, писатель, историк, тӗпчевҫӗ, чӑваш ача-пӑча литератури аталанӑвӗшӗн те сахал мар ӗҫ туса хӑварнӑ. Унӑн пултарулӑхӗнче ача-пӑча тематикине тӗрлӗ ӗҫсенче хускатнӑ. А.И. Мефодьев тӗпчевҫӗ вӗсене пурӗ тӑватӑ ушкӑна уйӑрма сӗнет: 1) вырӑс мар халӑхсем хушшинче ҫут ӗҫне сарас тӗлӗшпе каланӑ шухӑшсем, 2) чӑваш халӑхӗн воспитани парас мелӗсемпе меслечӗсене пӑхса тухни, 3) илемлӗ публицистикӑра ача сӑнарне калӑплани, 4) ачасене вуламалли кӗнекесен шутне ӳстерес тесе илемлӗ хайлавсем ҫырни тата фольклор тӗслӗхӗсене пуҫтарни. Пӗрремӗш ушкӑна «О приходских училищах в чувашских селах», «Село Ишаки в Козьмодемьянском уезде» ӗҫӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсенче автор чӑваш шкулӗсенче вӗрентӳ ӗҫӗ еплерех шайра пулса иртнине хаклать.

С. Михайлова вӗрентекенсемпе ачасем пӗр-пӗрне ӑнланманни, вӗрентекенӗсем хӑйсен ӗҫӗсене тивӗҫлӗ шайра пурнӑҫламанни, вӗренме илекен ачасен кӑмӑлне шута илменни хумхантарать. Вӑл шкулсене, училищӑсене мӗнлерех ялсене вырнаҫтарсан лайӑхрах пулни пирки те шухӑшлать. Шкул вӗренсе пӗтернӗ ачасем хӑйсен пӗлӳ шайне малалла ӳстерменни те хумхантарать ӑна. С. Михайлова вӗрентӳ процесне тӑван чӗлхепе йӗркелесе пымалли, ку ӗҫе хӗр ачасене те хутшӑнтармалли ыйтусем те хумхантарнӑ.

«Краткое этнографическое описание чуваш» ӗҫре чӑваш ачин пурнӑҫӗ мӗн ҫуралса ҫитӗнсе ҫитиччен еплерех пулнине сӑнласа кӑтартнӑ. Вӑл вылякан вӑйӑсене, хутшӑнакан ӗҫсене тата йӑла-йӗркесене, воспитани процесне камсем хутшӑннине, еплерех теттесем усӑ курнине ӑшӑ кӑмӑлпа ҫырса кӑтартнӑ. Халӑхра ӗҫе юратма вӗрентесси, кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен воспитани парасси, тӑван халӑха тата ҫӗр-шыва юратма вӗрентесси тӗпре пулнине палӑртнӑ. С. Михайлов XVIII-мӗш ӗмӗрти чӑваш ачин сӑнарне калӑплать, ҫак сӑнарах автобиогафилле очеркра та тӗл пулма пулать.

Виҫҫӗмӗш ушкӑна «Злополучный сын», «Рассказ дедушки Ивана о жизни в прошлом и происхождении названия «вирьял», «Рассказ дедушки Флора о Пугачеве» илемлӗ очеркӗсемпе калавӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсене аса илӗве тӗпе хурса ҫырнӑ. Кашнинчех ҫамрӑк ҫын сӑнарӗ пур. Пӗрремӗш калавра пурнӑҫри

тĕрĕсмарлăха пула çамрăк çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни пирки кулянса каласа кăтартнă. Ытти хайлавĕсенче халăхăн аваллăхĕпе кăсăкланакан, ватăсене сума сăвакан, нумай пĕлме тăрăшакан çамрăк çын сăнарĕ тĕпре. Автор чăвашсен аслисемпе кĕçĕннисен хушшинчи хутшăну традицийĕсем еплерех пулнине каласа кăтартать. «Ятлаçу» тĕрленчĕкре амăшĕпе хĕрĕ хушшинче пулса иртнĕ пăтăрмаха сăнланă. Амăшĕ хĕрне кӳрше шăпăр каланине итлеме кайнишĕн вăрçать. Ун шучĕпе хĕрачан килти ĕçсемсĕр пуçне нимпе те кăсăкланмалла мар. Çавăн пекех амăшне хĕрĕн таса ячĕ, вăхăта кирлĕ-кирлĕ мар япалапа аппаланса ирттерни те хумхантарать.

«Тури чăвашпа анатри чăваш калаçни», «Пугачев çинчен», «Чее кушак» илемлĕ хайлавсене тата халăхран çырса илнĕ «Сарри паттăр» халапа, «Чи-чи кăсăя», «Нарт-нарт кăвакал» юрăсене, «Çĕр çăтни», «Çармăспа упа туслă пулни» юмахсене чылай тĕпчевçĕ ача-пăча литературин малтанхи тĕслĕхĕсем шутне кĕртеççĕ. Хăй çырнă илемлĕ хайлавĕсенче С. Михайлов тĕрлĕ тăрăхри чăвашăн пурнăç условийĕсемпе палаштарать, воспитани парас тĕллеве тĕпе хурать. Вăл чăваш ача-пăча сăмахлăхне пуçтарни, пĕтĕмĕшле фольклор материалне хакланă чухне ача-пăча сăмахлăхне те тишкерни паллă, унăн уйрăмлăхĕсене асăрхаса хăварнă. Асăннă фольклор тĕслĕхĕсем 1873 çулта Хусанта «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекере пичетленсе тухнă. Çакна май ача-пăча фольклорĕн чылай тĕслĕхĕ паянхи куна çити упранса юлма пултарнă:

*– Чи-чи, кăсăя! Ăçта каян, кăсăя?*
*– Кантăр вăрри çимешкĕн.*
*– А хуçи курсассăн?*
*– Чăрăш тăрне хăпарăп.*
*– Чăрăш тăррине тарсассăн,*
*Унта мĕн çиен?*
*– Чăрăш йĕкеллине*
*унта ларса çиеп.*
*– А пырна ларсассăн?*
*– Чавăп-чавăп, кăларăп.*
*– А юн тухсассăн?*
*– Шыва кайăп та тасалăп.*

*– А шăнса кайсассăн?*
*– Вут хурăп та ăшăнăп.*
*– А уру пиçсе кайсассăн?*
*– Тимĕрçе кайăп та сыптарăп.*
*– А тимĕрçĕ килте пулмаса?.*
*– Вара хăрах урапа сиксе çӳрĕп.*

С. Михайлов «Была ли голова у вятского охотника», «Как вятчане хлебались толокна», «Никто из вотчан не хотел лечь с краю», «Не успевши переехать, стали онучи сушить» шӳтсем çырса илнĕ. Автор вĕсенче çынсен пĕлӳсĕрлĕхĕнчен, айванлăхĕнчен куççуль витĕр ашшăн кулать, кашни ĕçе тĕплĕ ларса шухăшланă хыççăн çеç тума сĕнет.

XIX ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче С. Михайлов ачасем валли шкул уçас ĕмĕтпе ăшталанса çӳренĕ. Çав тĕллевпех вăл чăваш букварĕ çырса хатĕрленĕ пулнă, унта чăваш алфавитне тата илемлĕ текстсене кĕртнĕ. Анчах та вăл хатĕрленĕ букварь сыхланса юлайман.

Чăваш ачисене вĕрентме ятарласа педагогика ăслăлăхĕн ыйтăвĕсене шута илсе кĕнеке çыраканĕсенчен пĕри ***Н.И. Золотницкий*** (1829 – 1880) пулнă. Вăл вырăс мар ачасене вĕрентес принципсем урăхларах пулмалли çинчен калать, хăй ятарласа уйрăм система йĕркелет. Ун шучĕпе, вĕренӳре тăван чĕлхене усă курасси тĕпре пулмалла. Н. Золотницкий шутланă тăрăх, ача тăван чĕлхепе вулама та, çырма та хăвăртрах вĕренет. Хусан кĕпернинчи шкулсен инспекторĕ пулса ĕçленĕ май вăл чăваш кĕнекине сарас тата чăваш шкулĕсем уçас тĕлĕшпе чылай ĕçлет. Малтанхи чăваш алфавитне йĕркелет, чĕлхе уйрăмлăхне тĕпчес тĕлĕшпе ĕçлет. «Корневой чувашско-русский словарь» пичетлесе кăларать, букварь текстне хатĕрлет тата учительсем валли вĕренӳ пособийĕ йĕркелет. 1867 çулта унăн «Чăваш кĕнеки» тухать. Ку ачасем валли çырнă кĕнеке пулнă, унта шутлама тата вулама вĕренмелли ятарлă текстсене кĕртнĕ. Ытти кĕнекесенчи текстсемпе танлаштарсан, кунти вуламалли тĕслĕхсене чăваш чĕлхин структурине шута илсе йĕркеленĕ. Чылай хайлавне халăх сăмахлăхĕнчен илнĕ: ваттисен сăмахĕсене, каларăшсене, тупмалли юмахсене. Тĕпчевçĕ халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем урлă вĕренекенсен тĕнче курăмне сарас, вĕсене шухăшлама пĕлекен,

ырă та тӳрĕ кăмăллă, йывăрлăхсенчен хăраман, йышпа килĕштерсе пурăнакан çынна аталантарас тĕллеве пурнăçлать. Çак текстсем ачасенче нацилĕх туйăмне те çирĕплетме пулăшнă.

Н.И. Золотницкий кĕнекисене тури диалект чĕлхипе çырнă пирки вăл хăйне евĕр йывăрлăхсем кăларса тăратнă. Апла пулин те çĕнĕ кĕнекесем çырма хавхалантарнă. Чылай чухне ачасем валли ятарласа çырман кĕнекесене вĕрентӳ процесĕнче усă курнă. Н.И. Золотницкийĕн «Чăваш календарĕнче» пичетленсе тухнă фольклор тĕслĕхĕсене, тĕрлĕ очерксемпе статьясене вулама вĕренмелли пособи вырăнĕнче пулнă.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Орхонпа Енисей чул палăкĕсенче ача-пăча сăмахлăхĕ палăрса юлни.
2. Ю. Баласагунин «Хăтлă пĕлӳ» поэминчи дидактикăлăх, пĕлӳ парас традицисем.
3. Авалхи чăвашсем Çурçĕр Кавказра пурăннă вăхăтри сăмахлăх.
4. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнчи çырулăх палăкĕсем.
5. XVIII ĕмĕрти чиркӳ шкулĕсен пĕлтерĕшĕ.
6. Чăвашла куçарнă тĕн кĕнекисен пĕлтерĕшĕ.
7. Е. Рожанскийĕн куçарăвĕсем, калавĕсем.
8. В.П. Вишневский куçарăвĕсемпе юмахĕсем.
9. Н.И. Золотницкий куçарăвĕсем, унăн çут ĕçĕнчи çитĕнĕвĕсем.

## И.Я. ЯКОВЛЕВ ПУЛТАРУЛĂХĔН ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИН АТАЛАНĂВĔНЧИ ПĔЛТЕРĔШĔ

И.Я. Яковлев (1828 – 1930) чăваш халăхне çутта кăларас, унăн культурине çĕклес, сăмах искусствине аталантарас тесе сахал мар тăрăшнă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче учительсене вĕрентсе кăларнисĕр пуçне вăл музыкантсемпе художниксене, ал-ĕç ăстисене хатĕрленĕ, çĕнĕ алфавит йĕркеленĕ, шкулсем валли кĕнеке кăларас, вырăс тата Хĕвел Анăç Европа классикине чăвашла куçарас ĕçе пуçарса янă. И.Я. Яковлев ачасем валли кĕнекесем хатĕрленĕ чухне К. Ушинский, Л. Толстой тата Европа педагогĕсен ĕçĕсене, халăх педагогикин традицийĕсене усă курнă, вĕсенчен вĕренсе пынă. Çавăн пекех ăна Н.И. Ильминскийĕн ĕçĕ-

хĕлĕ те хавхалантарнă. Вăл пулăшнипе чăваш ачисене халăх сăмахлăхĕ тата православи тĕнĕн вĕрентĕвĕ урлă пĕлӳ парас ĕçе пурнăçлама тытăннă.

И. Яковлев воспитани, пĕлӳ парас ĕçре тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине палăртать. Халăхшăн тăван чĕлхе унăн чун пуянлăхне палăртакан критери шутланать. Халăхăн культурине аталантарма, унăн пĕлӳлĕхне ӳстерме тăван чĕлхесĕр май çук. Тăван чĕлхе кăна кирек мĕнле шухăша та халăх патне çитерме пултарать. «Чĕлхе хăйне çуратнă халăхпа пĕрле пурăнать, унпа кăна вилет. Çавăнпа та тăван чĕлхене манма хушни халăха вилме хушнипе пĕрех. Истори тăршшĕнче, пиншер çулсем хушшинче чăмăртаннă кашни халăх хăйĕн ăс-тăнĕнче пухăннă туйăмсемпе ăнланусене сыхласа усрать, çавсем те унпа кăна вилеççĕ. Чĕлхе çав пуянлăхăн тулаш кăшкарĕ кăна, анчах ку кăшкар ăшчиккипе пĕрле ӳсет, унпа уйрăлми çыхăнса тăрать. Чĕлхене халăхран уйăрма çук, çакă халăха инкекпе хурлăх кăна кӳрĕччĕ, чунне суранлатса хăварĕччĕ. Тăван чĕлхе пулăшнипе вара кивĕ ăнланусене çĕнетме, çавсем çине çĕнĕ сыпăксем хушма, çĕнĕ хунавсем хунаттарма пулĕччĕ», – тесе каланă И.Я. Яковлев.

Тăван чĕлхе ачасен туйăмне, шухăшлавне аталанма май паракан тĕп мелсенчен пĕри тесе шутлнă пресветитель. Хăй никĕсленĕ шкулта та вĕрентӳ процесне чăвашла йĕркеленĕ. И. Яковлев пулăшаканĕсемпе пĕрле чăваш алфавитне çĕнетет. В.А. Белининпа А.В. Рекеев тăрăшнипе чăвашла букварь кăларма май килет, ăна валли ятарласа текстсем хатĕрлеççĕ. XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче букварь тексчĕсене çине-çинех çĕнетсе кăларнă пулнă. 1880 çулта тухнă А.В. Рекеевăн хатĕрленĕ кăларăма, тĕслĕхрен, çĕнĕ пилĕк калав кĕртнĕ. 1885 çулта П. Васильев йĕркеленĕ кăларăма 24 калав пичетленĕ. Çак çулсенче Д. Филимонов А.Ф. Петрушевскин «Рассказы из русской истории» кĕнекине чăвашла пичетлесе кăларать. 1882 çулта Л. Толстойăн «Çĕнĕ азбукине» куçараççĕ. Кĕçех вырăс писателĕн «Шкулта вуламалли пĕрремĕш тата иккĕмĕш кĕнекисем» пичетленсе тухаççĕ. Вĕсене П. Васильев куçарнă пулнă. Букварьти текстсем те, куçарусем те И. Яковлевăн

тĕллевĕсене пăхăнса тăнă. Вĕсем пурте кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма вĕрентнĕ.

1873 çулта тухнă «Букварь для чуваш» кĕнекене çырулă литературăн пирвайхи хайлавĕсем тата фольклор тексчĕсем пичетленнĕ. Вĕсенче тупмалли юмахсем, ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, юмахсем, кулăшсем, юптарусем, вырăсларан куçарнă классикăлла уйрăм хайлавсем кĕнĕ. Букварьти текстсем халăх пурнăçне тĕрлĕ енчен сăнлаççĕ: унăн ĕçĕ-хĕлне, тĕн уйрăмлăхĕсене, йăли-йĕркине... Фольклор тĕслĕхĕсем çамрăк ăрăвăн ăс-тăнне, шухăшлавне, сăмах пуянлăхĕпе илемлĕхне аталантарма пулăшнă. Г. Волков букварь тексчĕсенче ваттисен сăмахĕсем тăват çĕре яхăн тĕл пулаççĕ тесе палăртать. Вĕсем букварĕн шалти логикипе килĕшсе тăраççĕ. И. Яковлев чăваш халăх юррисене те пысăка хурса хаклать.

Букварь тексчĕсене йĕркеленĕ чухне И. Яковлев К. Ушинский тата Л. Толстой вĕрентĕвĕсене шута илсе ĕçлет. Кашни хайлавăн вуламалли содержанисĕр пуçне воспитани тĕллевĕ, сăнлăхпа сăнарлăх кăткăслăхĕ, фабулăпа сюжет илĕртӳллĕхĕ тĕпре пулмалла. Пĕчĕккисем валли çырнă хайлавра дидактикăллăх тӳремĕн пурнăçланать пулсан, аслисем валли çырнисенче сăнлăхпа сăнарлăх урлă пулса пырать. Кĕнекере фольклор тексчĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Халăх сăмахлăхĕ урлă ачасене тăван чĕлхен сасă илемне асăрхама, ăс-тăн çивĕчлĕхне аталантарма, пурнăç çине тиркевлĕ куçпа пăхма вĕрентме май пулнă. И. Яковлев уйрăмах тупмалли юмахсен пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине палăртать. Ун шучĕпе тупмалли юмахсем ачасене сăнама, логикăлла шухăшлава аталантарма, тăван сăмахлăхăн сăнарлă чĕлхине хăнăхма пулăшаççĕ. Ачасенчен тупмалли юмахăн тупсăмне ыйтнă чухне ансаттисенчен йывăррисем патне куçса пымалла. Пĕр-пĕр пулăм е япала пирки ыйтнă тупмалли юмах çумне кĕнеке авторĕ ун çинчен каланă ваттисен сăмахне илсе парать е калав хушса хурать. Ку ачасене пĕр пулăма тĕрлĕ енчен курма май парать, сăнама хăнăхтарать.

Воспитани процесне çăмăллатас тесе И. Яковлев хăй те оригиналлă хайлавсем çырать. Вĕсене çырнă чухне халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене тĕпе хурать. Педагог куçĕпе пăхса пĕр-пĕр халапа улăштарать. Хăйĕн хайлавĕсенче кулленхи

пурнăç çитменлĕхĕсенчен, пĕлӳсĕрлĕхрен, тĕшмĕшлĕхрен тата ытти начар енсенчен тăрăхлать. Вĕсенче ăса вĕрентесси киревсĕр пулăмсене тиркени урлă çеç мар, лайăххине ырлани, çирĕплетни урлă та пурнăçланать. И. Яковлев хăйĕн пултарулăхĕнче юмахсене те усă курнă. Вăл фольклор сюжечĕсене илемлетет е вырăс авторĕсен юмахĕсене куçарать: «Сармантей», «Кашкăр», «Тилĕпе кашкăр» юмахсем. И. Яковлевăн оригиналлă калавĕсенче таврапĕлĕве аталантарасси, кăмăл-сипет проблемисене хускатасси тĕпре, çавăнпа та вăл кулленхи пурнăçри ачасен тата аслисен ĕçĕ-хĕлĕ, çемье тата общество, этем тата çут çанталăк çинчен çырать. Ку калавсенчи тĕп сăнарĕсем те этем, çут çанталăк пулăмĕсем, чĕрĕ чун тата ӳсен-тăран тĕнчи. Ку евĕр калавсенчен чылайăшне И. Яковлев вырăс авторĕсене евĕрлесе çырать.

Букварьте пичетленнĕ вырăс классикин куçарăвĕсем чăваш ачисене вырăс литературипе, культурипе палашма май панă. И. Яковлевăн ĕçĕсен хăй евĕрлĕхĕсенчен тепĕр енĕ – вырăс литературине, халăхне, культурине хисеплеме чĕнсе каласси. Ансат мелпе куçарнă калавсем воспитани ĕçĕнче хăйсен вырăнне тупмасан та пултарнă. Çавăнпа та И. Яковлев вĕсене халăх, наци хăй евĕрлĕхне кура улăштарма сĕнет. Хăй куçарнипе çеç çырлахмасть, вĕрентекенсемпе вĕренекенсене те çак ĕçе явăçтарать. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Л. Толстойăн «Книга для чтения», А. Барановăн «Рассказы по русской истории» кĕнекисем, И. Крыловăн, Г. Андерсенăн, С. Аксаковăн, М. Лермонтовăн тата ытти авторсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă, пичетлесе кăларма пултарнă.

Вĕрентӳ кĕнекисенче чиркӳпе тĕн литературин тĕслĕхĕсем пулнă: кĕлĕ, притчăсем, уйрăм калавсем. Ку йышши хайлавсене тĕн литературине евĕрлесе çырнă е чăвашла ансатлатса куçарнă пулнă. Вĕсен шутне çак тĕслĕхсене кĕртмелле: «Çырăва вĕренме тытăнакана», «Турă кĕнекинчен илсе çырнă сăмахсем», «Святой çынсем каланă ӳкĕтсем», «Çырăва пĕлме Турă ăнлантарать»…

И.Я. Яковлевăн ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕсенчен пĕри – ачасен пултарулăхне аталантарасси пулнă, çавна май вĕренекенсен пултарулăх ĕçĕсене пухса кĕнекесем кăларни те пуллă. Г.И. Комиссаров палăртнă тăрăх, «Эпĕ сăхсăхма вĕренни», «Эпĕ ӳкĕнни», «Марук вилни» калавсене Алесеев хушаматлă ача

çырнă пулнă. «Эпĕ сехет çĕмĕрни» калава – А. Кузнецов, «Пирĕн пӳрт çунни» калава – И. Кукушкин. Наукăпа тепчев институчĕн архивĕнче П. Васильев пуçтарса пынă сочинени тетрачĕсем чылайăн упранаççĕ. Г. Юмарт шучĕпе, хĕрачасем çырнă сочиненисене те уйрăм тетрадь çине пуçтарса пынă. Ачасен çыру ĕçĕсем хушшинче оригиналлă хайлав пек хаклама тивĕçлĕ тĕслĕхсем те сахал мар пулнă.

Вĕренкенсем çырнă пултарулăх ĕçĕсен сюжечĕ пит ансат, вĕсем чылай чухне тӳрремĕн ăса вĕрентесе каланипе вĕçленнĕ. Вĕсенче хăйне кура сюжетпа композици, идейăпа мораль, сăнарлă çырас ăсталăх пур. Хайлавсем ачасене чĕрĕ сăнарлăх пулнипе илĕртеççĕ. Фабулăпа сюжет чăн пурнăçран илнĕ пĕр-пĕр эпизод тавра явăнать. Хăш чухне авторсем хăйсемпе мĕн пулса иртнине çырса кăтартаççĕ. Герой ялан тенĕ пекех пĕрремĕш сăпатран калаçать. Çакă хайлавăн реализмла сулăмне вăйлатма пулăшать. Букварь тексчĕсенчи сăнарсем ытларах чухне ачасем е чĕр чунсем. Герой тĕнче çине ача куçĕпе пăхать, ăна ача туйăмĕпе, ăнлавĕпе хаклать. Çавăнпа пĕрлех кунта авторăн ачана вĕрентсе калас шухăшĕ те палăрать: вăл инкеке, йывăр лару-тăрăва лекет, йăнăшать те тĕрĕссине курать, хуйхăсуйхăпа паллашать.

Букваре кĕнĕ калавсенче хăйне евĕр шӳт, ăшă кулă пур. Вĕрентӳ процесĕнче шӳтпе усă курас туртăм И. Яковлев пултарулăхне халăх сăмахлăхĕнчен куçать. Букварь тексчĕнчи «Тĕллит-тĕллит Микулай» юрă тексчĕнчи сăнар анекдотпа шӳтсен геройĕ евĕр. Вăл оптимист туйăмне нихăçан çухатмасть, нимĕнле йывăрлăх умĕнче те аптраса ӳкмест. «Пулă сĕрни», «Лаша шырани», «Çил-тăвăл» калавсенче те шӳтпе ăшă кулă тĕпре. Малтанхи тĕслĕхре кулăшĕ сăмахри сасă пĕр евĕрлĕхĕ çинче никĕсленнĕ пулсан, тепĕр икĕ калавĕнче çынăн çитменлĕхĕсенчен тăрăхласси малти вырăнта. Хăш-пĕр калавсенче шӳте сăмах вăййи урлă, аллитераципе ассонанс урлă палăрнине те курма пулать. Халăх пултарулăхĕчен килекен шӳтлĕ стиль, ытарлă сăмах, ăса вĕрентсе калани чылай текстшăн характерлă. Вĕсенче дидактизм тӳрремĕн палăрмасть, ытарлăх урлă пурнăçланать.

Калавсен чĕлхи те ачасен калаçу чĕлхине çывăх, вăл çыпăçуллă та ансат, сăнарлă. Кунсăр пуçне вăл кĕвĕллĕ, ритмлă пулнине кура вулаканăн асне те часах вырнаçса юлма пултарнă. И. Яковлев йĕркеленĕ букварьсенче ачасен пурнăçĕ, йăли-йĕрки, таврари çут çанталăк çинчен сăнласа, каласа парас ăсталăхпа çырса кăтартни сахал мар тĕл пулать. Вĕсенче этикăпа мораль ыйтăвĕсене те хускатнă. Илемлĕ хайлавсем ачасене эстетикăпа илемлĕх саккунĕсемпе çывăхрах паллашма, вĕсене çамăллăн ăша хывма май панă. Калавсене кенекене вырнаçтарнă чухне пĕчĕк калăпăшлисене маларах, пысăккисене каярах пичетленĕ. Çакă шухăша йĕркелеме, палăртма хăнăхтарнă.

Букварьти калавсенче уйрăмах виçĕ тĕп тема пулни уççăнах палăрать: ĕç, пĕлӳ, туслăх. «Ĕç – пĕлӳ никĕсĕ. Çут çанталăкпа общество тытăмĕ те ĕçпе çыхăннă. Пурнăçри пур япала та çынăн ĕçĕнчен килет. Çынăн тăрăшса ĕçлемелле, ырлăх тумалла», – тет И. Яковлев. Ĕç этеме, унăн пурнăçне илем кӳрет. Ачасен пĕчĕкрен ĕçе хăнăхса ӳсмелле текен шăхăш чылай калавра тĕл пулать: «Кулачă», «Эпĕ чăлха çыхни», «Эпĕ сехет çĕмĕрни». Ĕçе юратма вĕрентес тĕллеве автор хайлавра фольклор тĕслĕхĕсене усă курни урлă та пурнăçлать.

И. Яковле вăй-хал ĕçне кăна мар, вĕренӳпе культура ĕçне те пысăка хурса хакланă. Çакă унăн халăха вĕрентес, çутта кăларас тĕллевĕсемпе пĕр килнĕ. Çак ĕçе пурнăçланă чух вăл кĕнеке çырнипе çеç çырлахмасть, çыруллă чăваш литератури аталантăр тесе те тăрăшать. Пултаруллă, талантлă çамрăксене литература ĕçне хутшăнтарать, пичетленме пулăшать.

## Ыйтусемпе ĕçсем

1. И.Я. Яковлевăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн историйĕ, ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа кăтартăр.
2. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пĕлӳ, воспитани парас туртăмсем.
3. И. Яковлевăн педагогикăри çитĕнĕвĕсем.
4. Букварь тексчĕсенче вырăс педагогĕсен тата халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ палăрни.
5. Л.Н. Толстой пултарулăхĕ И. Яковлев ĕçĕ-хĕлне витĕм кӳни.
6. И.Я. Яковлевăн букварĕсен хăй евĕрлĕхĕ.

# И.Я. ЯКОВЛЕВ ВĔРЕНЕКЕНĔСЕМ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИН АТАЛАНĂВНЕ ВИТĔМ КӲНИ

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренсе тухнă ачасенчен чылайăшĕ кайран чăваш культури аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ çынсем пулса тăраççĕ. Вĕсен хушшинче ача-пăча çыравçисем те пур. ***Игнатий Иванов*** (1845 – 1883) ачасем валли кулленхи пурнăçа сăнлакан калавсем çырнипе паллă. Вăл И. Яковлевăн малтанхи вĕренекенĕсенчен пĕри пулнă. Литература ĕçне вăл Кăнна-Кушкинче учительте ĕçленĕ чухне пуçăнать. Ку ĕçре ăна И. Яковлев та хавхалантарнă темелле. Малтанхи калавĕсенче ытларах натурализм мелĕпе çырнă. Çыравçă хăй курнă фактсене ним улăштармасăр çырса парать. Вăхăт ыйтнине кура унăн калавĕсенче Христос вĕрентĕвĕн сĕмĕ сисĕнмеллех палăрать. Çав хушăрах, калавсенче воспитани пĕлтерĕшĕ тĕпре. Вĕсенче çыравçă çынсене пĕлӳ парса пурнăçне лайăхлатас, кăмăлне улăштарас, çынсене усал ĕçсем тăвасран асăрхаттарас текен шухăшсене тĕпе хурать. Унăн хайлавĕсенче, чылай чух, пархатарлă сăнар автор шухăшне палăртать. Геройăн характерне те хатĕр хальлĕн палăртнă. Сăнарăн характерĕ пĕр енлĕн палăрать. Пархатарлă герой, автор кăмăлне палăртнине кура, çыравçă унăн лайăх енĕсене çеç сăнласа парать, ыттисене асăнмасть те. Пархатарсăр геройсенне вара начар енĕсене çеç кăтартнă. Автор шучĕпе, аслисем ăс панине, вĕрентсе каланине шута илмен çын яланах хур курать. Хăй калавĕсенче, жанрне кура, Игн. Иванов çынна тĕплĕн сăнласа кăтартмасть, çын çинчен ытларах каласа каять. Автор монологпа тăтăшах усă курать. Тепĕр чухне, монолог çыравçăн тĕп мелĕ те пулса тăрать. Диалогпа сайра усă курать вăл, сăнарпа автор чĕлхи те пĕр килеççĕ. Автор сăнара хак пани тĕп вырăна тухать.

Çыравçă мифологипе, халăх сăмахлăхĕн пултарулăхĕпе творчествăлла усă курать. Унăн паллăрах хайлавĕсем: «Тĕпсĕр çынна тĕмен çитмен», «Çынна епле тăван, ху та çавнах куран», «Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă», «Лайăх, ăслă, кăмăллă çын пурне те юрăхлă»...

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче тĕрлĕ вăхăтра вĕреннĕ ***Иван Юркин*** (1863 – 1943) халăх сăмахлăхне пуçтарнă. Вăл чăваш халăхĕн

историйĕпе этногенезне тĕпченĕ, йăла-йĕркене тишкернĕ. Кăсăклантаракан ыйтусемпе тĕрлĕ статьясем чылай çырнă, халăхăн чĕлхе пуянлăхĕ, культури ӳссе пынине кăтартма тăрăшнă. Вăл пухса хатĕрленĕ сăмахлăх тĕслĕхĕсем хушшинче ача-пăча фольклорĕн тĕслĕхĕсем те чылай пулнă: юрă тексчĕсем, шӳтсем, халапсем, тупмалли юмахсем тата ыт. те. Ив. Юркинăн прозăпа çырнă хайлавĕсенче те дидактăллăх пур. Унăн «Йăлтăртатакан япаласем пурте ылтăн мар», «Мул» хайлавсенче аслисене чун ыйтнипе, тĕрĕс-тĕкел пурăнма вĕрентсе каласси тĕпре. Прозăлла хайлавсенче те юмах сюжечĕсемпе традицийĕсене усă курни çыравçăна калас шухăша витĕмлĕрех тума пулăшать. Ив. Юркин юмахсен, пулмасла халапсен, чăн пулнисен, чиркӳ-тĕн халапĕсен мотивĕсене новеллăсем евĕр йĕркелесе пĕр халапа пĕрлештерет. Этеме хакланă чух унăн пуянлăхĕпе пурлăхне мар, чун пуянлăхне шута илме кирли çинчен ас тутарать.

Ив. Юркин пултарулăхĕнче литература юмахне тӳр килекен тĕслĕхсем пур. Ытти авторсемпе танлаштарсан, вăл хăйĕн юмахĕсене прозăлла çырать. 1888 çулта Ив. Юркин «Илья паттăр çинчен янă халап» хайлава çырса пĕтерет. В.Г. Родионов тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, çыравçă хайлава Пӳрккел çынни Тимĕркке Саманра каласа панă юмах сюжечĕ çине таянса çырать. «Хайлава диалогсенчен йĕркеленĕ. Фабули ансат: карчăкпа старикĕн ача пулман. Асамлăха пула ача тупаççĕ. Тĕрĕк халăхĕсен юмахĕсенчи пекех паттăрпа пĕрле тиха тата йытă çури çитĕнеççĕ. Пурăнсан-пурăнсан старикки салтака тухса каять, карчăккине вара вĕри çĕлен ерет. Илья паттăр çĕлене вĕлерет. Паттăра уксах та чăлах, шатра питлĕ Натали тухатмăш качча тухасшăн. Илья патша хĕрне качча илет» [58, 359].

Ив. Юркинăн «Иван паттăр» хайлавĕ асамлă юмах жанрĕ шутне кĕрет. Паттăр епле çурални, унăн пулашаканĕсем пурри, вăл тĕрлĕ йывăрлăхсене çĕнтерме пултарни, хушнă ĕçсене пурнăçланă хыççăн патша хĕрне тивĕç пулни çинчен каланисем, ĕç-пуç темиçе хутчен пулнине палăртни асăннă жанрăн паллисем пулаççĕ. Кунсăр пуçне калура асамлă юмах элеменчĕсене те усă курнă: асамлă шампа пулă, патша хĕрĕ, паттăрпа пĕрле çитĕннĕ йытăпа тиха, вун икĕ пуçлă çĕлен – çаксем пурте юмаха асмлăх

енне туртаççĕ. Фольклор тĕслĕхĕпе танлаштарсан, автор вариантĕнче ĕç-пуç аталанăвне, вырăнпа тăрăх ӳкерчĕкĕсене, пӳрт-çурт таврашне питĕ тĕплĕн сăнласа кăтартнă, юмахра чылай сăнарăн пайăр ячĕ пур.

Ив. Юркина чăвашсем хутла пĕлменни, унăн уссине курманни, халăхшăн пăшăрханса илемлĕ хайлавсем çыракансене паламанни те хумхантарнă. «Толчокра» очеркра вăл çут ĕçĕ патне туртăнакан çамрăк ачана хĕрхенет. Аслисем ăна А.С. Пушкин портречĕ вырăнне илемсĕр ӳкерчĕк илме сĕннишĕн кулянать.

***Григорий Тимофеев*** (1878 – 1937) этнограф тата фольклорист, «Тăхăръял» этнографипе истори тĕпчев ĕçĕ çырнипе паллă. Унта ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем те пичетленнĕ, ачасем тĕрлĕ йăла-йĕрке ирттернĕ çĕре хутшăннине сăнланă. Чылай фольклор тексчĕ, халапсемпе юмахсем ачасене вулама юрăхлă хайлавсен шайĕнче. И. Яковлевăн «Краткий очерк моей жизни», Н. Охотниковăн «Записки из чувашской жизни. Детство» хайлавĕсене тĕпе хурса Г. Тимофеев 1900 çулта «Наследниксем» ятлă йăх романе çырма тытăнать. Аслăрах авторсенни пекех вăл та ачалăх çулĕсене аса илсе çырма, çитĕнсе пынă тапхăра сăнлама, чăвашсен кулленхи йăли-йĕркине кăтартма тĕллев лартнă пулнă. Анчах та ĕçĕ план шайĕнче çеç юлнă, пурнăçа кĕреймен.

***Константин Иванов*** (1890 – 1914) пултарулăхĕнче те ачасем валли çырнă, ача-сăнарне калăпланă хайлавсем сахал мар. Чăн малтанах «Хальхи самана» лирикăлла тата публицистикăлла сăввине палăртмала. Сăвăра çут ĕçĕн тĕп тĕллевĕ – ачасене хутла вĕрентесси, воспитани парасси пулмалла тесе палăртать сăвăç. Çакă халăха пурнăç çине тĕрĕсрех пăхма, хак пама вĕрентĕ, пулăшĕ тесе шухăшлать. Правасăрлăхпа чуралăхра асапланса пурăнакан халăха, тĕшмĕшлĕхрен, пĕлӳсĕрлĕхрен çут ĕçĕ хăтарма пултарĕ тесе шанать:

*Анчах тĕрлĕ хуйхă та*
*Пайтах пулнă-çке тата.*
*Тухатмăш та тухатать,*
*Юмăçĕ те хăратать,*
*Асамçăсем асаççĕ,*
*Ачасене пăсаççĕ...*

*Турăсем те ку чухне*
*Илми пулчĕç чӳксене...*

«Хальхи самана» сăвва К.В. Иванов Чĕмпĕр чăваш шкулне уçнăранпа 40 çул çитнĕ ятпа çырнă пулнă. Ку вăхăтра вăл Н.В. Шупуççыннипе шкул çывăхĕнче ĕçленĕ, вырăс классикине тата тĕн литературине чăвашла куçарнă. Сăвăç М.Ю. Лермонтовăн пултарулăхĕпе кăсăкланать, унăн урлă романтизм традицийĕсемпе паллашать. Сăвăра та ыррипе усаллин хирĕçтăрăвне, тĕттĕме хирĕç кĕрешме тухакан çамрăкăн сăнарне курма пулать.

К.В. Иванов уйрăм хайлавсенче те ача сăнарне ăста калăплать: «Нарспире» Сенти, кĕтӳç ачи, пулă тытакан, туй курма пынă ачасен сăнарĕсем. Çулĕсен хăй евĕрлĕхне кура хайлавра вĕсене хаваслă, лара-тăра пĕлмен, пурне те курма тата пĕлме тăрăшакан ачасем пек ӳкернĕ. Çав хушăрах вĕсене пурнăç тутимасине курма, туйма пултарнине те палăртнă. Ку чухнехи условисенче ачасен телейĕ питĕ черчен. Сăвăç калăпланă ачасен сăнарĕсенче вăл ачалăх çине еплерех пăхни, ун çинчен мĕн шутлани курăнать. Ачасем уншăн хальлĕхе пĕчĕк çынсем. Анчах вăл пĕчĕк çынсем сăнама, пурнăça тĕрлĕ енчен курма пĕлеççĕ, вĕсен пуласлăхĕ те пысăк.

«Нарспи» поэмăра сăнарланнă ача сăнарĕсем тĕнче литературинче сарăлнă «кӳрентернĕ ача» мотива çывăх. «Кӳрентернĕ ача» мотива усă курни хайлав аталанăвĕнче таса чунлăха, ырă кăмăллăха, çылăха кĕменлĕхе палăртма кирлĕ. Ĕç-пуça хăйĕн ячĕпе, тӳрĕ пĕлтерĕшпе ят пама пултараканĕ тĕрлĕ хайлавсенче ухмаха ернĕ çын та пулма пултарать. Ыттисемпе танлаштарсан, ăна айванлăхне пула, япаласене хăй ячĕпе ят пама юрать. «Нарспи» поэмăра кашни япалана хăй ячĕпе калама пултараканĕ калуçă хăй. Çапах та шăп кульминаци вăхăтĕнче, наркăмăшлă яшка пĕçернĕ чух, «кӳрентернĕ ача» мотива кĕртсе янин пĕлтерĕшĕ пур. К. Иванов сăнарсене ят панă чухне ята перекетлĕ усă курать. Кунта иккĕмĕшле пĕлтерĕшлисене ятран чĕнмеççĕ. Нарспин, Сетнерĕн, Михетерĕн, Тăхтаманăн çеç ячĕсем пур. Хайлав тăршшĕнче Сенти сăнарĕ те пурĕ виçĕ хутчен çеç тĕл пулать. Поэмăри ĕç аталанăвĕ çаврапа пулса пырать: Нарспи Силпирен каять – унта каялла таврăнать, çулталăк мешехине усă курни,

хĕвел сăнарĕ çавракa. Сенти сăнарĕ чăн малтан Нарспи упăшкине вĕлерме шухăш тытсан тĕл пулать. Вăл ачапа выляса кайнă пулсан усал ĕç пулмасан та пултарĕччĕ. Çылăха кĕмен ача килес трагедине сирсе ярасшăн. Вăл чун тасалăхне пула пулма пултаракан çылăха, усал ĕçе туять, тĕп сăнарăн чунĕнчи гармонилĕх арканнине курать. Хăрушла ĕç вĕçленĕвне те чăн малтанах Сенти курать. Ача хăйĕн çылăхсăр чунĕпе тĕнче, космосăн ĕмĕрхи саккунĕсене аслисенчен çывăхрах тăрать. Вĕсене пăхăнать. Çĕр çинчи пурнăçăн тĕрĕсмарлăхĕ чăн малтан ачан чунне пырса тивет. Çавăнпа та пурнăçăн вĕçĕмсĕрлĕхĕ тин çеç çуралакан çылăхăн самантне хирĕçлесе тăни пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

К. Иванов çырнă «Тăлăх арăм», «Тимĕр тылă», «Икĕ хĕр» поэмăсене те ача-пăча литературин тĕслĕхĕ шутне тахçанах кĕреççĕ. Сăвăç вĕсене А.С. Пушкинăн юмахĕсенчен вĕренсе çырнă. Юмахсен сюжечĕсем, форми, илемлĕх мелĕсемпе калу чĕлхи пĕтĕмпех фольклортан тухса тăраççĕ.

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, хайлавсене çырнă чухне автор халăх сăмахлăхне илемлетсе усă курать, çĕнĕ шухăш палăртать. Тĕрлĕ вăхăтра ку хайлавсене баллада тесе палăртнă, поэма тесе хаклакансем те пур. Эпир ача-пăча литературин тĕслĕхĕ пек пăхнине кура литература юмахĕ тесе калăпăр. Вĕсенче кашнинчех юмах жанрне тивĕçтерекен сăнлăх, повтор, ĕç-пуç аталанăвĕн йĕрки пур.

Юмах-халап традицийĕсене усă курни К.В. Иванова хăй пурнакан саманара пулса иртекен ĕçсем çинчен, пурнăç йĕрки çинчен ытарлă калама, пурнăçри тĕрĕс марлăх мĕнрен килни çинчен шутласа пăхма май парать. Унтан та ытларах, каланă шухăша ăнланмалларах, халăх кăмăлĕшĕн çепĕçрех тума, халăха шухăшлаттаракан ыйтусене хускатма пулăшать.

«Икĕ хĕр» юмахăн сюжечĕ ансат. Ашшĕ хăйĕн хĕрĕсенчен тĕнчере мĕн мăнтăр, мĕн тутлă, мĕн çемçе пулнине ыйтса пĕлет. Асли ашшĕне тивĕçтеренкен хуравсем парать. Кĕçĕнни – тĕрĕс сăмах каланине пула шар курать.

Ку хайлав йăла юмахĕн тĕсĕ шутланать. В.А. Ендеров кулленхи пурнăçпа йăла çинчен калакан юмахсем шутне кил-йышри пăтăрмах (упăшкипе арăмĕ, ашшĕсемпе ывăлĕ-хĕрĕсем, пускилсем хушшинчи хирĕçӳсем) çинчен калкан, ăса е ĕçĕ вĕрентекен, çамрăк

арăмăн ĕçри е кăмăлри çитменлĕхĕсене питлекен юмахсене кĕртме сĕнет. Вĕсенче çемьери хутшăнусем, çынсем хушшинчи çыхăнусем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Тĕп шухăшĕ – пĕр-пĕрне хисеплеме пĕлни, ăнланма, пулăшма хатĕр пулни. Çавăн пекех, хĕрсен хуравĕсем шурсухал умĕнче ирттернĕ тĕрĕслеве те аса илтереççĕ. Тĕп сăнара тĕрлĕ мелсемпе тĕрĕслеççĕ, ыйтусем ыйтаççĕ, тĕрлĕ ĕçсем пурнăçлама хушаççĕ. Тивĕçлипе пурнăçлама пултарнăшăн вăл асамлă япала е пулăшу хатĕрĕ илме тивĕçлĕ пулать. Асамлă юмахсенче çак ĕç ытларах чухне вăрманта е çул çинче пулса иртет.

К.В. Иванов юмахĕнче юрăхлă хуравсем пама пултараканĕ аслă аппăшĕ пулса тăрать. Вăл ашшĕн пуянлăхне тивĕçет. Халăх самахлăхĕн традицийĕсемпе килĕшӳллĕн парнине ăслă хуравсем панишĕн кĕçĕннин илмеллеччĕ. Автор традицисене пăхăнманни урлă кулленхи пурнăçра та тĕрĕсмарлăх хуçаланнине палăртасшăн, шухăшласа пăхма сĕнесшĕн. Ю.М. Артемьев палăртнă тăрăх, кĕçĕннисен çав тĕрĕсмарлăха çивĕчрех туяс, асăрхас туртăм пур. Çавăнпа та вĕсем çак ултавлă тĕнчере телейсĕр. Индоиран халăхĕсен мифологийĕнче ырăпа усал кĕрешĕвĕ çинчен калани пур. Ултавпа чеелĕхе пула юлашки кĕрешӳре усалĕ çиеле тухать. Унăн ĕмĕрĕ вĕçленсен ырă вăхăт пулмаллах, тесе шанать халăх. Çак шанăçа палăртни К.В. Иванов юмахĕсенче те пур. «Икĕ хĕр» юмахăн сюжетне аса илтерекен тĕслĕхсем ытти халăхсен фольклорĕнче те тĕл пулаççĕ.

«Тимĕр тылă» хайлавра та юмах традицийĕсем пур. Вĕсене хăй вăхăтĕнче М.Я. Сироткин тĕплĕ тишкернĕ пулнă, вăл хайлавра автор каланă шухăш халăх сăмахлăхĕпе пĕрлешсе тăнине палăртать: «Хайлавра ум сăмах пур. Çав ум сăмах хайлавра мĕнле ĕçсем пулассине, вĕсем мĕн тери ĕнентерӳллĕ-ĕнентерӳллĕ маррине малтанах систерсе хăварать. Поэт çине-çинех «тет» сăмаха усă курать, мĕн пулса иртнине ытарлă чухлама, тиркевлĕ йышăнма кирлине асăрхаттарать. Хайлавăн шалти пайне виçĕ сыпăклă çирĕп йĕркене пăхăнтарнă. Чĕкеç хăнана кайма хунямăшĕнчен виçĕ хут ыйтать. Карчăк кинне вĕлерме тимĕр тылăна виçĕ хут кăларса ярать. Чĕкеç тимĕр тылăран виçĕ хут хăтăлса юлать тата ытти те» [62. 140]. М.Я. Сироткин хăйĕн тĕпчевĕнче К.В. Иванов хайлавне халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе танлаштарать, тӳркилӳсем илсе парать. Ун шучĕпе

фольклорти «Вăпăрлă карчăкпа кинĕсем» юмахăн сюжечĕ илемлĕ литература тĕслĕхне çывăх.

«Тимĕр тылă» хайлавăн композицийĕ юмах традицийĕсемпе килĕшӳллĕн аталанса пырать. Кунта В.Я. Пропп палăртнă самантсем пур: герой çула тухни, çул çинче ăна тăшман хăвалани, тăшманран вăл асамлă юсман пулăшнипе хăтăлма пултарни. Тимĕр тылăна чĕрĕ пек ӳкерни, вăл хуçине итлени, кайран ун ирĕкĕнчен тухса усал ĕçсем туса хуни те асамлăх традицийĕсемпе килĕшӳллĕн сăнланнă.

Хайлавра автор паллисем чылай. Чăн малтан кунта юмахçă-автор сăнарĕ пур. Вăл вулаканпа калаçать, мĕн пулассине систерет, геройсене характеристика парать, вĕсен портретне, ĕçченлĕхне, кăмăлне кĕскен сăнласа парать, тавралăхри çут çанталăка ӳкресе кăтартать (уйăх, хĕвел, уй-хир). Пуплевре ытти халапсен сюжечĕсене (хĕрарăмсем тимĕр тылăран мĕншĕн хăранине ăнлантарни), вĕрӳ-суру чĕлхин текстне (тухатмăш калакан сăмах) усă курнă. Юмахçă тухатмăш карчăкăн кил-çурт таврашне, Чĕкеç кинĕн тăванĕсен пурăнмалли йĕркине кăтартса парать. Çавăнпа пĕрлех икĕ тĕнче хушшинчи талккăша ӳкерни те пур: тухатмăш тĕнчи (леш тĕнче), тăвансен тĕнчи (ку тĕнче), вĕсен хушшинче çырма пур, арман çавăрса ларать. Чĕкеç кинĕ çула лашапа, каç пулсан тухать. Юмахра, апла пулсан, мифологи тата йăла-йĕрке паллисем курăнса каяççĕ.

Хайлаври юмахçă çине-çинех хăй каласа панă халап суя пулнине, ăна ĕненме кирлĕ марине систерет:

*...Кам та пулин шанмасран*
*Е вăрçасран хăраса...*

*...Халăх шăв-шавĕ пĕр вĕçлĕ,*
*Шăв-шав сăмахĕ çĕр тĕслĕ.*

Çав хушăрах хăйĕн пуплевне ĕнентерӳллĕ тума ĕçсем «пирĕн ялта» пулнă тесе палăртать, геройсене ятпа чĕнет, Чĕкеç кинĕн тăванĕсем Акăр ялĕнче пурăннине калать. Ĕç-пуç пулса иртнĕ вырăна конкретизацилет. Калура çĕр ĕçĕпе ĕçлес, тыр-пул çитĕнтерес ĕçпе çыхăннă йăла-йĕрке паллисем те пур: Чĕкеç кин çăрса юсман пĕçерни, тимĕр тылăран улăм ăшне пытанни.

«Тимĕр тылă» хайлавра К.В. Иванов романтизм юхăмĕпе кăсăкланни те палăрса тăрать теме пулать. Романтизм традицийĕсемпе килĕшӳллĕн, Чĕкеç кин йăлана кĕнĕ пурнăç

йĕркисене, тĕрĕсмарлăха хирĕç тăрать. Тухатмăшĕ ăна пĕтерес тесе усал ĕç пуçарса ярать. Тимĕр тылăра ларакан шурă шуйттанĕ вара унăн хăватĕнчен те вăйлăрах, çавăнпа та вăл юлашкинчен хăйне те пĕтерсе хурать.

К.В. Ивановăн хайлавĕ çамрăк ăрăва чăваш халăхĕн авалхи пурнăçĕпе паллаштарать. Ăна илемлĕ чĕлхепе çырнă. Силлабика виçине усă курнине пула хайлав сыпăкĕсем çăмăллăнах асра юлăнаççĕ. Автор илемлĕ сюжет урлă çынна усал тума юраманни, усалĕ кайран каялла çаврăнса килме пултарни çинчен вĕрентсе, асăрхаттарса калать.

«Тăлăх арăм» хайлавра та юмах традицийĕсем тĕл пулаççĕ. Кунта та пуплеве юмахçă сăнарĕ ячĕпе йĕркеленĕ. Вăл хăйĕн сăмахне панорамăллă йĕркелет. Малтанах çичĕ пĕртăван вăрçă хирĕнче çапăçнине, кайран çичĕ кин тырă вырнине ӳкерсе кăтартать. Хунямăшĕ ывăлĕсен шăпине кашăк пăрахса шăпа яни, кĕçĕн кинĕ мăшăрĕн вил тăприне шырани, кайран хăй те пурнăçран уйрăлни çинчен каланине юмах традицийĕсемпе килĕшӳллĕ йĕркеленĕ. Кунта ĕç-пуç темиçе хутчен пулса иртни, сакраллă хисепсене усă курни пур: çичĕ ывăл, çичĕ кин, мăшăрĕн пиччĕшĕсемпе тĕл пулса вил тăпри ăçтине ыйтса пĕлни.

Пĕтĕмĕшле илсен, К.В. Иванов юмахĕсенче хăй пурнакан вăхăтăн йывăрлăхĕсене, пурнăç улшăнăвне, тĕрлĕ событисене ытарлă çырса кăтартнă. Хăйĕн пуплевне юмах евĕр йĕркелени ăна конкретлăхран пăрăнма май парать. Вăл тăтăшах тĕл пулакан тĕрĕсмарлăха, ултавпа суяна тиркесе çырать. Пурнăç йывăрланса çитнĕ вăхăтра ăна малалла аталантарса яма чӳк кирлине туйса хăйĕн чи таса чунлă, ырă кăмăллă геройĕсене вилмелле тăвать. Çыравçă юмах традицийĕсенчен ĕç-пуç темиçе хутчен пулнине, «тет» сăмаха, умĕнхи тата хыç сăмах каланине усă курать. Унăн юмахĕсемшĕн йăла-йĕрке, ĕненӳ, фольклорти жанрсен ытти тĕслĕхĕсене усă курасси характерлă. Кунсăр пуçне, К.В. Иванов йăла-йĕркене е пурнăç хăй евĕрлĕхне сăнланă чухне ытлашши сăмах вакламасть, чи кирлĕ тата пĕлтерĕшлĕ паллисене çеç каласа тухать. Калура вĕсем символ е метафора пек пулса тăраççĕ. Автор асра юлмалли ӳкрчĕк, сăнар, сюжет калăплать, тарăн шухăша ярать.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче учитель пулса ĕçленĕ май К. Иванов ачасем валли ятарласа сăвăсем çырни, букваре кĕнĕ калавсене редакцилени, ăна кирлĕ ӳкерчĕксемпе илемлетни паллă. К. Иванов ача-пăча литературине куçарнă тĕслĕхсемпе те пуянлатнă. Вăл анăç халăхĕсен «Акăшсем», вырăссен «Çарăк» юмахĕсене, сăпка юррисен тĕслĕхĕсене куçарнă. Вăл чăвашла пичетлесе кăларнă К.Д. Ушинскийĕн «Чĕкеç» сăвви тахçанах чăваш ача-пăча литературин тĕслĕхĕ пулса тăнă.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче 1905 – 1907-мĕш çулсенче вĕреннĕ ***Николай Шупуççыннин*** (1889 – 1942) пултаруллăхĕнче аслисем валли çырнă кайран ача-пăча литературине куçнă илемлĕ хайлав тĕслĕхĕсем пур. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, Н.В. Шупуççынни «Хитре Чĕкеç», «Вĕри çĕлен», «Ăслă суеçĕ» хайлавĕсене çырнă чухне халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене пăхăнса ĕçлет. Хайлав сюжетне, ĕç-пуç аталанăвĕн йĕркине, сăнарсен системине фольклортан илет.

Н.В. Шупуççыннин юмахĕсем асамлă ĕç-пуç çинчен каласа кăтартнисĕр пуçне халăхăн йăла-йĕрке пуянлăхĕ, пурнăç йĕркине сăнласа парас туртăмлă пулнипе уйрăлса тăраççĕ. «Ăслă суеçĕ» юмахра пиччĕшĕпе шăллĕ хăйсем çинчен чап сарас тĕллевпе вăрмана упа тытма каяççĕ. Каç пулсан апат пĕçерсе çиме шутлаççĕ. Шăши вучĕ патĕнче ларакан ватăран кăвар ыйтма черетпе пыраççĕ. Лешĕ ăста суйса кăтартма пултарнăшăн кĕçĕннине çеç кăвар парать. В. Пропп палăртнă асамлă юмахăн композицине йĕркелекен мотивсенчен кунта геройсем килтен тухса кайни, вĕсене çул çинче тĕпчекен тупăнни, хăйне парне параканăн ĕçĕсене пурнăçлани, асамлă япала герой аллине лекни, çакăн хыççăн вăл телей тупма пултарни çинчен каланисем тĕл пулаççĕ. Тĕпчевçĕ мифпа йăла-йĕрке тата юмах хушшинче тачă çыхăну пурри çинчен каланине шута илсен «Ăслă суеçĕ» юмахра авалхи инициаци йĕркине ытарлă çырса кăтартнă теме те пулать. Пĕртăвансем вăрмана лекеççĕ. Кунта вĕсен ăс-хакăлĕ мĕнле шайра пулнине шур сухал тĕрĕслет:

*... – Суя суй,*
*Пĕр чăн сăмах ан пултăр.*
*Ватă старик умĕнче*
*Ăсу-тăну палăртăр...,* – тет вăл.

Инициаци витĕр шăллĕ тухать, кăвайт илме тивĕçлĕ пулать. Кăвайт тени кунта ытти юмахсенчи асамлă япала, арăм тенипе тӳр килет.

Юмахра кĕçĕн шăллĕ суя суйса панă сăмах та хăйне евĕр кăткăс. Автор ăна пулмасла халап традицийĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ: калуçă хăй çураличчен виçĕ кун маларах кум шырама кайни, лашана пĕç хушшипе йăтса чуптарса пыни, йывăççем хушшинче кум шырани, çурăм хыçĕнчи пуртă ӳкнĕ май калуçăн купарчине тата лашан кайри урине касса пăрахни, лаша ури вырăнне турат тĕкĕлесе хуни, герой çӳлти тĕнчене йывăç тăрăх хăпарни, унта паллакан çынна тĕл пулни, çуллахи вăхăтра юр çуни, çуралман ача вăрăм çӳçлĕ пулни, çӳлтен анас çăкан хуппинчен пушăт явни тата ытти те. Калура чăваш мифологийĕн паллисене çине-çинех усă курнă: юман тата çăка йывăççисем, тĕнче темиçе сийлĕ пулни çинчен калани, йывăççене чĕрĕ пек курни. Çамрăк çын пур çĕрте те хăйĕн çаврăнçуллăхне, тавçăруллăхне палăртать. Ватăна сума сăвать, халăхăн ăс-хакăлне асра тытать. Çавăнпа та инициаци витĕр тухаять те. «Ăслă суеçĕ» хайлавăн лексикине те жанр традицийĕсене пăхăнтарнă: калу «пурăннă, тет, пĕр ялта» сăмахсемпе пуçланать; юмахçă çине-çинех «тет» сăмаха усă курать; йывăççене калаçтарать. Ĕçсем паллă мар ялта, вăрманта, çĕрпе пĕлĕт хушшинче пулса иртеççĕ.

«Хитре Чĕкеç» хайлавра та ĕç-пуç юмах традицийĕсемпе килĕшӳллĕн аталанса пырать. Автор калăва чăн пурнăçа çывхартать: Чĕмпĕр хулин, Кармал ялĕн тата тĕрлĕ вар, шывшур, вырăн ячĕсене, йăла-йĕрке, ĕненӳ çинчен каланине, хресчен пурнăçĕн ӳкерчĕкĕсене усă курать, геройсен портречĕсене, характерне сăнлать. Кармал ялĕнчи çĕрме пуянăн Уланкин хĕрне, хитре Чĕкеçе кайăк вăрласа каять. Хĕре тупмалли майсене Уланки таврари юмăç-тухатмăшсенчен ыйтса пĕлет. Шырама тухнă тарçăсем тĕл пулнă усал-тĕселсене усал вăйĕпе хирĕç тăраççĕ. Çавăнпа та хăйсем те пĕтеççĕ. Юманкка усала хирĕç юрату вăйĕпе, халăх ăс-хакăлĕпе, юлташĕсен вăй-хăвачĕ пулăшнипе кĕрешет. Таса чун-чĕре усала çĕнтерет.

«Хитре Чĕкеç» хайлавра асамлă ĕçсем çинчен калани çукпа пĕрех. Калăва йĕркелеме автор ку чухнехи чăваш пурнăçĕн хăй

евĕрлĕхне, ĕçĕ-хĕлне, социаллă хутшăнăвĕсене, ĕненӳсемпе йăла-йĕрке пуянлăхĕ çинчен каланине усă курать. Чăн малтанах Кармал ялĕн сăн-сăпачĕпе, кунти пурнăç йĕркипе паллашатпăр. Кунта Уланки пуян пур, унăн тарçисем, ăрăмçăсем (хăйне евĕрле духовенство), кĕтӳçĕ, ытти пуян тата чухăн халăх. Çурхи, çуллахи ĕç-çине, çамрăксен уявĕсене автор тĕплĕн те сăнарлăн ӳкерсе парать: çимĕк, утă вăхăчĕ, Илья кунĕ, тырă вырнă вăхăт, эрнекуна уяни, кăвак хуппи уçăлни тата ыт те. Автор чăваш çут çанталăкпа килĕшӳллĕ пурăннине сăнарлать.

Асамлă юмахсенчи евĕр Уланки хĕрне тупмалли майне юмăç-тухатмăшсене, чĕлхе пĕлекенсенчен ыйтса пĕлет, тарçисене Палан варĕ еннеле кăларса ярать. Маттурсене пĕр кăкшăм ылтăн пама пулать. Хайлавра мулпа чун проблемине хăйне евĕрлĕ татса панине те асăрхама пулать. Кунта «пуйма кайни вилсе килнĕ» тени тӳрре тухать. Ылтăна пула суккăрланнă тарçăсем ĕненӳсене уямаççĕ. Усал вăйран пĕтеççĕ.

Усала хирĕçлекен ырă вăя юмахра Юманкка сăнарĕ урлă палăртнă. Вăл сăнĕ-пуçĕпе, кĕлеткипе Улăп пек, тĕрĕслĕхшĕн тăрăшать. Традицилле амăшĕпе çеç пурăнать. Çула тухас умĕн те вăл ырă вăйсемпе канашлать, Пӳлĕхçĕрен пил ыйтать. Çул çинче вĕсем çавра çил варринчи шуйттана çĕнтереççĕ, наркăмăшлă улмана тытмаççĕ, хĕвеле вупăр çининчен хăтараççĕ, вĕри çĕлене тĕп тăваççĕ, тар йывăççине касса Чĕкеçе ирĕке кăлараççĕ.

Н.В. Шупуççынни «Хитре Чĕкеç» хайлава çырнă чухне К. Ивановăн «Нарспи» поэмине евĕрлени сисĕнет. Г.Ф. Юмарт Н.В. Шупуççыннин пултарулăхне тĕпченĕ май, икĕ çыравçă пĕрле ĕçленĕ хушăра пĕр-пĕрин хайлавĕсемпе паллашма, хак пама тата тӳрлетӳсем тума пултарни çинчен калать. Çавăнпа хайлавсенче пĕрпеклĕхсем çуралаççĕ те.

«Вĕри çĕлен» юмахра усалсемпе тĕл пулни çинчен калакан халап сюжечĕ тĕпре. Этемпе усал-тĕсел хушшинчи хутшăну çинчен çырса кăтартнă май автор «Усал ĕçе усалпа нихăçан пĕтерес çук» текен шухăша тӳрре кăларать. Çичĕ çамрăк тĕрĕсмарлăх çукран çынсем çине çилленсе вĕри çĕлене çаврăнаççĕ. Хăйĕн хĕрне пĕтернĕшĕн вĕсенчен пĕрне Ăраман чĕлхеçĕ тытать. Вăл пуçарнă тавăру ĕçне пула унăн хĕр пурнăçĕ

те синкерлĕ вĕçленет. Хайлавра ăрăмçă-тухатмăшсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕ йĕркипе çыхăннă этнографи материалĕ нумай. Автор вĕсене тĕплĕн, ĕнентерӳллĕн çырса кăтартать. Тивĕçлĕ каларăшсене, мифологири сăнарсен ячĕсене, ĕçе пысăклатса е пĕчĕклетсе каланине, сакраллă хисепсен ячĕсене усă курать. Юмахра асамлăх паллисенчен этнографи элеменчĕсем ытларах. Хайлавра ытарлă ĕç-пуç çинчен каланипе пĕрлех ырăпа усал пĕлтерĕшĕ пирки те шухăшласа пăхма сĕннĕ. Усал ĕçе ырăпа çеç çĕнтерме май пур тесе каласшăн автор.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен тĕрлĕ вăхăтра М. Акимов-Аруй сатирик, Тайăр Тимкки сăвăç-революционер, Ф. Павлов композитор, М. Трубина çыравçă, К. Кольцов сăвăç тата ытти пултаруллă çынсем вĕренсе тухнă.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Иг. Иванов – дидактикăлла калавсен ăсти.
2. К.Иванов юмахĕсен дидактики.
3. Н. Шупуççынни юмахĕсен хăй евĕрлĕхĕ.
4. Т. Тайăрăн, А. Аруйăн пултарулăхĕ.
5. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ авторсен калавĕсем.
6. Букварьте пичетленнĕ литература юмахĕсен тĕслĕхĕсем.

## XX ĔМĔРĔН 20-30-МĔШ ÇУЛĔСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

1917-мĕш çул хыççăн ача-пăча литературин аталăнăвне, пахалăхне пысăк пĕлтерĕш уйăрса пăхма тытăнаççĕ. Кĕнекен теорилле шайне тарăнлатас, пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе ятарласа правительствăлла мероприятисем туса ирттереççĕ. Ача-пăча литературин çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртма уйăрнă критиксемпе тĕпчевçĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Издательствосен ĕçне анлăлатас, шкулта литература урокĕсен шутне ӳстерес енĕпе те ĕçлеççĕ. Ача-пăча литератури аталанăвне партипе правительство сыхласа, йĕркелесе тăма тытăнаççĕ. Çине-çинех тухса тăракан партипе правительство постановленийĕсенче ача-пăча литературине «большевиксен идеологи фронтĕнчи чи çивĕч хĕç-пăшалĕ» тесе ят панă. Пичетленсе тухакан кĕнекесенче «социаллă тата

ӗнентерӳллӗ формăсемпе çынсен социализмалла улшăннине» кăтартмалла пулнă, ачасене вара «пролетарилле интернационализм сывлăшӗпе çирӗплетме, аталанма пулăшмалла» пулнă.

Партипе правительство хушнипе ачасем валли ятарлă кӗнекесен серисене кăларассине йӗркеленӗ: пионерсен пурнăçӗ çинчен калакан, пултаруллă çынсен пурнăçӗпе тата ӗçӗ-хӗлӗпе паллаштаракан литература. Кӗнекесен пахалăхне лайăхлатас тӗлӗшпе те тӗрлӗ требованисем кăларса тăратнă: хайлаври калăва лайăхлатасси, ачасен интересӗсене тивӗçтересси, кӗнекен оформленине çӳллӗ шайра пурнăçласси. Ача-пăча литературин идейăлла пахалăхӗ те чылай улшăнать. Унччен литературăра çут-ӗç тӗллевӗсемпе задачисем, çамрăк ăрăва аслисене хисеплеме вӗрентесси, ӗçченлӗх туйăмне аталантарасси, халăх сăмахлăхӗн традицийӗсем урлă воспитани парасси тӗпре пулнă пулсан çӗнӗ саманара класс кӗрешӗвӗн тӗслӗхӗсем урлă воспитани парасси мала тухать. Çыравçăсен илемлӗ сăмах урлă ачасен шухăшлавне социализм еннеле çавăрмалла, халăхăн класс тата социалă ăнне аталантармала пулнă. Çавна май ача-пăча литературине те пачах çӗнӗ сăнар килет – вăл аслисене кулаксемпе кӗрешме пулăшакан пионер. Çыравçăсем хăйсен хайлавӗсенче социаллă строительство çинчен, колхоз йӗркеленни çинчен, кивӗ тӗнчен тӳнтерле енӗсене пӗтерни çинчен, социаллă пурлăха хӳтӗлеме аслисене ачасемпе çамрăксем пулăшни çинчен каласа кăтартаççӗ.

Тӗпӗр чухне хайлавсенчи ачасемпе çамрăксем çӗнӗ пурнăç çирӗпленӗвӗшӗн пыракан кӗрешӳре аслисенчен хăюллăрах та матуртарах пулса тухаççӗ. 20-30-мӗш çулсенчи ача-пăчасен, аслисен литературишӗн куçăм тапхăрӗ характерлă. Совет ача-пăча литературине пуçарса яраканӗсем М. Горький, К. Чуковский, С. Маршак пулнă. Çӗнӗ ача-пăча литератури классикăла вырăс литератури, чикӗ леш енчи литература, фольклор çинче никӗсленсе тăнă. Поэзире ку тапхăрта икӗ юхăм палăрма тытăнать: ачан интелектне хускатакан вăйăлла тата кăсăклă литература тата сатирăпа публицистикăна пӗрлештерсе тăракан кăмăл-сипетпе дидактика литератури. Прозăшăн реализм паллисем характерлă пулса тăраççӗ. Çыравçăсем эпикăлла пӗтӗмлетӗве, совет символикине, чăнлăха илемлетес туртăма усă кураççӗ. Конкретлă фактсене хайлава кӗртсе ачасене наукăпа

кăсăклантарас туртăм та пулнă. Уйрăмах илемлĕ литература урлă пĕлӳ паракан литература хăвăрт аталанать.

Совет ача-пăча литературин аталанăвĕ М. Горький ячĕпе тачă çыхăнса тăнă. 1918 çулта вăл партине «Об издании русской художественной литературы» ятпа çыру çырать. Унта шкул ачисен вĕренӳ процесне пуянлатма, XVIII, XIX ĕмĕрсенчи вырăс классикĕсен хайлавĕсене, фольклор тĕслĕхĕсене çĕнĕрен пичетлесе кăларма ыйтатать. Вăл тăрăшнипех «Всемирная литература» издательство ĕçлеме тытăнать. Издательство тĕнче литературинчи чи паллă ача-пăча литературин тĕслĕхĕсене пичетлесе кăларма тытăнать. 1919 – 1920 çулсенче М. Горький тăрăшнипех ачасем валли «Северное сияние» журнал тухса тăма тытăнать. Журнал ачасене наука, литература, искусство çитĕнĕвĕсемпе палаштарас, ăс-хакăлне аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çавăнпа пĕрлех çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас тĕллеве те пурнăçланă. М. Горький ăслăлăхпа ĕçлекен çынсене ятарласа ачасем валли илемлĕ хайлавсем çырма хавхалантарать. Çавна май, ачасем наука çитĕнĕвĕсемпе тӳрремĕн палашма пултараççĕ, унпа кăсăкланма тытăнаççĕ. М. Горький хăй ачасем валли илемлĕ хайлавсем çырнисĕр пуçне ытти талантлă авторсене те çак ĕçе явăçтарать. Вăл ачасем мĕнпе кăсăкланнине тĕпчет, вĕсене хумхантаракан ыйтусене тупса палăртать. Ун шучĕпе, ача-пăча кĕнекинче вăйă, кăсăклантарасси, шӳт тĕпре пулмалла. Ачасен тавракурăмне ӳстерес тĕллевпе М. Горький «Паллă çынсен пурнăçĕ» серине кăларас ĕçе пикенет.

Совет çĕр-шывĕнче пурăнакан вырăс мар халăхсен ача-пăча литератури чылай чухне вырăс литератури, партипе правительство витĕмĕпе аталанса пынă. Кунта пулса иртекен улшăнусем, хушусем ытти литературăсемшĕн те пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Хăш пĕр халăхсен çыруллăхĕ, çав шутра ача-пăча литератури те, 1917 çул хыççăн çеç йĕркеленсе кайнине палăртмалла. Чăваш Республикинче 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ятарласа кружоксем ĕçленĕ. Вĕсем шкулсем валли кĕнекесем кăларас, фольклор тĕслĕхĕсене пуçтарас, пĕчĕк драмкружоксем валли инсценировкăсем çырас, ачасене воспитани пама пултаракан, тăван тавралăха, çут çанталăка юратма вĕрентекен кĕнекесем çырас ĕçе те хутшăннă. Ку чухнехи лите-

ратура çӳллӗ идейипе, илемлӗх шайӗпе, темипе тата жанр пуянлӑхӗпе, нумай енлӗхӗпе, пӗлӳ тата воспитани парас, эстетика туйӑмӗсене аталантарас пӗрлӗхпе палӑрать. Çӗнӗ условисенчи литература истори чӑнлӑхне тата илемлӗхе пӗрлештерсе тӑрать. Хайлавсенчи сӑнарсем те çӗнӗ условисенче пурӑнакан персонажсем. Прозӑра социаллӑ калавсем, повӗçсем, романсем ачасен пурнӑçне сӑнлаççӗ. Уйрӑмах революцичченхи ачалӑха хальхипе танлаштарасси, революци событийӗсене, граждан вӑрçине хутшӑннӑ ачасен шӑпи çинчен каласа парасси тӗпре.

Граждан вӑрçине, выçлӑх çулӗсене, кулаксемпе пуян çынсене, иртнӗ саманан тӳнтер енӗсен айӑпне пула тӑлӑха тӑрса юлнӑ, терт-нуша тӳсекен ача сӑнарӗсем Хумма Çеменӗн «Чалӑш пӳрт», «Хамӑр вӑйпа», «Çӗтӗк сӑхман», «Палля» калавӗсенче, Исаев Мӗтрин «Люпук çырӑвӗсем», «Лисук чӑптаçӑ» калавӗсенче тӗпре. Ачасене хӗрхеннипе пӗрлех вӗсенче беспризорниксен проблемине хускатни те пур. М. Трубина «Марине» калавра ача çуртӗнче çитӗнекен çамрӑксен пурнӑç хӑй еверлӗхне, терт-нушине çырса кӑтартать. Хайлавсенче, самана ыйтнине кура, ача куçӗпе историлле событисемне кӑтартса парасси, хакласси те малти вырӑна тухать.

Историлле прозӑра В.И. Ленин пурнӑçӗпе пултарулӑхӗ çинчен калакан хайлавсем пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Чӑваш ача-пӑча литературинче лениниана юхӑмне Н. Шелепи пуçарса ярать. Унӑн ачасем валли çырнӑ хайлавӗсенче телейлӗ те савӑнӑçлӑ кун-çула сӑнланӑ, аслӑ çул пуçсене Ленинпа Сталина халаллӑнӑ сӑвӑсем нумай. С. Шавлипе И. Ивникӑн та çул пуçсене халалӑнӑ сӑвӑсем пур. Вӗсем Ленинӑн ачалӑхӗ, вӑл çитӗнсе çитсен ачасемпе еплерех хутшӑни çинчен çыраççӗ. Çак темӑпа çырнӑ кӳршӗ халӑхсен, вырӑс литературин тӗслӗхӗсене куçараççӗ. И. Малгайӑн та «Октябрь ялавӗ» сӑвӑ кӗнекинче Ленин, парти, Сталин темисем тӗпре.

В. Долгов «Ачаранпах» калавӗнче Ленинӑн Çӗпӗрти сылкӑра Шуша ялӗнче пурӑннӑ тапхӑрне сӑнлать. Хӗллехи каç Ленин Н. Крупскаяна хӑйӗн Чӗмпӗрти пурнӑçӗ çинчен, ашшӗ çинчен, вӑл чӑваш ялӗсенче шкулсем уçса çӳрени çинчен каласа кӑтартать. Калаçу урлӑ чӑвашсен революцичченхи йывӑр

пурнăçĕ, вĕсем çутталла туртăнни курăнать. Вулакан умне аслă педагог-демократ, Атăл тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларассишĕн тăрăшакан И.Н. Ульянов сăнарĕ тухса тăрать. Калавра Ленина, унăн шухăш кăмăлне, хура халăх пурнăçне сăнласси пур. Икĕ тема тачă çыхăнура тăраççĕ. Нушаланса пурăнакн халăха Ленин, Улăп-паттăр пулса çăлма килет.

И. Салампекăн «Сармантей», И. Лисаевăн «Çулпуç хуравĕ» калавĕсенче Ленин сăнарне тӳрремĕн илсе кăтартман. Унăн пĕлтерĕшĕ çынсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, кĕрешĕвĕ, шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ-шанчăкĕ урлă курăнать. Сармантей кĕтӳçĕ Хĕрлĕ çар ретне тăрса ирĕклĕхшĕн кĕрешме каясшăн. Анчах ăна унта илмеççĕ. Вара вăл вырăнти кулаксене тăрă шыв çине кăларса ырă ĕçсем тăвать. И. Лисаев хайлавĕнчи Василие пуп килĕнче тaçăра ĕçлет. Вăл совет влаçне хапăл тăвать. Анчах вырăнти куштансем ялта коммуна тăвассине чарса тăраççĕ. Васили пулăшу ыйтса Ленин патне çыру çырать. Çырăвĕ асăннă çĕре çитмесен те пултарнă, апла пулин те, ялта пулса иртнĕ ырă улшăнусем çулпуç хушнипе пурнăçланнă тесе шутлать Васили.

Г. Луч «Эсир Куçука курман-и?» калавсен пуххине пичетлесе кăларать. Автор пурнăçри тĕрлĕ пулăмсене куçа курăнмала сăнласа пама пултарни курăнать. Калавсене эпир сире каласа паратпăр, эсир вара хăвăрах тавçăрса илĕр принципа тĕпе хурса çырнă. «Хĕллехи сад» калавĕнче ачасем Ленинпа пĕрле çĕнĕ çул уявне ирттернине сăнласа кăтартнă. Хайлавра илемлетсе каланинчен ытларах чăнлăх, ĕнентерӳллĕх тĕпре. «Аслă çул пуç» çинчен пĕр пĕр ватă каласа панă евĕр йĕркеленĕ тĕслĕх те пур. Мучи паянхи кунăн ырлăхĕсем çине пăхса иртсе кайнă йывăр вăхăта аса илет. Хăй Ленина тĕл пулни çинчен каласа парать. Уншăн вăл нушаран хăтаракан, телей парнелекен паттăрпа танлашать. Мучи калавĕнчен историлле событисене çутатса пани те пур.

Самана ыйтнипе XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче çул пуçсемпе ертӳçĕсем çинчен çырасси пĕтĕмĕшле çав хушăра ачапăча литературинче те анлă сарăлнă пулнă. Пĕр енчен илсен, çыравçăсем çак идейăсен тĕрĕслĕхне чăнахах та ĕненнĕ, тĕпрĕн енчен илсен – ку темăсене çутатса парассине çӳлти органсем тĕрĕслесе тăнă. Лениниана тата Сталиниана тематики чăваш ача-

пăча литературинче 80-90-мĕш çулсемчченех тăсăлать. Çавна пула поэзире те прозăра та лозунг евĕр янракан, ертӳçĕсене мухтакан хайлавсем çуралаççĕ. Çыравçăсем унăн ачалăхне ӳкререççĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ чăвашсене ирĕклĕх, çыруллăх, аталану парнеленине ырлаççĕ. Пĕр пĕр пулăма курнă хыççăн çул пуçсен сăнарĕсене аса илесси, калăва ватă çын ячĕпе йĕркелесси ытларах сарăлнă. Çыравçăсем паянхи кун лайăх пурăннишĕн Ленина тав тăваççĕ. Хальхи вăхăтра ачасемшĕн чи ырри вăл – шкулта хутла вĕрнме май пурри. Ку ырлăха та Ленин туса панă. Г. Ефимов хăйĕн сăввисенче сюжет тума, кĕрешӳ саманчĕсене ӳкерме юрататать пулсан («Вăрманти тĕл пулу», «Асламăшĕпе мăнукĕ»), П. Ялкир пĕтĕмĕшле сăмахсемпе çырать («Ленин»). Çул пуçăн пурнăçĕпе çыхăннă вырăсене сăнласа кăтартасси те йăлара: А. Понамарĕвăн «Ленинăн кил-музейĕ», В. Харитонов «Ленин сăнĕ», Я. Ухсайăн «Ешĕл палăк»… Ку тематикăпа çырнă хайлавсенче Турă ачи пирки калакан мифăн хăш пĕр традицилле мотивĕсене те курма пулать.

Ачасене воспитани парас ĕçре халапсемпе юмахсем уйрăм вырăн йышăнаççĕ. XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи критиксемпе тĕпчевçĕсем воспитани, аталану ĕçĕнче ачасене юмахпа халапсене суйласа усă курма сĕннĕ. Ача-пăчан фантазине, тавралăха сăнас ăсталăхне ӳстерме пулăшакан юмахсемсĕр пуçне пурнăçри чăнлăхран аякра тăракан сиенлĕ, тĕшмĕшле шухăшлă юмахсене те асăрхама пулать, тенĕ вĕсем. Çыравçăсен халап-юмахсенчи мистика енне сулăнакан вырăнсенчен хăтăлса, вĕсене чăн пурнăçпа тачăрах çыхăнтарса илемлĕ хайлавсем çырмалла пулнă. Критиксем юмахсене тиркесе çырасси ку тапхăрта атеизм витĕмĕ сарăлнинчен чылай килнĕ. Ача-пăча литературине аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ Н.К. Крупская та юмахсене воспитани ĕçĕшĕн сиенлĕ тесе шутланă. XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче çеç М. Горький тăрăшнипе юмаха ача-пăча литературине каялла тавăраççĕ. Юмах жанрĕ ачасен фантазине ӳстерме пулăшать, ĕмĕтленме вĕрентет, тенĕ вăл. Юмахра халăх ăс-хакăлĕ, ĕмĕтшухăшĕ, çирĕплĕхĕ, пурнăçĕпе йăли витĕр палăрса тăрать. Чăваш ача-пăча литературинче халăх юмахĕсене пуçтарса пичетлесе кăларнисĕр пуçне литература юмахĕсене çырасси те йăлана кĕрет. И. Ивник, Я. Ухсай, Ç. Элкер, М. Трубина тата ытти

çыравçăсем халăх юмахĕсене илемлетсе, вĕсен традицийĕсене усă курса çĕнĕ пурнăç йĕркеленĕвĕ çинчен каласа паракан юмахсем çыраççĕ. Вĕсен хайлавĕсенче чăн пурнăçа сăнласси, событисене ĕнентерӳллĕ ӳкересси пур. Юмахçăсем тĕн паллисене, асамлăха телейлĕ пуласлăх çинчен ĕмĕтленнипе ылмаштарма тăрăшаççĕ. М. Трубина «Шĕшкĕ», «Вĕренепе куршанкă», «Ютран килни» тата ытти хайлавĕсене ытарлă сăмах, юмах традицийĕсем урлă ачасене пĕлӳ парас тĕллеве пăхăтарать. Вĕсем çут-çанталăкри пулăмсем çинчен, ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсен пурнăçĕ çинчен каласа кăтартаççĕ.

XX ĕмĕрĕн 20 – 30-мĕш çулĕсенче ача-пăча драматургийĕ те аталанма тытăнать. Çакă ача-пăча театрне уçăлма май парать. 1933 çулта чăваш çамрăксен театрĕ никĕсленет. Унăн ертӳçисем Лениградран ятарласа килнĕ Маргарита Фигнерпа Эрих Фиесах пулнă. Чăн малтанах ку театрта ачасем валли ачасен пурнăçĕ çинчен калакан спектакльсем кăтартнă. Чăваш пукане театрĕ 1945 çулта Лениградран килнĕ В. Мерзляков режиссёр тăрăшнипе уçăлать. Чăвашла çырнă драма хайлавĕсем пулман пирки сцена çинче вырăс пьесинене, юмахĕсене, юптарăвĕсене инсценировка евĕр йĕркелесе выляма тивнĕ. Малтанхи драма хайлавĕсенче историлĕх, документаллăх палăрса тăнă. Ача-пăча драматургĕсем хăйсен хайлавĕсене юмах сюжечĕсене çывăх йĕркелеме тăрăшни пĕтĕмпех хайлава кĕçĕн тата вăтам çулхи ачасем валли çырнинчен килет.

Ача-пăча драматургине аталантарас енĕпе А. Кăлканпа В. Алагер та чылай ĕçленĕ. Вĕсен пьесисене ача-пăча театрĕсенче çеç мар, пултарулăх кружокĕсенче те выляннă. В.О. Алакерĕн 30-мĕш çулсенче çырнă пьесисене социаллă çивĕч конфликт, çĕнĕ пурнăç тăвакан çынсен шалти кăмăл-туйăмне ӳкерсе кăтартас тĕллев пĕрлештерсе тăрать. Çак тапхăрта унăн «Вăл» (1930), «Унăн çулĕ» (1932), «Кахал», «Ураса» (1933) пьесисем пичетленеççĕ. «Ураса» драмăра колхăз тунă тапхăра сăнласа кăтартнă. Çамрăк Тимук çĕнĕ пурнăç тăшманĕсемпе кĕрешет. Унăн кăмăл çирĕплĕхне ĕнентерӳллĕ кăтартса парать автор. Хура халăхăн телейĕшĕн кĕрешнĕ тапхăрта Тимук тăван ашшĕ тăшман пулнине курсан иккеленсе тăмасть, ăна та ыттисем пекех тăрă шыв çине кăларать. «Вăл» пьесăра та колхоз тăвакан

çамрăксене сăнлать В. Алакер. Унăн геройĕсем коллективлă ĕç пирки çеç шухăшлаççĕ. Юрату, çемье ыйтăвĕсенчен вара вĕсем хăраса тăраççĕ. Самана вĕрентни хыççăн кайса çырнă хайлавсенче сăнарсен характерне пĕр енлĕ çеç кăтартасси час-час тĕл пулать драматургăн.

Кунсăр пуçне, 1929 çулта «Хатĕр пул» журнал, 1931 çулта «Пионер сасси» хаçат тухма тытăнаççĕ. Периодика изданийĕсем тухса тăма пуçлани çыравçăсемпе ачасем хушшинчи хутшăнăва кĕскетет, ачасене хăйсене те литература пултарулăхне хутшăнма май парать. Ку тапхăрти критиксен ĕçĕсемшĕн ача-пăча журналĕсем те, çыравçирсем те литература аталанăвĕшĕн тивĕçлĕ çитĕнӳ туман тесе тиркесе каласси характерлă пулнă. Сентименталлăха, сăпайлăха тĕпе хуракан тĕн кĕнекисем пăрахăça тухаççĕ, вĕсен вырăнне çĕнĕ пурнăç, телейлĕ пуласлăх, тăван коллектив çинчен калакан кĕнекесем килеççĕ.

Вуламалли кĕнекесем сахалтарах пулнă пирки куçарусемпе, унччен тухнă кĕнекесене çĕнĕрен пичетлесе кăларнипе йӳнеçтерни те пулнă. 1926 çул тĕлне «Кайăкçă Емель», «Макар тĕлĕкĕ», «Кăвак мăй», «Çӳревçĕ Шапа» юмахсене куçарнă. Чикĕ леш енчи литературăран Д. Дефон «Робинзон Крузо», Шарль де Костерăн «Гиль Уленшпигель», Д. Свифтăн «Гулливер çӳренисем», М. Твенăн «Гекльберри Финн тем те пĕр курса çӳрени», Р. Киплингăн «Маугли» хайлавĕсене, Шарль Перрон, Г. Андерсенăн юмахĕсене куçарнă. Чăваш ачисене тĕнче литературин тĕслĕхĕсемпе палаштарас ĕçпе уйрăмах К. Чулкаç, Ф. Ижедер тăрăшса ĕçленĕ.

### Ыйтусемпе ĕçсем

1. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи ача-пăча литературин аталанăвĕ мĕнлерех юхăмсемпе çыхăнса тăнă, мĕнрен килнĕ?
2. XX ĕмĕрĕн 20 – 30-мĕш çулĕсенчи ача-пăча литературинче истори темине çутатса парас уйрăмлăхсем çинчен каласа парăр.
3. XX ĕмĕрĕн 20 – 30-мĕш çулĕсенчи ача-пăча литературинче литература юмахĕ жанрăн аталанăвĕ пирки каласа парăр.
4. Ача-пăча литературин аталанăвĕнчи М. Горкийĕн пĕлтерĕшĕ.
5. Ĕмĕр пуçламăшĕнчи ача-пăча литературинче çул пуçсен сăнарĕсене калăплас ĕçĕн пĕлтерĕшĕ.

# XX ĔМĔРĔН 20-30-МĔШ ÇУЛĔСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ÇЫРАВÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

***М.Н. Данилов-Чалдун*** (1894 – 1944) граждан вăрçи вăхăтĕнчи событисем çинчен, шурă гвардеецсен бандисене хирĕç партизансем мухтавлă кĕрешни çинчен чылай хайлав çырать. Вĕсенче ачасен пурнăçне сăнласси те пур. Унăн «Хĕрлĕ çар», «Çăлтăрлă çĕлĕк», «Ункăран», «Партизансем», «Икĕ вăй», «Çулăм витĕр», «Тайга паттăрĕсем» тата ытти калавĕсенчи ача сăнарĕсем нихăçан та пурнăçри ĕçпе кĕрешӳ тулашĕнче тăмаççĕ, мĕн пур ĕçсене активлă хутшăнаççĕ, çитĕннисемпе пĕрле ĕçхалăхĕн телейлĕ пуласлăхĕшĕн çапăçаççĕ. Тепĕр чухне вĕсем кĕрешӳре аслисенчен те çирĕпрех, маттуртарах пулнине курма пулать. «Çăлтăрлă çĕлĕк» калаври сăнар çамрăк пулин те хамăрăннисемпе тăшмансене уйăрма пĕлет. Вăрмана кайсан партизанра çӳрекен салтака çăкăр парать. Парнелĕх илнĕ çăлтăрлă çĕлĕке кам панине каламаншăн шурă гвардеецсем унăн çамки çине çăлтăр касса яраççĕ.

М. Чалдунăн геройĕсем çамрăк пулин те хăйсен çирĕплĕхĕпе, шанчăклă пулнипе палăрса тăраççĕ. Ку вăхăтра çырнă чылай хайлавĕшĕн икĕ хире-хирĕçле вăя хирĕçлесе кăтартасси тĕпре. Шуррисем хĕрлисене хирĕç кĕрешеççĕ, вĕсем хаяр, усал, ĕç халăхне нушалантараççĕ. Икĕ вăй пĕр-пĕрне хирĕçленине вăл пурнăçри фактсем тата çут çанталăк сăнарĕсем урлă та кăтартать. «Çăлтăрлă çĕлĕк» калаври Андрюша вăрмана кайсан упа тапăнать, упине партизансем персе вĕлереççĕ. Упи кунта шуррисене пĕлтерет, партизанĕсем, хĕрлисем, ĕç халăхне ирĕке кăлараççĕ. Çыравçă хăйĕн калавĕсене чăн пурнăçран илнĕ событисем çине таянса çырни паллă. Вĕсенче ĕнентерӳллĕх, натурализм мелĕпе çырасси тĕпре. В. Краснов-Асли те «Шуррисемпе çапăçни» аса илӳ майлă йĕркеленĕ кĕнекере граждан вăрçи вăхăтĕнчи çамрăксен кĕрешĕвне çырса кăларать.

***Иван Иваник*** (1914 – 1942) сăвăç, куçаруçă, критик пулнă, литературăсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес, К.В. Иванов ячĕпе хисепленсе тăракан литература музейне йĕркелес енĕпе вăй хунă. Унăн ачасем валли çырнă сăвă-

юррăсем сахал мар. Вĕсем хаçат-журналсенче, сăвă кĕнекисенче пичетленсе тăнă. Паллăраххисем: «Ёлка», «Сар автан», «Çĕнĕ пурнăç калчисем»... Сăвăç ытларах çут çанталăк, паттăрсем çинчен çырать, совет çĕр-шывĕнчи ачасен пурнăçĕ телейлĕ пулнишĕн савăнать. Сăвăсем çырнă чухне И. Ивник ачасен çитĕнӳ уйрăмлăхне, психологине те шута илме тăрăшнă. Çакна пула вĕсенче ăс-тăна вĕрентес туртăм, чĕлхе ансатлăхĕ пур. Хайлавсенче сасă кĕвĕлĕхĕ тĕпре пулнине кура вĕсем юрра çăмăллăн хывăнаççĕ. И. Ивникĕн çулталăк тапхăрĕсем çинчен çырнă сăввисене пĕр çĕре пуçтарса композиторсем ачасем валли либретто йĕркелеççĕ. Чи кĕçĕннисем валли çырнă чухне сăвăç уявсене, çут çанталăк пулăмĕсене, чĕр чунпа ӳсен-тăран тĕнчине сăнлать. Халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене, ытларах сăвă-юрă, халап-юмах жанрĕсемпе усă курать. Сăвăç саманашăн юрăхлă, ырра вĕрентекен, илемлĕ хайлавсем çырать:

*Ылтăн тумлăн ялкăшса*
*Килчĕ тулăх кĕркунне.*
*Ларса тухнă савăнса*
*Эпир парта хушшине.*
*Шкулĕ çутă тап-таса,*
*Пĕтĕм кăмăл çĕкленет.*
*Вĕренетпĕр тăрăшса*
*Эпир халĕ кулленех.*
*Эпир Ленин ачисем*
*Çĕнĕ пурнăç калчисем.*
*Пире лайăх вĕренме,*
*Пире лайăх çитĕнме!*

И. Ивникăн хайлавĕсене коммунистла воспитани парас ĕçре меллĕ, юрăхлă пулнишĕн хăй вăхăтĕнче ырланă. Унăн «Теллей çулĕ» юмахĕ, «Павлик Морозов» поэми совет саманинче программăлла хайлавсем шутланнă. «Павлик Морозов» поэмăра XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче класс кĕрешĕвĕ хĕрсе пынă тапхăр сăнланнă. Поэмăн теми те, тĕп шухăшĕ те ку тапхăршăн питех характерлă. Коллективизаци юхăмне хăвăртлатма, класс тăшманĕсене пĕр шелсĕр пĕтерме, тăван çĕр-шывшăн калама çук пĕлтерĕшлĕ ĕçе çамрăк вăйсене явăçтарас ĕçре И. Ивникăн поэмин пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Поэма никĕсĕнче чăн пулнă фактсем.

Автор вĕсене поэт куçĕпе тинкерсе тухать, хăйĕн шухăшĕпе туйăмĕсене палăртать. Павлик – сăпайлă, пултаруллă ача. Ашшĕ киревсĕр ĕçсем тунине пĕлсен, хăйне юнанинчен те хăраса тăмасть. Павлика паттăр, çĕнĕ пурнăçа чунтан ĕненекен пек сăнланă, вăл тăшманăн кашни утăмне, киревсĕр ĕçĕсене витĕр курса тăрать. Хăй вилет пулин те кулаксен ĕçĕсене тără шыв çине кăларма пултарать. Автор çамрăк пионер кĕрешӳре пĕччен мар, унпа пĕрле пĕтĕм çĕр-шыври пионерсем кар тăма хатĕр пулнине кăтартать. Вăл ку саманари литературăра палăрнă ытти хастар пионерсен ячĕсене аса илтерет (Коля Мяготин, Кычан Джакыпов, Гриша Акопян...), çамрăк ăрăва хăюллă пулма чĕнсе калать. Поэмăна сăнарлă чĕлхепе, ансат формăпа çырнă. Автор тăшман пирĕн умра пуç таяс çуккине палăртать, апла пулсан ăна çĕнтеричченех кĕрешме хатĕр пулмалла.

«Телей çулĕ» юмаха кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă. Фольклор материалне усă курса автор çĕнĕ пурнăç йĕркеленсе кайни çинчен, кĕрешӳ сăлтавĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен каласа кăтартать, иртнипе хальхине, ыррипе усаллине танлаштарать. Юмахра калăва традицилле мотивсем йĕркелесе тăраççĕ: икĕ ватă карчăкпа старик пурăнни, вĕсен ача пулманни, асамлă майпа ывăл çурални, вăл хăвăрт ӳсни, паттăр çула тухни, çул юппинчи чул çинче çыру тупни, çул çинче тĕрлĕ тăшмансене çĕнтерни, ĕç-пуç виçĕ хутчен пулса иртни тата ытти те. Паттăра çул çинче юмахри чĕр чунсем хирĕç тĕл пулаççĕ: упа, кашкăр, тилĕ. Вĕсемех чăн пурнăçри сивлек енсене, патша самодержавине, пусмăрлакансене пĕлтереççĕ. Ăмăрт кайăк сăнарĕ вара Ленин партине тӳр килет, вăл паттăра çул кăтартса пырать, телей тупма пулăшать. Юмаха силлабика виçипе çырнă, халăх сăмахлăхĕнчи çаврăмсене тăтăшах усă курнă: юмах юман тăрринче, хам урхамах çийĕнче; юмах ятăм юптартăм, сире кăштах тыттартăм; тет тата ытти те.

И. Ивник чăваш ача-пăча литературине тĕрлĕ халăхсен литературинчи тата сăмахлăхĕнчи тĕслĕхсене куçарса та пуянлатма тăрăшнă. Вăл пушкăртсен «Хура çăрха» эпосне, вырăс авторĕн О. Высотскаян «Самолет», «Салакайăк», «Савăк хурсем» сăввисене чăвашла куçарнă.

***Куçма Чулкаç*** (Кузьма Афанасьевич Афанасьев) (1907 – 1971). Çĕрпӳ районĕнчи Малти Ямаш ялĕнче çуралнă. Чиркӳллĕ

Ямашпа Лапрари пуҫламӑш шкулта вӗреннӗ. 1920 – 1921 ҫулсенче, Атӑл тӑрӑхӗнче выҫлӑх хуҫаланнӑ чухне, Чулхула облаҫӗнчи ача ҫуртӗнче пурӑннӑ.

Ҫыравҫӑн ачалӑхӗ телейлӗ пулман. Йывӑрлӑхсем, ытларах чух, Куҫма Чулкаҫӑн путишле характерне пула сиксе тухнӑ. Ямашри пуҫламӑш шкултан ӑна кӗлӗ вӑхӑтӗнче аташса тӑнӑшӑн кӑларса яраҫҫӗ. Ҫыравҫӑ кӗлеткипе лутра, асат хуҫнӑ ҫын пулнӑ. Хӑйне асат хуҫнине вӑл ача чухне циркра ӗҫленӗ вӑхӑтра трапеци ҫинчен ӳкнӗ тесе ӑнлантарнӑ. Хӑй вара, кӗлте лавӗ айне пулса икӗ урине те хуҫнӑ пулнӑ иккен.

К. Чулкаҫ Ҫӗрпӳри икӗ класлӑ шкула вӗренсе пӗтерсен хаҫат-журнал редакцийӗсемпе тачӑ ҫыхӑну тытса ӗҫлеме тытӑнать. 1925 ҫултан пуҫласа «Канаш» хаҫатра Аванеҫ Куҫми ятпа пичетленет, ҫакӑнтан унӑн литературӑри ӗҫӗ-хӗлӗ пуҫланать. К. Чулкаҫ «Трудовая газета», «Хресчен хаҫачӗ» редакцийӗсенче ӗҫленӗ, каярах чӑваш кӗнеке издательствинче ача-пӑча литературишӗн яваплӑ литература редакторӗ; 1952-1966-мӗш ҫулсенче радиопа телевиденинче литература передачисен редакторӗ пулса ӗҫленӗ.

К. Чулкаҫӑн хайлавӗсем: «Сунарҫӑ халапӗсем», «Пӗр таракан тем те пӗр курса ҫӳрени», «Хӑвӑл каска», «Пулӑҫӑ халапӗсем», «Ӗмӗтсӗр кушак аҫи», «Кӗтӳ ачи», «Чаплӑ хӑнасем», «Масар ялӗсем» – пьеса, «Хӗвел» роман ҫырма пуҫлани паллӑ. Чӑн пурнӑҫра Куҫма Чулкаҫ лутра ҫын пулнӑ пулин те, унӑн юратнӑ сӑнарӗ «Сунарҫӑ халапӗсенчи» Лапшуҫ Ҫтапанӗ тӗреклӗ те ҫӳллӗ ҫын. Ҫыравҫӑ пурнӑҫра хӑй мӗн тивӗҫейменнине сӑнарӗсенче тӳрре кӑларать. Характерӗпе те Лапшуҫ Ҫтапанӗ йывӑрлӑхсем умӗнче алла усса ларман ҫын пулнӑ, пӑшӑрханма пӗлмен, кирек епле йывӑрлӑхран та чипер хӑтӑлса тухма пултарнӑ. Хайлавсенчи ытти сӑнарӗсем те ҫавӑн пекех. Лапшуҫ Ҫтапанӗ Ямаш вӑрманӗнче Шашка йыттипе пӗрле тискер кайӑксене тытса пурӑннӑ. Сунар ӗҫӗпе кӑсӑкланасси унӑн ача чухне пӗррехинче ӑнсӑртран 102 мулкач тытнӑ хыҫҫӑн пуҫланать. Ҫтапан ҫак ӗҫ хыҫҫӑн таврари чи паллӑ сунарҫӑ пулма шутлать. Хӑйӗн халапӗсене сунарҫӑ ытларах ачасене каласа парать: «Эпӗ тилӗ тытма вӗренни», «Эпӗ чӗрӗлле ӑраслан тытни»... Калавсенче шутласа кӑларни, фантази вӑййи, пулмасла халапсен традицийӗсем пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Тавҫӑруллӑ сунарҫӑ, ӑсансем

пилеш юратнине пĕлсен, пилеш ыйвăççине касса киле сĕтĕрсе каять. Лешсем кун хыççăн сырăнаççĕ. «Эпĕ асамлă чечек тупса тайгана кайса килни» калавĕнче Çтапанпа асамлă ĕçсемпе пулăмсем пулса иртеççĕ. Вăл асамлă чечек вăррине çисе улăп пулса тăрать. Вăрманти йывăççем чĕркуççи таран пулаççĕ, хул пуççипе пĕлĕте перĕнет. Вăл Инçет хĕвел тухăçне çитсе курать. Кĕсьине тĕрлĕ тискер чĕр чунсене чиксе тултарать те вĕсене тăван ялне илсе килет, зоосад директорĕнче ĕçлеме тытăнать.

Анчах та Ямаш вăрманĕнчи Мюнхгаузен аслисене пурне те килĕшмен. Идеологине тивĕçтерес тесе Çтапан мĕн пур чĕрчунĕсемпе пĕрле колхоза кĕрет. Çитĕнсе çитнĕ вулакансене хайлавра шухăшласа кăларни ытла нумай пулни кăмăла кайман. Н. Дедушкин ку хайлав пирки çапларах çырать: «Сунарçă халапĕсем ачасене учительсене ĕненмелле мар тесе вĕрентеççĕ. Халăха суйма хĕтĕртеççĕ... Суя пирĕн халăх тăшманĕсене çеç кирлĕ». Л. Агаков та хăйĕн критика статьисенче «Сунарçă халапĕсем» хайлава тиркесе çырать: «Эта книга не приносит никакой пользы в повышении образования наших детей, в их правильном воспитании. Даже речи нет о том, что сказки эти занимают какое-нибудь место в развитии читательской мысли и фантазии. Читатель хорошо видит обман автора. Скажем, кто поверит в то, что львы, обитающие в Африке, пойманы в Цивильском районе, в лесу» [2].

Шел пулин те, XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулсенчи вульгарлă социологизм çыравçăсен шухăшлавне, фантази аталанăвне чарса тăнă. Куçма Чулкаç вăрманта е хирте пурăнакан тĕрлĕ чĕр чунсен йăли-йĕрки тата пурнăçĕ çинчен каласа кăтартни урлă çут çанталăк пуянлăхне тата унăн вăрттăнлăхĕсене вулакан умне кăларать, вăл курманнине, пĕлменнине каласа парать. Вăрманта пурăнакан тискер чĕр чунсемпе вĕçен кайăксем пире хăйсен йăли-йĕркине çеç мар, этем ăс-тăнне парăнса тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш тума пултарнипе тĕлĕнтереççĕ. Вĕсем хушшинче эпир хурăн кăчкипе тата пилешпе тăранса, йăпанса пурăнакан ăсансене, этем сехрине хăпартакан арасланпа çăмламас упана та, кашкăр-кашамана та, хăйсене паттăрла тыткалакан кĕске хӳреллĕ мулкачсене те, такам çăварĕнчен те чăкăт астарса илме пултаракан чее тилле, ĕмĕтсĕр кушак аçине, ытти чĕр чунсемпе кайăк-

кĕшĕксене тĕл пулатпăр. Çыравçă чĕр чун сăнарĕ урлă этем ăс-хакăлне, унăн иксĕлми вăй-хăватне мухтаса калать, çĕр çинче пулса иртекен мĕн пур ĕçшĕн вăл яваплă пулнине туйса тăма хистет. Çыравçă аслисемпе те, ачасемпе те уçă чунлă. Кашнинех вăл çĕр çинчи чи лайăх çын иккенне ĕнентерме тăрăшать. Пĕр эсĕ çеç тĕнчешĕн чи кирлине, пĕлтерĕшлине тупса палăртма пултаратăн, тесе хавхалантарать.

К. Чулкаç хайлавĕсен чĕлхи ансат, кăмăллă, сăнарлă. Çак ăсталăха вăл И. Тургеневран, С. Аксаковран, М. Пришвинран вĕренсе пынă теме май пур. Куçарупа ĕçлени те çыравçă пултарулăхне ырă витĕм кӳнĕ. Вăл Д. Мамин-Сибирякăн «Студеная çинче хĕл каçни», А. Гайдарăн «Шкул», Д. Свифтăн «Гулливер çул çӳревĕ», Ж. Вернăн «Çĕр варрине анса курни» хайлавĕсене чăвашла куçарнă. К. Чулкаçăн литература критикипе çырнă ĕçсем те сахал мар. К. Чулкаç ăста халапçă, путишле ĕçсене сăлтавлама пултаракан çын пулнă. Çавăнпа та хăйĕн пирки те тĕрлĕ халап çӳренĕ.

Ача-пăча литературинче хайлавсене аса илӳ çинче никĕслесе çырас туртăм пур. Кашни çын пурнăçĕнчех халиччен мĕн пулнине тишкерсе тухас, ăна хальхи ăс-пуçпа виçсе хаклас тапхăр çитет. Çыравçăсем пурăнса ирттернĕ вăхăта кун-çул тӳпинчен пăхса хăйсен тĕп кĕнекине çырма пикенеççĕ (Марфа Трубина, Хумма Çеменĕ, Мустай Карим...). Çак йăла ***Ухсай Яковĕн*** (1911 – 1986) пултарулăхĕшĕн те характерлă. Вăл «Ача чухнехи çăлтăрăм» хайлавĕшĕн патшалăх премине тивĕçнĕ. «Ача чухнехи çăлтăрăм» кĕнекене «Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăсем кĕреççĕ. Виçĕ поэми те автобиографилле. Поэт хăй çуралса ӳснĕ вырăнсемпе, çывăх çыннисемпе, ку чухнехи вăхăтпа, самана арпашуллăхĕпе паллаштарать. Кĕнекере çĕр-шыв историйĕнчи паллă событисене, 1917-мĕш çулти улшăнусене, граждан вăрçи тапхăрне ача куçĕпе сăнласа кăтартнă. Лирика геройĕшĕн чăваш çĕрне, çут çанталăкне, йăлисене, ĕçĕ-хĕлне тĕпе хурса сăнласси пĕлтерĕшлĕ. Халăх йăли-йĕрки, кун-çулĕ пирки çырнă вырăнсенче трилоги чĕлхи те сăнарлăхпа пуян.

Чăн пурнăç выçлăхпа, хаярлăхпа, вăрçă нушипе, социаллă танмарлăхпа хăратать пулсан, ачашăн çак йывăрлăхсем çинчен

манмали мелсем пур. Ку вăл аслисем каласа панă юмах-халап. Хаваслă та телейлĕ пулма, савăнса выляса çӳреме ачана нумаях та кирлĕ мар: унăн чун-чĕрине ăнланни, лăпкă та мирлĕ пурнăç. Кĕл çинче пĕçернĕ çĕр улми, çăмах яшки, хура çăкăр чĕлли, кăшкар утипе ыхра-сухан, хĕллехи вăхăтра тăхăнма кĕрĕкпе çĕлĕк, кăштах теттесем, ашшĕ-амăшĕ юратни пулсан чăваш ачи хăйне телейлĕ, çынран катăк мар тесе шутлать.

Я. Ухсайăн трилогийĕнче самана хăй евĕрлĕхне кура ачасен вăййисем те унпа килĕшӳллĕ пулни палăрать. Вĕсем тăтăшах патшалла выляççĕ. Хăйсем çĕтĕк сăхманпа пулин те, выртмара юмах итлесе хавхаланнă хыççăн хăйсене патша пек туяççĕ. Ашшĕ пĕрремĕш хут лаша çине утлантарса лартсан Якку хăйне патша пек курать. Çуркунне енне кайсан, ачасем юртан тунă патшана хĕнеççĕ. Çыннăн чунĕнчи хавха çийĕнче тата ăшĕнче мĕн пурринчен килмест, тесе палăртасшăн автор. Çавăн пекех çамрăк ăру класс кĕрешĕвне, социаллă танмарлăха еплерех ăнланса пыни те палăрать. Чапаевпа тĕл пулнă хыççăн ачасем пуканисене хĕрлĕ çăлтăрпа илемлетме тытăнаççĕ. Хăйсен хушшинче вăрçăлла вылянă чухне те шуррисем тата хĕрлисем çине пайланаççĕ.

Трилогин «Ача чухнехи çăлтăрăм» пайĕнче Якку ачалăхĕ çинчен хăйне мĕн ас тума пуçланăран каласа панă. Хăй çуралнипирки çынсем мĕн каланине илсе кăтартнă. «Чапаевпа тĕл пулни» поэмăра граждан вăрçи вăхăтне сăнланă. Ял витĕр шуррисен çарĕсем иртеççĕ, вĕсем хыççăн Чапаев килет. Шуррисене Атланта тум-тирпе, хĕç-пăшалпа пулăшать пулин те вĕсем хĕрлĕ çартан хăраççĕ. Ялта та кĕрешӳ пулса иртет. Чухăнсем пуянсене аркатсан та вĕсене хӳтĕлекен карательсен отрячĕсем килсех тăраççĕ. Халăха уталаса пурăнакан улпутсене пĕрех çиеле кăлараççĕ. Трилогин иккĕмĕш пайĕ динамикăлăхпа, чĕрĕлĕхпе, çĕкленӳлĕхпе уйрăлса тăрать. Халăхăн энтузиазмне палăртма автор çине-çинех çутă сăрăсене усă курать. Ача хĕрлĕ çар çыннисене курни çинчен каласа панинче те фольклор паллисем пур. Калу паттăрлăх эпосĕсенчи, асамлă юмахсенчи халăха хӳтĕлекен паттăр çинчен калакан мотивсене аса илтерет.

«Силпири асамат кĕперĕ» поэмăра Атăл тăрăхĕнчи выçлăх тапхăрне сăнланă. Пурнăç йывăрлăхне чăтса ываннă Якку тĕлĕкре Ленин патне пулăшу ыйтма Мускава каять. Ача Мускав хулине

сăнлани хăйне евĕрлĕ. Ун шучĕпе, тĕп хулара та симĕс çарансем нумай, пӳрчĕсем пĕр хутлă. Ленин çинчен вăл чăн малтанах ашшĕнчен илтет. Учительница ачасене Ленина курни пирки каласа парать. Амăшĕ кĕлĕ вăхăтĕнче ун ятне асăнать. Кунсăр пуçне аслисем Яккуна тăтăшах Кĕçтентин пиччĕшĕ пирки, вăл Пăртта йăхĕнчен пулни çинчен аса илтерсе тăраççĕ. Унăн çак ята çĕртмелле мар, çӳле çĕклемелле. Кунта автор талант тени епле çуралса çĕкленнине кăтартать. Яккун вĕренес ĕмĕчĕ çĕнĕ саманара пурнăçа кĕме пултарать.

Ача çут çанталăк илемне курма, туйма пĕлет, çывăх çыншăн темле йывăрлăха та чăтса ирттерме хатĕр. Вăл нушана лекнĕ çынна хĕрхенме, пулăшма пултарать, çĕнни патне талпăнать, пĕлменнине пĕлес тет, суяпа ултава уйăрать. Çакăн пек енсем аталанма пултарнинче ашшĕ-амăшĕн, тăванĕсен, пиччĕшĕпе шăллĕсен, саманан тивĕçĕ пур. Трилогире Я. Ухсайĕ час-часах çут çанталăкпа çынна, çынпа чĕр чуна, çынпа халăха, çынпа обществăна пĕрлештерме тăрăшать. Уйрăм çын аталанăвĕнче вĕсем мĕнлерех пĕлтерĕш йышăннине палăртать.

Я. Ухсайăн пултарулăхĕнче «Ленин» теми чылай хайлавĕнче палăрать. Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăннă тапхăрта вăл Ульяновсен çемьи чăваш интелегенцине аталанма пулăшни çинчен ĕнентерекен чылай материал пухса хатĕрлет. Ленинпа И.Я. Яковлев хутшăнăвĕсене сăнать. Хăйĕн хайлавĕсенче ытларах Ленинăн Чĕмпĕрте пурăннă тапхăрне сăнать: «Ленин çурчĕ умĕнче», «Ĕмĕт», «Чĕмпĕр»... Вăл çул пуçăн ачалăхне, çамрăклăхне ӳкерет, Ульяновсемпе Яковлевсен туслăхне кăтартать. Охотниковпа Ленин хутшăнăвĕ çинчен поэма çырса Я. Ухсай чăваш ача-пăча литературинчи паллă çынсен пурнăçĕ çинчен çырас ярăма чылай пуянлатнă тесе палăртнă тĕпчевçĕсем. «Ĕмĕт» поэмăра ял пурнăçне сăнласси, тĕрлĕ документ материалне усă курасси пур. Тĕп сăнар телей мĕн иккене хутла вĕреннинче курать. Сюжет аталаннă май геройăн характерĕ çеç мар, унăн тавракурăмĕ, ăс-тăнĕ те улшăнаççĕ. Вăл кĕрешӳ идейисемпе, хура халăхшăн телей хăçан килме пултарнине пĕлекен пулать. Я. Ухсай Ленина юмахри паттăр пек сăнланă май хайлавăн эпикăлăхне чуна витерекен лиризмпа пĕрлештерсе пырать.

Я. Ухсайӗ халӑх сӑмахлӑхӗн традицийӗсене, материалне усӑ курса ачасем валли литература юмахӗсем те ҫырнӑ: «Теллей юмахӗ», «Кӑмака ҫинчи Иван», «Чухӑн автанӗ». Вӗсенче йӑла юмахӗ жанрӑн уйрӑмлӑхӗсем палӑраҫҫӗ. Сӑнар системине, сӑвӑ виҫине автор тутар, пушкӑрт, чӑваш сӑмахлӑхӗсенчен илнӗ. Юмахсен чӗлхи ансат, вӗсенче ӑса вӗрентсе каласси, сюжет кӑткӑслӑхӗ тӗпре. Илемлӗ хайлавсенче иртнӗ тата хальхи пурнӑҫа танлаштарнӑ, социаллӑ танмарлӑха сӑнарланӑ. Унӑн хайлавӗсем йӑла юмахӗсене ҫывӑх. Тӗп сӑнарӗсем ытларах чухне пуянпа чухӑн ҫын. Чухӑна хута кӗрекен тупӑнать е вӑл хӑех ӑстӑн ҫивӗчлӗхне пула телей тупма пултарать, тӑшмана пӗтерет. Чухӑн ҫын ӑслӑ, тавҫӑруллӑ, улпутпа патшана улталама пултарать. Кашни юмахӗнчех хресченӗн йывӑр пурнӑҫне, ӗҫӗ-хӗлне ӳкерсе кӑтартни пур. Хайлавсенче кил-ҫурт таврашне, ҫут ҫанталӑка, геройсен портретне тӗплӗн сӑнласа панӑ.

«Кӑмака ҫинчи Иван» юмах вырӑс халӑхӗн «Ухмах Емель» ҫинчен калакан юмахне аса илтерет. Я. Ухсай чӑваш юмахӗсенчен илсе тӗп сӑнар асамлӑ майпа ҫурални ҫинчен каласа парать. Карчӑк ӑна чустаран унаса тӑвать те кӑмакана типме хурать. Тепӗр виҫӗ кунтан вӑл хӑех кӑмакаран тухать. Иван, Емелька пекех, кахал пулнӑ, кӑмака ҫинчен анман, пӗр вӗҫӗм пӑрҫа кӑшласа ларнӑ. Иван та шыв хӗрне ансан унӑн витрине пулӑ лекет. Пулли кайран ӑна пулӑшса пырать. Сӑвӑҫ ӗҫсем мӗнле ялта пулнине асӑнать, сӑнарсен ҫи-пуҫне, ҫил-тӑманлӑ ҫанталӑка тӗплӗн сӑнласа кӑтартать. Халӑх юмахӗнчи пекех ӗҫ-пуҫ виҫӗ хут пулса иртет: Иван тӑраниччен икерчӗ ҫиет, выртса ҫывӑрать вара тек шыв ӑсма каять; ҫур хуран какай ҫиет, виҫӗ кун ҫывӑрать кайран вутӑ ӗҫлеме вӑрмана каять; юман чукмар та ӑна виҫӗ хутчен пулӑшать; чӑпак пулӑ пулӑшнипе виҫӗ пуян ҫинчи тумтирпе ӗҫме-ҫиме Ивана куҫӑҫҫӗ.

Я. Ухсайӗ «Теллей юмахӗ» хайлавӑн пуҫламӑшне А. Некрасовӑн «Кому на Русси жить хорошо» поэмине евӗрлесе ҫырнӑ. Нушта курса пурӑнакан чӑваш ҫыннисем телей шырама каяҫҫӗ. Вӗсен ял ячӗсене те вырӑс авторӗн хайлавӗнчи пек хурлӑхпа ҫыхӑнтарнӑ:

> «*Асап патши ҫӗрӗнче*
> *Выҫлӑх касси ялӗнче...*».

Юмах пуçламăшĕнче чухăнсем нушара, пуянĕсем ырлăхра пурăннине хире-хирĕçлесе кăтартнă.

Чухăнĕсен хурлăхĕ хăйсенчен маларах, сĕм авалах пулнă, иккен. Иртнĕ пурнăç терт-нуши прики каласа кăтартма тухăç литературинч «каснă пуç» мотива усă курнă. Тĕп сăнар масар çинче çурхи шывпа çăвăнса тухнă пуç шăммине тупать. Ун янахĕ катăк пулнинчен аслашшĕне палласа илет. Ĕлĕкхи çынсен çĕр хĕсĕк пулнипе уншăн кĕрешме тивнĕ, вĕсем пăлхавсем çĕкленĕ. Çакăн пек çапăçу вăхăтĕнче тупать те ватă çын хăйĕн вилĕмне.

Çула тухнисем уйăхран, шăпчăкран, хĕвелтен телей ăçтине ыйтса пĕлеççĕ. Хĕвел çулне кăтартать: çӳллĕ ту умĕнче икĕ старик лараççĕ, вĕсем пурнăç кĕнекине вуласа калама пултараççĕ. Çичĕ уйăх çул çӳресен шур сухаллă стариксене тупаççĕ. Вĕсем шăтăкра лараççĕ, иккен. Телейне тупас тесен ту урлă каçмала, леш енче ӳсекен тирек тăрринче ăмăрт кайăк ларать, унран ыйтмалла. Ту урлă çул йывăр пулнине палăртма çут çанталăк йывăрлăхĕсене усă курнă: вăйлă çумăр çуни, урасенчен юн тухни, шуса, упаленсе тĕллев патне çитни. Çул йывăрлăхне палăртма автор халăх сăмахлăхĕнчи традицине усă курать. Мăн кĕрӳ такмакĕнче, асамлă юмахсенче паттăр çул çинче çут çанталăк йывăрлăхĕсене çĕнтерни çинчен калани урлă вăл мĕнле маттур, вăйлă пулнине палăртаççĕ. Çавăн пекех, çыравçăн кĕрешӳ çулĕ йывăр пулнине систерсе каласси те пур. Вăйлă çумăрпа çула тухнисенчен хăшĕсем çырмана та анса кайса пĕтеççĕ. Вĕсемшĕн хурланнине палăртма хӳхлев юррин йĕркисене усă курнă.

Тирек çинче ларакан ăмăрт кайăк телей шырама тухнисене хĕç парать, тăхăр пуçлă упана вĕлерме вĕрентет. Упа çĕршывĕнче пĕтĕм тĕнчипе пуçтарнă илем упранать, иккен. Çын куççулĕнчен пуçтарнă тăрă кӳлĕсенче шурă акăшсем ишсе çӳреççĕ. Çулçӳревçĕсем упана вĕлереççĕ, телейне тупаççĕ. Кĕçех Ăмăрт кайăк – Ленин вилет. Пурте уншăн кулянаççĕ.

Я. Ухсайĕ юмах сюжетне, элеменчĕсене, традицийĕсене усă курса авалхи пурнăçăн терт-нуши, телейлĕ пурнăçшăн кĕрешни çинчен çамрăк ăрăва каласа парать. Ытарлă сăмах ăна ачасене

революци, кĕрешӳ мĕн тума кирлĕ пулнине, çул пуç кам иккенне ăнлантарса пама кирлĕ.

Я. Ухсайăн тепĕр сăвăлла юмахĕ «Автан ылханĕ» ятлă. Кунта чухăн карчăкпа старикĕн тислĕк айĕнче тупнă мулне – ылтăн куркапа кĕмĕл кашăкне улпут туртса илет. Ватă çынсен автанĕ çак мăшкăла чăтаймасть, улпут хыççăн çӳресе пĕрмаях çапла аса илтерет:

*Мучипеле карчăка*
*Хĕрхенмесĕр кашăка*
*Тата ылтăн куркана*
*Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?*
*Икĕ ваттăн килĕнче*
*Çăкăр çук сĕтел çинче,*
*Пӳрт хутма та юлман вут.*
*Çич инкек сана улпут!*

Юмахри автана тарçисем хăвалаççĕ, тытаççĕ, сив пусса яраççĕ, анчах автан шыва ĕçсе пĕтерет те каллех улпута ылханма пуçлать. Автана тепринче вĕри мунчана хупса лартаççĕ. Вăл кунтан та хăтăлать. Юлашкинчен пур çĕрте те тĕрĕслĕхе кăшкăрса çӳрекен автана яшкана ярса пĕçереççĕ. Вăл кунтан та улпута тарă шыв çине кăларать. Хайлава йăла юмахĕн традицийĕсемпе килĕшӳллĕн çырнă: пуянпа чухăнсен хушшинчи хутшăну, пуянĕ чухăнĕсене уталани, тĕрĕслĕх автан пулăшнипе çиеле тухма пултани. Пуян çын автанран хăпас тесе пурнăçланă ĕçсем авалхи вырăс литературинчи «Княгиня Ольга» çинчен калакан халапсене аса илтереççĕ. Асăннă ĕçсем чăвашсен пытару йăлине сăнласа панине çывăх: вилене çуни, шăтăка пытарни, ун çинчен ырă ят сарăлни. Я. Ухсайĕ фольклорти сюжета усă курса пурнăçри социаллă улшăнусем çинчен ытарлă каласа кăтартать, иртнĕ пурнăçăн тӳнтер енĕсене уçса парать. Саманашăн килĕшӳллĕ хайлав çырать.

«Кĕслеçĕпе упа» юмахра чăваш халăхĕ юрра-кĕвве юратнине кăтартса парасси тĕпре. Пасарта кĕсле туяннă чăваш киле таврăннă чух чăтаймасăр вăрманта кĕсле калама тытăнать. Унăн сассине илтсе упа тухать, ташлама тытăнать. Çакă çутă тĕнчере этемрен вăйли çук, тесшĕн автор. Вăл хăйĕн ăс-тăнĕпе,

пултарулăхĕпе чĕр-чун тĕнчине пăхăнтарма пултарать. Çак шухăшах эпир Я. Ухсай йăвашла куçарнă тутар халăх поэчĕн Г. Тукайăн «Шурале», «Шыври», «Чулçă» юмахĕсене хайлавĕсенче те куратпăр. «Кĕслеçĕпе упа» юмах та хресченĕн йывăр тата çук пурнăçне сăнласа кăтартакан ӳкерчĕксемпе пуян.

XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсем çăмăлах пулман. Çамрăксене воспитани парас ĕçре ырă тĕслĕхсем кирлă пулнă. Çавăнпа та Я. Ухсайĕ ĕçчен, паттăр, ăслă ачасен сăнарĕсене хăйĕн хайлавĕсенче калăплама тăрăшать. «Пуканесен бригади», «Хĕрлĕ галстук», «Кирле пионер колхоз пухăвĕнче тухса калаçни» хайлавсенче çакна курма пулать те. Кунти ачасем çамрăк пулнине пăхмасăр, колхоз хирĕнче тăрăшаççĕ, чĕр чунсемпе выльăх-чĕрлĕхе пăхаççĕ, пухусенче колхоз пурнăçĕ еплерех аталанса пымалине татса пама пулăшаççĕ, тăшмана хирĕç тăма та пултараççĕ.

Я. Ухсайăн юмахĕсем «Пуканесен бригади», «Кĕслеçĕ упа», «Кăмака çинчи Иван» кĕнекесенче пичетленсе тухнă.

***Хумма Çеменĕ*** (1903 – 1936) – поэт, прозаик, драматург, критик, куçаруçă, журналист пулнă. XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи чăваш литературинчи проза жанрне аталантарса яракансенчен, никĕсне хываканĕсенчен пĕри. Хăйĕн хайлавĕсенче выçлăх тапхăрĕнчи, граждан вăрçи вăхăтĕнчи ачалăх, çамрăклăх темисене те хускатать. Унăн «Пирĕн вăй!.. Вăй!..», «Мирун», «Чалăш пӳрт», «Çĕтĕк сăхман», «Хамăр вăйпа», «Палля», «Ача чухнехи» тата ытти хайлавĕсем çамрăк ăру, комсомолецсемпе пионерсем, çĕнĕ пурнăç йĕркеленĕ çĕре еплерех хутшăннине сăнлаççĕ. Çамрăксем хут пĕлменлĕхе, тĕнпе тĕшмĕшлĕхе, кулаксене хирĕç пуçарнă кĕрешӳре хастар. «Палля» калаври тăхăр çулхи тăлăх ача пурнăçне сăнланă. Çири тум-тир çĕтĕк пулин те, çиме çăкăр çук пулин те пурнăç илемлĕ те хитре иккен. Йывăрлăхсене пăхмасăрах малалла талпăнмалла тесе шутлать çамрăк, комсомола кĕме ĕмĕтленет. Çакă унăн пурнăç тĕллевĕ, пĕлтерĕшĕ пулса тăрать.

«Пирĕн вăй!.. Вăй!..» калаври Куçук та кивĕ йăласене хирĕç кĕрешме пуçланă. Унăн юлташĕсем те комсомолецсем çĕнĕ пурнăç йĕркелес енĕпе ĕçлеççĕ. Киввине хирĕç кĕрешнĕ май çамрăксен ялти пуянсемпе улпутсене, пупсемпе пачăшкăсене хирĕç кĕрешме тивет. Тепĕр чух, çĕнĕ пурнăçăн уссине

ăнланман, йышăнасшăн пулман ашшĕпе амăшĕ те тăшман вырăнне тухса тăраççĕ. Авалхи тĕрĕксен «Огузнаме» эпосĕнче Мелике Тарон паттăр хăйĕн ашшĕне вăл Тенгри турра пăрахса мусульман тĕнне çаврăнманшăн вĕлерет. Модэ çар пуçĕ те Тумань ашшĕне тĕне пула вĕлернĕ пулнă. Авалхи тĕрĕк литературинче тĕне, çĕнĕ пурнăç йĕркине йышăнманшăн кĕçĕннисем аслисене хирĕç тăни çинчен калакан мотив чылай хайлавсенче тĕл пулать. Вăл революци хыççăнхи пурнăçа сăнлакан хайлавсемшĕн актуаллă пулса тăрать.

«Çĕтĕк сăхман», «Чалăш пӳрт» калавсенче чухăн ачисен пурнăçне уйрăмах тĕплĕн сăнланă. Çак хура масса вĕрентекен витĕмĕпе пач улшăнса кайнă. Вăл культура енне туртăнать, иккен. Ялти тĕттĕм, йывăр пурнăçран вĕсене комсомол организацийĕсем хăтăлма пулăшаççĕ. Унччен кукшаллă пулнă, кĕсен чирĕпе чирленĕ чухăн ачисем кĕçех ял хушшинче пĕлтерĕшлĕ çынсем пулса тăраççĕ. Çамрăксене чылай чухне ертсе пыракан е вĕрентсе калакан çын çук. Вĕсем хăйсемех хулара вĕренекен юлташĕсем хавхалантарнипе, хăйсем районта опыт пухса килнĕ хыççăн ялта çĕнĕ пурнăç йĕркелеме тытăнаççĕ.

Хумма Çеменĕ ачасен характерне чĕррĕн кăтартма пултарать. Вĕсем йывăрлăхран хăрамасăр ĕçлеççĕ, ырă ĕçсем тăваççĕ. Апла пулин те вĕсемшĕн те чуна пăлхантаракан самантсем пулса иртеççĕ. Избачăн тĕп сакайĕнче пытанса ларакан Куçукпа Михаля хăйсене кулак ачисем хĕнесе хăварасран шикленеççĕ («Пирĕн вăй… Вăй!»). Çимĕк каçĕнче тухатмăшсене хăртама тухнă комсомолецсем масар çинче çунакан кăвайт çутине курсан хăраса тараççĕ. Çамрăксен характерне уçса пама автор çут çанталăк ӳкерчĕкĕсене ăнăçлă усă курать. Тĕп сакайĕнче ларакан Куçука унран шапасем те кулнă пек туйăнать. Мăн кун уявĕнче пуп-пачăшкăсен йăли-йĕркине хирĕçлекен Мируна хĕвел те хавхалантарать («Мирун»). Хайлавсенчи çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем И. Тургеневăн «Бежин луг» калавне çывăх.

Хумма Çеменĕн хайлавĕсенчи реализм чылай чухне натурализмпа пĕрлешсе каять. Вăл çут çанталăк ӳкерчĕкĕсене, сăнарсен портречĕсене, пӳлĕмпе ял таврашне тĕплĕн сăнласа парать. Çак хăй евĕрлĕх калăва пĕрремĕш сăпатран йĕркеленинче те палăрать. Хайлавсене калуçă каланă евĕр йĕркеленĕ пулин те,

чылай чух вăл тĕп сăнарăн шухăшĕсемпе пĕрлешсе каять, ун ячĕпе каласма тытăнать. Е тата, калăва пĕр-пĕр хĕрӳ ĕçе хутшăннă ватă комсомолец аса илĕвĕ евĕр йĕркелени те пур. Автор чылай япалана хăй тӳссе иртернĕ, хăй курса çӳренĕ. Çавна май, калавсен ĕнентерӳлĕхĕ те пысăк. Чăн пурнăçри событисенчен çыравçă пурне те сăнласа памасть, хăйĕн эстетика, этика принципĕсене тӳр килекеннисене çеç усă курма тăрăшать.

Çыравçă «Хĕрарăм хăюллăхĕ», «Аннушка саппунĕ», «Хĕрарăм хуйхи» калавĕсенче çĕнĕ саманара хĕрсемпе хĕрарăмсен кăмăлĕ те улшăннине кăтартать. Вĕсем ĕлĕкхипе танлаштарсеан, чылай хăюллăрах, хăйсен юратăвĕшĕн, телейĕшĕн кĕрешме пултараççĕ. «Хĕрарăм хăюллăхĕ» калаври учительница хăй килĕштерекен комиссар патне çыру çырать, ăна килĕштеринине пĕлтерет. Тепĕр калавĕнче кĕрешӳ ĕçĕпе юнашарах юрату туйăмĕ хĕрсе аталанса пынине кăтартнă. «Аннушка саппунĕ» хайлаври герой ял халăхĕпе пĕрле улпутăн çуртне çаратнă çĕре хутшăнать, юратнă хĕрĕ валли илемлĕ тутăр илсе тухать. Малтанах çак тутăра Аннушка уявсенче çеç çыхса çӳрет пулсан, майĕпен вăл хĕрерăм пуçĕ çинчен пилĕкĕ çине анать, ахаль сапун пулса тăрать. Тутăр сăнарĕ урлă икĕ çын хушшинчи туйăм майĕпен сирĕлсе пынине, пĕлтерĕшсĕр пулса тăнине кăтартать çыравçă.

Хумма Çеменĕн «Ача чухнехи» повеçĕ чăваш ача-пăча литературинчи афтобиографилле повеçсен тĕслĕхĕ шутланать. Хайлавра XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи истори собитийĕсене, пурнăç улшăнăвне ача куçĕпе сăнласа кăтартнă. «Ача чухнехи» повеçре тĕнче литературинчи «Турă ачи» мифологемăн чылай мотивĕ палăрнине асăрхама пулать. Чăн малтанах Тимуш çурални çинчен каланинче хăй евĕрлĕх, асамлăх пур. Вăл амăшĕ куккăшĕсем патне кайнă чухне, вăрманта, çуралать. Традицилле пулнă пулсан унăн килте е мунчара çуралмаллаччĕ. Ятарлă вăхăт иртиччен ача пӳртрен тухмасăр пурăнать. Пӳрт ăна «амăшĕн варĕ» евĕр килес пурнăç валли хатĕрлесе, çирĕплетсе çитерет. Урамри çут çанталăк асар-писерĕнчен, пурнăç тамашинчен (хĕллехи çил-тăман, пуян хĕрĕсем чухăна таптаса вĕлерни) Тимуш пӳртре сыхланса пурăнать. Вăхăчĕ çитсен вăл урама тухма тытăнать. Ытти ачасемпе пĕрле шкула каfive. Шкулта вĕсене

Егор Павлович учитель пурнăç йывăрлăхĕсем çинчен, вĕсенчен хăрамалла марри çинчен, кĕрешмелли майсем çинчен каласа парать. Егор Павлович Тимушшăн çĕнĕ тĕн, урăх пурнăç çинчен каласа паракан пророк. Ача пĕчĕккĕн тантăшĕсемпе хутшăнма тытăнать, вĕренӳре чи ăсли, вăйăра чи вăйли пулса тăрать. Вăйă картинче те ăна ертӳçĕне суйлаççĕ. Тимуш çуракине хутшăнать, аслисен калаçăвĕсене тăнлать, пăлхава сăнать – майĕпен аслисен пурнăçне хăнăхать.

Хумма Çеменĕ М. Горькийĕн «Амăшĕ» романне чăвашла куçарнă, Ю. Яковлев тĕпчевçĕ шучĕпе, унăн витĕмне «Ача чухнехи» повеçре асăрхама пулать. М. Горькийĕн романĕнчи Власов асли заводри ĕçсем ăнманнишĕн тарăхнипе ĕçет, килне çитсен вара арăмне хĕнет. Ачи, Павăл, амăшне хĕрхенет, анчах вăл амăшне те ашшĕне те хывнă иккен. Унра лăпкăлăхпа пăлхавçă чунĕ пур. Тимуш та хăйĕн ача ăсĕпе ашшĕ мĕншĕн ĕçнине ăнланать, улпутсемпе пупсен пуянлăхĕ мĕнрен килни, вĕсем чухăнсемпе еплерех хутшăнни пирки шухăшлать. Вăл та лăпкă, çав хушăрах пăлхавлă чунлă ача.

Хумма Çеменĕн «Штрум» повеçĕнче граждан вăрçи вăхăтĕнчи пăтăрмахлă ĕçсене сăнланă. Çак арпашуллă тапхăрта характер улшăнасси, иккеленӳлĕх ачасемшĕн çеç мар, аслисемшĕн те характерлă пулнă.

XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче Хумма Çеменĕ ачасем валли пĕчĕк калăпăшлă сăвăсем çырма тытăнать. Вĕсенче вулама, çырма, тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси тĕпре. «Атăл тухнă чух», «Шкулта», «Вăрманта», «Юрă» тата ытти сăввисем шкул учебникĕсенче, «Канаш» хаçатра пичетленнĕ. Сăвăç тăван çĕр-шыв илемне, пуянлăхне мухтать, хитре пейзажсемпе çулталăк вăхăчĕсене сăнлать. Уншăн пĕр-пĕр вырăна е вăхăта ӳкернĕ чух вĕсемшĕн характерлă детальсене тĕплĕн пăлăртасси характерлă. Прозăри натурализм мелĕ поэзинче те тĕп мелсенчен пĕри пулса юлать.

Критикăра ĕçленĕ май Хумма Çеменĕ ача-пăча литературин аталанăвĕ пирки те нумай шухăшлать. Сĕнӳсемпе кăтартусем парса статьясем çырать, тĕрлĕ авторсене критиклет.

***Çемен Элкер*** (1894 – 1966) чăваш ача-пăча литератури аталанăвĕнче палăрмалла йĕр хăварнă. Унăн ачасем тата çамрăксем валли çырнă хайлавĕсем нумай енлĕхĕпе уйрăлса

тăраççĕ. Кĕçĕн çулхи ачасем валли унăн «Çутă кунсем» ятлă сăвă кĕнеки тухнă. Халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене усă курса вăл «Юмахсем» кĕнеке çырса кăларать. Кунта «Хыт кукарсем», «Çĕвĕç Иван», «Ылтăн пашалу», «Тăрнаккайпа тăрнасем» тата ытти юмахсем кĕреççĕ. Ç. Элкер пултарулăхĕшĕн биографи жанрĕпе ĕçлесси те характерлă. «Унтри» калавра патша саманинчи тăлăх ача пурнăçне, вăл истори событийĕсене хутшăннине, унăн тĕнчекурăмĕ улшăннине сăнланă. Паллă çынсен ачалăхĕ, пурнăçĕ пирки çырнă хайлавсем шутне «Вăл вилĕмсĕр!» поэмăна кĕртмеле. Ăна вăрçă вăхăтĕнче Лениград патĕнче çапăçса вилнĕ чăваш летчикне Иван Смирнова халаллană. Вăрçă тапхăрĕнче çакăн евĕр хайлавсем патриотизм туйăмне ӳстерме, хайлаври паттăрсем пек пулма хавхалантарма кирлĕ пулнă. Сăвăç чăвашран тухнă паттăрсен ĕçесем çинчен ыттисене каласа парас тĕллеве те пурнăçа кĕртет.

«Хурапа Шурă» романта Ç. Элкер çамрăксем хушшинчи хутшăну, юратупа кил-йыш ыйтăвĕсене хускатать. Юратусăр çын чĕри ванать, сӳрĕкленет, пултарулăхĕ хавшать, тет вăл. Юратусăр ан пĕрлешĕр, ан пурăнăр тени хайлавăн тĕп шухăшĕ пулать.

XIX ĕмĕр вĕçĕнчи тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш интеллигенцийĕ фольклорпа литературăна пĕрлĕхре курнă. Ку тапхăрта сăмахлăх тĕслĕхĕсене сăвăласа çырасси анлă сарăлнă. Çак ĕçе Ç. Элкер те кăмăлласа пăрахать. XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче вара литературă пĕлĕвĕнче фольклорпа литературăна хирĕçлесе пăхасси вăй илет. Пролеткултçăсем классен кĕрешĕвне тĕпе хурса хакланă пирки халăх сăмахлăхне пуçĕпех сивлеççĕ, унпа усă куракансене хаяррăн тапăнаççĕ.

Ç. Элкер халăх сăмахлăхĕн традицийĕсем çине таянса ачасем валли юмахсем çырать. Çыравçă халăх сăмахлăхне мĕн ачаран юратнă, ăна пуçтарас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Чĕлхе илемĕ, шухăш витĕмлĕхĕ ăна халăх пултарулăхĕнче илĕртет. Юмахсене çырнă чух çыравçăна вĕсенчи тĕлĕнтермĕш тĕнчерен ытларах тахçан ĕлĕк пулса иртнĕ ĕçсем илĕртеççĕ. Çиелтен кăткăсах та мар курăнакан юмахсем урлă автор тарăн шухăш калать. Литература юмахне çырасси тĕрлĕ енлĕ пулса пырать: 1) сăвăç халăх сăмахлăхĕнчен илнĕ сюжета сăвăласа, илемлетсе çырать («Хыт кукарсем», «Тамаша», «Ылтăн пашалу»); 2) халап-юмах

традицийĕсемпе мотивĕсене, шутласа кăларнине усă курса хăй çĕнĕ юмах ăсталать («Улăпсем», «Çĕвĕç Иван», «Тăрнаккайпа тăрнасем»); 3) халăх йăли-йĕрки, авалхи пурнăç пирки каланине сăвăласа çырать («Сахрун мучи калавĕсем», «Селти»).

«Улăпсем» хайлаври тĕп сăнар – ырă чунлă Ахрат, улăп-паттăр. Вăл выльăх-чĕрлĕх кĕтсе пурăнать. Хăйне кӳрентериччен вăл ырă. Эсреле хаяр çапăçура тĕп тăвать, Вутăшпа, çичĕ пуçлă хура çĕленпе, тигрсемпе, ăраслансемпе çапăçать. Çӳллĕ ту çине хăпарса тавралла пăхать. Унтан Инди, Китай çĕрĕсене курать. Тĕнче аслă иккен, анчах та тăван енрен хакли çук. Ахрат Атăл тăрăх хăпарать, унта çĕр ĕçĕпе ĕçлесе пурăнакан çынсене курать.

Автор хайлава çырнă чухне улăп тата истори халапĕсенчи мотивсемпе традицисене усă курать, çĕнĕ юмах калăплать. Тăван халăха унăн мăнаçлăхĕ çинчен аса илтерме тăрăшать. Чăваш автономи облаçне, кайран республикине туса хуни 20-30-мĕш çулсенчи интеллигенцине питех хавхалантарнă. Тинех наци культурине аталатарăпăр, историне, фольклорне тĕпчĕпĕр тенĕ вĕсем. Чăн чăваш патшалăхĕ йĕркеленсе кайĕ тесе ĕмĕтленнĕ, анчах та ĕмĕтленни тӳрре тухмасть. Фольклора усă курни килĕшӳсĕр, революцичченхи классика юрăхсăр, вĕсене тĕпчекенсем класс тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Çыравçăсем юмахĕсене вăхăт, самана ыйтнипе килĕшӳллĕн çыраççĕ, апла пулин те вĕсенче ача-пăча литературин паллисем упранса юлнă. Чăваш çынни паттăрлан! – тесе чĕнет Элкер «Улăпсем» поэмăра.  Паттăр пулма вара кивĕ тĕнчен хăш-пĕр тӳнтер енĕсене пĕтермелле. Киввине тиркес ĕçре çыравçăна юмах жанрĕ пулăшать те.

«Хыткукарсем» юмахра пуррине усă курма пĕлмен çынсенчен тăрăхласа çырнă. Куçма Чулкаç хайлаври хыткукарсене чăваш плюшкинĕсемпе маниловĕсем, тет. Çăвĕ, ашĕсем çенĕкре кăвакарса кайиччен упранаççĕ пулсан та, хытă карчăкпа старик типсе кайнă çăкăра шывпа ислетсе çисе лараççĕ. Пĕррехинче карчăк урай шăлнă чухне кĕрпе пĕрчи тупать. Ăна пĕçерсе çиме шутлаççĕ. Мăн хуран тулли шывне яраççĕ те пĕчĕк кĕрпе пĕрчине çавăнта пĕçереççĕ. Пиçсессĕн турилкке çине ăна сивĕнме хураççĕ. Пиçнĕ кĕрпе пĕрчине шăна йăтса каять. Шăнине вĕлерес тесе старик карчăк çамкине кашăкпа (тукмакпа) çапать – кашăкĕ катăлса ӳкет, карчăкĕ вилсе каять, шăни вĕçсе тарать. Куншăн кулянмипе

старикĕ хăйне пуçĕнчен ывăспа çапать те вилсе выртать. Хайхисен пурлăхĕ те ахалех тăрса юлать. Вулакан хыткукарсем вилнишĕн кулянмаç те, вĕсен урмăшла хăтланăвĕсенчен кулать çеç. Иг. Ивановăн хыт кукар çын çинчен çырнă калав пур, вăл та çыннăн çак киревсĕр енне тиркет.

Ç. Элкерĕн юмахĕсенче çыннăн тӳнтер, начар енĕсене тиркесе калать. «Тăрнаккайпа тăрнасем» юмахра ĕçе юратман, çăмăлрах çулсем шыраканран, «Тамаша» юмахра тăрлавсăр, ĕç тĕлне, йĕркине пĕлмен Ухмантейрен тăрăхланă. Тăрнаккай хăвăртрах пуяс тесе платникра та ĕçлет, атă-пушмак та юсать, çĕвĕçре те тум-тир çĕлесе пăхать, ямшăкра та чупкалать, анчах хăй пĕр ĕçне те юратман. Мĕншĕн тесен тăрăшса ĕçлесшĕн пулман. Тар юхтарса ĕçлес темен. Хăй ăсĕпе мар, çын канаш панипе çеç пурăннă. Пĕрре вăл тăрнасене çăмăллăнах тытма май пурри çинчен илтет. Ана çине пăрçа акса тултарать. Тăрнисем пăрçа çиме килеççĕ. Тăрнаккай вĕсене пăрака лртса парать. Кĕçех тăрнасем ӳсĕрĕлсе каяççĕ те ӳксе пĕтеççĕ. Тăрнаккай вĕсене вĕренпе çыхать те килне сĕтĕрсе кайма пикенет. Çур çула çитсен тăрнисем урăлаççĕ те пĕлĕте çĕкленеççĕ. Тăрнаккай та вĕсемпе пĕрле. Хайхи тĕрлĕ ялсем, уйсемпе хирсем урлă вĕççе иртет. Пысăк юхан шыв тĕлне çитсен сиксе юлать. Шыв айĕнчи тĕнчене лекет. Çăвара хăмăш тунине хыпать те унта çăмăллăнах утса çӳреме пултарать. Характерне кура геройпа тĕрлĕ пăтăрмахлă ĕçсем пулса иртеççĕ. Çапах та хăйне тивĕçлĕ тавçаруллăх пуррине пула вăл вĕсенчен чиперех хăтăлса тухма пултарать.

Чăваш халăх сăмахлăхĕнче тăрнаккайлăх, хыт кукарлăх, пĕлмесĕр ĕç тăвакансем çинчен калакан юмахсем чылай. Е.С. Сидорова ку юмахсене тишкернĕ хыççăн çапларах пĕтĕмлетӳ тăвать: «Сюжет о набитом дураке распространен в сказочном фольклоре. Их варианты называются по разному, смотря по тому, о ком идет в них речь: «Возвращающийся от знахаря», «Уля и Хвеля», «Сколько потянет жир от зарезанного быка», «Семнадцатилетний верзила»… В них высмеивается жизнь праздного и ленивого человека, далекого от всякого труда. Изображение полного неумения лоботряса выполнить какую-то ни было работу, его фантастическая недогадливость, непони-

мание простейших законов природы доводит до самокритического смеха… Некоторые сказители глупыми высмеивают не только мужика, но и его старуху… Преувеличенная глупость не только главная черта героя, но и других персонажей еще более оттеняет мысль о никчемности отрицательных типов. В сказках есть варианты сюжета о людях, ищущих дураков. Они высмеивают людей, не знающих жизни, не умеющих ничего делать: то они доят кур, то садят поросенка на шест; то тащат корову пастись на крышу, то рубят под собою сук, носят свет в мешках, растягивают бревно…» [61. 418].

Ку йышши юмахсенче кĕçĕн çын сĕт вĕреме пуçласан, вăл нумайланать тесе савăнать. Кĕçĕн çын сĕтел шăлма пуçласан хунямăшĕ ял тавра чупса çаврăнмалла, тет. Лешĕ тухса чупать. Хунямăшĕ вара сĕтеле тавралла шăлса çаврăнмалла теесшĕн пулнă. Тепĕр юмахра айван çын пӳрте çутă кĕртес тесе сывлăша хăваласа çӳрет те алăкне хупса лататъ. Пӳрт стени çинче кантăк касмаллине тавçăраймасть. Р. Сарпи халăх юмахĕ çине таянса сăмаха вырăнсăр калакан айван çын çинчен «Тăрнаккай» юмах çырать. Ку евĕр сюжета Г.Н. Волков та усă курать тенĕччĕ. Ухмаха пересси наци характерĕнче пур тесе палăртать Г.И. Федоров профессор. Тăрнаккайлăхпа тӳр килместь-ши çак наци характерĕ? Тепĕр енчен пăхсан, çак тăрнаккайсемех хăйсене пӳрнине пурнăçлаççĕ, ыттисем тума пултарайманнине тăваççĕ, тĕрлĕ пăтăрмахсенчен тивĕçлĕ хăтăлса тухма пултараççĕ. Хăйне евĕрлĕ «паттăрла» ĕçсем пурнăçлаççĕ.

«Çĕвĕç Иван» юмахри тĕп сăнар та хăйне ăнман çын тесе шутлать. Тăлăх пулни, ĕç тĕлне пĕлменни ăна хăйне çын вырăнне хурса хаклама чарать. Çакна пулах вăл тĕрлĕ авантюрăлла пăтăрмахсене лекет. Халата тĕрĕс мар çĕленĕшĕн ăна мунчана хупаççĕ, мунча ийи тесе вăл пăрăва пăвса пăрахать. Ватă карчăка çăла тĕксе ярать, арманта пурлăх пайлакан хурахсене хăрататъ. Хăйĕнчен тем чул маттур хурахсене тытма пулăшать. Кайран вĕсем вăрланă пурлăха халăха каялла тавăрса паратъ. Халăхшăн ырă ĕç тусан çеç вăл хăйне çын вырăнне хума пуçлать, телей тупать.

Вĕрентсе калакан юмахсем çырнă чухне Ç. Элкер йăла юмахĕсен сюжечĕсене, вăрă-хурахсем çинчен калакан халапсене, пулмасла халапсен традицийĕсене усă курать. Апла пул-

малла мар тесе калуçă е тĕп сăнар чĕлхипе калать. Тĕп сăнарсен ячĕсем те вĕсен характерне уçса пама пулăшаççĕ. Вĕсен тыткаларăшĕ тĕрлĕ ситуацисене лекессипе çыхăннă. Вĕсем çивĕч ăслă пулмасан та тĕрлĕ пăтăрмахлă ĕç-пуçран ăнăçлă хăтăлса тухма пултараççĕ. Сăнарсен шăпине сăнланă чухне вăхăт, самана хăй ĕвĕрлĕхĕн паллисене те асăрхама пулать. Чухăн, тăлăх хресчен ачишĕн телей тени революцилле шухăшпа, класс кĕрешĕвĕпе çыхăннă. «Çĕвĕç Иван» юмахра киввине тиркесе çĕннине ырланă.

«Сахрун мучи калавĕсем», «Селти» юмахсенче чăвашăн авалхи пурнăçне, йăли-йĕркине сăнласа кăтартнă. Иккĕшĕнче те ĕлĕкхипе хальхине танлаштарасси пур. Тĕнпе тĕшмĕш ĕненĕвĕ суя-ултав пулнине, паянхи çын вĕсене ĕненменнине кăтартнă. Юмах сĕмне кĕртме тесе автор хайлавĕсенче усалсем пулса кайни, вĕсемпе тĕл пулни çинчен калакан халапсен, быличкăсен традицийĕсене, элеменчĕсене усă курать. Калура хăрушлăх сĕмне ӳстерме тесе ĕç-пуç кĕркунне, çумăрлă çанталăкра, каçа хирĕç пулнине палăртса калать. «Сахрун мучи калавĕсем» хайлаври сăнар усал-хаяртан хăраманнине, çĕнĕ саманара вĕсене никам та ĕненменнине палăртать. Хайлавра, чăннипе, авалхи чăвашăн çулталăк тăршшĕнчи йăли-йĕркине сăнласа парасси тĕпре. Уйрăм сыпăкра çĕнĕ çултан пуçласа кĕркуннеччен мĕнле уявсем, йăласем пулнине, вĕсене мĕнлерех ирттернине каласа кăтартнă. Анчах та юмах саманапа килĕшӳллĕ пултрăр тесе юлашкинчен лирика геройĕ ячĕпе тĕшмĕшсене ĕненесси авалхи çын хутла пĕлменнинчен, кăмăлĕпе йăваш пулнинчен килет тесе пĕтĕмлетӳ тунă. Вăл кĕрхи уяв вăхăтĕнче мунча тăррине масар енчен тухатмăшсем килнине курма улăхса ларать, ватăсем калани суя пулнине курать.

«Селти» юмахра ĕлĕкхи вăхăтра тăлăх хĕрарăмăн йывăр пурнăне сăнланă. Пĕр енчен хайлавра социаллă танмарлăха палăртасси тĕпре пек, тĕпĕр енчен вăл усал-тĕселсем, арçурисем пулса кайни çинчен калакан халапсене аса илтерет. Ватă карчăк чирлĕ хĕрĕпе пурăннă. Кĕр çитсен кусен вутă пĕтсе çитет. Карчăк ырхан лашине кӳлсе вăрмана каять. Тулли лавĕпе вăл тарăн çырма урлă каялла каçаймасть. Лаши те ӳксе вилет, хăй те лав айне пулать. Чирлĕ хĕрĕ килĕнче шăнса вилет. Ял хĕрринче халĕ

те çав пӳрт ларать, тет. Кĕрхи çилпе алăкĕсем уçăлса хупăнаççĕ, тет. Карчăкĕпе хĕрĕ уласа йĕнĕ пек кĕрхи çил сасси илтĕнет, тет.

Ç. Элкерĕн юмахĕсен чĕлхи пуян, сăнарлă. Ĕç-пуçсен черетленĕвĕ хăвăрт пулса иртет. Геройсем темле йывăрлăхра та хăйсене çирĕп тытаççĕ, çухалса каймаççĕ. Саманашăн юрăхлă литература юмахĕ çырнă хушăрах вăл çамрăк ăрăва халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе паллаштарма майсем шыраса тупнă.

Ç. Элкере ачасене çут çанталăк пурнăçĕ çинчен ытарлă каласа кăтартас ыйту та хумхантарнă. «Кашкăрсемпе çапăçни» калавра вăл этемпе тискер кайăксем  хушшинче пулса иртнĕ хутшăнăва сăнласа кăтартать. Калаври герой хăй тавçăруллăхне пула вăрманта тĕл пулнă кашкăрсене хăратса яма пултарать, хăрушлăха сирет. Хайлавăн пултаруллăх историне В.Г. Родионов тĕпчевçĕ тĕплĕ тишкерӳ тунă. Вăл кун кенекине çырса хунă пĕчĕк заметкăран илемлĕ хайлава çитме пултарнине тĕпчесе çырнă. Малтанах кун кĕнекине çыравçă вăрманта уçăлса çӳренĕ чухне ăнсăртран кашкăрсене курнине çырса хурать. Çак самантра хăй мĕн тӳссе ирттернине, мĕн шухăшланине палăртать. Илемлĕ хайлав çырнă чухне вара вăрман ӳкерчĕкĕ, тин çурăлнă чечексен илемĕ çинче те чарăнса тăнă.

Çыравçă калав фабулине чăн пулнинчен ытларах хиврелтсе яни курăнать. Кун кĕнекинче кашкăрсене хăратни çинчен çырнине сакăр йĕркере вырнаçтарнă. Калавра вăрманти çав тискер кайăксене калуçа икĕ хут курнă пек пулса тухнă. «Эпĕ вăйлă этем иккенне чухласан вăл хăвăрт çаврăнса çӳçе тĕмĕсем хушшине кĕрсе çухалчĕ», – тесе çырать автор. Кайран пырса перĕннĕ икĕ кашкăра та хăратма ăс çитерет вăл. Çапла вара, çак «пĕррехинче» текен калава эпир Ç. Элкерĕн çыпăçуллă тата ĕнентерӳллĕ приключенине куратпăр», – ăнлантарать В.Г. Родионов [58. 224].

Ç. Элкерĕн хайлавĕнчи калуçă йывăрлăх, хăрушлăх умĕнче çухалса кайман çын. Малтанах вăл çак ситуацире мĕн тума май пурри çинчен тĕплĕн шухăшласа илет: кăçкăрас е вилнĕ пек пулса выртас. Енчен те вăл хускалман пулсан, хăйсен ĕçĕсемпе тухнă кашкăрсем ăна асăрхамасан ат пултарĕччĕç. Юлашкинчен вăл хăрушлăха куçран пăхма шухăшлать. Тискер кайăксенчен

ытла хӑйӗн ӑшӗнчи пӗчӗк хӑравҫӑна ҫӗнтерет. Ҫапла вара, С. Элекрӗн пултарулӑхӗ нумай енлӗ пулнипе уйрӑлса тӑрать.

***Илле Тӑхти*** (1889 – 1938) сӑвӑҫ, фольклорист, прозаик пултарулӑхӗнче те ачасем валли ҫырнӑ хайлавсем сахал мар. Унӑн самана улшӑнӑвне сӑнласа ҫырнӑ чылай хайлавӗ аслисен репертуарӗнчен ачасем вуламалли кӗнекесен йышне куҫнӑ. «Орфей чӗрӗлсе тӑни», «Шерхулла», «Колчак», «Ыт-тӗкел» тата ытти хайлавӗсем чылай хушӑ шкул программине те кӗнӗ пулнӑ. И. Тӑхти Н. Никольский ыйтнипе 1905 ҫулта тӗрлӗ халапсем («Пӑкачав», «Ялсем мӗнле пуҫланса кайни», «Ыраш пучахӗ мӗншӗн кӗске», «Ят хурса яни»), йӑла-йӗрке ҫинчен каланисем («Ҫын вилсен тӑвакан йӑла-йӗрке», «Тырӑ акакан калакан кӗлӗ»), мифла сӑнарсем ҫинчен каланисене («Арҫури мӗнрен пулать», «Хӗртсурт») пухать. 1906 ҫулта алпа ҫырса кӑларакан «Шурӑм пуҫ» журнал валли «Мӗн курни, мӗн илтни» ятпа тӗпӗр виҫӗ халап ҫырса парать. Вӗсемпе усӑ курса каярах илемлӗ хайлавсем ҫырать. Тӗслӗхрен, «Ухливан вутӑша уталани». Хайлава этнографи юмахӗн тӗслӗхӗ тесе палӑртма пулать. Ӑна усалтӗселсемпе тӗл пулни ҫинчен калакан халап сюжечӗ ҫинче никӗсленӗ. Ҫамрӑк чухне пӗрре Ухливан шыв хӗрринче вутӑш ларнине курать. Вӑл вӑрӑм ҫӳҫне ылтӑн турапа тураса ларать. Ухливан ҫакӑн турине вӑрласа тарать. Ял патне ҫитнӗ чухне вутӑшӗ хуса ҫитме тытӑнать, анчах та йытӑсем ӑна хӑратса яраҫҫӗ. Каҫ пулсан, ҫывӑрма выртсан, вутӑш турине илме Ухливансен чӳречи айне килсе ларать. Амӑшӗ ачине килӗшӳсӗр ӗҫ тунӑшӑн ятлать, вӑрланӑ япалана тавӑрса паратарать.

Калава халап сюжетне тӗпе хурса ҫырнӑ пулин те автор унӑн тытӑмне илемлӗ хайлав пек йӗркелет, тӗп сӑнарпа пулса иртекен пӑлхавлӑ самантсене ӗнентерӳллӗ ҫырса кӑтартма пултарать. Вутӑшӑн сӑнарне, вӑл усӑ куракан япаласене, хӑйӗн турине вӑрлакана канӑҫ паманнине, вӑл йытӑсенчен хӑранине тӗплӗн ҫырса кӑтартать. Юмахра этнографи элеменчӗсемпе пӗрлех дидактика паллисем те ӳкерӗннӗ, воспитани саманчӗсем палӑрнӑ. Хайлавра амӑшӗн ячӗпе ҫын япалине тытма юраманнине вӗрентсе каланӑ.

Тутарсен фольклорӗнче те вутӑшсем ҫинчен калакан халапсем пур. Г. Тукай «Русалка» поэмине вӗсене усӑ курса ҫырать.

И. Тӑхтин калавӗ сюжет тӗлӗшӗнчен тутар литературин тӗслӗхне ҫывӑх пулнине каласа хӑвармалла.

1909 ҫулта И. Тӑхти пуҫламӑш классенче вӗренекен ачасем валли арифметика кӗнекине Хусанта кӑларать. Ӑна хатӗрленӗ чухне халиччен пичетленнӗ учебниксен структурипе усӑ курнӑ. Авторӗ задачӑсене йӗркеленӗ чухне чӑваш ҫыннин кулленхи пурнӑҫӗнче тӗл пулакан япалисене усӑ курать. Математика терминӗсене чӑвашла куҫарать, ҫӗннисене шухӑшласа тупать.

***Трубина Марфи*** (1888 – 1956) чӑваш ача-пӑча литературине пуҫарса яраканӗсенчен пӗри пулнӑ. Марфӑн шкула кайма вӑхӑчӗ ҫитсен Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен хушшинче хӗрарӑмсемпе хӗрачасене ҫутта кӑларассишӗн тӑрӑшас туртӑм вӑйланать. Чӑваш ҫӗр-шывӗнче ку енӗпе И.Я. Яковлев ӗҫленӗ. Вӑл тӑрӑшнипех М. Трубина Чӗмпӗр чӑваш шкулне вӗренсе тухма пултарать. Вӗренӳ ҫулӗсенче Марфа уйрӑмах вырӑс сӑвҫисемпе кӑсӑкланать, фольклор пуҫтарас ӗҫе Р.Н. Идобаев чӗлхе вӗрентӳҫи хавхалантарнинпе хутшӑнать, вӗренекенсем хушшинче тухса тӑракан литература журналне йӗркелес ӗҫре тӑрӑшать.

Унӑн малтанхи хайлавӗ учительте ӗҫлеме пуҫласан, 1914 ҫулта А.С. Пушкина халалласа кӑларнӑ шкул ачисен алҫыру хальлӗн тухакан журналӗнче пичетленет. Калавӗ «Манӑн вӗрентекенсене» ятлӑ пулнӑ, унта ӑса вӗрентсе каласси тӗпре. К.Д. Ушинский, Л.Н. Толстой традицийӗсене ас туса ҫыравҫӑ ачасене киревсӗр ҫум куракӗ пек пуласран сыхланма, вӗренсе пархатарлӑ ҫын пулма чӗнет. Ҫак калавран пуҫласа М. Трубина пурнӑҫӗнче педагог ӗҫӗпе литература ӗҫӗ тачӑ ҫыхӑнса тӑма тытӑнаҫҫӗ. Вӗренӳ процесӗ валли шкулта учебниксем ҫитмен пирки вӑл ачасене вулама халӑх юмахӗсене, сӑвви-юррисене пухма, хӑй те пысӑках мар хайлавсем ҫырма тытӑнать.

1919 ҫулта вӑл «Чӑваш юмахӗсем» кӗнекене пухса йӗркелесе кӑларать. Кунта халӑх юмахӗсем кӗнӗ: «Ухмах ача», «Арҫури», «Пукане», «Чее тилӗ», «Уйӑх ҫинчи хӗр», «Вилме каякан пуйса килнӗ, пуйма каякан вилсе килнӗ». 1924 ҫулта ку кӗнекене тепӗр хут Шупашкарта ҫӗнетсе кӑлараҫҫӗ: «Икерчӗ ҫинӗ чух», «Хӑрӑк хурӑн», «Ухмахсем». Кӗнекере пичетленнӗ юмахсем ачасене ӑслӑн пухма, таса та тӳрӗ чунлӑ пулма, ҫынсене хисеплеме,

çуралнӑ çӗр-шыва тата халӑха юратма, çут çанталӑка упрама, хурапа шурра уйӑрма, тимлӗ тата тавçӑруллӑ пулма вӗрентеççӗ.

1925 çулта тухнӑ «Ачасем валли çырнӑ юмахсем» кӗнекене М. Трубинан хӑй çырнӑ литература юмахӗсем кӗреççӗ. Хайлавӗсем ытарлӑ сӑмах урлӑ çут çанталӑкра пулса иртекен пулӑмсемпе паллаштараççӗ, ӑса вӗрентсе калаççӗ. Вӗсенче И.Я. Яковлевӑн шкулӗнчи вӗрентӳ туртӑмӗсем, классикӑлла литературӑн витӗмӗсем палӑраççӗ, çут çанталӑка юратма вӗрентесси тӗпре.

М. Трубинан паллӑрах юмахӗсем: «Вӗренепе куршанкӑ», «Ютран килнисем», «Шӗшкӗ», «Çерçипе шӑнкӑрч». Вӗсем тытӑмӗпе те, шухӑшӗпе те халӑх юмахӗсене çывӑх. Вӗсенче этемпе çут çанталӑк сӑнарӗсем тӗп вырӑнта: пионерсем, вӗрене, куршанкӑ, шӗшкӗ, çерçи, шӑнкӑрч, чие çырли тата ыттисем те. Пӗрремӗшӗнче вӗренепе куршанкӑ пурнӑçне сӑнласа кӑтартнӑ. Икӗ сӑнар пӗр-пӗринпе хӑйсен пурнӑç йӗрки, ӗрчемелли мелсем пирки калаçаççӗ. Куршанкӑ вӑрри çӑмӑллӑнах таçта та çитет, сивӗ вӑхӑтра та вӑл питех аптрамасть. Вӗренен вара, ырӑ та усӑллӑ йывӑçӑн, пурнӑç çулӗ йывӑр. Ӑна ӳсме вӑхӑчӗ, çутти, нӳрӗкӗ, ӑшши ытларах кирлӗ. Автор пӗр енчен йывӑççен пурнӑçӗпе паллаштарать, тепӗр енчен воспитани тӗллевне пурнӑçлать. Пурнӑçра ырришӗн нумай тӑрӑшмалла, усалли çамӑллӑнах сарӑлать, унӑн «ури те вӑрӑм». Хайлавра йывӑçпа курӑка калаçтарни юмах пек курӑнать.

«Шӗшкӗ» юмахра та йывӑç этем пекех шухӑшлать, калаçать, хӑйне ачасем амантса хӑварнӑшӑн кулянать. Çыравçӑ тавралӑха ӳкерсе кӑтартса çамрӑксене пурнӑçа ӑнланма, тавçӑруллӑ пулма, пур ӗçе те шухӑшласа тума, ыррипе усаллине уйӑрма вӗрентет. Юмахсем çырас ӗçе М. Трубина И. Яковлевран тата Л. Толстойпа К. Ушинский пултарулӑхӗсенчен вӗренсе пырать. Тӗслӗхрен, вӑл Л. Толстойӑн «Как ходят деревья» тата «Дуб и орешник» юмахӗсен сюжечӗсем çине таянса хӑйӗн «Вӗренепе куршанкӑ» юмахне çырни паллӑ.

1920 çулта Хусанта тухса тӑракан «Шурӑмпуç» тата «Сунтал» литература журналӗсенче М. Трубинан ачасем валли çырнӑ сӑввисем пичетленсе тухаççӗ. Вӗсене пейзажпа интим лирикине, халӑх сӑввин виçине тӗпе хурса хайланӑ. Кӗçӗн çулхи ачасем

валли çырнă чухне йывăç-курăк, чĕр чунсен сăнарĕсене ӳкернĕ. Малтанах сăвăç тӳрремĕн чĕнсе калассине тĕпе хунă пулсан, каярах пĕлӳ, ăс-тăн парас функцине ӳкерчĕк урлă пурнăçлама тытăнать. Çак ăсталăх «Шăнкăрч вĕлли» сăвăра уйрăмах палăрать. Автор шăнкăрч валли вĕлле хатĕрлекен ачан ĕçне сăнлать, вăл пархатарлă пулнине кăтартать. Юлашкинчен ача хăй тунă ĕçĕн уссине курса киленет. Сăвăра автор пĕчĕккисен чунне туйма, сăнама пĕлни курăнать, вăл ачасене илеме туйма тата ĕçе юратма ытарлă сăмах урлă вĕрентсе калать. М. Трубина «Çуркунне», «Уйра», «Кĕркунне», «Çупа кĕркунне», «Ту айĕнче мĕскер пур?», «Манăн юрă», «Автан юрлать», «Хĕллехи çул» сăввисенче те ял пурнăçне ӳкерсе кăтартать, вĕсен тĕп сăнарĕсем те ĕçе хăнăхса пыракан ачасем.

Çыравçăн пултарулăхĕ пуринчен ытла пионерсемпе шкул ачисен пурнăçĕ çинчен çырнă калавĕсенче палăрса тăрать. Калавĕсенче вăл ку чухнехи çамрăксен тĕп тĕллевĕсене кăтартса пама тăрăшнă, пионерсемпе шкул ачисене çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме ырă тĕслĕхсемпе хавхалантарнă. Çĕнĕ самана йĕркисене çирĕплетес çĕрте çамрăк ăрăвăн ĕçĕ-хĕлĕн пĕлтерĕшĕ те пысăк пулнине «Хĕрлĕ галстук» калавра çутатса панă. Çамрăксем кивĕ йăлана, тĕнпе тĕшмĕшлĕхе хирĕç кĕрешеççĕ, çĕнĕ йăлапа культурăна çирĕплетессишĕн тăрăшаççĕ. Тепĕр чухне çыравçă сăнлакан çамрăк ăру аслисенчен те пултаруллăрах курăнать. Вĕсем колхоз йĕркелес ĕçре, хресченсен тăшманĕсемпе кĕрешес çĕрте чи çивĕччисем, маттурисем пек курăнаççĕ. Хăй вăхăтĕнче ку йышши хайлавсем шкул ачисемшĕн тĕслĕх вырăнне шутланнă. Шкул ачисен кĕрешĕвне, пĕрлехи ĕçре хастар пулнине, вĕренӳ патне туртăннине «Хĕллехи каçсенче», «Ял тăрăх» калавсенче сăнланă, колхоз пурнăçĕ пирки «Чăпăркка», «Пĕчĕк бригадирсем», «Пĕчĕк колхозниксем», «Арçури» калавсенче çырса кăтартнă. Вĕсем çамрăк пулнине, йывăр пулнине пăхмасăр хăйсене шанса панă ĕçĕ пурнăçлаççĕ: колхоз тыррине сыхлаççĕ, чирлĕ пăрусене сыватаççĕ...

Çыравçăна XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче тăлăха тăрса юлнă ачасен-беспризорниксен шăпи те кăсăклантарнă. «Марине» калаври хĕр ача тăхăр çулта тăлăха тăрса юлать, ыйткаласа çӳреме тытăнать. Милици пулăшнипе вăл ача çуртне çитет. Кунтан чаплă та пултаруллă пахчаçă пулса тухать. Хайлавра пейзаж ӳкрчĕкĕсене,

çыпăçуллă диалогсене, психологилле детальсене усă курни сăнара туллин калăплама май парать. Автор тăтăшах чăн пурнăçри топонимика ячĕсене усă курать (Хусан, Чулхула, Вăтакас…). Геройăн характерĕ улшăннине автор унăн протретне тĕплĕн сăнлани урлă та палăртать. Малтан вăл айван та мĕскĕн, кайран вара хастар та паттăр хĕр пулса тăрать. Унăн куçĕсен çутти те ылмашăнать.

Аслă Отечествăлла вăрçа вăхăтĕнче те М. Трубина ачасем валли илемлĕ хайлавсем çырма пăрахман. Хăйĕн «Пусăра», «Кил-йыш», «Пирĕн савăнăç», «Нина» тата ытти калавĕсене çырнă чухне чăн пурнăçра пулнă событисене никĕсе хурать, вулакана йывăр вăхăтра хавхалантарас тĕллеве пăхăнтарать, патриотизм туйăмне çĕклеме тăрăшать. Вĕсенче фронтри тата тылри ачасемпе çамрăксен паттăрлăхне сăнланă. Çыравçăн вăрçăра виçĕ ывăлĕ те пуçне хураççĕ, чунра йăвăр пулин те вăл хăйĕн вулаканĕ пирки манса каймасть, çине-çинех илемлĕ хайлавсем çырать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче М. Трубинан илемлĕ хайлав çырас хавхи тата та ӳсет. Вăл 1947 çулта «Калавсемпе юмахсем» çырнисен пуххине тата «Пионерсем», «Асăнмаллăх савăнмаллăх» кĕнекесене кăларать. Вĕсенче çамрăк ăрава паянхи куна тивĕçлĕ пулма, шухăшкăмăл тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма, çамрăксен хушшинче пĕрлĕх туйăмне тата ĕçпе туслăха тĕреклетсе пыма вĕренте каласси пур.

Поэзипе тата прозăпа ĕçленисĕр пуçне М. Трубина ача-пăча драматургине аталантарас тĕлĕшпе те сахал мар тăрăшнă. Унăн «Çĕр чĕлхи», «Çĕнтерӳ» виçĕ пайлă драмăра, «Килет», «Телейсĕр хĕр» пьесисенче революци çĕнтерĕвне, киввипе çĕннин кĕрешĕвне, колхоз тунă вăхăта сăнласа кăтартнă. Пьесăсенче тĕп сăнарсем çеç мар, сăнлама уйăрса илнĕ тапхăрăн уйрăм паллисем те ăста ӳкерĕнсе юлнă. Автор граждан вăрçи вăхăтĕнчи лăпкă мар кунсене те, революцире çĕнтернĕ халăхăн савăнăçне те чĕррĕн кăтартма пултарнă.

М. Трубинан аслисем валли çырнă калавĕсенче те дидактикăлăх тĕп вырăнта тăрать. Уйрăмах «Эрех çулĕ», «Хăнаран», «Пасар кунĕ» калавĕсем хускатакан проблемăсем паянхи куншăн та актуаллă. Вĕсенче автор эрех ĕçсе, унăн сĕмсĕрлĕхĕпе пăчланас йăлана питлет, эрех çулĕ çынна вилĕм патни илсе çитернине кăтартать.

Çыравçăн пултарулăхĕ çӳллĕ шайра пулнине унăн «Ача чухнехи» тата «Мучар» повеçĕсем палăртаççĕ. Çавăн пекех М. Трубина ялти учителĕн пархатарлă ĕçĕ çинчен «Анна Павловна» автобиографилле повесть çырнă. «Мучар» повеçре детектив паллисем пуррипе уйрăлса тăрать. Кунта сӳтсе явмали вăрттăнлăх – малтан кулак пулнă кайран пĕрремĕш колхозник пулса тăнă Мучарăн вăрттăн шухăшĕсем. Çак вăрттăнлăха çиеле кăларас тесе Михала Мучара ампар айĕнче сыхлать, ылтăнне тупса влаçсене кайса парать. Повеçри Михала сăнарĕ детектив сюжечĕпе тачă çыхăннă. Аннушка сăнарне вара психологилле самантсем уçса параççĕ. Автор колхоз пурнăçне ӳкерме публицистика мелĕсене усă курать.

М. Трубинан «Ача чухнехи» повеçĕ − автобиографилле повесть шутланать. Автор малтан, хайлав умĕнхи пролоґра, вулакансене хăй мĕнле кил-йышра, ăçта çурални çинчен кĕскен каласа парать, унтан хăй астума пултарайман çулсене сиктерсе хăварать те, тăватпилĕк çула çитнĕ вăхăтран пуçласа Чĕмпĕрти чăваш шкулне, И.Я. Яковлев патне вĕренме тухса кайнă самантчен мĕнле пурăнни, мĕн курни-илтни, мĕн-мĕн тӳсни çинчен йĕркепе çырса кăтартать.

«Кĕнекери ĕçсем Мархва ятлă хĕрача тавра пулса иртеççĕ. Вăл çуралса вунпиллĕке çитиччен унăн куçĕ умĕнче мĕн пулса иртни вулакан умне тухса пырать, тӳрех, − иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш ялĕ: унăн социаллă пурнăçĕ, йăли-йĕркисем, этнографипе халăх педагогикин тĕрлĕ енĕсем, уйрăмшар çынсен е пĕрпĕр сийсен ăшчикĕ, чунĕ-кăмăлĕ − пурĕ пĕрле чĕрĕлсе тăрать» [37. 124], − тесе çырать В. Канюков.

Повесть кĕске сыпăксенчен тăрать. Кашни сыпăкĕ − уйрăмшар пĕчĕкçĕ ӳкерчĕк, кашни вăл е ку сăнара çĕнĕ сĕм кӳрет. Сюжет аталанса пынă май, сăнарсем те вулакан умне туллин тухса тăраççĕ, вĕсен характерĕ аталанса пырать. Тĕп сăнарсем повеçре нумай мар. Ача хăй куçĕпе чылай курма пултарнă пулĕччĕ, анчах çыравçă ĕç-пуçсене суйла-суйла илет. Автор кашни сăнара лăпкăн, хăйне тивĕç сăнсемпе тĕплĕн уçса парать. Кун пек чухне сăмахĕсем çыпăçуллă, сăнлăхĕсем вичкĕн, сăнарсем куç умĕнче, калас тени уçăмлă.

М. Трубинан повеçĕ ытти çыравçăсене ачалăх кунĕсене аса илсе çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарнă. Тĕслĕхрен,

Уйӑп Мишшин «Ачалӑх кунӗсем» повеҫпе П. Осиповӑн «Ешӗл хунав пурнӑҫӑм» ытти кӗнекесем кун ҫути кураҫҫӗ.

***Н. Полорусов-Шелепи*** (1881 – 1945) XX ӗмӗрӗн 20-30-мӗш ҫулӗсенче ачасем валли ятарласа сӑвӑсемпе юрӑсем нумай ҫырать. Унӑн ӗмӗр пуҫламӑшӗнче халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсем ҫине таянса ҫырнӑ чылай хайлавне те ача-пӑча литератури шутне кӗртме юрать: «Уксах Тимӗр Пӳлере илни», «Эссепе», «Валем хун»… Вӗсенче халӑхӑн историйӗпе палаштарасси, ҫут ӗҫ идейисене сарасси пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Асӑннӑ хайлавсене литература юмахӗн тӗслӗхӗ пек хаклама юрать. Вӗсенче Н. Шелепин пултарулӑхӗ истори тата топонимика халапӗсене, юмах традицийӗсене, халӑх пурнӑҫӗн ку чухнехи ӳкерчӗкӗсене пӗтӗҫтерме пултарнинче палӑрать. 1905 – 1907-мӗш ҫулсенче Н. Шелепи Н.И. Ашмарин ыйтнипе, каярах Библи обществин пӗрлӗшӗвӗ ыйтнипе хӑй ҫуралса ӳснӗ тӑрӑхри фольклор материалне пуҫтарать, Хусана ярса парать. Каярах вӗсен сюжечӗсене усӑ курса илемлӗ хайлавсем ҫырать.

«Константинополь хулине туни ҫинчен чӑваш ваттисем калани» хайлавра IV ӗмӗрченхи Хура тинӗс хӗрринчи тӗрӗк йӑхӗсен пурнӑҫне сӑнласа кӑтартать. Маларахри тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх, кунта автор шурӑ кайӑкпа ҫӗлен ҫапӑҫӑвне кӑтартни урлӑ ислам тӗнӗпе христианство ку тӑрӑхра ылмашӑнассине ҫапларах ытарлӑ ӳкерсе кӑтартнӑ. Ҫавӑн пекех авалхи шумерсен фольклорӗнче ҫак сӑнарсем ырӑпа усал кӗрешӗвне палӑртнине те асӑнмалла. Кунта ҫӗлен хӑйӗн чеелӗхне усӑ курса тӑтӑшах ӑмӑрткайӑка ҫӗнтерет. Юлашкинчен унӑн тӗкӗсене татса илме, хӑйне читлӗхе хупса лартма пултарать. Хайлавра икӗ тӗн хирӗҫӗвӗ ҫинчен ҫырасси ӗмӗрсен чиккине чӑвашсен тутара тухса пӗтес харушлӑх пысӑк пулнинчен килет.

«Ухсах Тимӗр Пӳлере илни ҫинчен» хайлавра Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхне XIV ӗмӗр вӗҫӗнче тутар монголсем тӗп туни ҫинчен сӑмах пырать. Кунта истори событийӗсене кӑтартнисӗр пуҫне пӑлхарсен кулленхи пурнӑҫне те ӳкернӗ. Автор ҫӗр-шыв пуян пулни, халӑхӗ ӗҫчен пулни ҫинчен ҫырать, вӗсем ҫӗр ӗҫӗпе ӗҫлени ҫинчен асӑнать, тухатмӑш карчӑкӑн ҫурт таврашне ӳкерсе кӑтартнӑ. Кунта суту-илӳ те аталаннӑ пулнӑ. Хула ҫунма

пуçласан патша унтан тухса тарать, унăн виçĕ хĕрĕ кермен тăррине хăпарса çичĕ тинĕс леш енне акăш пулса вĕçссе каяççĕ.

Çĕнĕ саманара Н. Полоруссов-Шелепи, суккăрланса юлнă пулин те, ятарласа çамрăксемпе тĕл пулусем йĕркелет, вĕсене хăй пултарулăхĕпе палаштарать, асасене мĕн хумхантарнипе кăсăкланать. Сăвăç ачасен литературăри пултарулăхне аталантарас тĕлĕшпе те вăй хурать. Вăл йĕркеленĕ литература кружокĕнчен каярах чылай паллă çыравçăсемпе сăвăçсем тухаççĕ.

Асăннă тапхăрта Н. Полоруссов-Шелепи ачасем валли ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăç тата хальхи пуян та культурăллă вăхăт çинчен калакан чылай сăвă-юрă çырать: «Телейлĕ ачасем», «Тума пулнă, тăватпăр», «Хурçă çунатсем», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Вăрман касни»... Патша саманинче тăлăх ачасен хуйха-суйха тӳсме тӳр килнĕ. Вĕсем выçăлла-тутăлла, çĕтĕк тумтирпе килĕрен-киле ыйткаласа çӳренĕ. Пуян çынсемпе ял куштанĕсен мăшклăне тӳснĕ. Паянхи кун тăлăхсем валли ача çурчĕсем йĕркеленĕ, вĕсене ăшă сăмах калакан пур. «Телейлĕ ачасем» сăвăра ватă çын ачасене ĕлĕкхи йывăр пурнăç пирки каласа парать. Вĕсене тăрăшса ĕçлеме, вĕренме, летчиксем пулма, тăван çĕр-шыва сыхлакансем тата тĕреклетекенсем пулма чĕнсе калать.

Ачасем валли çырнă сăвăсенче кăнтăр çилĕ, çуркунне, шăнкăрчă, пыл хурчĕсем, хĕвел шевли, чĕкеç, улмуççи чечекĕ, тилĕ тус, кашкăр, упа, чăхсем – пурте хăйсен вырăнне тупаççĕ. Этемпе, çут çанталăкпа ăшă кăмăлпа калаçаççĕ. Н. Шелепи сăввисен пысăк уйрăмлăхĕ шутне чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ пек туса кăтартнине, чĕр чунсене çын пек калаçтарнине кĕртмелле. Унăн сăввисем калăпăшĕпе пĕчĕк пулин те, кашниех сюжетлă. Вĕсенче сăнарсем хăйсен пурнăçĕ, хăй евĕрлĕхĕ пирки каласа кăтартаççĕ. Упа, кашкăр, чее тилĕ, чăхă хăйсем пирки каланă май этем вĕсенчен вăйлăрах пулнине палăртаççĕ, колхоз пурлăхне хăй вăхăтĕнче сиен тунишĕн ӳкĕнеççĕ. Сарă чăхă хăйĕн çăмартисене тахçан чикĕ леш енне сутнине аса илет.

Н.И. Шелепин ачасем валли çырнă сăввисем янăравлăхпа тата ӳкерчĕклĕхпе уйрăлса тăраççĕ, вĕсем тавралăхпа паллашма май параççĕ. Ачасене сăнама, ӳкерчĕк калăплама вĕрентеççĕ. Н.И. Полоруссов-Шелепин «Çулталăк вăхăчĕсем» кĕнекене

çулталăк тапхăрĕсене сăнлакан сăвăсем кĕреççĕ. Сăвăç вĕсенчен ачасем валли кĕвĕллĕ драмăлла композици йĕркелесе пăхать.

Çыравçă вырăс тата чăваш ача-пăча фольклорĕн тĕслĕхĕсене усă курса ачасем валли сăвăлла юмахсем те çырнă. «Кушакпа автан» пьеса-юмахĕнчи тĕп сăнарĕсем: тилĕ тус, кушак, автан. Кушакĕ сунара кайнă хушăра чее тилĕ килсе автана вăрласа каять. Кушакĕ юлташĕсем пулăшнипе автана хăтарма пултарать. Вăл тилĕ тусăн çурисене тыткăна илет. Ачисене хăтарас тесе тилĕ кушака качча тухма пулать. Хăнана пынисене ытарлăн каласа тухма «Теремок» юмахри йĕркене усă курнă. Хăнисем хăйсем çинчен кĕскен каласа параççĕ. Юлашкинчен автан туя килнисене савăнтарма пурнăç аван пулни çинчен юрă юрласа парать.

Н. Шелепи темиçе юмахăн сюжетне пĕр çĕре пĕрлештерет, чăваш ача-пăча фольклорĕн тĕслĕхĕсемпе пуянлатать, самана паллисене усă курать. Тилĕ тус çурин ячĕсене каласа тухни, тĕслĕхрен, эрне тата хисеп ячĕсене шутламалли сăвăна çывăх. Туйра кушак комиссар пулни, тилĕ – комиссар арăмĕ пулса тăни çинчен каланă. Юмах прозăлла тата сăвăлла йĕркесенчен тăрать.

Революци, граждан вăрçи хыççăнхи, выçлăх тапхăрĕнчи ачасен йывăр пурнăçĕ çинчен ***Алексей Талвир*** (Башкиров) (1909 – 1979) та илемлĕ хайлавсем сахал мар çырнă. Унăн пĕрремĕш кĕнеки «Хĕллехи сивĕ» 1929 çулта Мускавра тухнă. «Хĕллехи каç» хайлавра ачасен граждан вăрçи вăхăтĕнчи йывăр пурнăçĕ тĕпре. Пĕртăван Терккапа Çерук амăшĕ вилсен хăр тăлăха тăрса юлаççĕ. Вĕсем пĕр хушă ашшĕн пиччĕшĕ Кăлтăрма Михали патĕнче тарçăра ĕçлесе пурăнаççĕ. Ачасем кунти асапа, мăшкăла чăтаймасăр хулана тухса каяççĕ. Анчах та пĕр-пĕрне çухатаççĕ. Интерната вырнаççан çеç вĕсем тинех хăйсен телейне тупма пултараççĕ. Çыравçă халăх пурнăçĕ, çĕр-шыври лару-тăру йывăр пулсан та ачасемшĕн тăрăшмаллине, ку ĕçри чăрмавсемпе тумхахсене хăюллăн пĕтермеллине асăрахттарать.

«Йăнăш», «Пĕр сăмах», «Юлташсем кĕтеççĕ» хайлавсенче кĕрешӳ вăхăтĕнчи çамрăксен хутшăнăвне, туйăм аталанăвне кăтартса парать çыравçă. Телтей тени, халăхпа пĕрле, ăна юрăхлă ĕç пурнăçласан çеç пулма пултарнине типлă ситуацисене, традицилле сюжета усă курса кăтартса парать. Ку хайлавсене композици йĕрĕ пĕр пек пулни те пĕрлештерсе тăрать. Çамрăк

геройсем, тахçан пĕр-пĕрне паллană, туслă пулнăскерсем, сасартăк пĕр-пĕрне кӳренсе, кĕвĕçсе уйрăлса каяççĕ, вăхăт иртсен ăнсăртран татах тĕл пулаççĕ. Халĕ вĕсем хăйсен йăнăшне ăнланса илнĕ ĕнтĕ.

А. Талвир «Пăва çулĕ çинче» ятлă автобиографилле повеçĕнче чăн пурнăçри историлле событисемпе фактсене, 1914 – 1917-мĕш çулсенчи чăваш ялĕнчи ĕçсене ӳкерсе кăтартать. Автор халăх пурнăçне, йăлисене, уйрăмах ача-пăча кăмăлне лайăх пĕлни, вĕсене юратса сăнлани сисĕнет. Писатель фольклор пуянлăхĕпе вырăнлă усă курать, ăнланмалла çăмăл чĕлхепе çырать. А. Талвир стилĕнче лирикăлла туйăм, ăшă кулă пурри сисĕнет.

Хайлаври тĕп герой Сантăр ятлă ача. Кĕнекери ĕçсем унăн тавра пулса иртеççĕ, унăн пурнăçĕпе çыхăнса пыраççĕ. Ачасен психологине, вĕсен интересне, вăййи-куллине пĕлни повеçĕн сĕткенне, пĕлтерĕшне ӳстерет. Тĕпчеме, ыйтса пĕлме юрататакан Сантăр, ашшĕ ĕçне сăнанă май, яланах ыйтусем парать, вăрăсене тытакан çăраççисем, тырă выракан машинăсем тума ĕмĕтленет, ăста çыннăн ĕçне хаклама, унăн илемне туйма хăнăхать. Вăл чĕрĕ, тавçăрулла ача.

Пурнăçа тишкерсе сăнакан ача куçĕ умне чăваш ялĕн куçăм тапхăрĕнчи кунĕсем тухса тăраççĕ. Вăтам хресченсем юхăнсах, кулаксем пуйсах пынине, Столыпин реформи хыççăн кулаксем хуторсене уйрăлса тухнине курать вăл. Граждан вăрçи çулĕсенче самана та сăнать вăл. Ача пурне те пĕлме тăрăшать, хăшĕсем лайăх, хăшĕсем лайăх маррине чухлама вĕренет. Повеçре А. Талвир пĕчĕк Сантăра мĕн ачаран епле çитĕнсе, тĕрекленсе пынине кăтартать. Ача çын пуласси унтан хăйĕнчен çеç килмест, çавăнпа та çыравçа ăна яланах халăхпа пĕрле кăтартать. Сантăрăн характерĕ аталанаса пыни халăхăн шухăш-туйăмĕн вмтĕмĕпе çирĕпленсе пынине кăтартать.

Хайлаври ĕçсем аталаннă май, Сантăрăн пурнăç опычĕ те ӳсет. Ача халăхăн вăйне, унăн çирĕп шанчăкĕ мĕнле йывăр тапхăрта та çухалса кайманнине курса ӳсет. Ырă кăмăл, тӳрĕлĕх, хастарлăх – ĕççыннисен палăрса тăракан енĕ. Çак паха енсем Сантăрăн харктерĕнче те çирĕпленсе пыраççĕ. Аслашшĕ каласа панисем, Андрей Павлович сăмахĕсем, хăй тӳссе курнисем Сантăрăн пĕлĕвне, тавракурăмне анлăлатсах пыраççĕ.

Пăвана кайсан, Сантăра, чăваш тесе, вĕренме илмеççĕ. Патша саманин тискерлĕхĕ, нацилле танмарлăх халăха питĕ тарăхтарать. А. Талвир хайне килĕшекен сăнарсене ӳкерсе пынă чухне кирлĕ сăмахсем суйласа илме, илемлетмелли мелсемпе усă курма ăста.

Ятарласа çамрăксен театрĕ валли пьеса-юмахсем çырас телĕшпе 30-мĕш çулсен вĕçĕнче ***Ефим Никитин*** (1912 – 2000) ĕçлеме тытăнать. 1940-мĕш çулта унăн тăвата пайлă «Кукша Иван» пьеса-юмахĕ пичетленсе тухать. Пьесăн шухăшĕ çапла: пĕчĕк куракансене юмахласа тĕрлĕ пулăмсем пирки каласа парасси. Пьесăна сăмахлăхра анлă сарăлнă сюжетсене тĕпе хурса çырăннă. Кунти тĕп герой – Кукша Иван. Вăл чухăн, Кăмпа патши çĕрĕнче хуралçăра тăрать. Геройсем (Юман, Ту паттăрсем, Иван хăй, ыттисем) прологра кашни хăйĕн функцийĕпе, тĕллевĕпе паллаштараççĕ. Кăмпа патши хĕрĕ (Уйăп) хăй кăмăлламан ют алла ан лектĕр тесе, ăна уçăлса çӳреме те кăлармасть, иккен. Çапах та пьеса пуçламăшĕнче кĕтмен инкек пулса иртетех: патша хĕрне вăрлаççĕ. Юманпа Ту паттăрсене хĕре тупса килме хушаççĕ. Иван та вĕсемпе тумхахлă çула тухать. Вăл паттăрсен ертӳçи пулса тăрать.

Юмахăн иккĕмĕш пайĕнче эпир ытти, халиччен курман сăнарсемпе тĕл пулатпăр. Кусем – Чике сухал, Ăрăмçă карчăк, Эсрел, Киремет, ыттисем. Чике старик патша хĕрне арăм тăвасшăн. Пьеса-юмахри хирĕç-тăру мĕн пуçласа вĕçне çитиччен ĕненмелле йĕркеленсе пырать. Унăн пуçламăш таппи Чике старикпе паттăрсем тĕл пулни. Чике старик çисе тăранайми хырăмлă. Пиçекен апат шăрши тухнă-тухманах паттăрсем чарăннă пӳрте персе çитет. Хăйне çĕклесе кĕртме, апатне антарса пама ыйтать. Юманпа Ту паттăрсем ăна пăхăнаççĕ, Иван апла тумасть. Вăл Чике аллисене вĕренпе çыхса хурать. Кунта унăн сухалĕ калăпĕпех тăпăлса тухать. (Е. Никитин шухăшĕпе унăн сухалĕ виçĕ аршăн тăршшĕ иккен, ун çине утланса таçта çитме те пулать).

Юмахăн виççĕмĕш пайĕнчи пулăмсем Чике сухалăн тĕнчинче пулса иртеççĕ. Уйăп пике, йывăç çумне çыхса лартнăскер, «Кам çăлĕ-ши мана?» тесе хуйхăрать. Пикен кулянăвне сăнласа кăтартнă самант А.С. Пушкинăн «Сказка о мертвой царевне и о семи богатырях» юмахĕнчи йĕркесене аса илтереççĕ. Иван Чике старикĕн çарĕпе çапăçать. Паттăр ячĕпе

çӳрекенсем кунта та хӑйсен хӑравçӑлӑхне кӑна кӑтартаççӗ. Уйӑп пике хӑйсен аллине лектӗр тесе вӗсем темиçе хут та Ивана вӗлерме тӑраççӗ. Вӗлереççӗ те. Анчах вилмелли ыйха путнӑ Иван макӑракан Уйӑпӑн куççулӗ хӑй çине тумланипе чӗрӗлет. Çапла майпа пьеса-юмах вӗçнелле Иван хӑй чӑннипех паттӑр пулнине çирӗплетсе парать.

Юмах Иван çӗнтернипе вӗçленет. Ту, Юман паттӑрсем патша хӗрне Иван аллине лекесрен тӗрлӗ усал утӑм тӑваççӗ пулин те, тӗрӗслӗх çиеле тухать. Иван патша е патша мар пулса юласси кӑсӑклантармасть автора. Ун пирки пьесӑра пӗр сӑмах та çук. Иван Ту, Юман «паттӑрсене» тӗрлӗ çӗре ӑсатать: пӗрине – ту çине, теприне – вӑрмана.

Каярах Е. Никитин «Кукша Иван» юмах-пьесӑна пуянлатса «Вӑрланӑ пике» юмах çырнӑ. «Сарпике» ятлӑ тепӗр юмахӗнче 17 çулхи сар каччӑ Сартиван 17 çулхи хитре хӗре, Сарпикене, Эсремет пусмӑрӗнчен çӑлать. Кунта асамлӑ вӑйсене (тӗкӗр, çӗрӗ, тутӑр, купӑс, тӗрлӗ йывӑрлӑха çӗнтерекен ӑмӑрткайӑк, Саха карчӑкпа Эсремет)  вырӑнлӑ усӑ курнӑ.

Çапла вара, ача-пӑча литературинче драмӑлла юмах жанрӗ вӑй илме тытӑнать. Халӑх историне, йӑла-йӗрке пуянлӑхне çырса кӑтартасси йӑлана кӗрет. Юмах жанрӗн çӗнӗ тӗсӗсем  аталанасси вӗсен кирлӗлӗхӗпе çыхӑннӑ пулнӑ.

XX ӗмӗрӗн 20-30-мӗш çулӗсем пӗтӗмӗшле чӑваш литературишӗн пӗлтерӗшлӗ шутланаççӗ. Репрессине, соцреализм традицийӗсем сарӑлнине пӑхмасӑр ку тапхӑрта чӑваш литературин паллӑрах традицийӗсем йӗркеленеççӗ, тӗпрех уйрӑмлӑхӗсем аталанма тытӑнаççӗ. Çак сӑмахсене ача-пӑча литератури пирки те калама юрать. 20-30-мӗш çулсенче тӗпрех жанрсем, çыру принципӗсемпе мелсем, халӑх сӑмахлӑхне усӑ курасси аталанма тытӑнаççӗ. Каярах, вӑрçӑ хыççӑнхи тапхӑрта, хальхи литературӑра вӗсем чӑваш ача-пӑча литературин тӗп уйрӑмлӑхӗсем пулса тӑраççӗ. Кунсӑр пуçне çак тапхӑрта ача-пӑча литературин пулас классикӗсем пултарулӑх  çулӗ çине тӑнине те палӑртса хӑвармалла.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. 20-30 çулсенчи ача-пăча литературинчи тĕпрех темăсем.
2. М.Трубина калавĕсем, педагогикăри ĕçĕ, ача-пăча литературине аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ.
3. Хумма Çеменĕн хайлавĕсенчи ача сăнарĕсем.
4. Куçма Чулкаçăн хайлавĕсенчи шутласа кăларнин пĕлтерĕшĕ.
5. 20-30-мĕш çулсенчи ача-пăча поэзийĕн аталанăвĕ. Сăвăçсен пултарулăхĕ, сăвăри сăнарлăхпа чĕлхе уйрăмлăхĕсем.

## ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

Аслă Отечествăлла вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи тапхăр пурнăç йĕркине, культура аталанăвне пысăк витĕм кӳнĕ. Пĕтĕмĕшле литературăри пекех, ача-пăча литературинче те ку çулсенче вăрçă терт-нуши, çĕнтерĕве шанасси, тăшмана ылханасси, паттăрсене мухтасси, тăшмана хирĕç çапăçас ĕçре пĕр пуласси темăсем тĕпре пулнă. Пурнăç йывăр пулнине пăхмасăрах чăваш çĕр-шывĕнче ачасем валли кĕнекесемпе хаçат-журналсем тухса тăнă, çамрăксен театрĕ ĕçленĕ. Тылра юлнă çыравçăсем Н. Шелепи, М. Трубина, И. Ивник тата ыттисем те кĕçĕн тата вăтам çулхи ачасене халлаласа илемлĕ хайлавсем пичетлесех тăнă. Ача-пăча çыравçисенчен чылайăшĕ фронта тухса кайнă пулнă. В. Бараев, ачасен вулавне литература юмахĕсепе пуянлатнă автор, вăрçăра пуçне хурать. Хĕрӳ çапăçусем витĕр тухнă Л. Агаков вăрçă кунĕсене пăхмасăрах ачасем çинчен героикăлла калавсемпе повестьсем çырать. Унăн «Юлташ пурнăçĕ» (1942), «Салтак чунĕ», «Хĕр юрри» (1943), «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Партизан Мурат», «Фронтри ачасем» (1943-1945) тата ытти хайлавĕсем пичетленсе тухма пултараççĕ. Хв. Уяр, А. Алга, С. Элькер, Я. Ухсай тата ытти çыравçăсем хăйсен хайлавĕсенче паттăрлăх кăтартакан çынсен сăнарĕсене калăплаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи ача-пăча литератури çĕр-шыва хӳтĕлекен тата тылра ырми-канми тăрăшакан, фронта кайса пĕтнĕ аслисене ылмаштарнă ачасем çинчен каласа кăтартать. Вĕсем хаяр çапăçăва хутшăнни çинчен калакан хайлавсем каярах пичетленме тытăнаççĕ.

Кӗҫӗннисем аслисене заводсенче ылмаштарнӑ, окупаци йывӑрлӑхӗсене чӑтнӑ. Ку тапхӑрта ачасем валли ҫырнӑ хайлавсен пафосӗ – халӑхӑн патриотизмне, паттӑрлӑхне мухтасси, вӑрҫа пуҫаракансене ылханасси, мирпа телейшӗн кӗрешесси. Кӗнекисене вӑрҫӑ событийӗсем хыҫҫӑн унта хутшӑннӑ ҫынсем е вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫитӗннӗ ҫыравҫасем хӑйсен ачалӑхне аса илсе ҫырнӑ.

Чылай ҫыравҫӑ вӑрҫа пула ачалӑхсӑр тӑрса юлнӑ, нушаланакан, выҫлӑхран тата пульӑсем айне пулса вилекен ачасем ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Ачасен сӑнарӗсем вӑрҫа пула пӗтекен пурнӑҫ символӗпе танлашаҫҫӗ. Ку тапхӑрта литературӑра «тавӑракан ача» сӑнарӗ тӑтӑшах тӗл пулать. Илемлӗ хайлавсем вӑрҫӑри ача йывӑрлӑхсене чӑтса иртерме пултарнине, аслисен чи шанчӑклӑ пулӑшаканӗ пулнине ӗнентереҫҫӗ. Ҫавӑн пекех йывӑр вӑхӑтра ачасен шӑпинче ырӑ, ӑслӑ ҫынсем тӗл пулни пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Вӗсем пулӑшнипе ачасем кӗрешеве хутшӑнаҫҫӗ, паттӑрла ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Кӗҫех ача-пӑча литературинче паттӑр характерӗпе ача кӑмӑлӗн, психологийӗн шайлашӑвӗ ыйту ҫивӗччӗн тухса тӑрать. Чылай автор «пӗчӗк салтак», «тавӑракан ача» ӑнлавсене вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче сивлеме тытӑнаҫҫӗ, вӑрҫӑри ача сӑнарне идеализацилеме пӑрахаҫҫӗ.

XX ӗмӗрӗн 40-мӗш ҫулӗсенчи чӑваш ача-пӑча литературинче ача – тыл ӗҫченӗ тема малтанах поэзире аталанать, кайран прозӑна куҫать. Ку темӑна тылра юлнӑ авторсем усӑ курнӑ. И. Ивник, М. Трубина, Н. Шелепи, К. Кольцов, А. Ӗҫхӗл, Уйӑп Мишши ачасем колхоз уйӗнче тӑрӑшнине, вӑрман каснине, эвакуацине куҫса килнӗ ҫынсене пулӑшнине, фронта тата фронтовиксен ҫемьисене пулӑшнине сӑнласа кӑтартаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, ачасен мухтавлӑ ӗҫӗсене сӑнлакан калавсемпе повеҫсем сахал мар ҫырӑнаҫҫӗ: В. Долговӑн «Тӗлӗнмелле винтовка» сборникри калавӗсем, А. Талвирӗн «Казик», И. Микулайӗ «Кӑсӑя», Хв. Уяр «Куҫмапа унӑн тусӗсем», М. Трубина «Нина», «Ҫемье» калавсем. М. Данилов-Чалдунӑн хайлавӗсенче натурализм, трагеди паллисем тӗпре. Тем пек йывӑр пулсан та ачасем аслисем пекех ҫирӗп, чӑтӑмлӑ пулнине кӑтартать вӑл. Унӑн калавӗсем: «Юрӑ пурпӗр янӑранӑ», «Елизавета Короткова»... Фронтри ӗҫсене сӑнлакан хайлавсенчи тӗп сӑнарӗсем партизан отрядне лекнӗ, вӑрҫӑна пула тӑван килсӗр, ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса юлнӑ ача-

сем. Сăвăлла тата прозăлла хайлавсен тĕп паллисем публицистикăллăх, документаллăх пулса тăраççĕ. Чылай чухне мирлĕ пурнăç ўкерчĕкĕсене вăрçă ўкерчĕкĕсемпе хирĕçлесе кăтартасси пур. Çыравçăсем пурнăçа тĕрĕс те таріннăн кăтартакан хайлавсем çырма тăрăшаççĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чăваш литературине çĕнĕ авторсем килеççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ ачасем валли те çыраççĕ. Ал. Артемьев «Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ» калавра тĕрлĕ халăхсен хушшинчи туслăх темăна аталанатарать. Иккен, Китайпа Япони халăхĕсен хушшинчи хутшăну совет салтакĕ килсен çеç уçăмланать. Пирĕн çĕр-шывра çеç ачасен ирĕклĕ, телейлĕ, туслă пурăнма, пур енлĕн аталанма майсем пур. Çыравçăсем совет çĕр-шывĕнчи ачасен пурнăçне капитализмла патшалăхсенчи ачасен пурнăçĕпе танлашатараççĕ. Капталимзмла çĕр-шывсен е вĕсен пусмăрĕ айĕнче пурăнакан халăхсен литературине куçарас туртăм та пулнă. Куçарнă чухне пурнăç условийĕсене пула нушаланса пурăнакан ачасене сăнлакан хайлавсене ытларах суйласа илнĕ. Ачасем выçăла-тутăлла пурăнаççĕ, çамрăклах хура ĕçе кўлĕнсе нушталанаççĕ, вĕсен ашшĕсемпе амăшĕсем те ĕç тупайманран йывăрлăхсене чăтса ирттереççĕ. Чылай чухне ку йышши хайлавсем трагедипе вĕçленеççĕ.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Вăрçă вăхăтĕнче пичетленнĕ хайлавсен тĕпрех жанрĕсем.
2. Ачасен тылри тата фронтри пурнăçне сăнласа кăтартакан хайлавсенчи реализмпа натурализм.
3. Вăрçă вăхăтĕнчи ача-пăча литературинче çуралнă тĕпрех символсем.
4. Илемлĕ хайлавсенче паттăрлăха сăнласа кăтартас традицисем.
5. Тылра юлнă çыравçăсен пултарулăхĕ.

# ВĂРÇĂ ВĂХĂТĚНЧИ АЧА-ПĂЧА ÇЫРАВÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĚ

***Стихван Шавли*** 1910 çулта Самар тăрăхĕнчи Шунтал районĕнче çуралнă. Ачалăхĕ Атăл тăрăхĕнче выçлăх çулĕсем хуçаланнă тапхăрта иртет. Пурнăç йывăрлăхĕсем çемьене Украинăна илсе çитереççĕ. Стихван кунта амăшне, шăллĕне çухатать, ача çуртĕнче пурăнать. Тăван яла каялла таврăнсан ачан аслашшĕ патĕнче пурăнма тивет. Ачалăхри йывăр кунĕсене С. Шавли каярах «Хăяхван çамрăклăхĕ», «Çиçĕм çиçет» поэмăсенче, «Ватă çын тăпри çинче» сăвăра аса илет. 30-мĕш çулсенчи чăваш ялĕн пурнăç йĕркине улштарас ĕçе С. Шавли те активлă хутшăнать. Çав хушăрах хăй мĕн курса тӳснине илемлĕ хайлавсенче сăнласа хăварма тăрăшать. «Çиçĕм çиçет» поэмăра халăха çутта кăларас тесе ырми-канми тăрăшакан çамрăксен ĕçĕ-хĕлне сăнласа кăтартать. Самана хăй евĕрлĕхне палăртнисĕр пуçне поэмăра фольклор традицийĕсене те анлă усă курнă.

С. Шавли Аслă Отечествăлла вăрçă вăхăтĕнче ачасем валли илемлĕ хайлавсем çырма пăрахмасть. «Киев пионерĕ», «Маттур Якур», «Зоя» поэмăсен сюжечĕсене вăл чăн пурнăçран илет. Киев хулинче пĕр ача полк ялавне сыхласа хăварса паттăрла ĕç туни çинчен вăл хаçатра çырнине курать. Ку ĕç çинчен сăвăласа поэма калăплать. «Маттур Якур» поэмăри сăнарсем те пионерсем. Вĕсем тылра тăрăшаççĕ: уя кĕл турттараççĕ, заводсем валли тимĕр-тăмăр пуçтараççĕ, аманнă салтаксем валли кученеçсем хатĕрлеççĕ. Ачасем тырă выраççĕ, колхоз лашисене пăхаççĕ, фронта валли тум-тир, госпиталь валли апат-çимĕç пуçтараççĕ. Якур эвакуацине килнĕ Остаппа иккĕшĕ ялти халăхпа тĕрлĕ ĕçсене хутшăнаççĕ, фронта пулăшаççĕ. «Зоя» поэмăра чăваш хĕрĕн фронтри паттăрлăхне сăнланă. Вăл фронт урлă каçнă та ракетчиксене тăшманăн объекчĕсем ăçтарах вырнаçнине рацие пĕлтерсе тăрать. Вилес вăхăт çитсен те тăшман аллине парăнмасть. Ракетăна хăй çине тĕллеме хушать. С. Шавли поэмисен геройĕсем хастар, хăюлă, çирĕп кăмăллă. Кирек ăçта çитсен те, кирек мĕнле йывăрлăхра та вĕсем тăван кĕтесе, çуралнă çĕр-шыва манмаççĕ, шухăш-кăмăлĕпе, ĕçĕсемпе хăйсем çинчен ырă ят хăвараççĕ.

С. Шавли хăйĕн пултарулăхĕнче паллă çынсен пурнăçĕ темăна та аталантарать. «Çăлтăр çынни» поэмăра А. Николаев космонавтăн паттăрлăхне кăтартса панă. С. Шавлине чăваш литературинче Лениниана ярăма аталантараканĕсенчен пĕри пулнă. Унăн «Ленин», «Аслă урам», «Тăван халăха», «Тăван çĕр-шыва», «И.Н. Ульянов уçнă Хутар шкулĕ» сăввисенче тата «Ешĕл палăк» поэмăра аслă çулпуç, тăван халăхăн çĕнĕ саманари кун-çулĕ çинчен çырса кăтартнă.

***Леонид Агаковăн*** (1910 – 1977) ачасем валли çырнă хайлавĕсене виçĕ ушкăна уйăрма пулать: 1) граждан вăрçи вăхăтĕнче паттăрлăха кăтартакан ача, 2) ача колхоз йĕркеленнĕ çĕре хутшăнни, 3) Аслă Отечественнăй вăрçăна хутшăннă ача сăнарĕ. Пултарулăх пуçламăшĕнче Л. Агаков ачасен пионер оргапнизацийĕсене йĕркелени çинчен çырать: «Маттур», «Пулăшрĕç», «Вăрманти отряд», «Юлашки юмах», «Ултав» пьеса. «Юлашки юмах» калавра ачасем кивĕ йăлана хирĕç активлă кĕрешнине сăнланă. Хулари пухуран таврăнакан Павăлпа Петĕр ват юман айне канма ларaççĕ. Кунта укçа, пуканесем выртнине кураççĕ. Çĕнĕ пурнăç йăлишĕн кĕрешекен ачасем чӳк япалисене сапаласа пăрахаççĕ. Кĕçех çамрăксем ялта колхоз йĕркелеме, ăратлă чăхсемпе кроликсем ĕрчетме шутлаççĕ. Ĕмĕте пурнăça кĕртме 40 тенкĕ укçа кирлĕ пулнă. Пионерсем киремет йывăççине касса вакласçĕ, вуттине сутаççĕ, кирлĕ укçана пуçтарса çитерсен ĕмĕте пурнăça кĕртеççĕ. Ачасен активлă пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен «Амăшĕн сăмахĕ», «33 номерлĕ старик», «Пулăшрĕç», «Салтак ывăлĕ», «Таня» калавсенче сăнласа кăтартнă.

Л. Агаковăн «Пĕрре çуркунне…» (1939) повеçĕнче приключени тата детектив паллисем чылай. Хайлавра чăваш ялĕсенчи 1920 – 1922 çулсенчи выçлăх вăхăтне сăнланă. Çыравçăн çывăх тăванĕсемпе пулса иртнĕ ĕç-пуçсен паллисем те пур. Икĕ социаллă сий хушшинчи конфликта кăтартса парасси сюжет йĕрне ӳкнĕ. Хĕрлĕ çартан таврăннă Тарас ялти пурнăçа йĕркелесшĕн, аталантарасшăн тăрăшать, тăшмансенчен тăрса юлнă кулаксен хӳрешкисене çĕнтерет. Хайлавра ял пурлăхне вăрлани, вăрăсене йĕрлени, вĕсене тупса арестлени тата ытти

эпизодсем пур. Повеçри событисен черетленĕвĕ, романтикăлла сăнарсем, сюжет çивĕчлĕхĕ вулакана тыткăнлаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче çырнă хайлавĕсенче Л. Агаков 41-мĕш çулхи тата хыççăнхи ачасен пурнăçне ӳкерсе кăтартать. «Фронтри ачасем», «Çапăçу хирĕнче», «Манăн туссем», «Пĕчĕк партизансем», «Манăн пĕчĕк туссем», «Пĕр хулара» калавсенче, «Ылтăн вăчăра», «Салтак ачисем», «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Яланах салтаксем» повеçĕсенче, «Шанчăк» романĕнче, тĕрлĕ очеркĕсенче тата ытти хайлавĕсенче аслисемпе пĕрле ачасем те тăшмана хирĕç кĕрешсе пысăк паттăрлăх кăтартнине сăнланă. Унăн геройĕсем – разведчиксем, лайăх стрелоксем, харсăр партизансем, фабрикăсемпе заводсенче, тылра ырми-канми пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Йывăр вăхăтра ачасем кăмăл çирĕплĕхне палăртма пултарнине кăтартать автор. Ачасем полк ялавне сыхласа хăвараççĕ, тăшманпа куçа-куçăн тĕл пулаççĕ, сывăх çыннисене çухатнă пулин те хуçăлса ӳкмеççĕ, малаллах кĕрешеççĕ. Ку вăхăтри калавсем характерлă эпизод çинче шăнăрланса тăраççĕ, сюжет драматизмĕ пур, ĕç-пуç приключенилле, хивре аталанса пырать.

Л. Агаков ачасен вăрçăри тата тылри паттăрлăхне сăнласа калав, повесть, очерк, фельетон жарнĕсемпе хайлавсем çырнă. Чылай хайлав ачасен телейлĕ пурнăçĕ вăрçа пула татăлнине сăнланинчен пуçланать. Кил-çурт таврашне тăшман çунтарса, аркатса пĕтернĕ, халĕ вăл тăван ялта хуçаланать. Тăшман сăнарне калăплама çыравçă карикатура мелĕсене усă курать. Вĕсем ухмах, айван ăслă, çав хушăрах усал, хаяр, совет халăхне пĕтерес тĕллевлĕ. Ку тапхăрти калавсенче тин çуралнă ача, хăюллă хĕрарăм тата ытти сăнарсем ирĕклĕ тăван çĕр-шыв символĕ пулса тăраççĕ.

Л. Агаков ачасем валли приключенилле хайлавсем çырнипе паллă: «Ылтăн вăчăра», «Юманлăхра çапла пулнă»... Ку хайлавсемшĕн ĕç-пуç, ӳкерчĕк черетленĕвĕ пурри характенрлă. Приключени сĕмне инверси мелĕ, повторсем, калăва калав ăшĕнчи калав евĕр йĕркелени те кĕртме пулăшать. Хайлавсенчи геройсем тĕрлĕ йывăрлăхсем витĕр тухма пултараççĕ. Вĕсем пур чухне те тивĕçлĕ йышăну çеç тăваççĕ, хăйсен тăшманĕсене çĕнтереççĕ. Çыравçă хăйĕн сăнарĕсене романтизацилесе тата

идеала çывăх ӳкерет. Вĕсем хăйсен çулĕсене кура мар ăслă тата пултаруллă пулса тухнă. «Сенкер модель» калавра çыравçă совет саманинчи ачасен пултарулăхĕ ирĕклĕн аталанма пултарни çинчен çырать. Л. Агаков хайлавĕсенче çамрăк ăрăва вĕренме, пĕлӳ илме чĕнсе калать, тăван тавралăхпа тата çĕр ĕçĕпе палаштарать. Фольклор традицийĕсене усă курса ачасене чĕлхе илемне курма вĕрентет, кăмăл-сипет проблемисене хускатать.

Л. Агаков ача-пăча литературин критикипе те нумай ĕçлет. Çамрăк ăру валли тĕрлĕ ĕçпе ĕçлекен çынсене илемлĕ хайлавсем çырма чĕнсе калать: историксене, агрономсене. Наукăлла, фантастикăлла, приключенилле, паттăрла кĕнекесем çырма кирли çинчен калать, хайлавсен чĕлхине лайăхлатма чĕнет. Унăн К. Чулкаç, М. Ильпек, Г. Луч тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене тишкерсе çырнă ĕçĕсем пичетленсе тухнă. Л. Агаков ытларах чухне, ачасем валли çырнă хайлавра идеологи витĕмĕ çуккине, вĕсем коммунистла воспитани парас ĕçре мĕн таран пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнине хакласа çырать. Пултарулăха, халăх сăмахлăхне тĕпе хурса çыракан авторсене тиркесе калать.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. С. Шавлин ачасен тата çамрăксен пурнăçне сăнласа кăтартакан хайлавĕсен хайне евĕрлĕхĕ, тĕллевĕсем.
2. С. Шавлин вăрçă вăхăтĕнче çырнă поэмисенчи патриотизм туйăмне аталантарас туртăмсем.
3. Л. Агаковăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă хайлавĕсенчи ача сăнарĕсем.
4. Л. Агаковăн хайлавĕсенчи приключении паллисем.

## 50-70-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта чăваш ача-пăча литератури çĕнĕрен чĕрелсе тăрать, пур енлĕн аталанма тытăнать. Литературăна халиччен усă курман темăсем, сăнарсем, жанрсем, çырас мелсем килеççĕ. Илемлĕ хайлавсене аслă çулсенчи авторсемпе пĕрле тин кăна пултарулăх çулĕ çине тăнă авторсем те хутшăнма тытăнаççĕ, тĕрлĕ профессипе ĕçлекен çынсем алла ручка тытса хăйсен ĕçĕ çинчен

çамрăк ăрăва каласа кăтартаççĕ. Тинех илемлĕ хайлавсене ачасен çитĕнӳ уйрăмлăхне шута илсе çыраси йăлана кĕме тытăнать. Ача-пăча прози çĕнĕ хайлавсемпе пуянланать: В. Элпин «Аппапа пĕрле», «Тус пулар» калавĕсем, Юхма Мишшин «Çăлтăрсем чĕнеççĕ», «Шур акăш тĕкĕ», «Ватă хурама вăрттăнлăхĕ», Е. Лисинан «Хупах хăлха Илюк», «Çĕнял ачисем» повеçĕсем, Г.Н. Волковăн калавĕсемпе юмахĕсем, В. Енĕшĕн, Г. Мальцевăн, З. Нестерован, Г. Харлампьев тата ыттисен калавĕсем. Поэзи анинче Г. Ефимов, Р. Сарпи, Ю. Сементер, П. Афанасьев, П. Эйзин, В. Тимаков, Г. Юмарт, В. Ахун тата ытти сăвăçсем тăрăшаççĕ. Çамрăксен тата пукане театрĕсен сценисем çинче чăваш драматургĕсем хайланă пьесăсене выляма тытăнаççĕ. Р. Сарпи, М. Юхма, П. Львов, Е. Никитин кĕçĕн çулхисем валли çыраççĕ пулсан, В. Родионов, Н. Айзман, Н. Терентьев аслă çулхи ачасен тата çамрăксен проблемисене çутатса пама тăшнă. Вăрçă хыççăнхи литературăра ачасем юхăннă хуçалăха ура çине тăратма хутшăнни тема аталанать. Çыравçăсем вăрçă хыççăнхи ĕç, çемье, шкул пурнăçĕ çинчен çыраççĕ.

XX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчи ача-пăча литературин аталанăвне каллех партипе правительство йĕркелесе пыма тытăнать. Çавăнпа та хайлаври конфликт вырăнне ахаль ăнланусăрлăхсем (недоразумени) тухаççĕ. Моральпе этика проблемисене критика кирлĕ мар тесе йышăнать. Ун шучĕпе, идеологи, «коммунистла мораль» проблемине çеç хускатма юранă. Çавăнпа та XX ĕмĕрĕн 40-50-мĕш çулсенчи литературăра чăн пурнăçран аякра тăракан, пĕр евĕрлĕ, асра юлман кĕнекесем чылай. Коммунистла воспитани парас тесе литература ĕçне вăрçă тата ĕç паттăрĕсене явăçтарма тытăнаççĕ. Пурнăçа тĕрлĕ енлĕ сăнласа кăтартакан пысăк жанрлă хайлавсем çырма палăртаççĕ.

Литературăра пионерсен шкулти, килти, канури кулленхи пурнăçне сăнласси йăлана кĕрет. А. Медведев А. Гайдар хайлавĕсемпе хавхаланса «Пирĕн отряд» повесть çырать. Вăл пархатарлă геройсене пархатарсăррисемпе хирĕçлесе кăтартать. А. Александров «Пирĕн лагерь» повеçре ачасем çĕр-шывшăн кирлĕ, ырă пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тăвассишĕн тăрăшнине кăтартать. В. Игнатьев «Пĕчĕк çул-çӳревçĕ» кĕнекинче Шупашкар, тăван çĕр-шыв çинчен хăй евĕрлехне тĕплĕн сăнласа каласа кăтартать. В. Эльби «Аппапа пĕрле» калавĕнче ачасем аслисемпе тан

пӗрлехи ӗçе хутшăннине сăнлать. С. Аслан «Илемпи» кӗнекинче ачасем мăн çул тунă çӗре хутшăнни çинчен каласа кăтартать. Совет çӗр-шывӗнчи ачашăн пысăк ӗç тăвасси тупăш шыранипе çыхăнман, вăл чун-чӗре хушнипе, çынсене ырă тăвас тесе ӗçлет, тесе палăртать калавра автор.

Асăннă тапхăрта литература юмахӗ жанр та хăйӗн тивӗçлӗ вырăнне йышăнма пултарать. Г. Волков, Я. Ухсай, Г. Орлов, М. Юхма, Е. Лисина тата ытти авторсем ятараса юмахсем çырма тытăнаççӗ. Вӗсем халăх сăмахлăхӗн традицийӗсене усă кураççӗ, халăх историне тата аваллăхне çырса кăтартаççӗ. Юмах жанрӗ урлă наукăлла пӗлӳ парасси йăлана кӗрет. Çыравçăсем чӗр чун, ӳсен-тăран тӗнчи, микробсемпе атомсем çинчен юмахласа каласа кăтартаççӗ. Хайлавăн сюжечӗ аталаннă май пӗлӳ, воспитани парасси, тăван çӗр-шыва юратма вӗрентесси тӗллевсем пурнăçланса пыраççӗ.

Вăрçă хыççăнхи ача-пăча литературинче паллă çынсен биографине çырса кăтартас традици малалла аталанать. Тихăн Петӗркки «Кушкă ачи» повеçре И.Я. Яковлевăн ачалăхне тӗплӗн те ӗнентерӳллӗн сăнласа кăтартать. К. Петров «Тайăр» роман-хроникăра чăвашсен пирвайхи поэт-революционерӗн аталану çул-йӗрне ӳкерет. Хайлава çырнă чухне документсемпе, аса илӳсемпе усă курать. В. Бурнаевскишӗн граждан вăрçи паттăрӗн В.И. Чапаевăн пурнăçӗпе ӗçӗсене сăнласа кăтартасси характерлă: «Хӗрлӗ çăлтăр», «Чапаев летчикӗсем», «Чапаев тăванӗсем», «Çунатлă эскадрон». Унсăр пуçне, ку тапхăрта вăрçă вăхăтӗнчи ӗçсене аслисем каласа панă тăрăх е аслăрах çыравçăсен опытне усă курса çырасси те йӗркеленет. И. Лисаев «Вунпиллӗкре эпӗ комбат» хайлавра вăрçă вăхăтӗнче чăн пулнă собитисене сăнласа кăтартать. Отпуска таврăннă салтак амăшӗсӗр тăрса юлнă ывăлне çара илсе каять. Лешӗ вун пиллӗкрех тăшманпа кӗрешсе паттăра тухать. В. Алентей «Хӗрлӗ кӗпе» повеçре партизан отрядне ертсе пыракан чăваш каччин Игнпт Парамоновпа çамрăк паттăрсен Гарăн, Борисăн, Игарӗн сăнарӗсене ӗнентерӳллӗ кăтартма пултарать. В. Енӗшӗн «Вучах çути» хайлавӗнчи ӗçсем ӗçсем вăрçа вăхăтӗнчи чăваш ялӗнче пулса иртеççӗ. Çыравçа ача куçӗпе ял çыннисен йывăр пурнăçне, ӗçӗ-хӗлне сăнлать. Йывăр вăхăтра пӗр пулни хурлăха чăтса ирттерме пулăшнине палăртать. В. Синичкин çырнă

«Салтак тутăрĕ» калавсен пуххинче вăрçă вăхăтĕнчи ачасен сăнарĕсене ӳкерет. Вĕсем çамрăк пулнине пăхмасăр мĕн пур йывăрлăха чăтса ирттереççĕ, çентерĕве çывхартма пулăшаççĕ.

XX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчи ача-пăча прозинче сарăлнă тĕпрех туртăмсем: ачан кулленхи пурнăçне сăнласа кăтартасси, истори событийĕсене аса илесси, фольклор традицийĕсене усă курасси. Çыравçăсем ачан кулленхи пурнăçне пур енлĕн сăнлаççĕ. Ачасемпе пулса иртнĕ шкулти, килти ĕç-пуçсене, юлташĕсемпе тата аслисемпе еплерех хутшăнни çинчен çырса кăтартаççĕ. Хайлавсенче çын кăмăлĕнчи начар енсенчен тăрăхлас, ыррине тĕслĕх вырăнне кăтартас, çут çанталăка упрама вĕрентес туртăмсем палăраççĕ. А. Галкин хăйĕн «Арифметика мыскари», «Шкул чечекĕ» калавĕсенче ĕçе ырана хăварма юратакан, хăйсемшĕн çеç тăрăшакан ачасенчен тăрăхласа çырать. Герой çапларах ача пулнине, апла тума юраманнине чăн малтан хăй ăнланса илет, юлташĕсем те вăл мĕнлерех ача пулнине кураççĕ. А. Юрт аслисемпе ачасен хушшинчи хутшăнăва сăнлама кăмăллать. «Пĕкĕ» калавра ача суйма юраманнине ăнланса илет. Пĕрре пурнăçра çак саманта чăтса ирттернĕ хыççăн вăл тек ун евĕр утăм тăвас çукки куç кĕрет. Асăннă калавсене пĕрремĕш сăпатран йĕркеленĕ. Ача хăй чăтса ирттернĕ самант çинчен каласа кăтартать. Унăн чун уççийĕ вулаканшăн та тĕслĕх пулса тăрать.

Ачасем мирлĕ вăхăтра та тĕрлĕ паттăрла ĕçсем тума пултаранине В. Ухли «Станцăра» калавра çырса кăтартать. Вăл хăюллă та харсăр вăтам çулхи ача сăнарĕсене ӳкерет. Ачасем тавар турттаракан пуйăса кирлĕ çулпа ирттерсе яма пултараççĕ, чирлĕ çынна пулăшаççĕ, ватă старике ывăлĕпе тĕл пулма пулăшаççĕ. Автор хальхи пионерсем пур çĕрте те матур пулнине палăртса калама тăрăшни сисĕнет. Çавăн пекех ача сăнарĕ урлă ку вăхăтри ял хуçалăх çитĕнĕвĕсене кăтартса парас туртăм та пур. К. Петров «Лекçей калавĕсенче» ферма хуçалăхĕ еплерех аталанса пынине çырса кăтартать. Унăн та маттур пионер сăнарĕ пур. Ача çулĕпе çамрăк пулин те аслисен ĕçĕ-хĕлĕпе интересленет. Çитĕнсе çитсен вăл çак ĕçе малалла тăсасси куç кĕрет. Хайлавсенче ачана ватă çын иртни пирки каласа кăтартни, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме вĕрентни пур.

Истори темине çутатса паракан хайлавсем ачасем те граждан, Аслă Отечествăлла вăрçăна хутшăннине сăнласа кăтартаççĕ, паттăрсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан хайлавсем те пур. Ю. Петровăн хăйĕн хайлавĕсенче Мересьев паттăрлăхĕ çинчен ачасене каласа кăтартать. В. Бурнаевский «Чапаев ачасем патĕнче» калавĕнче граждан вăрçи вăхăтĕнчи йывăр вăхăтсене çутатать. Чаплă полководеца ачасен пурнăçĕпе кăсăкланакан çын пек кăтартать, çапăçу мĕншĕн пынине ăнлантарать. М. Юхма «Тимук» калавра тăлăха юлнă Тимукăн терт-нуши пирки çырать. Ача хăйне камсем тăлăха хăварнине ăнланать. Вăл аслисемпе тан çапăçăва хутшăнать, вĕсем пекех тăшмана пĕтĕм чунтан кураймасть. Ачан чунĕнче курайманлăх туйăмĕ пысăк пулни ăна тыткăнран тарма пулăшать. Çыравçă граждан вăрçи вăхăтĕнчи йывăрлăхсем ачасене те пырса тивнине кăтартать, çав хушăрах çапăçакан ача сăнарне ытлашши илемлетсе çырать. Хайлавра çапăçу сценисем, класс кĕрешĕвне палăртасси, ача тарăхăвне кăтартасси пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Ку тапхăрта приключени жанрĕ уйрăмах вăй илсе аталанать, унăн çĕнĕ тĕсĕсем çуралаççĕ: детектив, çул-çурев, çар ĕçĕ çинчен калаканни, политикăлла приключени, шпионсен ĕçĕсене сăнлаканнисем тата ыттисем те. Чăваш приключенилле повеçĕн малтанхи тĕслĕхĕсем 30-40-мĕш çулсенче кун çути кураççĕ. Л. Агаковăн «Пĕрре çуркунне» (1939), «Партизан Мурат» (1943), «Ылтăн вăчăра» (1948) тата М. Трубинан «Мучар» повестьне вĕсен шутне кĕртсе юрать. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта повеçсемсĕр пуçне ачасем валли приключенилле романсем те çырăнаççĕ: М. Кипекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» роман-дилоги, В. Игнатьевпа А. Савельев-Сас «Шурăмпуç умĕн» романта çĕр-шыва хӳтĕлесси проблемăна хускатаççĕ, И. Вутлан «Ют çыран хĕрринче» романта ют çĕр-шывсене интернационалла пулăшу парас проблемăна хăйне евĕрлĕ çутатса парать.

Чăваш литературинче приключенилле повесть жанрĕ ытларах аталаннă. Унăн хăйне тивĕçлĕ тематика, сăнарлăх пур. В.А. Абрамов тĕпчевçĕ приключенилле повеçсене çак ушкăнсене уйăрма сĕнет: 1) ачасемпе çамрăксем валли çырнă детективлă приключенилле повесть. Вĕсен тĕп сăнарĕсем – ачасем (Л. Агаков, Г. Краснов, Р. Ярандай, В. Енĕш хайлавĕсем);

вăрçăпа приключенилле, детективлă повеçсем (М. Кипек, Г. Краснов, С. Аслан); милиципе следстви ĕçĕсем пирки (Л. Агаков, Г. Краснов, Г. Кабаков), политикăлла тата шпион ĕçĕсем çинчен (А. Григорьев, О. Горчаков, И. Вутлан, А. Савельев-Сас), моральпе психологи детективĕсем (Л. Маяксем, В. Петров, Р. Ярандай), историлле приключенилле повеçсем (Юхма Мишши) [1].

Л. Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă» повеçĕ ачасене халаллانă малтанхи детективлă повесть шутланать. Çыравçă хальхи çамрăксен кăткăс пурнăçне сăнласа кăтартать. Моральпе дидактика ыйтăвĕсене хускатать. Г. Красновăн пултарулăхĕ приключенилле повеçсен ярăмне çырас енĕпе уйрăлса тăрать. Унăн пĕрремĕш трилогине «Хуçăлнă чĕлĕм», «Матрос картусĕ», «Тĕкĕр витĕр» хайлавсем кĕреççĕ. Йĕрĕ те чĕрĕ ачасем милици сотрудникĕсемпе пĕр вăхăтра уксах лесникăн вăрттăнлăхĕсене шĕкĕлчеççĕ. Хайлаври чĕлĕм сăнарĕ, унпа çыхăннă халап кмпозици йĕркелес çĕрте пĕлтерĕшлĕ. Калу виçĕ хăйне уйрăм сийрен тытăнса тăрать: усал вăрă-хурахсем, ачасем, милиционерсем. Сăнарсем пĕр-пĕрне хирĕçлесе тăраççĕ. Трилогин иккĕмĕш тата виççĕмĕш пайĕсенчи сюжет аталанăвĕ те çак нумай пĕлме, курма тăрăшакан ачасен пăтăрмахла ĕçĕсемпе çыхăннă.

С. Асланпа А. Григорьев çырнă «Вăрман кайăкĕсем» повеçĕнче вăрçă тематики тĕпре. Кунта ĕçсем Аслă Отечественлла вăрçă вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Сăмах чуралăха илсе кайма хатĕрленĕ ачасене çăлса хăварни пирки пырать.

«СНП хыпар памарĕ» повеçре Г. Краснов разведка шкулĕн йăлисене, çак ĕçпе ĕçлекен çынсен ĕçĕ-хĕлне ĕнентерӳллĕн çырса кăтартнă. Ĕçленĕ май автор тĕрлĕ архив докуменчĕсемпе паллашнă, вырăс литературин тĕслĕхĕсенчен вĕренсе пынă. Социаллă конфликтпа пĕрлех сăнарсен психологилле хирĕçтăрăвне уçса пама пултарнă.

Милици ĕçĕпе политикăлла повеçсем çырасси чылай чухне авторсем çак ĕçпе ĕçленинчен килнĕ. Р. Ярандай «Йĕрсем çухалмаççĕ» повеçне милици органĕсенче ĕçленĕ май хайлать. Вăл тĕрĕслĕх çиеле тухатех, текен шухăша тĕпе хурать. И. Вутланăн «Асамат», «Пĕр çул кăна», «Кĕтмен утăм» повеçсенче те документаллăхпа автобиографи саманчĕсем

палăраççĕ. Хайлавсенче халăхсем хушшинчи туслăх теми тĕпре. Çыравçă хăйĕн сăнарĕсене социаллă тата моральпе психологи йывăрлăхĕсем витĕр кăларса тĕрĕслет. Тухăç çыннисен сăнпитне ĕнентерӳллĕрех тăвас тесе автор хайлава ют чĕлхери сăмахсене, çут çанталăк ӳкерчĕкĕсене, хуласемпе ял таврашĕсене сăнарлать. И. Вутлан совет инженерĕсем Египедра индустрине аталантарас тĕлĕшпе тăрăшнине сăнласа кăтартать. Капитализмла çĕр-шывсем çак гуманитарилле пулăшăва сивлеççĕ, хăйсем тухăç çĕрĕсене чуралăха илесшĕн.

Фантастика жанрĕн аталанăвĕ те XX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсемпе çыхăннă. Çыравçасем çĕнĕ жанрпа хайлавсем çырнă чухне тăван фольклор пуянлăхне усă кураççĕ тата вырăс, тĕнче литературин паха тĕслĕхĕсенчен вĕренсе пыраççĕ. Фантастикăлла литературăра пурнăç чăнлăхне сăнланипе пĕрлех, пулмасла ĕçсем çинчен ĕмĕтленнине, ăслăлăхри ăнлантарма çук вăрттăнлăхсене сӳтсе явни, этемлĕхĕн пуласлăхне ӳкерсе кăтартни тĕпре. Фантастикăлла хайлавра пуласлăха, иртнине е авалăха сăнлани пулма пултарать. Литература тĕсĕн хăйне тивĕçлĕ жанрĕсем пур. Ăслăлăх фантастики çыравçăн пĕлӳ шайне кура ăслăлăхпа техника аталанăвĕн, цивилизаци çитĕнĕвĕсен кăткăс задачисем, асамлă тĕнче çинчен хăй шухăшне калама ыйтать. Ку жанăра В.А. Абрамов тĕпчевçĕ тематика тĕлĕшĕнчен çак ушкăнсем çине пайлама сĕнет: космос, истори, фантастика, приключени.

Чăваш литературинче çивĕч сюжетлă, событисемпе пуян, романтикăлла тата героикăлла сăнарсемлĕ, авантюрăлăхпа уйрăлса тăракан фантастикăлла повеçсем Г. Ефремов, Г. Краснов, Тихăн Петĕркки, Н. Максимов, В. Енĕш, М. Сунтал, И. Другин çыраççĕ. 90-мĕш çулсенче литературăна килнĕ В. Степанов, Н. Петровская авторсем хăйсен хайлавĕсенче мистика паллисене ытларах усă кураççĕ. Фантастика жанрне пуçарса яраканĕ Г. Ефремов пулнă. Ăна ытларах ăслăлăхри, техника аталанăвĕчни çитĕнӳсем çинчен çырса парасси кăсăклантарать. Г. Краснов «Асамлă çăлкуç» (1966) повеçĕнче Шупашкар хулин пуласлăхне ӳкерет, «Инçет сасăсем» (1967) хайлавра вара космос теми тĕпре. Çыравçă чылай хайлавĕнче ăслăлăхпа пĕлӳ информацине усă курать. Автор сюжетра вăхăт тăрăх çул çӳренине

сăнлама юратни сисĕнет. Г. Краснов пултарулăхĕнче космос теми аталанасси XX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче тĕнче уçлăхне чăваш çынни çĕкленме пултарнипе те çыхăннă. Çак темăна вăл «Тĕкĕр витĕр», «Шыв çухалнă каç», «Кăвак пайăрка», «Урапа çинчен ӳксен» хайлавĕсенче хускатать.

Н. Максимовăн «Вĕççĕр анлăхри пĕчĕк пăнчă», «Пĕррехинче, XXIV-мĕш ĕмĕрте» повеçесенче ют планетăсем çине çул çӳреве кайса килнине сăнласа кăтартать. Геройсем çĕнĕ цивилизацисем шыраççĕ, вĕсенче сиксе тухнă конфликтсене татса параççĕ. Автор çынсен пурнăçĕнчи ăслăлăх, обществăри роботсен пĕлтерĕшĕ çинчен шухăшлать.

Чăваш фантастикинче аваллăха, ытти çĕр-шывсене кайса килнине сăнласси те аталаннă. Тихăн Петĕркки «Атлант» повеçĕнче сĕм аваллăхри пурнăçа ӳкерсе кăтартать. Çут çанталăкри катастрофăна пула шыв айне пулнă Атлантида утравĕ çинчен çĕнĕ, хăйне евĕр гипотеза шутласа кăларать. Хайлаври геройсем ют планетăри çынсемпе кĕрешеççĕ. Вĕсен ячĕсем чăваш ячĕсене аса илтереççĕ. Калăва ĕнентерӳллĕрех тума çыравçă ятарлă лексикăна, автобиографи паллисене усă курать.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Ача-пăча литературинче приключени жанрĕ аталанма пуçланин сăлтавĕсем.
2. Фантастика фанрĕн хăйне евĕрлĕхĕ. Чăваш çыравçисем хайланă фантастикăлла повĕçĕсен уйрăмлăхĕсем.
3. 50-80-мĕш çулсенчи ача-пăча поэзийĕнчи тĕпрех туртăмсем. Çĕнĕ авторсен хайлавĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.
4. Ача-пăча литературинче ĕçе юратма вĕрентесси тема сарăлнин сăлтавĕсем.
5. Драматургире ачасен пурнăçне тата çамрăксен проблемисене кăтартса пама тăрăшни.

# 50-80-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ÇЫРАВÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

***Егор Афанасьев*** (1922 – 1980) кĕçĕн çулхи ачасем валли сăвăсем çырать, вĕсен телейлĕ те хаваслă пурнăçне сăнлать. Сăвăсенче пурнăçа сăнласа тĕпчеме, ĕçе юратма, пĕр-пĕринпе туслă пулма, йывăр чухне пулăшма вĕрентсе калать. Сăвăçăн «Кентти сăвви-юррисем» (1959), «Ши-шăнкăрч» (1964), «Пирĕн ял ачисем» (1965), «Кентти ӳсет» (1966), «Кентти – космонавт» (1967) кĕнекисем пичетленсе тухнă. Вĕсен тĕп сăнарĕ – Кентти ятлă ача. Ача ӳснĕ май унăн вăййи-кулли, тавра курăмĕ ӳссе пыраççĕ, ĕмĕчĕсем те улшăнаççĕ. Чăваш çынни тĕнче уçлăхне хăпарнă май, Кентти те космонавт пулма ĕмĕтленме тытăнать. Асăннă кĕнекесене «Детская литература» издательствăра вырăсла пичетлесе кăлараççĕ. Кунсăр пуçне, Е. Афанасьев ачасем валли килти пахча-çимĕçсем, выльăх-чĕрлĕх, вăрманти тисекер чĕр чунсем çинчен калса кăтартакан сăвăлла юмахсем те çырнă. Вĕсем «Сухан» (1969) кĕнекере пичетленсе тухнă. Çыравçан «Портрет» пьеси 1970 мĕш çулта «Пионер сасси» хаçатра кун çути курать.

***Александр Галкин*** (1928 – 2002) чăваш ача пăча литературинче сăвăлла, прозăлла хайлавсем çырнипе палăрса юлнă автор. Вăл В. Бианкин, М. Пришвинăн, С. Баруздинăн, М. Прилежаевăн хайлавĕсене куçарса ачасем вулакан кĕнекесен йышне пуянлатнă. 1958 çулта унăн «Пĕчĕк ĕçченсем» пĕрремĕш сăвă кĕнеки пичетленсе тухать. Сăвăсенче ĕçе, çут çанталăка юратма вĕрентесси тĕпре. Сăвă формине, илемлĕх мелĕсене вăл халăх сăмахлăхĕнчен илет, тупмалли юмах, ваттисен сăмахĕ ытти жанрсене евĕрлесе çырать. Çакă ачана тавралăха сăнама, пĕр пулăм çинчен тĕрлĕрен çавăртарса калма май пуррине уçса парать. А. Галкинăн сăввисенче чĕр чун сăнарĕсем урлă воспитани, пĕлӳ парас туртăм пур. Унăн туслă пурăнма вĕрентекен «Икĕ автан» сăвви ача-пăча литературинче классикăна та тухнă ĕнтĕ.

1975 çулта тухнă «Хаваслă ачасем» кĕнекене ачасем валли çырнă калавсем кĕреççĕ. Автор пĕчĕк калавсенче пысăк сюжет аталантарма пултарать, лару-тăрăвне пурнăçри пулăмсемпе çыхăнтарать, ачасен характерне уçăмлăн кăтартса пама пулта-

рать. Калавсенчи сăнарĕсем – лара-тăра пĕлмен, мыскараçă ачасем. Вĕсем хăйсене шкулта та, ĕçре те, килте те лăпкă тытмаççĕ, темĕн те пĕр шухăшласа кăлараççĕ. Тĕрлĕ инкек умне килсе туххсан, вĕсенчен хăтăлма тесе тăрăшаççĕ, кулăшла лару-тăрăва çакланаççĕ. Ачасен тавçăрулăхĕ аслисене улталасси патне те илсе çитме пултарать, анчах ултавăн ури кĕске пулни куç кĕретех. Ачасем çитĕнсе çитсен халăхшăн усăллă пулма ĕмĕтленеççĕ, вĕсем ĕçре те вĕренӳре те хастар.

А. Галкин «Çунатлă Улăп», «Аптраман Роман» кĕнекесене те ачасене халаллать. «Çунатлă Улăп» кĕнекере пичетлесе кăларнă çут çанталăк пурнăçне сăнлакан юмахĕсем сăмахлăхри халапсене çывăх пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Çыравçă хăйĕн юмахĕсене кĕçĕн çулхи ачасене халаллать. Вăл юмах çырнă чухне йывăç-курăк, чĕрчунсем пулса кайни е вĕсен уйрăм паллисем епле пуçланни çинчен калакан мифсемпе легендăсен традицийĕсене усă курать, хăйĕнчен хушса çырать. Халăхра çӳрекен ăнлантарăва шута илсе хăйне евĕр юмах шутласа кăларать, ачан тавçăрулăхĕпе шухăшлавне аталантарма тăрăшать.

«Çунатлă Улăп» кĕнекене «Çунатлă улăп», «Нюх-нюх сăмси мĕншĕн пуклак?», «Талпас карсак», «Шапасем мĕншĕн пакăрти», «Наян мулкач», «Куянсен мĕншен хӳри кĕске» юмахсем кĕреççĕ. Хайлавсенче чĕр чунсем тĕп сăнар пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен тыткаларăшĕпе туслă пурăнма кирлине, йывăрлăхсем умĕнче алă усмалла маррине, юлташсем умĕнче сăмахпа мар, ĕçпе маттур пулма кирлине, юлташа йывăрлăхра пăрахмалла маррине вĕрентсе калаççĕ. «Çунатлă Улăп» юмахра, тĕслĕхрен, тĕнчене пăр хупланă тапхăра ытарлăн сăнласа кăтартнă. Йывăç-курăксем шăнса лараççĕ, кайăк-кĕшĕксем сивĕпе аптăраççĕ. Шăнса вилме пуçланă кайăксене ăмăрткайăк кăнтăралла вĕçме кирли çинчен ăнлантарать. «Наян мулкач» юмахра килсĕр тăрса юлнă упа хĕле хирĕç мулкачсемпе пĕрле çурт тăвать, сивĕ вăхăта чипер ирттерсе ярать. Унăн пӳртне çавăрса илнĕ наян мулкач вара çурхи шывпа кăшт çеç юхса каймасть. Çак ĕç-пуç хыççăн вăл йывăр вăхатра çеç мар, ырлăхра та юлташсемпе пĕрле пулма кирлине ăнланса илет. А. Галкин чĕр чунсен тыткаларăшне, савăнăçĕпе хăранă саманчĕсене чĕррĕн çырса кăтартать. Тавралăха, вăрман ӳкерчĕкĕсене тĕплĕн сăнлать.

«Читлĕхри хăнасем» (1959), «Пĕчĕк ĕçченсем» (1959), «Хĕвел тухсан» (1975) кĕнекесенче пичетленнĕ сăвăсенче çут çанталăк теми тĕпре. Автор тĕрлĕ чĕр чунсен пурнăç йĕркипе паллаштарать: зоопраркра, чăваш вăрманĕсенче, килте пурнаканнисем. Ачасемпе чĕр чунсем хушшинче пулса иртнĕ ырă хутшăнусене сăнлать.

«Юптарса – пăрăç хыптарса» кĕнекене çыравçăн юптарĕвĕсемпе шӳчĕсем кĕнĕ. Хайлавсенче тĕрĕсмарлăхран, çынсен киревсĕр енĕсенчен тăрăхласси, тăрă шыв çине кăларасси, тип мунча кĕртесси пур. Час-часах ырă – сăнар ырă ĕç, усал сăнар – усал ĕç йышши танлаштару маслечĕпе усă курать, сăнарсене асра юлмалла калăплать.

***Уйăп Мишшин*** (1911 – 1970) пултарулăхĕ 30-мĕш çулсенче аталанма пуçлать. Ку вăхăтра унăн сăввисенче çамрăклăх теми тĕпре пулнă («Лирика» кĕнеке). Сăвăсенчи лирика геройĕ – ку чухнехи çамрăк çын, коммунизм тăвассишĕн хастар кĕрешет. Вăл çамрăк пулин те халăхпа пĕр, вĕресе тăракан пурнăçран аякра тăмасть. Унăн пурнăçĕнчи пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ, юратăвĕ-курайманлăхĕ, хуйхи-савăнăçĕ – йăлтах Тăван çĕр-шыв пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Сăвăсенче документаллăх, конкретлă çынсене тата вăхăт паллисене тĕплĕ сăнласси пур. Сăвăç ытларах хăй вăхăтĕнчи комсомол ӳстернĕ маттур чăваш çамрăкĕсене кăтартать. Хастар çамрăксем хăйсен шăписене пилĕкçуллăх сторйкисемпе уйрăлми çыхăнтарнă, вĕсем мухтавлă ĕçсемпе чапа тухнă: Магниттура, Çĕпĕрте, Амур çинче, Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Канашра, Куславкара çĕнĕ заводсем лартас çĕрте хутшăнаççĕ, Аслă Отечествăлла вăрçăра хастар çапăçаççĕ. Сăввисем: «Манми çамрăклăх», «Пирĕн кун-çул», «Пурнăç таппи», «Çурхи ярăмран».

М. Уйăп сăвăсем çырнисĕр пуçне «Ачалăх кунĕсем» повеçĕпе, «Пирĕн юрă», «Телейлĕ ачасем» проза кĕнекисемпе паллă. Унăн хайлавĕсенче патша саманинчи пурнăçа аса илсе çырасси характерлă. Çыравçă иртнĕ тата хальхи пурнăçри ачасен кунçулне танлаштарать. Ют çĕр-шыври ачасен пурнăçне сăнласа кăтартасси те пур.

Уйăп Мишшин «Ачалăх кунĕсем» повеçĕ чăваш ача-пăча литературинчи автобиографилле жанрсен тăсăмĕ пулать. Хайлав

пуçламăшĕнче тĕп сăнарăн амăшĕ унăн ачалăхĕ çинчен аса илет, вăл ăçта, хăçан, мĕнле çуралнине каласа парать. Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем те чылай повеçре: рекрута каякансем салтак юрри юрлани, ашшĕ-амăшĕн kulленхи юррисем. Лаçук мучи те ачасене час-часах юмах юптарса кăтартать. Вăрманти шуйттансемпе вăкăрсем çинчен каласа парать. Юлашкинчен «Юмах юплĕ, хӳри кукăр, итлекенĕ суккăр», – тесе хушса калать. Амăшĕн калаçăвĕ ваттисен сăмахĕсемпе пуян. Чирленĕ Мишшана кукамăшĕ вĕрӳ-суру чĕлхи каласа сыватать. Хайлавра ачасен вăййисене сăнлани уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Халăхăн kulленхи йăлине, ĕçĕ-хĕлне сăнлать çыравçă, ача вĕсене хутшăннине кăтартать. Çĕр сухалама вĕренни, пĕрремĕш çăпата тунине тата ытти ĕçсене сăнланă. Шурă е хура тăла сырни çинчен калани урлă ача тĕрлĕ вырăнти чăвашсен тум-тирĕ улшăнса тăнине ăнласа илет. Ашшĕ ывăлне пĕрле сунара илсе çӳрет. Ашшĕ-амăшĕ ачана тĕрлĕ ĕçе хутшăнтарни, киревсĕр ĕçе тума вăхăтра чарни (пĕррехинче вĕсем юлташĕпе чĕлĕм туртса пăхаççĕ), пултарулăха аталантарма майсем тупса пани – пĕтĕмпех ачан тĕнчекурăмĕн, пултарулăхĕн аталанăвне витĕм кӳреççĕ. Мишшана ашшĕ купăс илсе парать те мунчана кĕрсе ларса калама вĕренме хушать. Кунта, иккен, шедеврсем çуралаççĕ. (Мранька хăйĕн романне мунчара ларса çырнă теççĕ). Ачалăх çулĕсенче Мишша Н. Шелепипе тĕл пулни те унăн пуласлăхне витĕм кӳрет. Ватă сăвăç шкула килсе хăйĕн сăввисемпе юмахĕсене вуласа кăтартать.

Уйăп Мишшин «Ачалăх кунĕсем» повеçĕнчи пурнăçра пулса иртнĕ истори событийĕсене ача куçĕпе сăнласа кăтартасси Хумма Çеменĕн, Д. Исаев-Мĕтрин, М. Трубинан хайлавĕсенчи традицийсене çывăх. Ял халăхĕ ату-пушмак çĕлес енĕпе ăста пулнăран станвуй салтакри арçынсем валли атăсем хатĕрлет, иккĕмĕш Микулай патшана престолтан сирпĕтеççĕ, çĕнĕ самана пуçланать, совет влаçне йĕркелеççĕ, хресченсене çĕр валеçеççĕ, халăхăн репертуарĕ Интернационал юрăпа пуянланать, çемье тĕп килтен уйрăлса тухать, ырă пурнăç шыраса Çĕпĕре куçса кайма шутлать. Уйрăмах выçлăх çулĕсен вăхăтĕнче йывăр килет.

Пулас поэтăн пултарулăх аталанăвне, воспитанине витĕм кӳнĕ пулăмсем çинче уйрăмах чарăнса тăнă. Ачан пултарулăхне,

тавракурӑмне аталантарас ӗҫре пӗлтерӗшлӗ ҫынсем, ӗҫсем кирлине, вӑхӑтпа самана витӗмӗ палӑрнине асӑрхать автор. Ҫыравҫӑ ачалӑхри ырӑ, хаклӑ, кулӑшла самантсене те аса илет.

***Герасим Харлампьев*** (1913 – 1994) ачасем валли ҫут ҫанталӑк ҫинчен, тӑван тавралӑха сӑнласа кӑтартакан хайлавсем ҫырать. Герасим Дмитриевич Пилеш (Харлампьев) Элӗк районӗнче ҫуралса ӳснӗ. Вӑл пултаруллӑ ҫыравҫӑ, драматург, поэт, скульптор, график пулнӑ. Ачасене валли ҫырнӑ калавӗсенче Г. Харлампьев пирӗн ума ӑста художник пек тухса тӑрать. Вӑл чӑваш енри ҫут ҫанталӑка, вӑрманӗсемпе уйхирӗсене, кӳллисемпе юхан-шывӗсене ӑста сӑнласа кӑтартать. Ачасене те ҫак илемпе киленме, ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене сӑнама вӗрентет. Хӑйӗн кӗнекисене вӑл кӗҫӗн тата вӑтам ҫулхи ачасене халалланӑ, савӑнпа та хайлавӗсем ытларах чух калӑпӑшӗпе пысӑках мар. Калаври текст валли иллюстрацийӗсене те хӑех хатӗрлеме тӑрӑшнӑ ҫыравҫӑ. Унӑн «Тӑрна ташши» калавсен пуххийӗ пысӑк хака тивӗҫет, ӑна Мускаври тата Украинӑри ачапӑча издательствисенче куҫарса пичетлесе кӑлараҫҫӗ.

Унӑн «Илемлӗ ир», «Тӑрнасен ташши», «Ытарайми ҫӗр-шывра», «Вӑрман юрри» кӗнекесем, «Мулкач йӗрӗпе», «Палланӑ сӑнсем», «Пакша кучченеҫӗ», «Чакӑр куҫ», «Кайӑксен савӑнӑҫӗ», «Карӑш», «Ҫырла пиҫсен», «Шӑхлич», «Ашкӑнчӑкӗ», «Тӑрна ташши», «Пӗчӗкҫеҫ юмахсем», «Палюк мучи кӗнеки», «Утарта», «Ытарайми ҫӗр-шывра» калавӗсем пичетленсе тухнӑ. Ҫыравҫӑшӑн ҫут ҫанталӑкра пулса иртекен ӗҫсем ҫинчен сӑнавҫӑ ячӗпе каласа парасси характерлӑ. Унӑн хайлавӗсенчи сӑнар ытларах чухне сӑнама, пурне те пӗлме тӑрӑшакан ача, е пур ҫӗрте те йӗрке тӑвассишӗн тӑрӑшакан ҫитӗнсе ҫитнӗ ҫын. Хӑй мӗн курни ҫинчен каласа панӑ май вӑл вулакана тискер чӗр чунӑн е кайӑкӑн пурнӑҫ йӗркипе палаштарать, унӑн тӗпчевҫӗ туйӑмне вӑратать. Хӑй кайӑккӗшӗке сӑнани, вӗсене йывӑр вӑхӑтра пулӑшни ҫинчен каласа ачасене те ҫапла тума вӗрентет.  Хайлава сӑнавҫӑ ячӗпе каласа парас ӑсталӑх Г. Харлампьевӑн сӑрӑ ӑсти пулнинчен те килет пулӗ.

Пурне те асӑрхама, пӗлме тӑрӑшнине пулах унӑн калавӗсенчи сӑнар тилӗсем хӗллехи вӑхӑтра шӑши тытнине, чаксем кайран валли апат хатӗрлесе хума пултарнине, ула таккасен пурнӑҫ йӗркине, тӑрнасен ҫурхи ташшине, пакша хӗл каҫма

хатĕрлекен тупрана тата ыттине те курма пултарать. Кашни хайлавĕнче уйрăм чĕр чунпа е кайăк-кĕшĕкпе пулса иртнĕ тĕл пулу çинчен каласа кăтартнă. Çавăн пекех, калуçă сăнав, тĕпчев ĕçĕнче чăтăмлăх, тăрăшуллăх кирлĕ пулнине палăртать. Вăл хăйĕн ĕçĕсемпе, тыткаларăшĕпе чĕр чунсене чăрмантармасть, сиен кӳмест. Вĕсем çине аякран пăхса киленет, вĕсем çинчен ытларах пĕлме пултарнишĕн савăнать.

Çыравçăн ачасем валли çут çанталăк пурнăçĕ çинчен сăвăласа çырнă хайлавĕсем те пур: «Кучченеç ăçта?», «Йытă», «Зонтик», «Мухтанчăк упа» тата ыттисем те.

«Илемлĕ ир» повеçре революци, граждан вăрçи событийĕсене ачасем хутшăннине сăнлать. Эскетин, пĕчĕклех тăлăха юлнă ача, хăйне ялти пуянсем вĕлерме тăнине пĕлсен ялтан тухса тарать, Чулхулана çитет. Питĕр хулинче рабочисемпе салтаксем вăхăтлăх правительствона сирпĕтсе антарнă çĕре хутшăнать. Хайлавăн виççĕмĕш кĕнекинче Эскетин хăйĕн тăван ялĕнче совет влаçне йĕркелес ĕçре хастар пулнине сăнланă.

***В. Давыдов-Анатри*** (1917 – 2010) ачасем юратнă авторĕсенчен пĕри. Вăл ачасем валли сăвă-юрăсем, юмахсем, калавсем, «Сатин кĕпе» ятлă автобиографилле повесть çырнă. Поэтăн çак кĕнекисем кун çути курнă: «Пĕчĕк туссем», «Ачапăча сăввисем», «Илемпи», «Çурхи кунсем». «Тимушпа унăн тусĕсем». Сăвăсенче кĕçĕн çулхи ачасен савăнăçне, ĕçĕ-хĕлне, вăййи-куллине кăтартса парать. Лирикăлла хайлавĕсен чĕлхи илемлĕ те ансат, кĕвĕллĕ пулнипе уйрăлса тăрать. Вĕсене халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене тĕпе хурса çырнă. Ачасем валли çырнă чыллай сăввине чăваш композиторĕсем юрра хывнă.

Сăвăç хăйĕн пултарулăхĕнче, тĕрлĕ ĕçĕсенче тăван тăрăха юратни курăнать. Çак юрату çинчен вăл çамрăк ăрăва каласа парать. Унăн хайлавĕсенчи сăнарсем пĕчĕк пулин те ĕçчен пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем аслисемпе тан колхоз уй-хирĕнче тăрăшаççĕ: утă пуçтараççĕ, пăру пăхаççĕ. Килти хуçалăха тирпейлеме те пулăшса пыраççĕ.

Чăваш халăхĕн кăмăлĕн ырă енĕсенчен пĕри – ĕçченлĕх шутланать. Ачасене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса пырасси тĕпре шутланать. В.И. Давыдов-Анатрин хайлавĕсенчи сăнарсем те яланах ĕçре: «Тракторпа» сăвăри арçын ача тракторист пуласси

çинчен ĕмĕтленет, вăл çĕр-шывшăн усăллă çын пуласшăн. Тепĕр сăвăри хĕр ача хĕвелпе пĕрле чĕпĕ пăхма тăрать, чăх-чĕп ферминче ырми-канми тăрăшать.

В.И. Давыдова-Анатри хăйĕн сăввисенче пархатарсăр сăнарсене те ӳкерет. Вĕсем тирпейсĕр, кахал. «Павăл вылять футболла» сăвăра ача аслисене пахчара ĕçлеме пулăшас вăхăтра урамра мечĕк хăваласа çӳрет, уроксене вăхăтра хатĕрлемест.

Сăвăç хăйĕн тăрăхне, тăван çĕр-шывне юратни унăн çулталăк вăхăчĕсене сăнласа çырнă сăввисенче те палăрать: «Çуркунне», «Пуш уйăхĕ», «Çулла», «Çумăр хыççăн», «Çумăр», «Çĕнĕ çул», «Тырă-пулă» тата ыттисем те. Çавăн пекех сăвăç чĕрчунсен тĕнчине, пурнăçне ӳкерсе кăтартма юратать: «Пăру», «Пăрчăкан», «Кроликсем», «Кăсăя», «Чĕкеç», «Качака», «Пакша». Сăвăсенче вăйă интонацийĕ илтĕнет. Кашни хайлавĕнчех çут çанталăка упрама чĕнсе калани пур. Автор чĕрĕ чунсем, ӳсен-тăрансем те чĕрĕ пулнине, вĕсем ыратнине туйма, ыррине ăнланма пултарнине ĕненет.

В.И. Давыдов-Анатри ачасем валли сăвăлла юмахсем çырнă: «Тилĕпе йытăсем», «Хӳресĕр упа», «Улăм, хăмпă, çăпата», «Çăткăн кашкăр». Ачасене пуянран чылай тавçăруллă та пултаруллă чухăн («Чухăнпа пуян»), пылак çиме юратнине пула хӳресĕр тăрса юлнă упа («Хӳресĕр упа»), чухăнăн вăрланă хĕрне тупма пулăшнă çын («Чее çын») çинчен калакан юмахĕсем уйрăмах килĕшеççĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне усă курса В.И. Давыдов-Анатри «Чеменпе Мерчен» поэма, Крым халăхĕн халап сюжетне усă курса «Вутăш» юмах çырать. Юмахри ĕç-пуç хура тинĕс хĕрринче çӳллĕ тусем çинче пулса иртет. Арси пике юратман çынпа пĕрле пулас мар тесе тинĕсе сикет, вутăш пулса тăрать. «Чеменпе Мерчен» поэмăри сăнарсем те пурнăç йывăрлăхне пăхмасăр хăйсен юратăвĕшĕн кĕрешеççĕ.

В.И. Давыдов-Анатри ачасем валли прозăлла хайлавсем те çырнă. Унăн «Пиччесем» кĕнекере пиччĕшĕпе шăллĕ çинчен калакан калавсем пичетленнĕ. Вĕсем таса та ырă кăмăллă, ĕçчен, туслăхăн хакне ăнланакан, лара-тăра пĕлмен ачасем. Вĕсемпе кăсăклă, кулăшла тепĕр чух хăрушла ĕçсем пулса иртеççĕ. Пĕртăвансем пĕчĕк пулин те тăван çĕр-шывшăн, халăхшăн усăллă тата таса чунлă çынсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

Асли кӗҫӗннине ырӑпа усала, лайӑххипе япӑххине уйӑрма вӗрентет, уншӑн ырӑ тӗслӗх пулса тӑрать.

***Хветӗр Уярӑн*** (1914 – 2000) ачасем валли ҫут ҫанталӑк пурнӑҫне сӑнласа кӑтартакан «Упа» (1944), «Куҫукпа хураҫка» (1945), «Пулӑҫӑ упа» (1957), «Пирӗн енче» (1952) кӗнекесем пичетленсе тухнӑ. Ҫыравҫӑн ҫут ҫанталӑк пурнӑҫне сӑнласа кӑтартас пултарулӑхӗ нумай енлӗ пулнипе палӑрса тӑрать. Пӗрре вӑл чӗр чунсен тыткаларӑшне тӗплӗн сӑнласа кӑтартать («Пурӑш», «Пулӑҫӑ упа»), тепре этемпе чӗр чун хушшинче пулса иртнӗ ӗҫсем ҫинчен ҫырать («Куҫукпа хураҫка», «Тарӑхнӑ така»). Хутшӑнӑвӗсен кулӑшлисем те, куҫҫуль кӑлараканнисем те пулма пултараҫҫӗ. Чӗр чунсем этем пекех туйма, кулянма пултарнине кӑтартса парать. Тӑван тавралӑхри ҫут ҫанталӑка, улӑх-ҫаранпа вӑрман-катана тӗплӗн ӳкерсе кӑтартать, ку тӑрӑхран илемли, хакли тек пулма пултараймасть тесе ӗнентерет. Пӗтӗмӗшле илсен, ҫыравҫӑ калавӗсенче ҫут ҫанталӑк пурнӑҫӗпе паллаштарнипе пӗр харӑсах пӗлӳ тата воспитани парас тӗллевсем пурнӑҫланаҫҫӗ.

Хв. Уяр «Йытӑ макӑрни» калавра йытӑ пурнӑҫнче пулса иртнӗ хурлӑхлӑ саманта сӑнласа кӑтартать. Калавӑн сюжечӗ ансат, Хураҫка вилнӗ ҫурине шӑтӑк чавса пытарать. Хайлаври калуҫӑ туйӑмлӑ, сисӗмлӗ ҫын пулни курӑнать. Вӑл йытӑн куҫӗнчен тумлакан куҫҫульсене асӑрхать, пусӑрӑнчӑк кӑмӑлне ӑнланать. Хураҫкана ҫурине пытарма тепӗр йытӑ та пулӑшать. Апла пулсан, чӗр чунсем те хуйхи-савӑнӑҫне пӗр-пӗринпе пайлама пултараҫҫӗ. Вӗсем, чӗлхесӗр янавар пек, веҫех кураҫҫӗ, ӑнланаҫҫӗ, анчах калҫма чӗлхи ҫук.

«Пурӑш» калавра Хв. Уяр пурӑшӑн пурнӑҫ йӗркипе паллаштарать. Хайлаври калу ача ҫуркунне вӑрмана ушкӑнпа кайсан, ӑнсӑртран ҫӗр ӑшӗнчен чаваланса тухнӑ суккӑр чӗрчуна тӗл пулни ҫинчен каласа панипе пуҫланать. Киле ҫитсен ӑна ашшӗ ҫак чӗр чун ҫинчен ӑнлантарать. Хӗл каҫиччен выҫса ҫитнӗ чӗр чун этемшӗн те хӑрушӑ пулма пултарать иккен. Малалла ача хӑех ҫак тискер кайӑк ҫинчен информаци шыраса тупать. Вӑл хӗл каҫма епле хатӗрленни, кӑпшанкӑсем ҫисе пурӑнни, миҫе ҫӑвӑр ҫӑвӑрлама пултарни ҫинчен пӗлет. Пӗтӗмӗшле калӑва калуҫӑ ячӗпе йӗркеленӗ. Автор ачасене малтанах ӑнсӑртран пулса тухнӑ тӗл пулу ҫинчен каласа пурӑшӑн

пурнăç йĕркипе кăсăклантарса ярать, кайран шыравмелĕпе тулли хурав патне çитмелли çул-йĕре кăтартать.

Хв. Уярăн çавăн пекех килти чĕр чунсен пурнăçне сăнлакан калавсем те пур. «Йĕкел пулнă çул» хайлавра, тĕслĕхрен, сыснасем çинчен çырса кăтартнă. Вĕсем тĕрлĕ теслĕ, тĕрлĕ ăратлă пулма пултарни, мĕн çисе пурăнни çинчен каланă. «Ытти çынсен сыснисем пăшатан пек шĕп-шĕвĕр сăмсаллă та хĕç пек çивĕч çурăмлă пулатчĕç. Тарма тытăнсан, вĕсене çын мар, йытă та хăваласа çитейместчĕ. Те кĕтӳре палласа илме лайăх пултăр тесе, пирĕн ялта кашни урам хăйне тĕслĕ сысна усратчĕ. Шуркас ула сыснасене юратарах паратчĕ. Тукасра мĕн асатте астăвассах кавак сысна ĕрчететчеç, тет. Анаткас çыннисем темшĕн хура тĕсе ытларах кăмăллана пулнă.

Йĕкел пулнă çулсенче кĕркунне пирĕн ял çыннисем сыснасене ялĕпех Пушпулек вăрманне хăваласа кайса яратчĕç. Çу каçипе курăк çинче çӳренĕ чухнĕ вĕшле сыснасем пĕр-ик уйăх хушшинче вара самаях хитреленсе каятчĕç. Пĕрер уйăхранах, сыснасем çынтан ютшăнма тытанатчĕç. Хĕл лариччен яла хăваласа килесси çинчен ан та шухăшлаччĕ вĕсене. Юр ӳксе йĕкелсене хупласа хурсан тин вара сыснасем хăйсемех, шурă уя суха касси пек хура йĕр хăварса, ялалла кăштăртатса таврăнатчĕç», – тесе çырать Хв. Уяр пĕрре паллана, пурте пĕлекен чĕр чун çинчен. Вĕсем ушкăнпа чухне нимĕнле кашкăр-упаран та хăраманнине, хăйсене хӳтĕлеме пултарнине каласа кăтартать. Унăн сыснисем кашни хăйне характерлă, хăйне евĕр тыткаларăшлă пулса тухни те куçкĕрет.

Самар тăрăхĕнче çуралса ӳснине кура Хв. Уяр хайлавĕсенче ытларах тăван тавралăх çинчен çырать. Унăн çамрăклăхĕ Инçет Хĕвел Тухăçĕнче иртнине кура унти çут çанталăк сăнарĕ те калавĕсемпе повеçĕсене кĕрет. «Ăçта эс, тинĕс?», «Çул кĕнеки», «Тăван çĕр-шыв тăрăх», «Яланах çул çинче» хайлавсенче çĕр-шывăн сăн-сăпачĕпе паллаштарнă, тĕрлĕ çĕрти вăрман, сăрт-ту, уй-хир, вĕсенче пурăнакан чĕр чунсем çинчен каласа кăтартнă. Вĕсене вуланă май ачан тавракурăмĕ ӳсет, вăл тăван çĕр-шывăн çут çанталăк пуянлăхĕпе, хăй евĕрлĕхĕпе паллашать.

***Мария Ухсай*** (1908 – 1969) ача-пăча литературине аталантарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн патшалăх орденне тивĕçет. Çыравçă малтанах 1926 çулта «Канаш» хаçатра пичетленет.

«Хĕрлĕ тутăр» ятлă сăвви айĕнче «Маруç» тесе алă пуснă пулнă. М. Ухсай нумай çул хушши шкулта ĕçлесе пурăннă, çавăнпа та ачасен пурнăçне витĕр курса тăнă, вĕсен ĕмĕт-туйăмĕсене аван пĕлнĕ. Унăн «Хăйă çути», «Типĕ çыран хĕрринче», «Ясмăк пĕрчи», «Улаçка», «Икĕ хĕрача», «Ирхи сывлăм» калавĕсенче тăрăшуллă, тавçăруллă ачасен пурнăçне сăнланă. Çыравçă ĕçе, туслăха, сăпайлăха вĕрентсе калакан ваттисен сăмахĕсен пĕлтерĕшне тӳрре кăларса çырать, çамрăксем самана улшăннă тапхăрта активлă пулнине кăтартать. Унăн хайлавĕсемшĕн ĕç урлă воспитани парасси характерлă, çыннăн сăн сăн-пичĕпе çеç мар, чунĕпе, ăсĕпе, ĕçĕпе те хитре, таса пулмалла тесе калать вăл. «Кăра çилсем» романĕнче ĕмĕр чиккинчи самана улшăнăвне, истори событийĕсене çивĕч ăс-тăнлă, пултаруллă хĕрача куçĕпе сăнласа кăтартнă.

М. Ухсай ача-пăча драматургине аталантарас тĕлĕшпе те ĕçленĕ. Унăн «Çу, çумăр, çу!», «Атăл хĕрринче», «Виçĕ сукмак», «Шăпчăк юрри», «Милиционер», «Андрейка» пьесисенче вĕренӳре те, ĕçре те хастар, кăсăк шухăш-туйăмлă ачасен сăнарĕсене калăпланă. Истори темипе çырнă пьесăсем шутне «Кăра çилсем» роман тăрăх çырнă «Çураçнă хĕр» тата «Çу çумăр, çу!» драмăсене кĕртме пулать. XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи событисене М. Ухсай хăй те активлă хутшăннă. Кулаксене пĕтерес, хресченсен саманине çирĕплетес ĕнĕпе кĕрешнĕ, кайран çавăн çинчен илемлĕ хайлавсенче çырса кăтартнă. «Çу çумăр, çу!» пьесăра 1921 çулхи выçлăх вăхăтĕнче ялти комсомолецсем кулаксене хирĕç паттăрăн кĕрешнине витĕмлĕн сăнлать. Çамрăксем çĕнĕ пурнăç тунине, пысăк ĕмĕтпе çунатланнине кăтартать. Çыравçăн «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă», «Виçĕ сукмак», «Шăпчăк-кĕслеçĕ», «Хĕветĕр тус – яка юс» комедисем те пур. Унсăр пуçне «Шăпчăк-кĕслеçĕ», «Элпике тĕрри» пьесăсене çырнă чухне М. Ухсай халăх сăмахлăхĕнчи халапюмах традицийĕсене усă курать. Шанчăклă юлташсем яланах йывăрлăхра пулăшма хатĕр, ырă усала çĕнтеретех текен шухăшсене палăртать вĕсенче автор. «Элпике тĕрри» пьесăра «Уйăх çинчи хĕр» мотив пуррине палăртмалла. Ăна усă курса каярах Виктор Ходяшев композитор балет çырать.

М. Ухсай пултарулăхĕнче паллă çынсен ачалăхне сăнлас туртăм та палăрать. «Андрейка» пьесăра А. Николаевăн ачалăхне сăнласа кăтартнă. Пĕчĕк Андрейка ача чухне мал ĕмĕтлĕ пулнă, çакă ăна пысăк çитĕнӳсем тума май парать те. Çавăн пекех автор ача пуласлăхне витĕм кӳрекен пĕлтерĕшлĕ самантсем çинче те чарăнса тăрать.

***Александра Лазарева*** (1917 – 1978) Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Тури Томлай ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1933 çулта Анат Кĕнерти колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă, çав çулах Балашов хулинчи авиаци техникумне вĕренме кайнă. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн темиçе çул хушши А. Лазарева пилотсен шкулĕнче ĕçленĕ. 1939 çулта вăл Шупашкара куçса килнĕ: малтан «Ленин çулĕпе» журнал редакцийĕн литература сотрудникĕ, кайран Чăваш АССР Министерсен Совечĕ çумĕнчи Радиоинформаци комитетне куçнă. Вăрçă çулĕсенче унта литература передачисен редакторĕ тата диктор пулса ĕçленĕ. А. Лазарева 1945 çултанпа литература ĕçĕпе кăна пурăнма пуçлать.

Литература ĕçне çыравçă 1938 çулта пуçăннă тесе палăртма пулать, мĕншĕн тесен А. Лазаревăн пĕрремĕш калавĕ 1938 çулта «Çутă ĕмĕт» ятпа «Сунтал» журналта пичетленсе тухать.

Хайлаври тĕп сăнар – Санюк. Унăн пурнăçĕнче тĕлĕнмелле ĕç пулса иртет – мĕн ачаран ĕмĕтленнĕ ĕмĕт – летчик пуласси пурнăçа кĕрет-çке. Çак калавшăн автор илемлĕ произведенисен конкурсĕнче преми илме тивĕç пулнă (1938). Çак çулах çыравçă летчиксен пурнăçне тĕплĕн уçса паркан хайлав – «Сывлăшра» (1939) калăплать. Тепĕр çулта вара тӳрех виçĕ калав хайлать: «Иккĕмĕш тĕлпулу», «Телейлĕ вĕçев», «Çеçенхир çеçки».

А. Лазарева пысăккисем валли кăна мар ачасем валли ытларах çырнă. Кĕçĕннисене халалланă хайлавсем уйрăмах илĕртӳллĕ пулса тухни курăнать. Тем çинчен те ачасене интереслентермелла çырать А. Лазарева. Уйрăмах, туслăх çинчен нумай çырнине асăрхама пулать. «Çĕнĕ çул» умĕн калавра куç умне икĕ юлташ – Сашăпа Тимуш тухса тăраççĕ. Вĕсем пĕрпĕринсĕр пĕр кун та пурăнма пултараймаççĕ тейĕн. «Канав» хайлавра та туслăх вăйĕ пирки калаçу пырать.

А. Лазареван тĕп сăнарĕсем ăслă, ăнкаруллă, ĕçчен, тирпейлĕ. Сăмахран, «Çĕнĕ çул» умĕн калавра икĕ юлташ çĕнĕ çул валли хатĕрленĕ чăрăшсемпе шофера канава лекнĕ машинине кăларма пулăшаççĕ, «Улăхра» калаври Настя ал айĕнчи япаласемпе çырмара путма пуçланă пăрăва пĕчченех туртса кăларма вăй çитерет. «Юрать-ха тĕл пулнă» калаври Витя аташса кайнă пĕчĕк хĕрачана килне ăсатса ярать.

Пултаруллă сăнарсен хушшинче итлеменнисем, тирпейсĕррисем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, «Çĕнĕ çурт» калавра Ванюшпа Лева çĕнĕ çуртăн стенисене вараласа пĕтереççĕ. Çыравçă ачасем ĕçчен пулни кăна мар, тирпейлĕ пулмалла, çын ĕçне хисеплеме вĕренмелле тесе палăртса хăварать. «Икĕ тĕл пулу» калаври Алик пĕчĕк ачаран велосипедăн шăнкăравне туртса илет те нумай вăхăт иртсен тин тавăрса парать. «Çĕнĕ хĕрача» калаври Неля амăшĕ киноактриса, ашшĕ Совет Союзĕн Паттăрĕ тесе, хăй питĕ хитре тĕрлеме тата питĕ хăвăрт ишме пултарать тесе суять юлташĕсене. Анчах та суйи кĕçех çиеле тухать.

А. Лазарева геройĕсем патриотсем. Вĕсем мĕн пĕчĕкренех хăвăрт ӳссе çитĕнсе çĕр-шыва юрăхлă çын пуласчĕ тесе ĕмĕтленеççĕ. «Тоня юрланă чух» калаври питĕ хитре юрлакан Тоня çитĕнсессĕн юрăçă пуласси пĕрре те иккĕлентермест. Тĕп сăнарсем пĕчĕк пулин те питĕ хăюллă. «Тĕттĕм каç» калаври Мишăна пула ял пушартан сыхланса юлать. «Канмалли кун» калаври пĕчĕк ачасен тăрăшулăхне кура кукуруз ани кураксенчен сыхласа юлать. «Кĕсле янăрать...» калаври ачасем пысăккисене ялта клуб уçтараççĕ.

Нумай чухне А. Лазарева ачасене ĕлĕкхи пурнăçпа паллаштарма тăрăшать. Сăмахран, «Тоня юрланă чух...» калаври Тоня амăшĕн калаçăвĕ урлă эпир ĕлĕк çынсем вулама-çырма пĕлменни пирки пĕлетпĕр. «Ашшĕсен парни» калаври икĕ плотник калаçăвĕ урлă ĕлĕк ачасем пĕчĕк çуртсенче вĕренни паллă. А. Лазарева çут çанталăка юратни куç умĕнчех. Çут çанталăкăн кашни вăхăчĕ пирки чуна пырса тивмелле ӳкерсе кăтартма пултарть.

Чăваш ача-пăча литературинче фантастикăлла повесть жанрне пуçарса яраканĕсенчен пĕри математик, чылай наукăлла статьясен авторĕ ***Георгий Ефремов*** (1928 – 2005) пулнă. 1948 çулта вăл ачасем валли «Улшăннă çанталăк» по-

весть ҫырса пӗтерет. Кӗҫех унӑн «Громов диссертацийӗ» тата «Тивӗҫлӗ аттестат» хайлавӗсем пичетленсе тухаҫҫӗ. Повӗҫсен сюжечӗ ҫамрӑксен наукӑри ҫӗнӗ идейисем тата тӗнчери ҫут ҫанталӑка тӗпчемелли шыравсем ҫинче никӗсленнӗ. Вӗсенче наукӑлла идейӑна малти вырӑна лартасси, сюжета шыравсемпе тӗпчевсем ҫинче никӗслесси, приключенилле мотивсем тӗпре. Ҫамрӑк Громов тӗпчевҫӗ хӑй вӗрентекенӗпе пӗрле экспедицие тухса каять, вулкан таврашӗнчи атмосферӑна, сывлӑш тытӑмне тишкерет. Вӑл тупса палӑртнӑ ҫӗнӗлӗхсем ҫынсене ҫанталӑка кирлӗ пек улӑштарма май парӗҫ. Пирвайхи фантастикӑлла хайлавсенче наука идейине тӗпе хывнӑ, сюжет йӗрӗ тӗпчеври шыравпа ҫыхӑнса тӑрать, приключени кӗввисене те усӑ курнӑ.

1968 ҫулта Г. Ефремов «Тимӗр тыткӑнран» повесть ҫырать. Унӑн тытӑмне 1985 ҫулта улӑп халапӗсен сюжечӗпе пуянлатса ҫӗнӗрен пичетлесе кӑларать. Повеҫӗн идейӑпа тематикине тарӑнлатать автор, композицине пуянлатать, мифологилле сӑнара кӗртет. Икӗ ҫамрӑк тӗпчевҫӗ авалхи улӑп халапне ас туса тӑрса улӑп тӑпри патне килсе Чемен паттӑра чӗнеҫҫӗ. Кӗҫех вӗсенчен пӗри тӗлӗкре формулӑсем курма тытӑнать. Тӗнче шайӗнчи конференцине хутшӑнакан тӗпчевҫӗне вӑрласа каяҫҫӗ. Ют ҫӗр-шыв ученӑйӗсене те ҫак асамлӑ формула кӑсӑклантарать, иккен. Пултаруллӑ ҫамрӑк хӑйне хупса хунӑ тимӗр тыткӑнран тарма пултарать. Вӑхӑт ыйтнине кура, геройсем совет ученӑйӗсем пулнине кура таса чунлӑ, ҫирӗп кӑмӑллӑ пулнине палӑртасси те пур повеҫре. Хайлава Чемен сӑнарне кӗртсе автор унӑн нацилле хӑй евӗрлӗхне вӑйлатать, вӑхӑт талккӑшне анлӑлатать. Повеҫре техника хатӗрӗсене, роботсене, асамлӑ ҫут ҫанталӑка сӑнласси пур. Геройсем наука чӗлхипе калаҫаҫҫӗ, тем пек йывӑр пулин те вӗсе чун тасалӑхне упраса хӑварма пултараҫҫӗ.

Ҫыравҫӑн унсӑр пуҫне «Ҫӗр тӗнӗлӗ», «Акилемӑн уҫӑ ҫилӗ» наукӑпа фантастикӑла повеҫӗсем пур. Вӗсенче социаллӑ-политикӑлла ыйтусене, экологи проблемисене хускатасси тӗпре. Пӗтӗмӗшле илсен, Г. Ефремовӑн хайлавӗсем ҫамрӑксене наука еннеле туртӑнма пулӑшаҫҫӗ, ырӑ открытисен пархатарлӑхӗпе илӗртеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне Г. Ефимов халӑх сӑмахлӑхӗн пуянлӑхне усӑ курса ачасем валли сӑвӑлла юмахсем ҫырнӑ. Унӑн «Тимӗрпе

ылтăн», «Куçлă çĕрĕ», «Пăрçа», «Акăшпи», «Орден», «Çитмĕл çичĕ чечекрен çĕленĕ кĕпе», «Ультиван салтак çинчен хывнă юмах» хайлавĕсем пур. Çыравçăшăн самана паллисене усă курасси, хăй пурнакан пурнăç йĕркисене мухтасси характерлă. Асамлă юмах традицийĕсене пăхăнса çырнă юмахра та ĕç-пуç совет саманине ырланипе вĕçленме пултарать.

***Петĕр Хусанкайăн*** (1907 – 1970) пултарулăхĕнче те ачасем валли тата ачасем çинчен çырнă хайлавсем сахал мар. Вăл тĕрлĕ çулсенче сăвăсем, поэмăсем, литература юмахĕсем хайланă. 20-мĕш çулсенче поэт «Феникс чикĕ урлă каçни» поэмăна пичетлесе кăларать. Кунта тăван тата капитализмла çĕр-шыври ачасен пурнăçĕ еплерех пулнине шайлаштарса кăтартнă. Вăрманта çĕтсе кайнă ача ăнсăртран чикĕ леш енне лекет, тĕрлĕ пăтăрмаха хутшăнать. 1950 çулта çырнă «Тăван çĕр-шыв» поэма ачасене тăван çĕр-шыва юратас, хисеплес туйăма аталантарма пулăшать, тавралăха юратма вĕрентет. Поэма композицийĕ тĕрлĕ географи ӳкерчĕкĕсене сăнланипе пĕрлешсе тăрать. Ачасем тăван çĕр-шыв тăрăх курма тухса каяççĕ. Калуçă малтанах вĕсене чăваш çĕрĕ тăрăх кăтартса çӳрет, кайран – тăван çĕр-шыв анлăшне уçса парать, тăванла халăхсен культура пуянлăхне, хăй евĕрлĕхне кăтартать. Калуçă çине-çинех риторикăла йытусем усă курать. Çавна май çĕр-шывăн мăнаçлăхне, илемне палăртать.

«Вăрман юрлать» поэмăна тăван тăрăхри çут çанталăка çанлас ĕçе халалланă. Сăвăç кунта вăрманта ӳсекен йывăççене сăнласа тухать, вĕсем хуçалăхра мĕнле усă панине ăнлантарать.

Поэтăн ачасене халалланă сăввисем поэтика сăнарĕсемпе пуян, чĕлхе, сăрарлăх тĕлĕшĕнчен нумай енлĕ. Вăл халăх сăмахлăхĕнчи сюжетсемпе, мотивсемпе, илемлĕх мелĕсемпе усă курать. Хайлавсенчи шӳт, воспитани парас туртăм та фольклора çывăх. Вĕсем халăхăн дидактикăлла юррисене, юмахĕсене çывăх. Çавăнпа пĕрлех паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтереççĕ, содержани тĕлĕшĕнчен ансат, ăнланма çăмăл. П. Хусанкай çырнисем поэтика сăнарĕсемпе пуян. Çакна унăн «Сăпка юрри» сăвви те çирĕплетсе парать. Поэтăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă сăвви-поэмисем ачасемпе çамрăксен йывăр пурнăçне, паттăрла ĕçĕсене

сăнласа кăтартаççĕ. «Таня», «Аптраман тавраш» поэмăсенче уйрăмах çакна курма пулать.

П. Хусанкай «Итлемен Илтепи», «Çарăк», «Кăвакарчăн», «Тĕнчере мĕн вăйлă?», «Валемхунпа Сулпике», «Таварпи» юмахсем çырнă. Унăн юмахĕсене чăваш халăхĕн сăмахлăхĕ çине тата ытти халăхсен юмах традицийĕсем çине таянса çырнисене уйăрма пулать. «Кăвакарчăн», «Тĕнчере мĕн вăйлă?», «Итлемен Илтепи» хайлавсене çырнă чухне сăмахлăхри юмах тата халап сюжечĕсене усă курнă. Автор вĕсене сăвăласа çырать, хăйĕн шухăшне палăртать. «Валемхунпа Сулпике», «Çарăк» юмахĕсенче чăваш халăхĕн юмах тата мифологи традицийĕсем палăрнисĕр пуçне вырăс тата тĕнче юмахĕсен паллисене те асăрхама пулать.

«Çарăк» хайлавра вырăс юмахĕпе килĕшӳллĕн карчăкпа старик çарăк акса ӳстереççĕ. Анчах та çарака ăçта акни, вăл мĕн пысăкăш шăтса ӳсни çинчен калани, ун тăрăх хăпарса старик çулти турăсене курма пултарни çинчен калани, чăркăш карчăкăн тыткаларăшне сăнлани çинчен калани чăваш фольклорĕпе килĕшӳллĕн пурнăçланса пырать. Сăмах май каласан, чăвашсен сăмах вĕççĕн çӳрекен юмахĕсенче, пулмасла халапĕсенче те тĕп сăнар пĕр-пĕр ӳсен-тăран тăрăх хăпарса çӳлти патшалăха çитни, унта турăсемпе курса калаçни çинчен калакан сюжетсем чылай сарăлнă. Г. Ефимов та «Пăрçа» ятлă юмахĕнче сакайне шăтарса пĕлĕте çити ӳссе кайнă пăрçа çинчен класса кăтартать. Анчах та самана витĕмне пула унти герой Турăсене хирĕçле калаçать.

«Валемхунпа Сулпике» юмаха асамлă юмах традицийĕсемпе килĕшӳллĕн çырнă. Кунта В.Я. Пропп палăртнă композицине йĕркелекен мотивсем чылайăшĕ тĕл пулаççĕ, ĕç-пуç аталанăвĕ те тĕпчевçĕ палăртнă йĕркепе пулса пырать. Тĕп сăнарăн, Сулпикен, çĕлен патшине качча тухмалла пулса тухать. Юратнă лаши пулăшнипе вăл туйран пăрахса тарать. Хыçран хăвалакан çĕленсен эшкерне Сулпике тĕрлĕ япаласем пăрахса хăварса чăрмавсем йĕркелет. Çыравçă юмахсенчи традицилле чăрмавсене усă курмасть, хăйĕнчен хушса калать:

*«Ан хурлан, пикеçĕм, илĕн*
*Хупала эс виçĕ милĕк,*

*Виçĕ катăк чул тата*
*Виçĕ пĕрчĕ тулă та*
*Виçĕ пуç тури; ан ман —*
*Шăмă турасем! Унтан*
*Виçĕ пĕрчĕ шăрт тупатăн,*
*Ху мана тытса утланăн»…*

Çăлăнăçне Сулпике Валем хунăн килĕнче тупать. Кунта вăл унăн виççĕмĕш арăмĕ пулса тăрать. Юмахри ĕç-пуç малалла А. Пушкинăн «Сказка о царе Салтане и 33 богатырях» юмахĕнчи пек аталанать. Виçĕ арăмĕ инçе çула кайма хатĕрленекен Валем хуна таврăннă çĕре тĕлĕнтермĕш япаласем хатĕрлеме шантараççĕ. Мăшăрĕ инçе çĕрте çӳренĕ вăхăтра Сулпике ывăл ача çуратать. Аслă арăмĕсем ăна кĕвĕçнипе ачине вăрлаттарса яраççĕ. Сăпкине вара йытă çури хурса параççĕ. Аслă арăмĕсем хĕтĕртнипе Валем хун Сулпикене вăрман варрине туса лартнă виçĕ кĕтеслĕ пӳрте хупса хума хушать. Вырăс юмахĕнчи пекех виç кĕтеслĕ пӳрт патĕнчен иртсе килнĕ купцасен сăмахне манăçтарас тесе аслă арăмсем упăшкине тĕнчери тĕлĕнтермĕшсем çинчен каласа параççĕ. Вĕсене пурне те йытă çури тупса килме пултарать: утмассерен хăмлакан тăхăр вунă утăм тăршшĕ утмăл утăм урлăшлă çăрха ула кĕсре; тĕрлĕ ĕçме-çимесем авăтакан арман, siксе ташлакан улмаллă, çупса лара-кан çулçăллă, татмассерен виç улма çитĕнтерекен лапсăркка улмуççи; пĕр пичĕ уйăх евĕр, тепĕр пичĕ – хĕвелпе пĕр, ылтăн çӳçлĕ те кĕмĕл шăллă сĕтлĕ кӳлĕре ишсе çӳрекен ача. Юлаш-кинчен Валем хун Сулпикене курма каять. Юмах вĕçĕнче тивĕçлисем телей кураççĕ, усал арăмсене намăс кăтартса килтен хăваласа кăларса яраççĕ.

П. Хусанкай тĕрлĕ ситуацире унччен каланă сыпăксене тепĕр хут каласа тухать, юмахри сăвă кĕвĕлĕхĕ те А. Пушкинăн хайлав-не çывăх. Çыравçă сюжет йĕрне вырăс тĕслĕхне çывăх йĕркелет пулин те çине-çинех чăваш фольклорĕнчи, мифологийĕнчи паллăсене кĕртсе ярать: сĕтлĕ кӳлĕ çинчен калани, мусульман тĕнĕпе çыхăннă сăваплă çын ятне усă курни, инициаци тата пыта-ру йăли-йĕркинчи паллăсене усă курни, шыв-шура çĕлен-калта тĕнчипе çыхăнтарни, чĕр чун тотемсем çинчен калани, калаçакан лаша тĕп сăнара пулăшса пыни тата ытти те.

А. Пушкин хӑй юмахӗсене ҫырнӑ чухне вырӑс халӑхӗн фольклор традицийӗсене ҫеҫ мар, пӗртӑван Гриммсен юмах пуххипе те усӑ курнӑ. Апла пулсан, вырӑс классикӗн пултаруллӑхӗ урлӑ чӑваш ача-пӑча литературине тӗнче, Европа юмахӗсен традицийӗсем те кӗрсе пыраҫҫӗ.

***Петӗр Ялкир*** (1922 – 2006) кӗҫӗн тата вӑтам ҫулсенчи ачасем валли тӑван тавралӑх, чӗр чун, выльӑх-чӗрлӗх, ӳсен-тӑран ҫинчен калакан, ӗҫченлӗхе, туслӑ пулма вӗрентекен сӑвӑсем ҫырать. «Ачасем валли ҫырассине эпӗ питӗ кирлӗ ӗҫ вырӑнне хуратӑп», – тесе каланӑ вӑл. Кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли унӑн «Ӗмӗтсем пысӑк», «Саспалли хули», «Тӗкӗр», «Хрисан Степанов» кӗнекесем пичетленсе тухнӑ. Ҫыравҫӑ ачасен шкулти пурнӑҫне «Илемлӗ шӑнкӑрав», «Кӗнеке», «Пӗлӳ керменӗ», «Мухтав учителе» сӑвӑсенче сӑнлать, ачасене вӗренме, кӗнекепе туслӑ пулма чӗнсе калать. Ачасен класс тулашӗнчи ӗҫӗсене сӑнлакан сӑвӑсем те пур. «Тимурҫӑсем» сӑвӑ ваттисене хисеплекен, пулӑшма тӑрӑшакан пултаруллӑ ачасен ӗҫӗ-хӗлне кӑтартса парать. П. Ялкирӗн ачасем валли ҫырнӑ сӑвӑсенчи лирика геройӗ яланах ӗҫре, юлташсемшӗн, ҫывӑх ҫынсемшӗн кирлӗ, пӗлтерӗшлӗ ӗҫ тӑвать, вулаканшӑн та ырӑ тӗслӗх пулса тӑрать. Ҫыравҫӑн аннесене халаллӑнӑ сӑвӑ ярӑмӗ те пур. Кунта «Чӗрере анне ялан», «Анне», «Асран каймасть атте-анне» тата ытти сӑвӑсем кӗреҫҫӗ. Ку хайлавсем тарӑн шухӑшлӑ пулнипе, ашшӗ-амӑшӗн пӗлтерӗшӗ ҫинчен каланипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ, кашни ҫыннӑн ӗмӗрхи парӑмӗ ҫинчен аса илтереҫҫӗ.

П. Ялкир ачасем валли сӑвӑсем, юптарусем, вӗрентсе калакан каларӑшсем ҫырнӑ. Чылай сӑвви унӑн юрра хывӑннӑ: «Павӑл, эпӗ, Микула», «Вӑйӑра», «Лагерьте», «Хрисан»... Юптарусем ҫырнӑ чухне тискер чӗрчунсен, выльӑх-чӗрлӗх сӑнарӗсем урлӑ ҫынсен ҫитменлӗхӗсенчен, тӳнртер енӗсенчен тӑрӑхласа ҫырса кӑтартать, тепӗр чухне ҫын сӑнарӗсене тӳрӗ пӗлтерӗшпе усӑ курни те пур.

***Мария Волкова*** (1933 – 1976) чӑваш ача-пӑча литературинче шкулта учительте ӗҫлекен хӗрарӑмсем алла ручка тытса ачасем валли илемлӗ хайлавсем ҫырма пуҫлани туртӑм пур. Ҫакӑн йышши авторсем – Валентина Тарават, Мария Волкова. Шкулта кулленех ачасемпе хутшӑнни, вӗсен тӗнчине, ӳсӗм уйрӑмлӑхне аван пӗлсе тӑни, тепӗр чухне, тен, вӗрентӳ процесне пуянлатас

тени палăрать вĕсен хайлавĕсенче. М. Волковашăн хăйĕн ачалăхне аса илсе тата ачасем валли ятарласа çырасси характерлă. Сăвăç мĕн ачаран кĕнекесем вулама юратнă, 12 çухрăмра вырнаçнă библиотекăна сывлăхĕ хавшак пулнине пăхмасăрах тăтăшах кайса çӳренĕ. Вăл тата музыкăна, сăн ӳкерчĕксем тума кăмăлланă.

М. Волкован «Ак мĕнле эп пысăккă» (1968), «Сан валли» (1972) ачасем валли çырнă сăвă кĕнекисем пичетленсе тухнă. «Качака», «Кушак», «Верук», «Шур аппа» тата ытти сăввисенче ачасен кулленхи пурнăçне сăнлать вăл, ăса вĕрентет. Учительница пулнă май вулав техникине аталантарас тĕллеве те сăвăра пурнăçлать. Уçă тата хупă сасăсен черетленĕвне, сыпăксем çине тĕрĕс пайланса пырассине асăрхаса тăрать. Тепĕр чухне сăмахĕсене ятарласа сыпăксем çине пайласа çырать. «Хурлăханăм ан хурлан», «Мĕншĕн эпĕ кулянап», «Лартатпăр тополь» сăвăсенче тăван çĕр-шыва, тавралăха, çут çанталăка юратма тата упрама, вĕсен илемĕпе киленме вĕрентсе каласси тĕпре.

Çыравçăсем çамрăк ăрăва аваллăх çинчен илемлĕ сăмах урлă каласа пама тăрăшаççĕ. Ку енĕпе ***Ираида Петрова*** (1913-1983) та тăрăшса ĕçлет. Вулакан унăн «Савпипе Кришна», «Кун-çул юппинче», «Татюк» хайлавĕсемпе тĕрлĕ журналсенче пичетленнĕ сăвви-юррисене аван пĕлет. Пушкăрт тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ çыравçă хăй тăрăхĕнчи сăмахлăх пуянлăхне, халăх аваллăхĕ пирки калакан халапсен сюжечĕсемпе мотивĕсене усă курса литература хайлавĕсем çырать.

И. Петрован «Савпипе Кришна» юмах 1971 çулта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать. Ăна автор ачасене халаллать. Хайлавра икĕ çамрăкăн юратăвĕ çинчен каласа кăтартасси тĕпре. Çыравçă пурнăннă саманана витĕмне пула юмахра социаллă танмарлăх, халăхсем хушшинчи туслăх проблемисене хускатнă.

Авалхи чăвашсен пурнăçне туллинрех сăнлама И. Петрова «Савпипе Кришна» юмахра улăп халапĕсен сюжетне, юмахри калуçă сăнарне, пăлхарсен çĕлен тотем пирки каланине, вĕрӳ-суру чĕлхине, хуласен историйĕ пирки каланине, этнографилле тата топонимикăлла ӳкерчĕксене усă курать. Халăхăн сĕм авалхи

кун-çулĕ инçет Хĕвел Тухăçĕпе çыхăннине шак хурса инди çыннине тĕп сăнарсенчен пĕри туса хурать.

Юмах чăваш сăмах культуришĕн традицилле пуçланать. Калуçă ĕç-пуç пулса иртекен вырăнпа (Атăл хĕрри, Пăлхар çĕр-шывĕ) вăхăт (Сăвар, Пăлхар хулисем пуличчен) çинчен каласа кăтартать, тĕп сăнарпа паллаштарать. Усал, хаяр характерлă Ятманăн нумай хушă ача пулманни çинчен калани тĕрĕк халăхĕсен фольклорĕшĕн традицилле шутланать. Унăн хĕсĕр арăмĕ йывăр пурнăçа чăтаймасăр хăй çине алă хума шутлать, шухăшне пурнăçа кĕртме каçхине вăрмана каять. Кунта ăна çĕлен патши ача тумалли асамлă мел çинчен каласа кăтартать. Ача, чăнах та, юмахри пек, асамлă, хăрушла йăлана пурнăçланă хыççăн çуралать. Хаяр пике шăп виçĕ кунтан çуралнипе, характерĕпе усал, хаяр, кахал пулнипе тантăшĕсенчен уйрăлса тăрать. Виçĕ çулхи ача тарçăсене хĕнет, çӳçрен сĕтĕрет, ашшĕпе амăшне хăй кăмăлне тивĕçтерме ыйтать.

Юмахри тепĕр сăнарăн пурнăçĕнче те йăлана кĕнĕ япаласенчен уйрăлса тăракан пулăмсем хуçаланаççĕ. Кришна Инди çурутравĕ çинче çуралнине, ашшĕпе пĕрле тинĕс тĕпĕнче мерчен шыранине, ăнсăртлăха пула тарçă пулса тăнине юмахçă каласа кăтартать. Геройăн пуплевĕ урлă та инçет çĕр-шывăн çут çанталăкĕ, пурнăç хăй евĕрлĕхĕ пирки пĕлтернĕ. Вăл социаллă танмарлăха пула çĕр çинче телейсĕр çынсем нумай пулнине палăртать.

Юмахри ĕç-пуç аталанăвĕ хронологипе йĕркеленсе пырать. Малтанах геройсен пурнăçне вĕçе-вĕçĕн сăнланă, каярах çулталăк тăршăнче пулса иртекен уявсене калăва кĕртнĕ. Çамрăксем вăййа тухнине тĕплĕн сăнлать юмахçă. Шăп вăйă вăхăтĕнче хăйсене телейлĕ туякан Савпипе Кришнăна Хаярпике курать, вĕсене кĕвĕçет, пĕтерме шут тытать. Кришна шыва чăмма пултарнине асра тытса вăл ăна виçĕ хутчен Атăла чăмтарать, юхан шыв тĕпне тухья, măйя, çĕрĕ пăрахать. Йывăрлăха лекнĕ çамрăка çак ĕçсене пурнăçлама вăрмантан тухнă шурсухал пулăшать. Вăл хăмăш ту-нипе шыв тĕпĕнче сывлама май пурине ăнлантарать, Кришнăна тарса кайма çул уçса парать.

Поэмăра çавăн пекех, юмахçă сăнарĕ пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăрать. Вăл, сăмахлăхри пекех, тĕп сăнарсем, ĕç-пуç аталанăвĕ çинчен тĕплĕн каласа парать, вĕсене хак парать. Хай-

лаври сăнарсене пархатарлисем тата пархатарсăррисем çине уйăрма пулать. Юмахçă калу аталанса пынă май вĕсене характерлать, сăн-питне сăнланинчен ытла ĕçĕсем çинчен каласа каять. Ятман пуянпа палаштарнă чухне те вăл хаяр пулнине тӳрех каласа хурать. Çак сăмах уншăн яланхи эпитет пулса тăрать. Ятман хĕрĕ те кăмăлĕпе усал пулнине ячĕ урлă палăртать. Чăн ячĕ манăçа тухнине пула Хаярпике тесе чĕнет. Савпипе Кришна ячĕсем те характера, шăпана палăртса калама май параççĕ. Пархатарсăр геройсем пирки калаçнă чухне юмахçăн пуплевĕ типĕ, Савпипе Кришна е тарçăсем пирки калаçнă чухне чĕлхере сăнарлăхпа, сасă кĕвĕлĕхĕпе туллин усă курни сисĕнет, хĕрхенӳ туйăмĕ палăрать.

***Валем Ахунăн*** (1930) ачасем валли çырнă сăвăсем нумай. Вĕсем уйрăм кĕнекен те пичетленсе тухнă: «Хӳкле кĕвви», «Шевле вăййи», ... Вĕсене вуласан автор ача-пăча психологине аван пĕлни сисĕнет. Вăл хайлавсем çырăн чухне ачан сăнарлă шухăшлав малта тăнине шута илни курăнтать. В. Ахунăн ачасем валли çырнă сăввисенче сăвăç пултаруллăхĕ çӳллĕ шайра пулни курăнать, вĕсенче ирĕклĕх, кĕвĕ янăравлăхĕ, этемпе çут çанталăк килĕшĕвĕ пурри сисĕнет. Сăвăсем урлă вăл шкул çулне çитнĕ ачасене хăй пурнакан вырăнпа тĕплĕн палаштарать. Унăн куçĕ умне вăрман, уй-хир, çырма-çатра ӳкерчĕкĕсене кăларса тăратать. Вĕçен кайăк е чĕр чун, тĕрлĕ йывăç е улма-çырла пирки çырнă чухне вара сăнара туллин, ачасене ăнланмалла, ăна шухăша ямалла калăплать. Çакăн йышши сăвăсем ачан тавракурăмне пысăклатаççĕ, çынпа çут çанталăк уйрăлми çыхăнура пулнине çирĕплетеççĕ.

Поэтăн тăван çĕршыв темипе çырнă сăвăсем те чылай. Вĕсем ачасене тăван тавралăха хаклама, тăван чĕлхепе çуралнă киле, атте-аннене юратма вĕрентеççĕ:

*Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –*
*Çуралнă кил, умри йăмра.*
*Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –*
*Хитре янран кĕсле-тăмра...*

Сăвăç ачасем валли шӳтлĕ сăвăсем те çырать. Вĕсенче камран та пулсан витлес е пулмасла япаласем çинчен çырасси шухăша уçса пама пулăшать:

*... Эп ун чухне ачаччĕ,*
*Аттем манпа танахчĕ,*
*Кукаç сăпка сикетчĕ,*
*Анне вăйӑа çӳретчĕ...*

Çакăн йышши сăвăсенчех çынсен кăмăлĕнчи начар енсене, çитменлĕхсене тиркес, чее, ырă мар сăнарсенчен витлес е тăрăхлас туртăм пур. Вĕсенче автор ачасене ятран каламасть, чĕр чун ячĕсене усă курать, пĕтĕмлетсе калать.

В. Ахунăн чĕр чунсен пурнăçне сăнласа çырнă сăвăсем те пур: «Сăвăр», «Чĕрĕп», «Шапа», «Çăрттан», «Пирĕн качака», «Карсак куян куртăмăр» тата ыттисем те. Вĕсем ачасен тавра курăмне, ăс хакăлне аталантараççĕ, чĕр чунсен пурнăçĕ, тыткаларăшĕ пирки пĕлме пулăшаççĕ. Сăввисене илемлĕ, сăнарлă, ачасене ăнланмалла çырать, сăнарĕсене калăпланă чухне кулăшпа шӳте усă курать. Хайлавсенче çавăн пекех фольклор традицийĕсене, сăнавсене усă курнине те асăрхама пулать. Чĕр чунсен тыткаларăшĕ урлă сăвăç ачасене çут çанталăка сăнама вĕрентет.

В. Ахун ачасем валли «Ай, хитре телле «лаши»...», «Пилĕк пĕртăван», «Тимĕрçĕ» сăвăлла юмахсем çырнă. Автор вĕсенче çамрăк ăрăва ăс вĕрентессине мала хурать. Кунсăр пуçне, В. Ахун пултарулăхĕнче ачсем валли çырнă вăйă сăввисем, такмаксем, юрăсем те чылай. Юрă-такмак ачасен чĕлхине, пуплевне аталантарать, якатать. Вĕсене вăйăсем выляна чухне усă курма меллĕ. Сăвăç вĕсенче вăйă урлă ачасене тăван республика, культура пуянлăхĕпе паллаштарать.

В. Ахунăн чылай сăввинче воспитани тĕллевне пурнăçласси малти вырăнта тăрать. Вăл илемлĕ сăмах урлă ачасене сăпайлă, тирпейлĕ пулма, аслисене итлеме вĕрентет. Ырă тата начар ача сăнарĕсене юнашар илсе сăнлать, хăшĕ лайăхрах пулнине ĕçĕсемпе тыткаларăшĕ урлă кăтартать. Сăвăçăн пултарулăхĕ ачасен ăс-хакăлне ӳстерекен, шухăшлавне аталантаракан тупмалли юмахсене çырнă чухне те палăрать:

*Хура тупанлă упана,*
*Ятне кăкарнă упана,*
*Куллен вĕри çĕлен çунать,*
*Ялан хаяр çĕлен сăхать* (Хуран).

Пĕтĕмĕшле илсен, В. Ахунăн ачасем валли ҫырнă сăввисем сăнарлă, вĕсен чĕлхи пуян. Хайлавсем ачасене ăнланмалла, интереслĕ. Сăвăсене ача-пăчан кăмăлне, психологине ăнланса ҫырнă. Сăвăҫ воспитани, пĕлӳ парас тĕллевсене мала хуни курăнать, вăл ачасене тăван ҫĕр-шыва тата атте-аннене юратма, ҫут ҫанталăка упрама, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма вĕрентет.

**Ыйтусемпе ĕҫсем**

1. П. Хусанкайăн ачасем валли ҫырнă хайлавĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.
2. В. Давыдов-Анатрин сăввисен кĕвĕлĕхĕ тата ĕҫе юратма вĕрентесси тĕпре пулни.
3. XX ĕмĕрĕн 50-80-мĕш ҫулĕсенчи ача-пăча драматургийĕн ҫитĕнĕвĕсем.
4. Ача-пăча литературинче юмах урлă историне каласа кăтартас, йăла-йĕрке пуянлăхĕпе паллаштарас туртăмсем аталанса пыни.
5. Паллă ҫынсен пурнăҫĕ ҫинчен каласа парасси чăваш ача-пăча литературинче аталанма тытăнни.
6. Ачасем валли ҫырнă хайлавсен тематики пуянланса пыни.

## ХАЛЬХИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

Паянхи куна ача-пăча прози тивĕҫлĕ шайра аталанса пырать теме юрать. Пĕчĕк, вăтам, пысăк калăпăшлă, тĕрлĕ жанрлă хайлавсем ҫырăнаҫҫĕ, тĕрлĕ тематикăна хускатасси аталаннă. Кĕҫĕн ҫулхи ачасем валли ҫырнă чухне ҫыравҫăсем калав, юмах, анекдот жанрĕсене усă кураҫҫĕ. Вăтам тата аслă ҫулхи асачене валли приключенилле, детективлă, кулленхи пурнăҫа е аса илĕве сăнлассине тĕпе хурса ҫырнă повеҫсем пичетленеҫҫĕ. Юмах-повесть ҫыракансем йышлăланчĕҫ. Илемлĕ хайлав ҫыракансем хушшинче хĕр арăм авторсем ытларах. Аслăрах ҫулсенчи ҫыравҫăсен хайлавĕсен пахалăхĕ чылай пысăкрах, вĕсем ачасен пурнăҫне витĕр курса тăраҫҫĕ, вĕсемпе уйрăм чĕлхепе калаҫма пултараҫҫĕ. Шкулта ĕҫлекен авторсен хайлавĕсем ачасен пурнăҫне туллинрех, кăткăсрах сăнланипе уйрăлса тăраҫҫĕ. Ачасене тăван халăхăн аваллăхĕ ҫинчен каласа парасси, унпа кăсăклантарасси палăра пуҫларĕ.

Кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă С. Асаматăн, Р. Шевлепин, З. Нестерован, Л.Саринен, Ю. Силемĕн юмахĕсенче фольклорти халапсемпе легендăсен витĕмне, асамлăх паллисемпе кулленхи пурнăç пĕрлĕхне усă курасси пур. Çыравçăсем асамлă тĕнче çинчен калани урлă пĕлӳ, воспитани парас тĕллеве пурнăçлаççĕ. С. Асамат «Тĕлĕнтермĕш тĕлĕк» юмахра чăвашăн аваллăхĕ çинчен илĕртӳллĕ çырса кăтартать. З. Нестерова, Л. Сарине, Ю. Силем çут çанталăк пулăмĕсене, чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансене хăйсен юмахĕсенче чĕрĕ пек ӳкереççĕ, пĕр-пĕринпе калаçтараççĕ, вĕсен хутшăнăвне сăнласа кăтартнă май ачасене биологи, ботаника, зоологи пĕлĕвĕпе паллаштараççĕ, çут çанталăка упрама кирли çинчен калаççĕ. Р. Шевлепи юмахĕсемшĕн ĕмĕт тĕнчине чĕретсе тăратасси характерлă. Ача кулленхи пурнăçпа пурăнать, çав хушăрах хăйĕн теттисемпе пулса иртекен тĕлĕнтермĕш ĕçсене те хутшăнать. Н. Медюкова юмахĕсене çырнă чухне тĕрлĕ халăхсен юмахĕсемпе халапĕсен сюжечĕсене усă курать. Унăн геройĕсем чĕр чунсем, ачасем, аслисем. Вĕсен хушшинчи хутшăнăва ӳкернĕ май автор воспитани проблемисене хускатать, сюжет хыççăн пĕтĕмлетӳ тăвать, геройсен тыткаларăшĕ пирки шутласа пăхма сĕнет. Юмах сюжечĕ урлă çĕнĕ пĕлӳпе паллаштарасси, хăвăрт вулама тата шутлама хăнăхтарасси, пурнăç пирки шухăшлама вĕрентесси тăтăшах тĕл пулать.

Ачасем валли илемлĕ калав çырас тĕлĕшпе Е. Нарпи, М. Карягина, Н. Ишентей, А. Осипов, Н. Исемпек, Н. Симунов тата ыттисем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра тухнă кĕнекесенче паянхи ачан пурнăçне сăнласси тĕпре. Ачан хулари кун-çулĕ, вăл яла асламăшĕ патне хăнана çӳрени, çĕнĕ йышши техника хатĕрĕсене усă курни, ача сачĕнчи пурнăç тата ытти самантсем те хăйсен вырăнне йышăннă. М. Карягинан «Сас палли çĕр-шывĕнче» кĕнекери калавсем чăваш чĕлхи пуянлăхĕпе паллаштараççĕ. Кашни калавĕ уйрăм сас паллинчен пуçланакан сăмахсенчен тăрать. Автор хайлавра кăткăс сюжет аталантарать, вĕсене тĕрлĕ жанрпа çырать.

Илемлĕ хайлава аса илӳ евĕр йĕркелес туртăм пур. Калуçă хăйĕн ачалăхĕ е пĕр-пĕр ачан пурнăçĕ пирки аса илет (Л. Сарине, З. Нестерова, Р. Шевлепи), аслăрах çулсенчи çынсен аса илĕвне

усă кураççĕ (Н.Медюкова, Н.Ишетнтей). Тепĕр чухне сăнарсен калаçăвĕнче Аслă Отечествăлла вăрçă (Н. Медюкован «Амăшĕн куççулĕ»), XX ĕмĕрĕн 50-60 çулĕсен йывăрлăхĕ (Л. Саринен «Пуян Мук», «Анне сакайĕнче çук») çинчен калани тĕл пулать. С. Асаматăн хайлавĕнчи сăнар ячĕсемпе вырăн ячĕсем (Кăтрак, Аслати, Саркун) чăваш халăхĕн аваллăхĕ çинчен аса илтереççĕ. Н. Ишентейĕн «Ташлакан купăс» кĕнекинчи асламăшĕн арчинче упранакан капăрлăх хатĕрĕсем каллех чăвашсен аваллăхĕ, амазонкăсен пурнăçĕ патне тавăраççĕ. Чĕр чунпа ачан хутшăнăвне сăнлакан калавсем уйрăмах чуна пырса тивеççĕ (Л. Саринен «Наçтукпа Мухтар», З. Нестерован «Чĕкеçĕм, чĕкеç», «Усравкка», Р. Шевлепин «Шăши тус парни»). Аса илсе калани чылай чухне пĕтĕм калав калăпăшне йышăнать, унăн урлă вĕрентсе калани пурнăçланать, тепĕр чухне пĕтĕмлетĕвне вулакана хăйне пурнăçлама сĕннĕ.

Вăтам çулхи ачасене моральпе этика, кăмăл-сипет проблемисем çинчен шухăшлаттаракан хайлавсем те сахал мар. В. Петров «Салтак сăн ӳкерчĕкĕ», «Тăпăлча», «Улăппа шăши», «Усал ят», А.В. Савельев-Сас «Хула ачи», «Шăнкăравлă пĕкĕ», С.Л. Павлов «Серепе», «Хуçăк турат», «Вунултта кайсан», «Амăшĕпе ывăлĕсем» хайлавĕсенче этем чысĕ, çамрăк çыннăн шухăштуйăмĕн аталанăвĕ, пурнăçри хутшăнусен кăткăслăхĕ çинчен ыйтусем хускатаççĕ.

Аслăрах çулхи ачасем валли Ордем Галин «Кĕтмен хăна», В. Эльпин «Пепке çуралсан…», Г. Краснован «Çĕрле лартнă улмуççи», А. Павловскаян «Саланнă кĕлте», Н. Петровскаян «Çил-тăманлă каç», Л. Маяксен «Хуçăлман хулă», П. Михайлован «Таса чун» тата ытти кĕнекесем пичетленсе тухрĕç. Кашнинчех çамрăк вăхăта, ку чухнехи улшăнусене, тин çеç пурнăç çулĕ çине тухнă çын тĕрлĕ йывăрлăхсем витĕр тухнине сăнласа кăтартаççĕ. Кăмăл çирĕплĕхне кура геройсем ырăлăх, тĕрĕслĕх çулне суйласа илеççĕ, усала хирĕç тăма пултараççĕ, юлашкинчен телейлĕ пулма пултараççĕ. Кĕнекесен авторĕсем çулланнă çынсем пулнине кура-и вĕсен геройĕсем хăйсен телейне ĕçре тупнине çырса кăтартасси характерлă. Çăмăл çулсем тем пек илĕртсен те вĕсем телее хăйсен аллипех туптама тăрăшаççĕ е çапла тума кирлине ăнланса илеççĕ.

Паянхи ача-пăча литературинче тĕрлĕ çитĕнӳри ачасене валли çырасси, литературăн пур тĕсĕсене те усă курасси аталаннă. Аслăрах çулхи авторсемсĕр пуçне çамрăк çыравçăсем те çак ĕçе хутшăнаççĕ. Малтан аслисене валли çырнă авторсем тĕрлĕ сăлтавсене пула кĕçĕн çулхи ачасене валли илемлĕ хайлавсем çырма пуçланине те асăрхама пулать. Çыравçăсем хăйсен ачи е мăнукĕ çуралнă хыççăн пултарулăх çине урăхларах пăхма тытăнаççĕ. Хайлавĕсене вĕсене халалласçĕ.

Ача-пăча поэзийĕнче кĕçĕн тата вăтам çулхи ачасене валли сăвăсем çырасси ытларах аталаннă. Ку енĕпе В. Тараватт, Г. Ирхи, П. Çăлкуç, Н. Карай, С. Асамат, К. Вишневская, Ю. Бороницын, А. Пăртта, С. Гордеева тата ыттисем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Ачасене валли çырнă сăвăсенче ачалăх тĕнчи ӳкерĕннĕ. Вĕсен вăййи, аслисене пулăшни, теттисен пурнăçĕ, ачасене ырă тата усал тĕслĕхсене ӳкерсе кăтартса воспитани тĕллевĕсене пурнăçлани пур. Сăвăçсем хайлавăсем чĕлхине пуянлатма аллитераци, ассонанс мелĕсене, евĕрлев сăмахĕсене ăнăçлă усă кураççĕ. Сăвăсем калăпăшăпе пысăк мар, ӳкерчĕклĕ, асра та хăвăрт юлăнаççĕ.

Б. Борлен, А. Пăртта, Ю. Броницын, В. Эктел сăвă кĕнекисемшĕн паллаштару ярăмĕсене усă курасси характерлă. Вĕсен кĕске те ансат сăввисем ачасене çулталăкăн тапхăрĕсем, пахчаçимĕçсем, ӳсен-тăрансем, килте тата зоопаркра пурăнакан чĕрĕ чунсем, шкул ачисем çулталăк тăршшĕнче пурнăçлакан ĕçсем çинчен, халăхăн пурлăх культурипе çыхăннă япаласем çинчен каласа кăтартаççĕ. Уйăхсен черетленĕвĕпе паллаштарнă май ял çыннисен кулленхи ĕçĕсем çинчен каласа кăтартнă. Çакă ĕç урлă воспитани парас тĕллеве пурнăçланипе танлашать.

XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче сăвăçсем ачесем валли ытларах кулăшла сăвăсем çырас туртăмлă пулни курăнать. «Юмористический смех часто бывает следствием любования автора своим героем, его остроумием, жизнерадостностью», – тет Н.А. Гуляев. Чăваш авторĕсене кулăшла сăвăсем еннелле туртăнни халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене тытса пыма тăрăшнинчен те килет, пулас. Ачасен пурнăçне кулăшла сăнлас ĕçре Н. Карайпа П. Çăлкуçăн сăввисем уйрăлса тăраççĕ. Вĕсен калăпăшĕ, йĕрке тăршĕ, ритмики, сăнласа кăтартакан объектăн ĕçĕ-хĕлĕ кĕçĕн çулхи ачан тĕнчекурăмĕшĕн юрăхлă, вăйă интонацийĕ, ăшă кулă

пурри палăрать. Н. Карайăн «Халĕ эпĕ пиллĕкре», «Ташлакан купăс», П. Çăлкуçăн «Карамель-тарамель», «Савăнăçлă тĕлпулу» кĕнекисене кĕрекен сăсвăсенчи геройсем хăйсен тыткаларăшĕпе çынсен ырă тата начар енĕсене палăртаççĕ. Юптаруri евĕр мухтанчăклăхран, хыт кукар пулнинчен, тирпейсĕрлĕхрен ытти çитменлĕхсенчен тăрăхлас, пурне те ĕненнинчен, тавçăрусăр пулнинчен, ашшăн кулас туртăм пур. Кулăшла ситуаци сасă кĕвĕлĕхне усă курнинче, геройсем хăйсемшĕн характерлă мар ĕçсене пурнăçланинче те палăрать.

Ытти литература тĕсĕсемпе танлаштарсан паянхи куна ача-пăча драматургийĕн аталанăвĕ хавшать. Юлашки пилĕк çул хушшинче пилĕк кĕнеке тухрĕ тесе те савăнмаллăх çук. Н.Г. Иванова хатĕрленĕ аслă çулсенчи драматургсен хайлавĕсен пуххи, Л. Сачкован «Шăпăрлан», В. Николаевăн «Пиневерĕн çĕнĕ тусĕсем» тата Л.Саринен «Наян мулкач» кĕнекисем кун çути курма пултарчĕç.

Вырăс тата ытти халăхсен ача-пăча литературин тĕслĕхĕсене чăвашла куçарса пичетлес ĕç те аталаннă. А.С. Пушкинăн юмахĕсем чăвашла уйрăм кĕнекен тухрĕç (Г. Юмарт), Х. Андерсенăн юмахĕсене И. Дмитриева куçарса кăларчĕ. «Асамлă кушел», «Итлемен упа çури» кĕнекесем тĕрлĕ халăхсен сăмахлăх тĕслĕхĕсемпе паллашатарççĕ. В. Кервен яппунсен «Исумбоси» юмахне ачасем патне çитерчĕ. Куçаруçăсем ача-пăча литературин классикине тата халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене куçарма ытларах кăмăллани сисĕнет.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Ача-пăча поэзийĕнче фольклор традицийĕсене усă курас уйрăмлăхсем.
2. Ачасем валли çырнă лирикăлла хайлавсенче шӳте, ăшă кулăна усă курас традицисем çирĕпленсе пынин сăлтавĕсем.
3. Литература юмахĕ жанрăн çĕнĕ тĕсĕсем çуралса пыни.
4. Ача-пăча прози çĕнĕ авторсемпе тата жанрсемпе пуянланни.

## ХАЛЬХИ АЧА-ПĂЧА ÇЫРАВÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

***Михаил Сениэл*** (1940) пултарулăхĕнче ачасем валли ятарласа çырнă хайлавсем сахал мар. «Малтанхи юр» (1969) сăвă кĕнекине кĕçĕн çулхи ачасене валли çырнă сăвăсем кĕреççĕ, «Шкул вальсĕ» кĕнекене аслă классенче вĕренекен ачасене халаллană. Поэт кĕнекисенче хăйĕн ачалăхĕ, çамрăклăхĕ, паянхи кунĕ çинчен, кашни тапхăрĕ çинчен хăй мĕн шухăшлани, ĕмĕтленни çинчен çырса кăтартать. М. Сениэлĕн лирика геройĕ çуратнă ашшĕ-амăшне, тăван-пĕтене, тантăшĕсене, кӳршĕ-аршăна, ял-йыша, пурнăçа юратма чĕнет. Сăвăç шутланă тăрăх, çын савăнăçĕ – санăн савăнăçу пулмалла. Çавăн чухне çеç çын хăйне телейлĕ тесе шутлама пултарать.

Çамрăксен хутшăнăвĕсем, пурнăçĕ ыйту та хумхантарать сăвăçа. Çак ыйтăва вăл лирикăлла хайлавсенче («Çĕр чунĕ», «Савăнăç куççулĕ», «Ытарайми») тата повеçсемпе новеллăсенче («Каçĕ сенкер, уйăхĕ çутă...», «Çутă шыв хĕрринче») хускатать. Яшлăх этем ĕмĕрĕн чи ырă та хаваслă вăхăчĕ, тесе палăртать çыравçă. Вăл пуласлăха чĕнекен йыхравлă тапхăр. Яш чух хĕвел те хĕрӳллĕрех, уйăхĕ те çутăрах, тавралăхĕ те илемлĕрех, ĕмĕт те çунатлă. Хайлавсенчи геройсем романтикăлла тĕнчере пурăнаççĕ, аслисен мухтавлă ĕçĕсене малалла тăсма хатĕр.

Паллă çынсен кун-çулĕ çинчен çырасси те характерлă сăвăçшăн. «Юлашки юн тумламĕсем» (1989) поэмăра вăл Çеçпĕл Мишшин чăваш поэзийĕнчи кун-çулне ӳкерсе кăтартать, унăн чун трагедийĕн тупсăмне уçса пăхма тăрăшать. Кĕрешӳçĕн тарăн та психологилле ӳкерĕннĕ монологĕсем унăн характерне палăртма кирлĕ. Поэмăра Çеçпĕл ытларах халăх шăпи, пурнăçĕ çинчен калаçать, хăйне тивĕççĕр айăпланишĕн пăшăрханать.

***Николай Ытарай*** (Николай Васильевич Васильев) (1925 – 2005) литературăри пултарулăхне ачасем валли çырас ĕçпе мĕн пуçламăшĕнченех çыхăнтарнă. Унăн тĕпрех кĕнекисем: «Юптарусем» (1958), «Чĕрĕлĕх» (1981), «Айпике» (1987), «Сăпка юррисем» (1989), «Алфавит – асăма вит» (1998), «Ырă тĕрленчĕк – ылтăн тĕпренчĕк» ( 2004) и др. 1941 çулта унăн «Çăмламас упа» юптарăвĕ «Сунтал» журналта пичетленсе тухать. Каярах «Юптарусем» кĕнеки те кун çути курать. Ачасем валли илемлĕ хайлав-

сем çырма сăвăçăна вĕсен пурнăçне, тĕнчин хăй евĕрлĕхне лайăх пĕлни пулăшать. Сăвăсенче ачан кулленхи пурнăçне, кун йĕркине сăнлани пур. Çавăнпа пĕрлех вĕсем вăйă урлă тĕрлĕ самантра хăйсене мĕнле тытмаллине вĕрентсе калаççĕ: апат вăхăтĕнче калаçма юраманни, сĕтел хушшинчен тухсан тав тăвасси, юлташсемпе туслă тата сăпайлă пуласси, чĕр-чунсене юратасси тата упрасси тата ытти те. Сăвăсенче тĕрлĕ пулăмсем, япаласем мĕншĕн çапларах пулнине ăнлантарса парасси пур. Сăвăç акăш шурă тинĕсре, сар кайăксем сарă тинĕсре пĕрмаях чӳкеннĕрен çавăн тĕслĕ пулнă тесе каласа парать («Чӳхенӳ» сăвă). Хăйĕн ăнлантарăвне халăх халапĕсем çинче никĕслет. Халăх сăмахлăхне чĕнӳ-йыхрав жанрĕпе çырнă сăвăсене çырнă чухне те усă курнă («Аслати», «Хĕвел тух!»). Сăвăçăн пултарулăх çулĕ çинчи тĕп тĕллевĕ – ача-пăчана савăнăç кӳресси.

***А. Тимофеев-Ыхра*** (1948 – 2004) сăввисенче чĕр чун сăнарĕсене калăпласси тĕп уйрăмлăхсенчен пĕри пулать. Кушак çури, хур аçи, чăхă, чĕпсем, автан тата тискер кайăксем пур: кашкăр, упа, мулкач, тилĕ... Кашни чĕр чунăн хăйĕн нуши пур иккен, тесе палăртать çыравçă. Килти чĕр чунсен пурнăçĕ çинчен çырни уйрăмах вырăнлă, вĕсем ачан пурнăçне çывăх. Сăвăсем ачасен тавракурăмне, ăс-тăнне, кăмăл-шухăшне пуянлатма тата аталантарма меллĕ. Вĕсем ачана çут çанталăка, пурнăça сăнама вĕрентеççĕ. Çут çанталăк пулăмĕсене сăнас тĕлĕшрен А. Ыхра хăй те пултаруллă пулни курăнать. Ю. Артемьев тĕпчевçĕ ăна «çут çанталăкăн вăрттăн пурнăçне сăнама пултарать», – тесе асăрхаса хăварать.

А.Тимофеев-Ыхран сăввисен чĕлхи сăнарлăхпа уйрăлса тăрать. Илемлĕх мелĕсенечен вăл темиçе хут каланине (повтора), евĕрлев сăмахĕсене, ятарлă лексикăна (ача-пăча сăмахĕ), танлаштарусене ытларах усă курать.

*Ме-ке-кек тютю парать,*
*Кăт-кăтик матя тăвать,*
*Пĕç-пĕç-пĕç шăши тытать,*
*Хам-хам-хам кил-çурт сыхлать.*
*Марине те ĕçсĕр мар,*
*Шăварать садра хăяр:*
*– Ӳс, хăярăм, хăвăртрах,*
*Кавăнран пул пысăкрах.*

А. Ыхран ачасем валли çырас пултарулăхĕ кĕске шӳтсем çырнинче те палăрать. Вĕсем ытларах хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ. Шӳтсене прозăпа çырнă. Вĕсем калăпăшĕпе пысăках мар. Текстри предложенисем те ансат. Шӳтсенче ачасене пĕлӳ парасси, тавракурăмне аталантарсси тĕпре. Вĕсенче ачана халиччен курман е илтмен япала пирки каласа парать. Пурнăç пулăмĕсем çине анлăн, пур енлĕн пăхма вĕрентет. Шӳчĕ сăмах вылявĕ, нумай пĕлтерĕшлĕхĕ çинче те никĕсленет. Тĕслĕхрен, çăлăн куçне шыракан ачасем тапса тăракан шывра этем пайĕсене асăрхасшăн.

***Георгий Орлов*** (1925) – сăвăç, прозаик, куçаруçă. Хăйĕн прозăлла тата лиро-эпикăлла хайлавĕсенче вăрçă паттăрĕсене мухтаса çырать. Çав вăхăтрах ачасем çинчен те манмасть. Унăн 1974 çулта пичетленсе тухнă «Тривим йысна калавĕсем» ачасаен юратнă кĕнеки шутланать.

«Тривим йысна калавĕсем» кĕнекере тĕп сăнар хăйпе шывра, çĕр çинче, вăрманта, улăхра пулса иртнĕ ĕç-пуçсем çинчен каласа парать. Кулăшла, çав хушăрах пулмасла халпсем урлă ачасене çут çанталăк тĕнчипе палаштарать, ăна юратма вĕрентет. Калавĕсене йĕркеленĕ чухне ваттисен сăмахĕсене тĕпе хурать: «Ир такăнсан каçченех», «Тухман çын тухсан тăман тухать» тата ыттисем те. Ӳстерсе каланисемпе танлаштарусем калăва шӳт сĕмне кĕртме май параççĕ. Тривим хăйне кайăк-кĕшĕксен, тискер кайăксен чи çывăх юлташĕ пек сăнлать. Вĕсене тытма сунара çӳрет çеç мар, кирлĕ чухне йывăрлаха лекнĕ чĕр чунсене пулăшма та пултарать.

***Петĕр Çăлкуç*** (1952 – 2009) «Тантăш» («Пионер сасси») хаçатра ĕçленĕ, ачасем валли сăвăсем çыранă. Унăн ачалăх тĕнчине сăнлакан статьисемпе очеркĕсем «Тантăш» хаçатра тата «Тетте» журналта пичетленнĕ. Кĕçĕн çулхи ачасене пĕлӳ, ăс-тăн парас, халăхăн историйĕпе тата сас палли тĕнчипе паллаштарас тĕллевпе вăл «Чăваш патшалăхĕн кун-çулĕ», «Саспалюкпа шиши шăши» юмахсем çырнă. Унăн сăввисене чылай композитор кĕвве хывса ача-пăча репертуарне пуянлатнă («Шкул карапĕ», «Елкăра», «Пукане»). П. Çăлкуç ытти халăх авторĕсен ачасем валли çырнă хайлавĕсене те чăвашла куçарнă: К. Чуковскийĕн «Муха-цокотуха», «Морозко» вырăс халăх юмахĕ тата эскимос-

сен чее тилĕпе тавçăрулă шăши çури пирки калакан, мордва халĕхĕн такапа кушак тата автан туслăхĕ çинчен калакан, нимĕçсен юр кĕлеткепе пулса иртнĕ тĕлĕнтермĕшсем çинчен калакан юмахсем.

2000 çулта П. Çăлкуçăн «Салтака каять така» кĕнеки пичетленсе тухать. Кунта 42 яхăна сăвă тата кулăшла юптарусем пичетленнĕ. Сăвăсенче çут çанталăк илемне сăнласси, вĕçен кайăксемпе чĕр чунсен пурнăçне ӳкерессi, ачасен пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнăвĕ пирки каласа кăтартасси тĕпре. Автор хăйĕн сăввисене çут çанталăк илемĕ тата чĕр чунсен мыскарисем çинчен çырма кăмăллани сисĕнет. Чылай чухне автор кулăш урлă ачасене çут çанталăк пурнăçĕ çинчен каласа парать, кулăш туйăмне аталантарма тăрăшать, кил картинчи чĕр чунсен пурнăçĕ çине урăхларах куçпа пăхма вĕрентет.

П. Çăлкуçăн кулăшĕ çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене, омонимсене усă курнинче ытларах палăрать. Кунсăр пуçне сăвăçа евĕрлев сăмахĕсем кулăшла ӳкерчĕк тума май параççĕ. Вăл халăх сăмахлăхĕнчи пулмасла халапсен традицийĕсене те усă курать.

*Кастрюльте, плита çинче,*
*Тутлă çеç яшка вĕрет.*
*Урамра, кил умĕнче,*
*Манăн тус, Кампур, вĕрет. –*
*Сивĕ, – тет вăл, – çил вĕрет.*
*Шăнтăм эп Кирук хытах.*
*Ман валли эс чей вĕрет,*
*Ăшăнасчĕ хăвăртрах.*

Тĕрлĕ туптармăшсем, пуçватмăшсем, логорифмăсем çырасси те П. Çăлкуçăн ăнăçлă пулса пырать. Сăмах вăййисем ачана чĕлхе пуянлăхĕпе паллаштараççĕ, унăн илемне туйма хăнăхтараççĕ, шухăшлама вĕретеççĕ.

Юлашки çулсенче П. Çăлкуçăн «Карамель-тарамель», «Савăнăçлă тĕлпулу» кĕнекесем пичетелнсе тухрĕç. Сăвăсен калăпăшĕ, йĕрке тăршшĕ, ритмики, сăнласа кăтартакан объектăн ĕçĕ-хĕлне, кулленхи уйрăмлăхĕсене ӳкерсе кăтартни кĕçĕн çулхи ачан тĕнчекурăмĕшĕн юрăхлă, вăйă интонацийĕ, ăшă кулă пурри палăрать. Кĕнекесене кĕрекен сăсвăсенчи геройсем хăйсен тыткаларăшĕпе çынсен ырă тата начар енĕсене палăртаççĕ. Юп-

таруri евĕр мухтанчăклăхран, хыт кукар пулнинчен, тирпейсĕрлĕхрен, ытти çитменлĕхсенчен тăрăхлас, пурне те ĕненнинчен, тавçăрусăр пулнинчен, ашшăн кулас туртăм пур. Кулăшла ситуаци сасă кĕвĕлĕхне усă курнинче, геройсем хăйсемшĕн характерлă мар ĕçсене пурнăçланинче те палăрать.

П. Çăлкуçăн сăввисем ӳкерчĕклĕ пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Пĕр-пĕр ĕç-пуç çинчен çырса кăтартнă май вăл вĕрентсе калать, пĕлӳ пама тăрăшать. Унăн геройĕсем пур çĕре те çитсе курма, пурне те пĕлме тăрăшаççĕ. Вĕсене хур мĕншĕн пĕр ура çинче анчах тăни, автан ирех ачасене мĕншĕн вăратманни, кăмпан шĕлепке пурри тата ытти ыйтусем кăсăклантараççĕ. Ачасем аслисене хăйсен ыйтăвĕсемпе чăрмантармаççĕ, хуравĕсене кĕнекере шырама тăрăшаççĕ. Сăвăç туслăх, тăван тавралăха тата чĕлхене юратасси, этикет тата ытти темăсене хускатать. Тепĕр чух унăн геройĕсем умне тĕрлĕ йывăрлăхсем те сиксе тухаççĕ. «Хама çеç, тен, хăналас?..» сăвăри ача виçĕ çырлана пилĕк пая епле пайламаллине пĕлеймест, хăйĕн те çиес килет, шăллĕсене те хăналамалла; пылак çиме юрататакан ача малашне мĕнле пулмалли пирки шухăшлать.

«Тăхăр уйăх» философилле поэмăра П. Çăлкуç ача амăшĕн варĕнче тĕвĕленсе çут тĕнчене килме хатĕрленекен ача таврашĕнчи этем тата çут çанталăк тĕнчинче мĕн пулса иртнине çанласа кăтартать. Çуралас ачана тăхăр савăнăçпа тăхăр хуйăх кĕтсе тăраççĕ иккен. Вăл макăрса мар, «юрласа çуралать».

***Лидия Сарине*** (1950) Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ. Нумай çул хушши ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçленĕ, «Тăван Атăл» журналта вăй хунă. Хăйĕн ачасем валли сырнă калавĕсене, сăввисене, пьесисене тĕрлĕ хаçат-журналта пичетлесе тăрать. Чылайăшĕ уйрăм кĕнекен тухма пултарчĕç. Юлашки вăхăтра ачасем валли çакăн пек юмахсемпе калавсем çырса кăларчĕ: «Тăварлă хурăн шывĕ», «Йӳçĕ çырла», «Чĕрĕп», «Кăс-кăс», «Сарă хĕвел çаврăнăш», «Лекрĕн-и?», «Кукамайăн сар чехи», «Ăçта пурăнатăн, Оля?», «Цирк курма кайни», «Чи паттăрри», «Хĕрлĕ тинĕс», «Çумăр тумламĕ», «Мухтанчăк».

Çыравçă ачан психологине аван пĕлни сисĕнсе тăрать. Хайлав валли сăнарĕсене вăл куленхи пурнăçран илет. Вĕсен пирĕн пекех ырă тата начар енсем пур. Çавăнпа та вĕсем вулакана

уйрăмах ҫывăх. Л. Саринен хайлавĕсен тĕп тĕллевĕ – ҫамрăк ăрăва пур енлĕн аталантарасси, тивĕҫлĕ воспитани парасси. Тĕрлĕ ситуацисене ӳкерсе кăтартса ачана тĕрĕс ҫул ҫине тухма пулăшать, ырăпа усала уйăрма вĕрентет, йăнăшсем тăвасран асăрхаттарать.

***Михаил Мерчен*** (1954) хальхи ҫамрăксен проблемисене хăйĕн хайлавĕсенче хускатать. Кĕҫĕн ҫулхи ачасене валли ҫырнă сăввисем те пур унăн: «Сăпка юрри» «Чăваш чĕлхишĕн», «Аннене сума сунса», «Пурпĕрех хитре кĕрхи ҫанталăк», «Эпĕ ылтăн чăмăркки»... Прозăлла хайлавĕсене ҫыравҫă аслăрах ҫулхи вулакана халаллать. Калавĕсемпе повеҫĕсенче вăл юратуту темине хускатать, конфликчĕ те юрату виҫкĕтеслĕхĕ тавра аталанать. Сюжет аталаннă май воспитани ыйтăвĕсене те хускатать.

Юлашки вăхăтра М. Мерченĕн «Хĕрлĕ ҫиҫĕм», «Сарă тюльпан», «Пыллăхраччĕ ҫамрăк ҫăкасар» хайлавĕсем республикăри хаҫат-журналсенче пичетленсе тухма пултарчĕҫ. Кашнинех автор хăй ҫырнă сăвăпа эпиграфран пуҫлать. Юратури тасалăх, ҫамрăксен хушшинчи, аслисемпе кĕҫĕннисем хутшăну ҫинчен ҫырать вăл. Вăл сăнлакан хутшăнусенче хĕр ҫирĕплĕхне пула ҫамрăк мăшăр телейлĕ пулма пултарнине, каччă иртнĕ кӳренӳсене манманни хĕре вилĕм патне илсе ҫитернине, каччăн кӳренĕвне пула пĕр пĕрне юратакан чĕресем яланлăхах уйрăлса кайнине асăрхама пулать. Геройсем пĕр пĕрне ăнланма васкаманнине, хăйсен кăмăлне мала хунине пула тепĕр ҫынна хур тăваҫҫĕ, вилĕм патне илсе ҫитереҫҫĕ. Сăпайлă, ырă кăмăллă геройсем вара яланлăхах юратнă ҫынран уйрăлса каяҫҫĕ, телейсĕр тăрса юлаҫҫĕ. Ҫамрăк мăшăрсен туйăмĕсене тĕрĕслеме ҫыравҫă вĕсен умне тĕрлĕ йышши йывăрлăхсене кăларса тăратать: Ингăпа Кронид ҫурхи шыв урлă каҫаҫҫĕ, вăрă-хурахсемпе кĕрешеҫҫĕ, Зинăпа Леонид хушшине хула каччи кĕрсе тăрать, Сергейпа Рита тивĕҫсĕр айпăланине чăтса ирттереҫҫĕ. Геройсем ҫут ҫанталăк кăларса тăратакан йывăрлăхсене чиперех ҫĕнтереҫҫĕ пулсан, усал ҫынсен серепине сирме вĕсене йывăртарах килет. Сергейпа Рита ҫеҫ юратура телей тупма пултараҫҫĕ. «Юратмасăр ан пĕрлешĕр», – тесе калать ҫак тĕслĕхсемпе автор вулакана. Ҫыравҫăн хайлавĕсенче илем тени пысăк пĕлтерĕш йышăнать.

Илеме вара хитре хӗр пӗлтерет. Вăл тӗнче илемӗпе, идеал сăнарӗпе ҫывăх. Каччă хӗре пӗрремӗш хут курсанах килӗштерсе пăрахать, унăн чунӗнче кӗвӗ янăрама тытăнать. Пӗрре курса килӗштерсе пăрахнă хӗр пурнăҫ ҫулӗпе утмалли шанчăклă юлташ пулса тăрать. Ҫиелти илем тепӗр чухне ниме тăман хитрелӗх пулнине те асăрхама пулать.

***Любовь Мартьянова*** (1950) Сӗнтӗр Вăрри районӗнче ҫуралса ӳснӗ. Учитель, журналист пулса ӗҫленӗ. Сăвăсем ҫырнисӗр пуҫне ачасем валли те сахал мар калав пичетлесе кăларнă: «Йăлăмра», «Качакасем», «Ăнланчӗҫ», «Каҫару», «Туслăх», «Малька», «Пурте пӗриншӗн». Вӗсенче автор ăса вӗрентсе, тӗслӗхсемпе ҫирӗплетсе, пӗтӗмлетсе ҫырать. Сюжет никӗсене те вăл ача-пăчан кулленхи мыскарисене, вăййисене илет, вӗсен пурнăҫӗ ҫинчен ӗнентерӳллӗ каласа кăтартать. Ҫыравҫă калавӗсенче тапратакан темăсем аслисемпе ачасем хушшинчи хутшăну, нумая хапсăнмалла мар, вăрлани, ҫын япалине тытни – киревсӗр ӗҫ, хăвăнтан кӗҫӗннине ан кӳрентер, тусу хăвăнтан ăслă пултăр, ватта хисепле, ҫиччӗ виҫ те пӗрре кас, ҫапма пӗлмен пушă каялла пырса ҫапать, чавса ҫывăх та ҫыртма ҫук тата ыттисем те ваттисен сăмахӗсене тӳр килеҫҫӗ. Унăн чылай калавӗ шкул программине кӗнӗ.

***Ева Лисина*** (1939) Патăрьел районӗнчи Именкасси ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Мускаври Тимерязев ячӗллӗ ялхуҫалăх академинче пӗлӳ пухнă. Чăваш литературинче ачасем валли калавсемпе юмахсем, повеҫсем ҫырнипе, ют ҫӗр-шыв авторӗсен драмăлла тата прозăлла хайлавӗсене куҫарнипе палăрнă. Унăн паллăрах хайлавӗсем: «Ҫӗнял ачисем», «Хупах хăлха Илюк», «Тепӗр ҫул та килетпӗр», «Пăркка мучи калавӗсем», «Хӗле кӗрес умӗн» тата ыттисем те. Ҫыравҫăн чылай кӗнеки республикăра, ҫӗр-шывра тата чикӗ леш енче те ырă ята тивӗҫнӗ, тӗрлӗ премисем илме пултарнă.

Е. Лисина хайлавӗнче кашнинчех ача сăнарӗ тӗпре, ҫавăнпа пӗрлех чун ыратăвӗ те пур. Вӗсем пысăк тӗнче умӗнче черченкӗ, ҫав хушăрах чун хăвачӗпе вăйлă. Ырату ҫинчен пӗр вӗҫӗм ҫырни тасалăх, ҫынлăх патне илсе ҫитерет. Ҫыравҫăна илемлӗ хайлавсем ҫырма ăнсăртлăх, чун кӳтсе килни хистет теме май пур. Пӗрле ӗҫлекен хӗрарăм ачине валли анăҫ авторӗсен юмахӗсене илнине курсан ҫыравҫă пуҫӗнче тӗрлӗ юмах сюжечӗсем ҫуралаҫҫӗ. Лавккаран слон теттене илсе кил-

сен, хӗрачана ун ҫинчен юмах каласа пама тивет, «Хупах хӑлха Илюк» кӗнеке ҫуралать. Чирлӗ аппӑшне пӑхса кӳтсе ҫитнӗ чӗре «Ҫӑкӑр чӗлли» калава ҫыртарать.

Е. Лисина Мускавра вӗреннӗ чухне, пиччӗшӗ кӑтартса пынипе, пысӑк пахалӑхлӑ илемлӗ кӗнеке нумай вулать. Лайӑх традицисем ҫинче ҫитӗннӗскер вӑл вӗсен витӗмне хӑйӗн хайлавӗсене ҫырнӑ чухне те усӑ курать. «Улӑхпи» калавра Моис Ветерникӑн «Сенкер кайӑк», Н. Гогольӗн «Миргород», В. Распутинӑн «Матерӑпа сывпулашни» хайлавӗсенчи палӑрӑмсене асӑрхама пулать.

Е. Лисина хайлавӗсем Б. Пастернакӑн, Г. Айхинни пекех чун ыратӑвӗ ҫинче хывӑнаҫҫӗ. Вӗсен геройӗсем те тӗнче ҫине пӗрремӗш хут курнӑран шалт аптранӑ пек пӑхаҫҫӗ. Чылай хайлавне Е. Лисина шухӑшласа кӑларнӑ. Вӗсен шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ: «Хупах хӑлха Илюк», «Тепӗр ҫул та килетпӗр», «Пӑркка мучи калавӗсем», «Большие луга» повеҫӗ. «Ҫӗньял ячисем», «Ҫӑкӑр чӗлли», «Хӗле кӗрес умӗн» тата ытти калавӗсене вара пурнӑҫра чӑн пулнӑ самантсене аса илсе ҫырнӑ. Ку калавсен пахалӑхӗ – ҫыравҫӑ май пур таран хӑй ҫинчен пӗр пытармасӑр ҫырса кӑтартнинче палӑрать. Автор ас тӗввине сӳтнӗ чухне унӑн ӑс-тӑнӗ те, кӑмӑл екки те палӑрать, вӗсен урлӑ ҫыравҫӑ хӑй кӑмӑлӗпе сӑпатне сӑнласа парать. Суясси, улталасси, вӑрттӑнлӑхсемпе аванмарланнӑ самантсене пытарса хӑварасси ҫук унӑн. Автор сӑнарӗ вулакан куҫӗ умне хӗрача ҫинчен мӗн ҫырнинче тӗкӗр ҫинчи пек тухса тӑрать. Ҫулланса ҫитнӗ ҫыравҫӑ аслӑ тӗнче ҫине ача куҫӗпе пӑхма пултарать. Вӑл ача чухнехи пурнӑҫ хурланчӑкӗн ҫиппине паянхи куна татмасӑр илсе тухма пултарнӑ.

Калавсенчи йывӑр терте пӗчӗк ачасен пысӑк хуйхи витӗр куратпӑр. «Ҫӑлтӑрсем курӑнман каҫ» калавра ашшӗпе амӑшӗ хушшинчи хирӗҫӗве пачах палӑртман. Ҫемье саланассине виҫҫӗри Катя чун ыратӑвӗ витӗр туять. «Ҫӗньял ачисем» повеҫре ашшӗне курмасӑр, ун сассине илтмесӗр, унпа юнашар ларса калаҫмасӑр, ашшӗ хӳтти мӗнне пӗлмесӗр ӳснӗ ачасен хурлӑхӗпе тунсӑхӗ ҫинчен аса илсе ҫырнӑ. Хӗрачасен тата арҫын ачасен сӑнарӗсене калӑпласси пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑрать. Пӗрре «йӑл-йӑл куҫ харшиллӗ, утмӑл турат пек кӑвак

куçлă е кĕр каçĕ пек хура çӳçлĕ, хура куçлă та йăлтăр кулăллă хĕрачасем» çинчен, тепре «ши-и! шăхăракан, пĕр-пĕринпе шăла çыртса çапăçакан, хĕрачасене ура явса çӳрекен кирлĕ пулсан пурне те хӳтĕлеме хатĕр паттăр арçын ачасем» çинчен çырать автор. Анчах та хĕрачасен шалти тĕнчине витĕр кăтартса парать, арçын ачасен ĕçĕсем çинчен каланипе çеç çырлахать, кăмăл туйăмне вара шала кĕрсе тĕпчеместь. Ку вăл пĕтĕмпех хăй тӳссе ирттернĕ, пĕрремĕшле туйăмсене сăнласа кăтартас туртăмлă пулнинчен килет. Çыравçă хĕрачан черчен чунне вулакана уçса кăтартать. Ун сăнарĕ урлă вулакана куçран тĕксен те тĕлĕнес çук япаласем çине тĕлĕнсе кайса пăхма вĕрентет. Вăл Маринен кăмăл-туйăмĕ çинчен каласа памасть, ăна кăтартса парать, çавăнпа та хĕрачан кăмăл-туйăмне те ăс-тăнпа мар, ытларах чĕрепе йышăнмалла.

***Юхма Мишши*** (1936) ача-пăча прозипе поэзийĕн, драматургийĕн аталанăвĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнакан çыравçă. Вăл литературăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе ĕçленисĕр пуçне ача-пăча литературинчи тĕпрех темăсене аталантарать: çут çанталăк пурнăçĕ, халăх историйĕ, ачасен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, пултаруллă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ тата ыттисем те.

Пултарулăх пуçламăшĕнче çыравçăшăн 20-30-мĕш çулсенчи пионер тата комсомолец организацийĕсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки çырасси, вĕсен кунçулне çутатасси характерлă пулнă. 1964 çулта тухнă «Палăк» повеçре Микиш Кибеков паттăр комсомолецăн тавракурăмĕ аталанса пынине витĕмлĕн кăтартса пама пултарнă. Микиш ялти пултаруллă ачасене пуçтарса «Хĕрлĕ çăлтăр» отряд йĕркелет. Отряд ял пурнăçне ырă енне улăштарас тĕлĕшпе чылай тăрăшса ĕçлет. Пулăшу комитечĕ йĕркелет, чухăнсемпе пĕччен пурнакан тăлăх туратсене, ватăсене пулăшать. Ачасем ял çумĕнчи лачакана канав чавса типĕтеççĕ, унта сад ĕрчетеççĕ. Микиша ял пуянĕсем ура хурсах тăраççĕ. Кĕрешӳре çамрăкăн характерĕ çирĕпленет, вăл кулаксен хура ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Колхоз йĕркеленĕвне тем пек чăрмантарма тăрăшакан кулаксем юлашкинчен хастар çамрăка тискеррĕн вĕлереççĕ.

Хайлава çамрăк ăрăва тивĕçлĕ тĕслĕхсем çине таянса революцилле воспитани парас тĕллевпе çырнă теме пулать. Автор

самана, истори палисене тĕплĕн сăнлать, çамрăкăн аталанăвне, чун пăлхавне кăтартса пама пултарать.

«Шуракăш тĕкĕ» повеçре те чăваш çĕрĕнчи малтанхи пионерсен ĕçĕ-хĕлне, кĕрешĕвне сăнласа кăтартнă. Хайлавăн тĕп шухăшĕ – пĕрлĕхре – вăй, тени пулать. Турханкасси ялĕнчи ачасем Пинер, Сентти, Евген чухăн çемьесенче пурăнаççĕ, вĕсем ял пурнăçне улăштарас ĕçе активлă хутшăнаççĕ.

Юхма Мишши юмахсем çырнă чухне халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене тĕпе хурать. Унăн «Хăлат юмахĕсем» тата «Пӳрнескепе унăн тусĕсем» юмахсем пур. «Пӳрнескепе унăн тусĕсем» юмаха Юхма Мишши кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă. Кунта пĕрлешӳллĕ ĕçре телей тупасси тĕп шухăш пулать. Юмахри тĕп сăнар Пӳрнеске – тĕрĕслĕхшĕн, ырă ĕçшĕн, тăнăçлăхшăн кĕрешекен пĕчĕк пукане. Çĕр çинче ырри усала çĕнтерет тесе пĕтĕмлетет автор хăйĕн хайлавне. Пӳрнескепе унăн тусĕсен çулçӳревне, приключенийĕсене сăнласа кăтартма автор халăх сăмахлăхĕнчи, мифологийĕнчи сăнарсене, тĕнче литературинчи литература юмахĕн традицийĕсене усă курать. Ачан тавракурăмне аталантарма, воспитани теллевĕсене пурнăçлама май паракан илемлĕ хайлав калăплать.

Çыравçăн хайлавĕнче чăн пурнăç пирки калани тата юмахри асамлă тĕнче пĕрлешсе тăраççĕ. Чăн малтанах ĕç пуç пулса иртекен вырăна конкретлă ят панă: Атăл варринчи утрав. Юмахçă Атăлне, унăн анлăшне, утрав çинчи ӳсен-тăрансене, унăн çут çанталăкне тĕплĕн, реализмла сăнласа парать. Çак чăнлахпа юнашарах асамлăх та пулма пултирнине палăртнă. Пӳрнеске кĕлеткипе пĕчĕк пулнине пула çийĕнчех куçа курăнмасан та пултарать. Малашнехи ĕçсем вăрманта, пуш хирте, Леш тĕнчере пулса иртеççĕ. Ку вырăн ячĕсене палăртман. Юмахçă сăнласа кăтартакан тĕнчен калăпăшĕ чăн пурнăçрине çывăх. Çавăнпа та геройсем унăн ырлăхĕпе усă курма пултараççĕ: Пӳрнескен тумтирне çулçăран, чечексенчен çĕленĕ, аслашшĕне шырама ача юман çулçи çине ларса тухса каять, Пӳрнескен юлташĕсем чечек пылне, çырла çисе пурăнаççĕ тата ытти те. Леш тĕнчере вара пысăккисемпе пĕчĕккисем хушшинче нимле уйрăмлăх та çук.

Хайлавра ырӑпа усал хушшинчи хирӗҫтӑрӑва сӑнласа кӑтартасси тӗпре. Ҫавна май сӑнарсене ыррисемпе усаллисем ҫине пайлама пулать. Пӳрнескепе унӑн тусӗсем: Мӑкӑньпи, Тӗпеш лӗпӗш, Юртти каюра, Ҫилҫунат лаша, Мӑр-мӑр кушак, Аньяр йытӑ ҫури, Кампур йытӑ, аслашшӗ – ыррисем шутне кӗреҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗринпе яланах туслӑ пурӑнаҫҫӗ, вӑйӑсем выляҫҫӗ, юрӑсем шӑратаҫҫӗ. Йывӑрлӑха лекнисене пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ, тӑшмана та хӗрхенме пултараҫҫӗ. Усалсене Леш тӗнче хуҫи Чике старик хур сухал ертсе пырать. Унӑн тарҫисем – эрешмен, кашкӑрпа тигр, ӑҫтаха ҫури, ҫил ачисем. Ку геройсен хушшинче вара нихӑҫан та ҫураҫулӑх ҫук. Вӗсем пӗр-пӗринпе темшӗн те хирӗҫеҫҫӗ, ятлаҫаҫҫӗ, тӳпелешеҫҫӗ. Чее, япӑлти, усал пулнипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ.

Юмахра калуҫӑ кашни сӑнара тӗплӗн сӑнарласа кӑтартать. Вӑл мӗн тӑхӑннине, питне-куҫне ӳкерет. Ҫавӑн пекех чӗрӗ мар япаласене чӗрӗ пек сӑнарлани те, вӗсене кӗлетне уйрӑмлӑхӗсене палӑртни те пур. Чике старик хур сухал кача пӳрне пек пӗчӗк. Анчах та унӑн сухалӗ хӑйӗнчен 33 хут вӑрӑмрах иккен. Унӑн пӗтӗм вӑй хӑвачӗ ҫак сухалта упранать. Чике старикӗн сӑн-сӑпатне сӑнарласа кӑтартни А.С. Пушкинӑн «Руслан и Людмила» юмахӗнчи Дятька Черномор сӑнарне тӳр килет теме пулать. Леш тӗнчене анакан юлташсене ҫил ачисем тапӑнаҫҫӗ. Калуҫӑ кунта ҫурҫӗр ҫилӗ, кӑнтӑр ҫилӗ ячӗсене асӑнать. Ку ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсемпе паллаштарнипе танлашать. Ҫил ачисем сӑнӗпе илемсӗр. Пӳрнескепе унӑн тусӗсем вӗсемпе ҫапӑҫнӑ май сӑмсисенчен ҫыртаҫҫӗ, пичӗсенчен чаваҫҫӗ, кӗлеткинчен хӗҫпе чикеҫҫӗ.

Юлашкинчен Пӳрнескепе унӑн тусӗсем Мӑкӑньпине ирӗке кӑларма пултараҫҫӗ, суккӑрланнӑ аслашшӗне чӗрӗ шыв пулӑшнипе куракан тӑваҫҫӗ. Юмахра туслӑха мухтаса каласси тӗпре. Пӗр-пӗрне йывӑрлӑхра пулӑшакан юлташсем тем пек усала тата йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пултараҫҫӗ. Юмахри ӗҫсем питӗ хӑвӑрт пулса иртеҫҫӗ. Автор асамлӑх паллисем кулленхи пурнӑҫра юнашарах тӗл пулма пултарнине палӑртать.

Юхма Мишши ачасем валли «Хӗвел хӑлхи» сӑвӑ кӗнеки ҫырса кӑларать. Кӗнекене кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли ҫырнӑ сӑвӑсем кӗреҫҫӗ. Автор сӑмахлӑх традицийӗсене асра тытса ача-

сене ĕçе юратма, хăйсене тĕрлĕ ситуацинче мĕнле тытмаллине вĕрентсе калать, ачасен пурнăçне тĕрлĕ енлĕн сăнлать. Пуканесемпе вылякан Элпине çинчен çырнă май вăл хăнасене пăхмалли йĕркепе паллаштарать, сăмах вăййине усă курса ăс-тăна çивĕчлетет, выльăх-чĕрлĕхпе чĕр чунсен пурнăçĕ, пахчара ӳсенкен ӳсен-тăрансем çинчен каласа кăтартать, ĕçченлĕхе вĕрентет. Кĕнекере çут çантăлăк пулăмĕсемпе, халăх искусствипе паллаштаракан сăвăсем те пур. Сăвăсем çырнă чухне М. Юхма халăх педагогикине тĕпе хурать.

М. Юхма ача-пăча драматургине аталантарас тĕлĕшпе те чылай ĕçлет. Унăн «Пӳрнескепе унăн тусĕсем» юмахне 1971 çулта виçĕ серилле пьеса инсценировка туса «Пӳрнескепе Мăкăньпи» ятпа телевидени валли хатĕрлеççĕ. Пьесăна кĕвĕпе тата юрăсемпе илемлетеççĕ. 1976 çулта çырнă «Хĕвел тĕрри» юмахран та пьеса хатĕрлеççĕ. Вăл халăхăн ырă йăли-йĕркипе паллаштарать, ырă усала çĕнтернине çирĕплетет. Тахçан авал çĕр питне виçĕ хĕвел çутатса тăнă тет. Çынсем ку чухне хурлăх мĕнне пĕлмен. Пĕррехинче куштансем Каçал ятлă паттăра хăйсем майлă çавăраççĕ те икĕ хĕвелне хăваласа яма хушаççĕ. Виççĕмĕшĕ хăех тарса пытанать. Тавралăхра яланлăхах тĕттĕм пулса тăрать. Çĕр пичĕ сивĕнсе çитет. Каçалĕ вара хăйне телейлĕ туять. Мĕншĕн тесен унăн савнийĕ Илемпи юнашар. Анчах та таврари хура халăх нушаланса пурăннине курсан Каçал хăй мĕн тери начар ĕç тунине ăнланса илет. Вăл хĕвеле шырама тухса каять.

Юхма Мишшин ытти пьесисем: «Чуста-паттăр», «Мулкач валли çĕнĕ кĕрĕк», «Улăм пукане». Çыравçă ытти халăх литературинчен ачасем валли çырнă пьесăсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Ингуш халăх юмахĕ тăрăх Саид Чахкиев çырнă «Йĕкĕрешсем» пьесăна, Литва авторĕн Казис Салăн «Инкек куçа çитет» комедине, Юрий Коринецăн «Пĕчĕк Баба-Яга е Пĕчĕк тухатмăш» пьесине, Венгр драматургĕн Урбан Гюлан «Сенкер Петрик» пьесине, Фазиль Искандерăн «Джамхун – пăлан ывăлĕ» пьесине куçарать.

***Валентина Тарават*** (1946) сăвăç, прозаик, куçаруçă, композитор. Хăйĕн хайлавĕсене вырăсла та, чăвашла та çырать. Сăвăсенче автор ача-пăча кăмăлне уçса пама пултарни курăнса

тăрать. Вăл сахал сăмахпа шухăша витĕмлĕн уçса пама тăрăшать. Ачан тĕнчине витĕмлĕн кăтартса пама пултарать. Унăн сăввисенче ачасен сăвăнăçне, уявĕсене тата ĕçĕсене ытларах сăнланă. Ача та аслисемпе пĕрле ĕçлет, вĕсенчен вĕренсе пырать, хăйне валли савăнăç тупать. «Ĕçчен мăнук», «Перчетке», «Портниха», «Маленькая хозяйка», «Заботы» сăввисенче ачасене ĕçе юратма, ваттисене пулăшма вĕрентесси, вĕсен кулленхи ĕç-хĕлне кăтартсасси тĕпре. В. Тарават хайлавĕсенчи тĕп сăнар яланах ача. Вĕсенче çыравçă тавралăх, пурнăç çине ача куçĕпе пăхни курăнать.

В. Тарават ачасем валли калавсем те çырать. Вĕсенче вăл çутçанталăк, тавралăх çинчен тата ачасен ӳссен лайăх çынсем пулма тăрăшмалли çинчен калать. Калавсен сюжечĕсене те çыравçă ачасен пурнăçĕнченех илет. Хайлавсенче ачасен пурнăçне сăнласа парасси, вĕрентсе каласси çеç мар, тĕрлĕ пулăмсем çинчен шутласа пăхма сĕнни пур. «Ырă кăмăл» калавра, тĕслĕхрен, кайăксен ячĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен шутласа пăхма сĕнет. Ачасен тавçăрулăхне аталантарать. Калавсенче аслисен сăнарĕсем те тĕл пулаççĕ. Вĕсем ачасене пулăшма тата канаш пама яланах хатĕр, шанчăклă юлташсем тата вĕрентекенсем пулса тăраççĕ. В. Тараватӑн паллăрах калавĕсем: «К бабушке в гости», «Доброта», «Хураçкапа хура хăлха» тата ыттисем те. Кĕске калавсемпе сăвăсенче В. Тарават ачасене çут çанталăк, ыр кăмăллăх тĕнчипе палаштарать, чĕр чунсен, кайăк-кĕшĕкĕн, ӳсен-тăрансен пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать, аслисемпе ачасем тата ваттисемпе ачасем хушшинчи хутшăнусене ӳкерсе кăтартать. Автор ачасене яланах вĕренӳ патне туртăнма, тăван чĕлхене, литературăна юратма вĕрентсе калать.

***Раиса Сарпи*** (1951) ачасем валли сăвăлла, прозăлла тата драмăлла хайлавсем çырнипе палăрса тăрать. Унăн «Асанне юмахĕ», «Пĕрремĕш утăмсем», «Çăлтăрлă ĕмĕт», «Пукане качча каять» пьесисене пукане театрĕн сцени çинче вылянă. Шкул çулне çитмен тата кĕçĕн çулхи ачасем валли вăл тăхăр кĕнекене яхăн пичетлесе кăларнă: «Пляшет, пляшет Илемпи», «Тăрнаккай», «Небесные кони», «Первый лист», «Выходи на улицу», «Парне», «Транкки», «Кам-ши эпĕ?», «Пукане». Çыравçă халăх юмахĕсене усă курса «Тăрнаккай» тата «Пукане»

юмахсем çырнă. Юмах сюжечĕсене вăл халăх сăмахлăхĕнчен илсе çĕнетет, сăнарсен йышне хушать, воспитани тĕллевĕсемпе пуянлатать, сăвăласа çырать. Юмахри ĕç-пуç Нăрваш Шăхаль ялĕнче пулса иртнине палăртса автор хайлава реализм паллисене кĕртет, ачасен пурнăçне çывăхлатать. Кашни юмахĕнчех тавçăрусăрлăха, наянлăха тиркесе каласси, ĕçе юратма вĕрентесси тĕпре. Р. Сарпин сăввисем халăх педагогикипе пуян. Унăн сăнарĕсем яланах ĕçре: йывăç лартаççĕ, пахчара ĕçлеççĕ, аслисене пулăшаççĕ. Хĕр ачасене ятарлă воспитани парасси те сăвă урлă пурнăçланса пырать. «Маçтăр» сăвăра вăл çĕвĕç ĕçне хăнăхса пыракан хĕрачан ĕçĕсене сăнарлать. Пукане валли çĕлеме хăнăхнăскер, вăл кĕçех шăллĕпе йăмăкĕ валли те тумтир ăсталама тытăнать. Илемлĕ хайлавсенче çутçанталăка, хуçалăх пурлăхне, несĕлсен еткерне упрама вĕрентесси те хумхантарать çыравçăна. Ачана ташăпа кĕвве ăнлантарас, чĕлхе илемне туйма вĕрентес ыйтусем те канăç памаççĕ, вăл ачана пур енлĕн аталанма пулăшакан сăвăсем те çырать. Сăнарлă чĕлхе урлă сăвăç çут çанталăк ӳкерчĕкĕсене ӳкерет, çанталăкăн тĕрлĕ пулăмĕсемпе паллаштарать. Сăвăç чĕлхе пуянлăхĕпе тирпейлĕ, пĕлсе усă курать. Тĕрлĕрен ӳкерчĕксем тума тăрăшать, шухăша уççăн та сăнарлăн калать. Р. Сарпин сăввисенче тĕрлĕ çулхи ачасен психологине, тĕрлĕ лару-тăрура мĕнлерех палăрнине те кăтартса пама тăрăшнă.

«Саплăклă шăлавар» калавра та ĕçченлĕхе вĕрентсе каланă. Илемпи хĕрача хăй наянлăхне çĕнтерсе çĕтĕлнĕ шăлавар çине саплăк лартать. Саплăкпа çӳреме аванах маррине курать, япалана çĕнĕ чух упрамаллине ăнланса илет.

***Зоя Нестерова*** (1925) Красноармейски районĕнче çуралса ӳснĕ. Нумай çул хушши шкулта ачасене вĕрентнĕ. Аслисем валли çырнă хушăрах çамрăк ăру çинчен те манмасть, тăтăшах вĕсем валли кĕнекесем кăларать: «Чее мулкач» пьесăсем, «Ванюш курнă тĕлĕнтермĕшсем» калавсен пуххи, «Тăвата асамçă» литература юмахĕсен пуххи. З. Нестерова юмахĕсенче асамлă тĕнчепе куленхи пурнăç ӳкерчĕкĕсем пĕрлешсе тăраççĕ. Асамлă тĕнче çинчен калани урлă пĕлӳ, воспитани парас тĕллевсем пурнăçланаççĕ. Çыравçă çут çанталăк, ӳсен-тăран пурнăçĕ çинчен ытарлă каласа пама кăмăллать. «Тăвата асамçă» юмахра

çулталăкăн тăвата асамлă тапхăрĕ пирки сăмах пырать пулсан, «Улмуççи» хайлавра пахчара ӳсекен йывăççен пурнăçĕпе палаштарнă. Калăва ăнсăртран шăтса ӳçнĕ улма йывăççи ячĕпе йĕркеленĕ. Вăл хĕллехи сивĕрен те, тымарсене кăшлакан шăширен те хăрать. Çав хушăрах хĕртсе пăхакан çурхи хĕвеле курса савăнать, ытти йывăççем пекех улма çитĕнтерсе курасшăн. Анчах, ăнсăртран шатса ӳснĕ, этем алли пăхман, ачашламан йывăçран тутлă панулми пулаймĕ. Хăйĕн йӳçĕ панулмийĕсене ачасем çĕре ывăтнине курсан вăл питĕ пăшăрханать. Вăл та ытти йывăççем пекех, тутлă çимĕç çитĕнтерме ĕмĕтленеччĕ-çке. Пахчара ӳсекен пур йывăç та ырă кăмăллă мар иккен. Хăйсем нуша тӳснисем ыттисене те çавнах сунаççĕ, пулас йывăрлăхсем çинчен асăрхаттараканнисем те пур. Мучи йывăçа килес сивĕсем тивесрен тунă ĕçене курсан, кайран ăна тутлă йывăçпа сыпма шухăшланине пĕлсен çамрăк улмуççи чунтанах савăнать.

***Николай Ишентей*** (1953) «Чĕвĕлпи» (1993), «Çĕрпин чечек çĕршывĕнче» (1995), «Çавра кӳлĕ хĕрринче» (2001), «Хӳреллĕ дневник» (2004), «Тĕрĕллĕ çыру тĕлĕнтермĕшĕсем» (2005), «Ташлакан купăс» (2006). Çыравçă шкулта ĕçленине пула паянхи ачан пурнăçне, вăл мĕнпе кăсăкланнине аван пĕлсе тăрать. Унăн геройĕсем чĕрĕ, пурне те пĕлме, таçта та çитсе курма тăрăшаççĕ. Вĕсем ырă чунлă пулнипе, ырă ĕçсем тума тăрăшнипе уйрăлса тăраççĕ. Пĕлӳ патне туртăнни, çывăх çынсене пулăшма тăрăшни, туслăхра çирĕп пулни, ĕмĕте пурнăçа кĕртме ăнтăлни те вĕсен паха енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çыравçă илемлĕ хайлавсенче ачалăх тĕнчин тĕрлĕ проблемисене хускатать, вĕсен вăййикуллине, пурнăçне сăнлани урлă халăх историйĕпе, йăла-йĕрке тата ĕненӳ пуянлăхĕпе, çĕнĕ пĕлӳпе паллаштарать, воспитани тĕллевĕсене пурнăçлать. Унăн геройĕсем йывăрлăха лекнĕ çынна хĕрхенме пĕлеççĕ, ырăпа усал пĕлтерĕшĕ çинчен шухăшлаççĕ. Хайлавăн сюжетне хивререх йĕркелеме, ачана кăсăклантарса яма çыравçă детектив элеменчĕсене те усă курать. Унăн геройĕсем ĕмĕтленме юратаççĕ, тĕрлĕ вак-тĕвеке тата тавралăха сăнама кăмăлласçĕ, тавçăруллă, йывăрлăхсем умĕнче аптараса тăмаççĕ.

Н. Ишентейĕн хайлавĕсен чĕлхи пирки уйрăммăн чарăнса тăрас килет. Çыравçă калуçă тата геройсен пуплевне рифмăланакан

çаврăмсемпе, метаболăсемпе, ача-пăча лексикинчи сăмахсемпе, тĕрлĕ терминсемпе тата çĕнĕ сăмахсемпе илемлетет. Геройсен е хуласен тĕлĕнтермĕш ячĕсене каялла вуласан паллакан сăмах пулнине курма пулать. Ĕç-пуç черетленĕвĕ хăвăрт пулса иртни, сюжет хиврелĕхĕ, хăйне евĕр вăйă сĕмне кĕртекен лексика Н. Ишентейĕн ачасем валли çырнă хайлавĕсен чи паха енĕсем пулса тăраççĕ. Вăл ачасен пурнăçне, психологине шалтан пĕлсе тăрать, илемлĕ сăмах урлă пурнăçа, ырра вĕрентсе калать, ачалăх тĕнчине хаклама вĕрентет.

Тотемла чĕр чунсен сăнарĕсене, вĕсем пирки калакан халап сюжечĕсене Н. Ишентей хăйĕн «Тĕрĕллĕ çыру тĕлĕнтермĕшĕсем» повесть-юмахĕнче усă курать. Хайлавра пĕчĕк Йăвашук çинчен сăмах пырать. Вăл паллă мар йăхран пĕчченех тăрса юлнă. Ыттисем хаяр тăшманпа çапăçса вилнĕ. Амăшĕ тăшманăн кулли пулас мар тесе акăш пулса вĕçсе каять. Пĕчĕк ача пĕччен юлмасть, ăна шурă кашкăр хăй патне илсе каять, пурăнма лайăх вырăн тупса парать, пĕрле сунара илсе çӳрет, ашшĕ вырăнне пулать. Куян шăллĕ вырăнне пулать, унпа вăйăсем вылять. Кулюкка кăлтăртатать, Чĕвĕл чĕкеç йăмăкĕ унпа калаçăть, ачан чĕлхине аталантарать. Ача çитĕнсе çитсен унăн кĕпе-йĕмĕ пĕчĕкленсе çитет. Вара Упа пир тĕртсе парать, Чĕрĕп çĕнĕ кĕпе-йĕм çĕлет, кайăксем тĕрĕ тĕрлесе илемлетеççĕ. Вăрманти пур чĕр чун та Йăвашука пулăшаççĕ, унăн çемьи пулса тăраççĕ. Хайлавра авалхи тотемла чĕр чунсем пирки калакан халапсен сюжечĕсене, ача-пăча фольклорĕн тĕслĕхĕсене усă курнă, ытти чĕр чунсем этемшĕн пĕр тăвансем пулни çинчен каланă, чĕлхи йăваш пулнине ăна чĕкеçпе кăвакарчăнран вĕреннĕ тесе сăлтавланă. Н. Ишентей халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне хайлавăн сюжетне аталантарма пĕлсе вырнаçтарать.

***Ăсан Уçăпĕ*** (1944) Красноармейский районĕнчи Санькасси ялĕнче çуралнă. Тăван ялта пуçламăш, кайран Чурачăкри вăтам шкулта пĕлӳ пухнă. Çыравçă аса илнĕ тăрăх, çамрăклах çут çанталăка çывăх пулни ăна илемлĕ хайлавсем çырас çул çине тăратать те. Шкулĕ инçе пулнăран вăрман витĕр тухма, уйсем урлă каçма тивнĕ унăн. Çавăн чухне шкул ачине çут çанталăкăн асамлă вăйĕ хăйĕн тыткăнне илнĕ, кашни йывăç-курăк, чĕр чун

унăшăн хăйне евĕр сăнар пулса тăраççĕ. Çыравçă халапĕсене çут çанталăк тĕнчинчен пачах уйăрма çук.

Чăн пурнăçра пулма пултарайманнине, фантазие, юмахпа çыхăнтарнине усă курса вăл ӳсен-тăран тата чĕр чун тĕнчи çинчен каласа парать. Унăн геройĕ мулкач çине ларса Шупашкара килет, пĕвере ишсе çĕлен пулла хăваласа тытать, ĕнене лачакаран ним мар çĕклесе кăларать. Çынсене вăл пăт çурă таякан ăсан е хăлаç тăршĕ çуйăн тытса какай яшкипе пулă шӳрпине çитерет. Вăл çĕлен пыйтисенчен еплерех хăтăлнине каласа пани те мĕне тăрать. Тислĕк вырăнне шăнтнă пулă хурса ӳстернĕ помидорсем, вăл шутласа кăларнă «Негр» çĕр улмин çĕнĕ сорчĕ – пĕтĕмпех тĕлĕнтермĕшпе çыхăннă. Тата мĕн чул кашкăрпа упа тирĕ сӳмен пуль пултаруллă сунарçă. Тилĕсемпе мулкачсем хăйсемех ун патне чупса пыраççĕ, тет.

Тĕрлĕ вăхăтра О. Алексеевăн «Сатурн çинчи ăсан», «Ăсан Уçăпĕ сунарçă», «Чăваш вăрманĕ» кĕнекесем пичетленсе тухаççĕ. Хайлавсен тĕп геройĕ кунта Ăсан Уçăпĕ сунарçă. Хăйĕн тыткаларăшĕпе, ĕçĕсемпе вăл Куçма Чулкаçăн калавĕсенчи Лапшуç Çтапанне аса илтерет. Вулакансем ăна Лапшуç Çтапанĕн шăллĕ е мăнукĕ тесе ят панине те курма пулать. Çыравçă К. Чулкаçăн çырас традицийĕсене маллала тăсни куç кĕретех, анчах та вăл хăй тавршĕнчи вăрмансем пирки, чĕр чунсен пурнăçĕ пирки хăйне евĕрлĕ, хăй пултарнă пек каласа парать. Кашни калавĕ – автор чунĕ витĕр сăрхăнса тухнă пурнăç ӳкерчĕкĕ, унăн уйрăм саманчĕ. Хăйĕн хайлавĕсене çырнă чухне автор ырлăха, çынлăха, çынна йывăрлăхра, инкек-синкере пулăшас, хӳтĕлес, унра шанăçне çирĕплетес шухăш-туйăма тĕпе хурать. Çыравçă çут çанталăкпа, тĕрлĕ чĕр чунпа, кайăк-кĕшĕкпе туслă. Ачасене тăван тавралăхăн илемне курма-туйма, чĕр чунсеме кайăк-кĕшĕке юратма-упрама вĕрентет вăл. Вăрманта е хирте пурăнакан тĕрлĕ чĕр чунсен пурнăçĕ урлă вулакана çут çанталăк пуянлăхне уçса кăтартать.

О. Алексеевăн пултарулăхри хушма ятне суйласа илесси те юптаруллă-шахвăртуллă лару-тăрупа çыхăннă. Пуçламăш класра вĕреннĕ чухне ачасем Букварьти пĕр калавра «Уçăп сунара кайнă. Вăл ăсан тытнă» предложенисене вулаççĕ. Класри ачасем кĕçех пĕчĕк Уçăпа «ăсан» тесе витлеме тытăнаççĕ. Кайран, çыравçă каçалăкне тăрсан, О. Алексеев çак ята аса илет те.

Çыравçă шучĕпе, ачалăхпа çамрăклăх пĕтĕм пурнăçа тата пултарулăха витĕм кӳреççĕ, унăн юххине кĕрсе чăнлăх никĕсе пулса тăраççĕ. О. Алексеевăн «Шăнкăр-шăнкăр çăл куç» кĕнекине вăрман пурнăçĕпе çыхăнман калавсем кĕреççĕ. Вĕсенче автор çынсен кулленхи хутшăнăвне, пурнăç чăнлăхĕпе çынсен асапне тараннăн сăнлать. Ашшĕ-амăшĕпе ачисен хутшăнăвĕ, аслисемпе кĕçĕннисем, кĕçĕннисен аслисен умĕнчи яваплăхĕ тата ытти проблемăсене хускатать вăл. Пурнăç тытăмĕпе юрату темине те хăйне евĕр сăнласа парать.

***Петĕр Эйзинăн*** (1943) ачасем валли çырнă хайлавĕсем шутне «Тилĕ тус», «Сар хĕвел» кĕнекесенче пичетленнĕ сăвăсем, «Кам кĕне пахчана», «Упа пӳрчĕ», «Тилĕ тус» юмахсем кĕреççĕ. «Кам кĕнĕ пахчана» юмахра кил картинче пурнакан выльăх-чĕрлĕхпе кайăк кĕшĕк хушшинчи хутшăнусене ытарлă сăнласа кăтартать. Йытă хăй çывăрнă чухне пахчана кĕрсе купăста вăрлакана шырать. Шырав вăхăтĕнче Качакапа, Сыснапа, Чăхсемпе, Автанпа, Хурпа, Кушакпа хутшăнăва кĕрет, шар курса пĕтет. Сысна сăмахĕсене итленĕ хыççăн вăл ним айăпсăр чăхсене тустарса илет, çакна пулах Автанран пĕçерккĕ лекет. Юлашкинчен вăл кушакпа пырса калаçать. Кусем ĕмĕрех пĕр-пĕринпе килĕштермесĕр пурăнаççĕ, çавăнпа та кушак йытта тĕрĕссине калас вырăнне хăйне айăплать, хуçана каласа парассипе хăратать. Çапла вара пĕтĕм пăтăрмахра йытă хăй айăплă пулса тухать. Юмах вĕçĕнче чăннипе кам айăплă пулнине кăтартса панă:

*Йытă тăрать хурланса,*
*Качака йăл-йăл кулса.*

Автор ачасене тĕрĕслĕхе юратма вĕрентет. Харпăр курайманлăхпа ултава пула тӳрĕ çынна айăплама, йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкме те пулать иккен.

«Тилĕ тус» юмаха халăх сăмахлăхĕнчи юмах çине таянса çырнă. Ĕç-пуç виçĕ персонаж тавра пулса иртет: карчăкпа старик, йывăрлăха лекнĕ Тилĕ тус. Тилĕ тем пек чее пулин те сунарçă аллине çакланать, апла пулин те юлашки самант çитсен те хăтăлмалли мел шырать. Чеелĕхне пула вилĕм аллинчен хăтăлма пултаратех. Автор кунта кирек мĕнле йывăрлăха лексен те пуçа усмалла мар, çăлăнмалли мелсем шырамалла тесе каласшăн. Çавăн пекех «лайăххинчен лайăххине» шыракан мĕн

пуррине те çухатма пултарассине асăрхаттарса каланă. Старик тилĕ тирне сĕвичченех хăйĕн кивĕ калпакне кăмакана пăрахса çунтарать. Юлашкинчен нимсĕр тăрса юлать.

«Упа пӳрчĕ» юмахра вăрманти чĕр чунсен пурнăçне сăнласа кăтартнă. Автор чĕрчунсен сăнарĕсем урлă çынсен хутшăну уйрăмлăхĕсене кăтартать. Вăрманта чаплă керменте пурнакан Кашкăрпа Тилĕ пĕр каварлă, çĕр пӳртре пурăнакан упаран пăрăнса çӳреççĕ. Кашкăрĕ тĕл пулсан сывлăх сунмасть, Тилли вара хăнана та чĕнмест. Ытти чĕр чунсем Упа çинчен манмаççĕ. Пĕррехинче вĕсем ниме туса Упана чаплă пӳрт туса пама шатлаççĕ. Пурте тăрăшса ĕçленĕ чухне Кашкăрпа Тилĕ пăрăнса çӳреççĕ, нимерен тараççĕ. Юмахра кахал та măн кăмăллă геройсене питлесе каланă, йывăрлăха лекнĕ çынна пулăшма кирлине асăрхаттарнă.

Ачасем валли çырнă «Тилĕ тус» кĕнекене пурĕ 25 сăвă кĕрет. П. Эйзин сăвăсенче çут çанталăк пулăмĕсемпе, чĕр чунсемпе, кайăк-кĕшĕксемпе тата ытти пулăмсемпе паллаштарать, вĕсен хăй евĕрлĕхĕсемпе вăрттăнлăхĕсем çинчен каласа кăтартать. Чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке юратма, ыйвăр чухне вĕсене пулăшма вĕрентсе калать. Сăвăсем çырнă чухне сăвăç халăх сăмахлăхĕнчи çаврăмсене, ытарлă сăмахсене, сасă кĕвĕлĕхне усă курать. Сăвă композицине пейзаж ӳкерчĕкĕ е этюд евĕр йĕркелет. Ачасене паллакан, пĕлекен япаласем çине урăхла куçпа пăхма хăнăхтапрать, сăнавлăхне çивĕчлетет. П. Эйзинăн сăпка çулĕсенчи, кĕçĕн тата вăтам çулсенчи ачасем валли çырнă сăвăсем те пур.

***Петĕр Яккусен*** (1950) ачасем валли калавсемпе литература юмахĕсем çырнă. Унăн «Кумаляк» (1984), «Эснереш» (2008) кĕнекисем пичетленсе тухнă. «Эснереш» хайлавăн жанрне юмах-повесть тесе палăртнă. Кунта пиччĕшĕпе йăмăкĕн асамлă çулçуревне сăнласа кăтартасси тĕпре. Хайлав ахаль пурнăçа ӳкерни тата асамлă тĕнчене кайса килни çинчен каласа кăтартакан пайсенчен тăрать. Икĕ тĕнчене хĕл мучи эрешлесе пĕтрнĕ кантăк çыхăнтарса тăрать. Ахаль пурнăçра куллен тĕл пулакан япаласем çинчен каланă. Асамлă тĕнчене ӳкерме чĕлхе вăййине, ӳстерсе каланине, ытарлă сăмаха усă курнă. Асамлă тĕнчене лекнĕ ачасем калама çук хитре вăрман тăрăх курса çӳреççĕ. Кунта пурте сивĕпе шăнса ларнă иккен. Çырласем те,

арбузсем те пăр пек. Ют тĕнчери хуласемпе ялсене те ĕнентерӳллĕ ӳкерет калуçă: пӳртсем çӳллĕ пулни, кашнин тавра çӳллĕ хӳме пулни, çыннисем питĕ вăрăм пулни, лаша вырăнне шăрчăксене кӳлсе çӳрени...

Ку тĕнчере эсрелсем хуçаланаççĕ, вĕсем укçашăн çунса çынсен чĕрисене шăнтса пăрлантарса лартнă. Асамлă тĕнчери пурнăç условийĕсем пирки каланине аслисене валли çырнă юмах пек хаклама пулать. Çынсем чунсăрланса пырсан тĕнче çакăн пек сивĕнсе кайма пултарать тесе асăрхаттарать калуçă.

Çынсем пуçлăхсене пуç çапни, лешсем хура халăха хăйсен чĕлхине усă курма, юрлама, ташлама чарни те паянхи пурнăç çинчен ытарлă калани пулать. Халăх культурин, сăмахлăхĕн пĕлтерĕшĕ чакса пынишĕн пăшăрханать автор, асăрхаттарса калать. Асамлă тĕнчен хăй евĕрлĕхне сăнланă чухне вĕсен калаçăвĕнче ача-пăча фольклорĕнчи вăрттăн чĕлхене усă курнă. Кашни сăмахра *–сну* сыпăка кĕртсе лартни вăрттăн чĕлхене аса илтерет. Асамлă тĕнчере пурнакансем çакна патшана хисепленине палăртма усă куратпăр, теççĕ. Патшасен пусмăрлас, хăйсене мăнаçлантарас ĕçсене каласа тухнă чухне Библири сюжетсене усă курнă. Виççĕмĕш Сну патша ĕмĕрлĕх сивĕ патне улăхма çӳллĕ кермен тума шухăшланă иккен. Çакă Библири Вавилон башни çинчен каланине аса илтерет. Анчах та ку кермене те туса пĕтерме çук иккен, сну халăхĕ ĕçленĕ чухне тарлать те унăн чунĕ ăшăнма тытăнать. Кĕнекере пăлхавçăсем çинчен каланисене, çăлакансем хăçăн та пулсан килесси çинчен тахçаннах систерсе хуни мотивсене те курма пулать. Чăваш çĕрĕнчен килнĕ ачасем пĕчĕк пулин те, хăйсен тавçăруллăхне усă курса йывăрлăха лекнĕ халăха пулăшма пултараççĕ. Çулăм кăларса мĕн пур тĕнчене ăшăтаççĕ.

Асамлă тĕнчери вăхăт талккăшĕ те хăйне евĕрлĕ иккен. Кунта ирттернĕ пĕр кун ахаль пурнăçри пĕр сехетпе танлашать. Хайлава ĕнентерӳллĕх сĕмĕ кĕртес тесе автобиографи паллисене усă курнă. Ача шкула мĕншĕн кайманнине, ял ачин пурнăç уйрăмлăхĕсене тĕплĕн сăнланă. Тĕп сăнар – Петĕр ятлă ача. Тӳрех авторĕ Петĕр ятлă пулни аса килет. Вăл шкул ачи. Йăмăкне юратни, ăна хĕрхенни, унпа мухтанни палăрать. Ачасен портречĕ, çипуçне сăнлани çук. Вĕсен характерĕ çинчен калавçă монологĕ,

геройсен ĕçĕсем урлă пĕлетпĕр. Йăмăкĕн «почемучка» тапхăрĕ иккен. Вăл хăйуллă, çирĕп кăмăллă, пурне те çитсе курма тата пĕлме тăрăшать. Çав хушăрах ачаш чунлă, ашшĕ-амăшĕнчен, ыттисенчен хӳтлĕх кĕтет. Петĕр тăрăшуллă ача, яваплăха туять, ĕмĕтленме юарататъ, çĕннине пĕлесшĕн çунать. Тавçăруллă пулни ăна йывăрлăхсенчен тухма пулăшать. Ют тĕнчене лексен вăл сăнама, хамăрăннипе танлаштарма пултарни сисĕнет. Ĕлĕкхи вăхăтри пуянсемпе чухăнсем хушшинчи хутшăнусем çинчен пĕлни ăна çĕнĕ çĕрте ĕç-пуçа тĕрĕс хак пама май парать. Унсăр пуçне ача шӳтлеме юратни те курăнать. Çакă ăна йывăрлăхсем çинчен манма, пурнăç çине оптимистла пăхма пулăшать. Ача кирлĕ чухне хăюллă, харсăр пулма пултарни курăнать.

Кĕнекере çавăн пекех логикăлла, математикăлла шӳтсем те пур. Профессорсен пуçĕсене ĕçлеттерсе юрăхсăра кăларас тесе Петĕр 1 çумне 1 хушсан 0 пулнине ĕнентерет: «Вăт, калăпăр, ман велосипедăн икĕ кустăрма. Пĕр кустăрмине кăларса ывăтсан нуль пулать. Мĕншĕн тесен велосипед халь велосипед мар, нуль, ăна хăйне çĕклесе çӳремелле». Чĕлхе вăййин тĕслĕхĕсем пур: ***Хĕç-пăшалсăрлантараканнисемшĕннисемпеле.***

Асамлă кантăк витĕр тепĕр тĕнчене куçни, сăмах вăййине усă курни Алиса пирки калакан хайлавăн традицийĕсене çывăх.

***Любовь Сачкова*** (1957) Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕнче çуралса ӳснĕ, Чăваш патшалăх университетĕнчи филологи уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ. Пушкăрт тата Чăваш Республикисенче ачасене шкулта вĕрентсе пурăннă, журналист пулса ĕçленĕ. Малтанхи проза кĕнеки 1996 çулта «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» ятпа тухать. Хайлавĕсенчи тĕп сăнарĕсем ытларах ял çыннисем, ака-суха ĕçпе чыслăн пурăнакан яш-кĕрĕмпе хĕрупраç, хĕрарăмсемпе арçынсем е, пач урăхла, эрех-сăрана пула пăсăлма тытăннă ăнăçсăр шăпаллă телейсĕр çынсем. Унăн «Эсĕ кайрăн та...» пьесине çамрăксен театрĕнче, «Шăпăран» пьесине пукане театрĕнче сцена çинче лартнă пулнă.

***Василий Эктел*** (1950 – 2005) сăвăсем çырма çамрăклах пуçăннă. Унăн малтанхи сăввисем «Пионер сасси» хаçатра пичетленсе тухнă. 1982 çулта пĕрремĕш кĕнеки «Тĕлĕнтермĕшсем» ятпа кун çути курать. Кунта ачасем валли çырнă сăвăсем пичетленеççĕ. «Чи хитри» (1992) кĕнекене те ачасене халалланă.

«Тĕлĕнтермĕшсем» кĕнекене кĕнĕ сăвăсем калăпăшĕпе кĕске, ӳкерчĕклĕ, янăравлă пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Кашнинчех пĕр-пĕр пулăмпа е япалапа çыхăннă ĕç-пуç пулса иртет. Сăввăн содержанийĕ ачалăх тĕнчипе, ял пурнăçĕпе, çут çанталăкри улшăнусемпе çыхăннă. Ача çывăх çынсенчен тĕрлĕ пулăмсем çинчен ыйтса пĕлет, вăйăсем вылять, конькипе ярăнать, шкула каять, юр кĕлеткесем ăсталать, çырла пуçтарать...

Уйăхпа, çăлтăрсемпе, саралнă çулçăпа, чĕр чунсен йĕрĕсемпе, çулталăк тапхăрĕсемпе палаштаракан сăвăсем пур. Ял пурнăçне сăнлакан сăвăсенче тĕрлĕ чĕр чуна, йывăç-курăка, ĕç-çи вăхăтне ӳкерсе кăтартнă.

«Тĕлĕнтермĕшсем» кĕнекере «Çулталăк паллисем» ятлă ярăм тĕп вырăн йышăнать. Вăл çулталăкăн 12 уйăхĕпе паллаштарать, вĕсемпе çыхăннă улшăнусем çинчен каласа кăтартать. Сăвăсенче сăнласа кăтартнă пулăмсем çине автор тĕлĕнтермĕш япаласем çине пăхнă пек пăхма вĕрентет, кашниех асамлă пулма пултарассине палăрать. Кĕнеке ятне вăл çакăн евĕр тӳрре кăларать. Сăвăсенчи сывлăм пĕрчи, çумăр, хĕвел, çил-тăман, асамат кĕперĕ, кĕркунне, Хĕл мучи тата ытти сăнарсем чĕрĕ пек тухса тăраççĕ, пурнăçри тĕлĕнтермĕшсене тĕп пурнăçлакансем пек курăнаççĕ.

*Хĕл мучи маттур иккен:*
*Çывăрса эп тăриччен*
*Эрешленĕ кантăка,*
*Пăрлантарнă катока...*

Сăвăсенче тĕрлĕ чĕр чунсене, кайăк-кĕшĕксене, тискер кайăка ырă кăмăллă, ачасен тусĕ пек сăнласа кăтартас туртăм пур. «Тĕлĕнтермĕшсем» кĕнекене кĕрекен сăвăсене тĕрлĕ жанрпа çырнă: паллаштаракан сăвă, диалогран йĕркеленĕ сăвă, сăпка юрри, сăнав сăвви. Кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнине кура вĕсем калăпăшĕпе пысăк мар. Çаврисем икĕ е тăватă йĕркерен тăраççĕ. Сăвă йĕркине кĕске туни ăна вăйă интонацийĕ кĕртме пулăшать. «Аслă çĕр-шывăм» сăвăра йĕркери сыпăксен шучĕ улшăнни, сасă кĕвĕлĕхĕ унăн содержанине тĕрĕс палăртма кирлĕ. Ачасен вăййине сăнлакан сăвă хăйне тивĕçлĕ интонаципе вуланать. Пĕр евĕр сасăсене çуммăн усă курни ачана вĕсене тĕрĕс калама вĕренме те пулăшать:

*Шăнкăр-шăнкăр*
*Вĕтр-шакăр*
*Йăтса килчĕ Кĕтерук:*
*- Ман çума эс лар-ха акă,*
*Иккĕн выльăпăр, Марук.*
*Валя, Галя*
*Пит тирпейлĕн*
*Ту çĕклеççĕ хăйăртан.*
*Космодром майлаççе меллĕн*
*Петĕр, Хветĕр иккĕн тан.*

***Дмитрий Суслин*** (1974) хальхи вăхăтри пултаруллă, ачасем юратнă авторсенчен пĕри. Вăл ытларах приключени, фантастика элеменчĕсене усă курса вăтам тата аслă çулхи ачасем валли юмахсем çырать. Ачан кулленхи ĕçĕ-хĕлне, кулянăвĕпе савăнăçне сăнлакан повеçсем пур («Димка ашшĕне шырать»). Шкулта учитель пулса ĕçлени çыравçăна паянхи кун ача мĕнпе кăсăкланнине, ăна хумхантаракан ыйтусене çывăх пĕлсе тăма май парать. Д. Суслин тĕнче литературинчи приключени жанрĕн тĕслĕхĕсенчен вĕренсе пырать, тăван халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне усă курса çырнă хайлавĕсем уйрăмах илĕртӳллĕ пулса пыраççĕ. Халиччен унăн вырăсла çырнă вунă теçеткене яхăн кĕнеке пичетленсе тухнă. Çыравçăн хайлавĕсене Г.А. Матвеева куçарса чăваш ачисем патне çитерет.

Д. Суслин «Юрăпи» этнографилле юмахра халăхăн аваллăхĕпе, йăла-йĕрке пуянлăхĕпе паллаштарать, илемлĕ сюжет урлă çынсене ырă тумаллине вĕрентсе калать. Юмах традицийĕсене тата халăх ĕненĕвне тĕпе хурса çырнине кура хавйлавра таврари çутçанталăк чĕрĕ пек тухса тăрать. Автор çут тĕнчепе çынсем хушшинчи хутшăну çураçуллă пулмаллине кăтартать. Ырă геройсем çут çанталăкăн ырă сăнарĕсемпе туслă: хĕвелпе, çилпе, йывăç-курăкпа, çăлкуçпа. Вĕсем ырă геройсене йывăрлăхра пулăшса тăраççĕ. Хаярпике çынсене усал тунипе хăйне юраттарасшăн, пăхăнтарасшăн. Анчах та таса юратупа ырă чĕре вăй-хăватне, халăхăн ырă йăли-йĕркипе çирĕп туслăха нимĕнле усал вăй та çĕнтереймĕ.

«Димка ашшĕне шырать» социаллă повеçре тулли мар çемьере пурăнакан ачасен пурнăçне сăнласа кăтартнă. Пур

ачанни пекех вĕсен ашшĕ-амăшĕн ăшши-юратăвне туяс килет. Амăшĕн ачасене уйăрма вăхăчĕ çитсе пымасть пулин те, вĕсем ашкăнас шухăшпа çӳремеççĕ. Хăйсем тĕллĕн пĕлӳ пухма, тĕрĕслĕхе çиеле кăларма пултараççĕ. Ачасемшĕн ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те тимлеме кирлине тупса палăртнă Димка ашшĕне шыраса тупма шутлать, хăйĕн яваплăхĕ çинчен аса илтересшĕн пулать. Ачасем ырлăхра та хурлăхра та пĕрле. Пĕр пĕриншĕн чăн-чăн тĕрек пулса тăраççĕ. Пĕри теприншĕн тăрăшаççĕ, вăрттăн шухăшĕсене пĕлсе тăраççĕ. Хайлавра ачасем право йĕркипе кăсăкланни çинчен калани урлă çак ĕçпе ĕçлекен çынсен професси уйрăмлăхĕсем çинче каласа кăтартнă, туслăха упрама кирлине палăртнă. Ачасен шухăшĕсем логикăлла аталанса пыраççĕ, вĕсен ĕçĕсем те самахĕсемпе тӳр килеççĕ. Д. Суслинăн хайлавĕсенче ачан психологине витĕр курса тăни, вĕсене ырра вĕрентни палăрать.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. В.Эльпи, Ю.Силэм, Л.Сачкова, Е. Чекушкина тата ытти авторсен ачасен кулленхи пурнăçне сăнласа кăтартас уйрăмлăхĕсем.
2. Н. Ишентейĕн хайлавĕсенчи халăх кун-çулĕпе паллаштарас уйрăмлăхĕсем.
3. Юхма Мишшин ача-пăча драматургийĕ аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ.
4. Р. Сарпи поэзийĕнчи этнопедагогика традицийĕсем.
5. Ачасем валли çырнă лирикăлла хайлавсенче шӳт, кулăш элеменчĕсем çирĕпленсе пыни (Н. Карай, П. Çăлкуç, Н. Ытарай, А. Ыхра сăввисем).

## ХЫÇ СĂМАХ

Чăваш ача-пăча литературин кун-çулĕ кăткăс та хăйне евĕрлĕ килсе тухнă. Пĕр енчен вăл Совет çĕр-шывĕнче пурăннă чылай халăх литературине çывăх, тепĕр енчен, унăн хăйне çеç тивĕçлĕ уйрăмлăхсем, çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем пур. Ача-пăча литератури пĕтĕмĕшле литературăпа юнашар аталаннине шута илсе эпир авалхи тĕрĕк литературин тĕслĕхĕсене воспитани саманчĕсене сăнлани, вĕрентсе калани пуррине шута илсе тишкерме тăрăшрăмăр. Чăваш ача-пăча литературин малтанхи хайлавĕсем Н.И. Золотницкий, В.П. Вишневский хатĕрленĕ кĕнекесенче кун çути кураççĕ. И.Я. Яковлев хатĕрленĕ букварьсенче пичетленнĕ тĕслĕхсенече ачан çитĕнӳ уйрăмлăхне, психологине шута илни пур, тăван сăмахлăхăн пуянлăхне усă курасси йăлана кĕрсе пыма тытăнать. Самана аталанса пынă май кашни тапхăр хăйне тивĕçлĕ автор çуратать, ача-пăча литературин критерийĕсем улшăнса пыраççĕ. Прозăра малтан ытларах калав сарăлнă пулсан, ун вырăнне повесть, роман, юмах-повесть жанрĕсем килеççĕ. Пĕчĕк тата пысăк калăпăшлă сăвăсенче, поэмăсенче, сăвăлла юмахсенче идеаллă ача сăнарне ӳкересси, паллаштару темине усă курасси, пуриншĕн те тĕслĕх пулма тивĕç ĕç-пуç çинчен каласа кăтартасси аталаннă. Ача-пăча драматургийĕ кĕçĕн çулхисене юмах выляса кăтартать. Асамлă сюжет урлă пĕлӳ, воспитани парас тĕллевсене пурнăçлать. Кашни тапхăрти çыравçă ĕç урлă воспитани парассине тĕпе хурса ĕçлет. Хайлавсенче ĕç процесне, ĕçе хутшăнакансене ӳкереççĕ.

Республикăра вырăсла çыракан авторсем те сахал мар. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулсенче палăрнă В. Чаплина, Н. Мишутин, П. Маркин çыравçăсем çумне Г. Белгалис, Н. Медюкова, В. Пугачева ячĕсем хутшăнчĕç. Кашнинех хăйсене тивĕçлĕ вулакан пур.

Ача-пăча литератури çулсеренех çĕнĕ авторсемпе, кĕнекесемпе пуянланса пырать. Кунсăр пуçне çак ăнлавăн пĕлтерĕшĕ те анлăланса пырать. Паянхи куна кĕнеке издательствисенче тĕрлĕ тĕслĕ кĕнекесем кăларнипе çеç ачасене тĕлĕнтерме çук. Литература çĕнĕ талккăшсем йышăнма тытăнчĕ. Унăн вулакан патне çитмелли çулĕсем те йышлăланчĕç. Наци радиовĕпе

халăх юмахĕсене, авторсен хайлавĕсене вулаççĕ. Илемлĕ литературăн чылай тĕслĕхĕ сцена çине тухма пултарчĕ. Е. Лисинан «Хупах хăлха Илюк», Р. Сарпин «Пукане качча каять» юмахĕсем пуянланса илĕртӳллĕ спектакль пулса тăчĕç. Н. Васильевапа В. Васильев йĕркеленĕ «Асамат хулин юмахĕсем» кĕнекесен ярăмĕнче сăмах тата сăрă ӳнерĕ пĕрлешсе тăраççĕ. Хăйне евĕр кăткăс сюжет йĕркелесе авторсем ачана ӳкерчĕк тума вĕрентеççĕ, сăрăсемпе паллаштараççĕ. Чăваш халăх юмахĕсене комикс туса каласа кăтартасси те аван пулса пыракан ĕç. Интернетра ача-пăча библиотекисем йĕркеленĕ сайтсен те усси, пĕлтерĕшĕ пысăк.

Хальхи вăхăтра çыравçăсем литература юмахĕ, приключени, фантастика жанрĕсене кăмăллани сисĕнет. Хăйсен хайлавĕсенче вĕсем тăван çĕр-шыври, тăрăхри географи объекчĕсем, халăх кун-çулĕ, çут çанталăк пурнăçĕ, тĕрлĕ ăслăлăхри çитĕнӳсем тата професси хăй евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартаççĕ. Традицилле шутланакан биографилле тата автобиографилле хайлавсем те кĕнеке çӳлĕкĕсем çинчен каймаççĕ. Кĕçĕн çулхисене сас паллисемпе паллаштарасси, пулмасла халапсен традицийĕсем çине таянса чăваш мюнхгаузениадине аталантарасси вăй илсе пырать.

Кашни çыннах, çыравçăсем çеç мар, ача е мăнук çуралсан халапçă, юмахçă пулса тăрать. Хут çине çырăнса юлнă тĕслĕхсем кайран ача-пăча литературин илемлĕ хайлавсем пулса тăраççĕ. Апла пулсан, ача-пăча литератури – пĕр вĕçĕм аталанса тата пуянланса пыракан, пурне те илĕртекен тата кăсăклантаракан пулăм.

# УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1. *Абрамов, В.А.* Становление и развитие чувашской повести: учеб. пособие / В.А. Абрамов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004.

2. *Агаков, Л.* Веселая книга для детей / Л. Агаков // Сов. Чувашия. 1965. – 17 июля.

3. *Алга, А.* Ача-пăча литератури çинчен / А. Алга // Коммунизм ялавĕ. 1952. – Мартăн 23-мĕшĕ.

4. *Алга, А.* Ачасене лайăх кĕнеке ытларах кирлĕ / А. Алга // Тăван Атăл. – 1965. – 1 №.

5. *Алексеева, А.* Ача-пăча тĕнчи – малашлăх ĕнчи / А. Алексеева // Ялав. – 2001. – 7№. – С. 90-91.

6. *Амирханова, Р.* Юхма Мишши пултарулăхĕ тата халăх педагогики / Р. Ахтемирова. – Шупашкар, 1996.

7. *Андреева, А.* Ăнса пулнă çимĕç / А. Андреева // Тăван Атăл. – 1976. – 9№. – С. 75-77.

8. *Арзамасцева, И.Н.* Детская литература: учебник для студ. высш. пед. учеб. заведений / И.Н. Арзамасцева, С.А. Николаева. – М.: Издательский центр «Академия», 2005. – 576 с.

9. *Артемьев, А.* Тĕрлĕ çулхисем валли – тĕрлĕ парне / А. Артемьев // Тăван Атăл. – 1981. – 8№. – С. 62-64.

10. *Артемьев, Ю.М.* Ĕмĕр пуçламăшĕ: вĕрентӳ пособийĕ / Ю.М. Артемьев. – Шупашкар: Чăваш. кĕн. изд-ви, 1986.

11. *Артемьев, Ю. М.* Иртет иккен ĕмĕр, пĕтет кунçул... / Ю.М. Артемьев // Артемьев Ю. М. Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн: критика статйисемпе рецензисем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1984. – С. 21-24.

12. *Артемьев, Ю.* Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн / Ю. Артемьев. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1984. – С. 108-118.

13. *Ача-пăча* сăмахлăхĕ: хрестомати, пуçламăш шк. валли / Г.Ф. Трофимовпа Р. Н. Петрова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993. – 304 с.

14. *Баруздин, С.* Путь к настаящему счастью / С. Баруздин // Чувашкая литература между двумя съездами писателей (1954-1958). Библиографический справочник. – Чебоксары, 1958. – С. 66-69.

15. *Брандис, Е.* От Эзопа до Джани Родари / Е. Брандис. – М.: Просвещение, 1965.

16. *Васильев, А. В.* И.Я. Яковлев тата унăн литература ĕçĕнчи пултарулăхĕ: лит. Критика / А.В. Васильев // Чăваш литературоведенийĕн ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1978. – С. 20 – 32. (Тĕпчев ĕçĕсем , 82-мĕш кăларăм).

17. *Васильева, Л.А.* Художественное повествование в чувашской прозе VIII- начала XX в.: учеб. пособие / Л.А. Васильева. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2006. – 124 с.

18. *Владимиров, Е.* Межнациональные связи чувашской литературы / Е. Владимиров. – Чебоксары, 1970.

19. *Владимиров, Е.В.* Талвир / Е.В. Владимиров // Учен. зап. ЧНИИ. Вып. 46. – Чебоксары, 1970, – С. 272-276.

20. *Волков, Г.Н.* Этнопедагогика: учебник для студ. сред. и высш. пед. учеб. заведений / Г.Н. Волков. – М.: Издательский центр «Академия», 1999. – 168 с.

21. *Волков, Г.Н.* Чувашская народная педагогика. Очерки / Г.Н. Волков. – Чебоксары,1958.

22. *Воронцов, Г.* Иван Ивник. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ / Г. Воронцов. – Шупашкар, 1982.

23. *Давыдов-Анатри, В.* Кăлкан юптарăвĕсем / В. Давыдов-Анатри // Ялав. 1954. – №4. – С. 31.

24. *Данилов, Д.* Уйăп Мишши / Д. Данилов // Илемлĕ литература. – 1941. – №3. – С.157-161.

25. *Детская* литература: учеб. пособие для учащихся дошкольных отделений пед. училищ / сост. Е.Е. Зубарева, З.П. Пахомова. – М.: Просвещение, 1976. – 398 с.

26. *Детская* библия. М., 2003.

27. *Дедушкин, Н.* Шелепин ача-пăча сăввисем / Н. Дедушкин // Илемлĕ литература. – 1941. – 2 №.

28. *Дедушкин, Н.* «Сунарçă халапĕсем» пирки / Н. Дедушкин // Сунтал. – 1938. – 4 №. – С. 31-33.

29. *Димитриев, В.* Г.Н. Волков. Этнопедагогика чувашского народа / В. Димитриев // Учен. зап. ЧНИИ. – Чебоксары, 1967. Вып. 36.

30. *Доброта* памяти: Юхма и его творчество в оценках писателей и читателей мира: сб. ст. Кн. 1. – Чебоксары, 2001.

31. *Егоров, Д. Е.* Трубина Марфа Дмитриевна / Д. Е. Егоров // Егоров Д. Е. Женщины-матери земли чувашской. – Кн. 3. – Чебоксары, 2003. – С. 148 –149.

32. *Ефимов, Г.* Çамрăклăхпа туслăх юрăçи / Г. Ефимов // Тăван Атăл. – 1971. – 11 №. – С. 73 – 74.

33. *Зарубежная* детская литература. – М.: Наука, 1982.

34. *Зарубежная* литература для детей и юношества. – М.: Наука, 1989.

35. *Казаков, А,* Кăлкан юптарăвĕсем / А. Казаков, Н. Григорьев // Тăван Атăл. – 1954. – 3 №.

36. *Канюков, В.* Трубина Мархви. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен / В.Я. Канюков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, – 1959.

37. *Канюков, В.Я.* Дореволюционная чувашская детская литература / В.Я. Канюков // Уч. зап.ЧНИИ. Вып. 42. – Чебоксары, 1954. – С.99 – 103.

38. *Канюков, В.Я.* Ача-пăча сăмахлăхĕ. Сăвă-юрă. Юмах-халап / В.Я. Канюков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1964.

39. *Канюков, В.Я.* И.Я. Яковлев и чувашская детская литература / В.Я. Канюков // Уч. зап. ЧНИИ. Вып. 42. – Чебоксары, 1964.

40. *Канюков, В.Я.* Писатель ăсталăхĕ: статьясен пуххи / В.Я. Канюков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1986.

41. *Канюков В.Я.* Агаков как детский писатель // Тезисы докладов, обсуждаемых на заседаниях секции литературы и искусства. Научная сессия, посв. итогам исследовательской работ ЧНИИ за 1961 г. – Чебоксары, 1961, С. 1 – 21.

42. *Канюков, В.Я.* Тăвăр калăп урана хĕсет / В.Я. Канюков // Тăван Атăл. – 1966. – 5 №. – С. 86 – 94.

43. *Каримов И.* Лунный камешек с детства / И. Каримов // Литературная Россия. – 1978. – 8 дек.

44. *Кириллов, Г.* Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши тата пукане театрĕ / Г. Кириллов. – Шупашкар, 1997.

45. *Леонтьев, Н.А.* Правда жизни и характера / Н.А. Леонтьев. – Чебоксары: Чуваш кн. изд-во, 1969. – С. 67 – 78.

46. *Малов, А.* Ачасен юратнă писателĕ / А. Малов // Ялав. – 1967. – 7 №. – С. 31.

47. *Максимов, В*. Сатин кĕпе / В. Максимов // Ялав. – 1972. – 9 №. – С. 32.

48. *Мефодьев, А.И.* Чăваш ача-пăча литератури: программа /

А.И. Мефодьев. – Шупашкар: Изд-во Чуваш. пед. ин-та, 1994.

49. *Мефодьев, А.И.* Чувашская детская литература. Часть1: Истоки. Возникновение. Формирование. / А.И. Мефодьев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. пед. ин-та, 2008. – 200 с.

50. *Минералова, И.Г.* Детская литература: учеб. пособие для студ. высш. учеб. заведений / И.Г. Минералова. – М.: Владос, 2005. – 175 с.

51. *Никитин, В.П.* Чувашский рассказ (1921-1941) / В.П. Никитин. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1990.

52. *Петрова, Р.* Сарпи поэзийĕнчи халăх педагогикин ыйтăвĕсем / Р. Петрова // Вучах. 1993. – 9 июнь.

53. *Петрова, Р.* Сарпи поэзийĕнчи халăх педагогикин ыйтăвĕсем / Р. Петрова // Петрова Р. Асанне халалĕ. – Шупашкар, 1993.

54. *Пласкин, Г.* Рассказы для детей [О книге «Танец журавлей»] / Г. Пласкин // Сов. Чувашия. – 1952. – 23 сент.

55. *Петров, Ю.* Çамрăк туссем валли / Ю. Петров // Ялав. – 1965. – 7 №.

56. *Родионов, В.Г.* Чăваш литератури (XVIII-XIX ĕмĕрсем): вĕрен̆ӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2006. – 463 с.

57. *Родионов В.Г.* Чăваш литератури (1917-1930 çç.): вĕрентӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 2005.

58. *Революцичченхи* чăваш литератури: учебник. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989.

59. *Сетин, Ф.И.* История русской детской литературы, конец X – первая половина XIX в.: учеб. пособие для ин-тов культуры, пед. ин-тов и ун-тов / Ф.И. Сетин. – М.: Наука, 1990.

60. *Сидорова, Е.С.* Из наблюдений над современными чувашскими бытовыми сказками // Чувашский язык, литература и фольклор: сб. ст. ЧНИИ. Вып. 1. – Чебоксары, 1972. – С. 418 – 423.

61. *Сироткин, М.Я.* Чăваш литератури / М.Я. Сироткин. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1978. – 140 с.

62. *Сироткин, М.Я.* Очерк советской чувашской литературы / М.Я. Сироткин. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1956.

63. Сироткин М. Н.И. Полорусов (Шелепи) / М.Я. Сироткин. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1956.

64. *Сироткин, М.* М.Д. Трубина калавĕсенчи ял пурнăçĕ /

М.Я. Сироткин // Ялав. – 1948. – 9 №. – С. 25-27.

65. *Софронова, И.В.* Традиции восточной поэзии в чувашской лирике: учеб. пособие. / И.В. Софронова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. – 164 с.

66. *Сениэл, М.* Лапшу Çтапанĕ – зоологи сачĕн директорĕ / М. Сениэл // Тăван Атăл. – 1973. – 10 №. – С. 77-78.

67. *Ставский, М.* Эстетика тата чăваш илемлĕ литератури / М. Ставский. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993.

68. *Тимофеев-Ыхра, А.* Шелепи çырнă ача-пăча хайлавĕнчи чĕр чун тĕнчи / А. Тимофеев-Ыхра // Тăван Атăл. – 2001. – 4 №.

69. *Халăх* сăмахлăхĕ: хрестомати / Г.Ф. Юмарт пухса хатĕрл. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. – 415 с.

70. *Хлебников, Г.* Чăваш романĕн çулĕ / Г. Хлебников // Тăван Атăл. – 1963. – 3 №.

71. *Хлебников, Г.* Современный чувашский рассказ / Г. Хлебников // Уч. зап. ЧНИИ. 1970. – Вып. 46.

72. *Хузангай, А.П.* Долгое путешествие Илюка / А.П. Хузангай // Советская Чувашия. – 1986. – 13 окт.

73. *Чăваш* писателĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1968. – С. 297 – 298.

74. *Чăваш* халăх поэчĕ Н.И. Полорусов-Шелепи: статьясен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1982.

75. *Чекушкина, Е.П.* Общетюркские традиции в чувашской словесности: учеб. пособие / Е.П. Чекушкина. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2006. – 142 с.

76. *Эзенкин, В.* Идейно-художественные особенности творчества М.Н. Данилова-Чалдуна / В. Эзенкин // Чувашский язык, литература и фольклор: сб. ст. ЧНИИ. Вып. 1. – Чебоксары, 1972. – С. 327 – 351.

77. *Эзенкин, В.* Художественно-творческие искания Ивана Мучи в сатире / В. Эзенкин // Тр. ЧНИИ. Вып. 95. – Чебоксары, 1979. – С. 131 – 137.

78. *Юмарт, Г.* Пĕчĕк юрă кăна мар / Г. Юмарт // Ялав. – 1983. – №3. – С. 30.

79. *Юмарт, Г.* Асăнмалăх, savăнмалăх / Г. Юмарт // Ялав. – 1988. – 9 №. – С. 16-17.

# Тупмалли

Кӳртĕм……………………………………………………………………..…3
Ача-пăча литературин ум историйĕ…………………………………..……7
Чикĕ леш енчи халăхсен ача-пăча литератури…………………………....11
Европăри Вăтам тата Чĕрĕлӳ тапхăрĕнчи
ача-пăча литератури………………………………………………11
Çут ĕç тапхăрĕнчи ача-пăча литератури…………………………....13
Европăри романтизм тапхăрĕнчи ача-пăча литератури…………...15
XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи тата XX ĕмĕрти
чикĕ леш енчи ача-пăча литератури……………………………...…18
Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕ……………………………………………….21
Г.Н. Волковăн этнопедагогики………………………………………...…30
XVIII ĕмĕрчченхи чăваш ача-пăча литератури…………………………35
И.Я. Яковлев пултарулăхĕн чăваш ача-пăча литературин
аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ…………………………………………………43
И.Я. Яковлев вĕренекенĕсем ача-пăча литературин
аталанăвне витĕм кӳни……………………………………………………..49
XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулсенчи ача-пăча литератури…………………60
XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи
ача-пăча çыравçисен пултарулăхĕ……………………………………....68
Вăрçă вăхăтĕнчи ача-пăча литератури…………………………………101
Вăрçă вăхăтĕнчи çыравçисен пултарулăхĕ……………………… ……104
50-70-мĕш çулсенчи ача-пăча литератури……………………………..107
50-80-мĕш çулсенчи ача-пăча çыравçисен пултарулăхĕ…………..…115
Хальхи ача-пăча литератури……………………………………………136
Хальхи ача-пăча çыравçисен пултарулăхĕ……………………………141
Хыç сăмах…………………………………………………………………..165
Усă курмалли литература…………….………………………………...167

*Учебно-теоретическое издание*

**Чувашская детская**

**и юношеская литература**

Учебное пособие

Редактор О.А. Хлебкова

Компьютерная верстка и правка
Подписано в печать 18.04.2012. Формат 60х84/16. Бумага газетная.
Печать офсетная. Гарнитура Times. Уч.-изд. л. 9,8.
Усл. печ. л. 8,00. Тираж 100 экз. Заказ № 215 .

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

**Хушма литература:**

Сироткин М.Я. Стихван Шавли сăвви-поэмисем. // Тăван Атăл. 1980. – 5№.
Литературно-энциклопедический словарь. М., 1987.
Брондис Е.П. От Эзопа до Джанни Родари. - М., 1974.
Владимиров Е.В. Взаимосвязи национальных литератур. - Чебоксары, 1970
Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем. - Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1997.
- - Артемьев А. Ачасем юратса вулакан кĕнеке // Ялав, 1950. - №2, С. 20-22.
- Ал. Г. Çамрăксем юратмалла кĕнеке // Тăван Атăл. - №5, С. 91.
- Портнов К. «Хĕрлĕ кĕпе» паттăрĕсем // Пионер сасси, 1983. дек. 10.<u>Алентей В.</u>
- Алентей В. Пирĕн кил: сăвăсем. – Шупашкар. 1953.
<u>Алка А.</u>
Иванов Н. Тăван çĕршывпа халăха мухтакан сăвăсем // Ялав. – 1962. - №5. С.30.
Орлов Г. Мухтавлă Кушкăн мухтавлă ывăлĕ// Ялав. – 1978. - №12. – С. 28-29.
Юрьев М. Поэт кунçулĕ. – Тăван Атăл, 1959. - №6.- С. 86-98.
Агаков Л. Поэт-салтак // Тăван Атăл. – 1963. - №6. – С. 42-44.
Агаков Л. Поэт-салтак // Тăван Атăл. – 1973. - №11. – С. 61-65.
Ефимов Г. Вăхăтпа пурнăç юрăçи// Ялав. 1963. - №11. С. 25-27.
Дедушкин Н. Çулăмра туптаннă пултарулăх// Ялав. 1973. - №11. С. 24-27.
Алга А. Тăватă çулталăк: сăвăсем. – Шупашкар, 1947.
Алакер В. Хăюллăхпа паттăрлăх сăввисем // Тăван Атăл. – 1948. №32. – С.122-134.
Алга А. Çуралнă çĕршывра: сăвăсем. – Шупашкар, 1952.
Агаков Л. Хĕрӳллĕ сăвăсем. // Ялав. - 1952, - №4, С. 31-32.
Алга А. Юлташпа юнашар: повеçсемпе калавсем. – Шупашкар, 1954.
<u>С.Аслан</u>
Микки В. Сакăр калавпа пĕр юмах// Çамрăк коммунист, 1960. – сент 9.
Бурнаевский В. Степан Аслан// Ялав. – 1977. - №11. С. 26.
<u>Афанасьев А.</u>

Канюков В.Я. Тăвăр калăп урана хĕсет// Тăван Атăл. – 1966. № 5. – С.86-94.
Афанасьев Е.А.
Ачасен çывăх тусĕ// Тăван Атăл. – 1972. - №10 С. 63.
Петров Ю. «Пирĕн ял ачисем» // Коммунизм ялавĕ, 1965. нояб. 2.
Афанасьев Е. Сăвăсемпе юмахсем. – Шупашкар, 1949.
Долгов В. Егор Афанасьевăн сăввисем// Чăваш коммунни. - 1949. февр. 2.
Петров А. Çамрăк поэт парни. -// Ялав. – 1949. №9, - С. 27.
Афанасьев Е. Кентти ӳсет: сăвăсем. – Шупашкар, 1966.
Васильев Г. Шухăш тарăн пултăр// Коммунизм ялавĕ. – 1966, нояб. 15.
Кузнецов И. «Наш маленький Кентти» // Советская Чувашия. – 1962. – 14 апр.
Валем Ахун Шурă акăш: сăвăсем. – Шупашкар, 1976.
Петров Ю. // Ялав. 1976. №3. – С. 29.
Бараев В.
Шавлы С. Бараев-Сĕрккен пурнăçĕпе пултарулăхĕ// Бараев В. Сӳнми хĕлхем. – Шупашкар, 1961.
Иванов Ип. Талантлă сăвăç, паттăр салтак // Тăван Атăл. – 1980. - №80. С. 77-78.
Бурнаевский В.
Долгов В. Чапаев çинчен// Тăван Атăл. – 1974. №2. С. 65-67.
Ванин Ф.Е. Юптарусем. – Шупашкар, 1940.
Ваçанкка
Каçанкка-Шаланкă – çамрăксен поэчĕ// Хатĕр пул, 1933. - №11-12, С. 14-15.
Орлов Г. Ачасем валли //Ялав. – 1966. - №5. – С.32.
Волков Г.Н.
Алексеев А. Шăллăмсемпе йăмăксене халалласа çырнă кĕнеке// Ялав. – 1963. № 12. - С. 29 с.
Димитриев В. Г.Н. Волков. Этнопедагогика чувашского народа // Уч. записки ЧНИИ. – Чебоксары, 1967. вып. 36.
Галкин А.
Абашев В. Хаклă парне// Коммунизм ялавĕ. – 1963. – нояб – 13.
Агивер Хв. «Хаваслă ачасем» // Пионер сасси. – 1972. авг. 22.
Галкин А. Туссем: калавсем. – Шупашкар, 1964.
Агаков Л. Веселая книга для малышей// Советская Чувашия,

1965. – 17 июля.
Агаков Л. Сатира хăйĕн ĕçне тăвать// Тăван Атăл. – 1964. - №4.
Петров Ю. Çамрăк туссем валли// Ялав. – 1965. №7. - С. 3.
Давыдов-Анатри В. Юлташсемпе юнашар: аса-илюсем. – Шупашкар, 1981.
Максимов В. «Сатин кĕпе» // Ялав.- 1972. - №9. - С. 32.
Данилов-Чалдун
В.Енĕш
Мефодьев А. Чун кăварĕ çинчен// Ялав. 1989 .- №2, - С.15.
Енĕш В. Чи маттурри – Урине: повеçпе калавсем. – Шупашкар, 1984.
Алентей В. Вучах çутин илемĕ// Хатĕр пул. 1985. - №1. С. 26.
Маяксем Л. Асамлă вучах // Тăван Атăл. – 1985. - №2. – С. 68-69.
Чындыков Б. Чун вучахĕ// Коммунизм ялавĕ. – 1984. отк. 14.
Ивник И.
Агаков Л. Аван пуçару// Сунтал. – 1938. №10. – С.28-29.
Воронцов Г. Иван Ивник. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ. –Шупашкар, 1982.
Энтип В. Ирĕкри илем шевлисем// Тăван Атăл. – 1982. - №2. - С. 64-66.
Илпек М. Тимĕр: роман. – Шупашкар, 1971.
Канюков В.Я. Д.В. Исаев (Авраль) произведенийĕсенчи проблемăсем// Тăван Атăл. – 1952. - №1. – С.133-142.
Канюков В.Я. Исаев Мĕтри // Ялав. – 1955. - №4. - С.29.
Карай Н. Шăллăм: сăвăсем. – Шупашкар, 1975.
Романов Б. Кĕçĕннисен ĕмĕтне тивĕçлĕ// Ялав. – 1976. - №1. – С. 23.
Кăлкан А.
Агаков Л. Тĕл тивекен юптарусем// Коммунизм ялавĕ. – 1960. авг. 25.
Вашки И. «Алим» Шупашкарти ТЮЗ выляса кăтартни// Çамрăк большевик. – 1940. – февр. 28.
Юрьев М. Драмой, басней и песней. – Молодой коммунист. – 1961. – 25 с.
Кăлкан А. Юптарусем. – Шупашкар, 1954.
Давыдов-Анатри В. Кăлкан юптарăвĕсем// Ялав. 1954. - №4. С. 31.
Казанов А. Кăлкан юптарăвĕсем// Тăван Атăл. – 1954. - №3, - С.

150-154.
Кăлкан А. Сар Иван: сăвăлла поэма-юмах. – Шупашкар, 1959.
Дедушкин Н., Федотов М. Сказка-быль «Сар-Иван»// Литература и жизнь, 1960. – 22 мая.
Селезнев С. Чăн юмах.// Ялав. – 1957. - №1. – С. 30-31.
Кипек М. Кайăк тусĕ: роман. – Шупашкар, 1962.
Алакер В. // Ялав. – 1961. № 1. С. 24-26.
Николаев Г. // Тăван Атăл. 1963. - №3, - С. 96.
Лазарева А. Санăн çитмĕл çичĕ тус: калавсем. – Шупашкар, 1975
Юр А. Пурнăçра туслăх çĕнтерет. // Тăван Атăл. – 1976. - № 2. – С. 80.
Станьял В. Пурнăçран килнĕ сăнарсем// Тăван Атăл. – 1977. - №5. – С. 73-75.
Александров Г.Лайăх çынсем, ырă ĕмĕтсем// Тăван Атăл. – 1961. – 2-мĕш кĕнеке.
Малов А. Вулакансем ăна юратаççĕ// Тăван Атăл. – 1957. 3-мĕш кĕнеке.
Игнатьев В Çурхи кĕвĕсем// Ялав. – 1969. - №5.
Артемьев А. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕшĕн// Ялав. – 1972. - №8.

Е. Лисина
Каримов И. Лунный камешек с детства// Литературная Россия. – 1978. 8 дек.
Уяр Хв. Талантлă кĕнеке// Ялав. – 1972. – №5. – С. 31.
Хузангай П. Долгое путешествие Илюка// Советская Чувашия. – 1986. – 13 окт.
Луч
Артемьев А. Тĕрлĕ çулхисем валли – тĕрлĕ парне// Тăван Атăл. – 1981. - №8. – С. 62-64.
И.Петрова
Юмарт Г. Пĕчĕк юрă кăна мар// Ялав. – 1983. - №3. – С. 30.
Петрова И. Татюк: повесть. – Шупашкар, 1969.
Талвир А
Волков Г. Большой друг детства// Талвир А. Аньяр: рассказы. – М.: Дет. лит-ра, - 1972.

Паллӑ прзаик// Ялав. – 1969. - №5. – С. 190-192.
Пласкин Г. Тӑвӑл умӗн // Ялав. – 1954. - №12. – С. 27-28.
М. Трубина
Долгов В. Шкул ачи ҫинчен ҫырнӑ калав// Ялав. – 1946. - №7-8. – С. 47.
Канюков В. Трубина Мархви. Пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен. – Шупашкар: Чӑваш. кӗн. изд-ви, - 1959.
Канюков В. Ҫӗнӗлӗх ҫулӗпе// Ялав. – 1978. - №9. – С. 25.
Ачасен ырӑ тусӗ// Тӑван Атӑл. – 1963. - №5. – С. 87.
Агаков Л. Лайӑх повесть// Тӑван Атӑл. – 1958. - №1 – С. 94-104.
Чернов М. Т. Мархвин «Ача чухнехи» повесть чӗлхи// Тӑван Атӑл. – 1961. - №1 – С. 81-88
Данилов Д. Уйӑп Мишши.// Илемлӗ литература. – 1941. - №3. – С.157-161.
Иванов М. Ҫамрӑксен тусӗ// Ялав. – 1961. - №11 – С. 27.
Уйӑп М. Корея ачисем: поэма// Тӑван Атӑл. – 1952. - №3.
Петров Н. «Корея ачисем» поэма пирки// Ялав. – 1953. - №3 – С. 31-32.
Артемьев М. «Кӑра ҫилсем» // Ялав. – 1957. - №5– С. 26-29.
Ухсай Я. Вырӑс ачи: поэма. – Шупашкар, 1950
Кӑмӑла каякан поэма//Ялав. – 1952. - №1 – С. 30.
Ухсай Я. Акӑшкӳль: поэма. – Шупашкар, 1955.
Акшар Ю. Ҫывӑх сӑнсем// Тӑван Атӑл. – 1973. - №11 – С. 75-76
Хв. Уяр. Сук шывӗ хӗрринче: калавсем. – Шупашкар, 1947.
Аслан С. Туслӑхпа юрату ҫинчен// Тӑван Атӑл. – 1946. - №1 – С. 136-144.
Хв. Уяр В Шуше, у подножия Саяна: очерки. – Чебоксары, 1970
Хв. Уяр Ҫул кӗнеки: повеҫпе тӗрленчӗксем. – Шупашкар, 1978
Харлампьев Г.
Малов А. Танок журавлив// Ялав. – 1967. - №3– С. 32.
Чулкаҫ
5. Малов А. Ачасен юратнӑ писателӗ// Ялав. – 1967. – №7. – С. 31.
6. Мыпгиков Г. «Сунарҫӑ юмахӗсен» авторӗ // Ӗҫ ялавӗ (Етӗрне р-нӗ). - 1997. - 29 утӑ.
7. 8. Тимков М. Манӑҫми кӗнекесем// Тӑван Атӑл. – 1977. – №7. – С. 78.

Алантей В. Манăçа тухми тусăм // Тăван Атăл. - 1987. - №6. – С. 66-67.
Дедушкин Н. Шелепин ача-пăча сăввисем// Илемлĕ литература. – 1941. - №2. – С. 168-181.
Ухсай Я. Н.И. Шелепи юмахĕ// Ялав. – 1952. - №2. – С. 31.
Шелепи Н. Сăвăсем. Легендăсем. – Шупашкар, 1981.
Долгов В. Хитре Чĕкеç// Ялав. – 1957. - №8. – С. 28-30.
Шупуççынни Н.В. // Тăван Атăл. – 1959. - №6. – С. 77-79.
Элкер
Долгов В. Ача-пăча валли çырнă кĕнекесем// Тăван Атăл. – 1946. - №2. – С. 91-93.
Чулкаç К. Ача-пăча валли çырнă юмахсем// Чăваш коммуни. – 1947. – авг. 16.
Юхма М. Шур акăш тĕкĕ: повеçсем. – Шупашкар, 1977.
Васяков Ф. Малтанхи пионерсем çинчен// Пионер сасси. – 1977. – март 26.
Степанов В. Ачасем валли // Тăван Атăл. – 1977. - №11. – С. 71-73.